ПĔТĔМ ТĔНҪЕРИ ПРОЛЕТТАРИСЕМ, ПĔРЛЕШĔР!

ТРАКТĂР

ҪĂВАШ СОВЕТ ПИССАТТĔЛĔСЕН АЛМАНАХĔ

ВИҪҪĔМĔШ
КĔНЕКЕ

ҪАВАШСЕН ПАТШАЛĂХ ИСТАТТĔЛСТВИ
ШУПАШКАР 1932 ҫул

Отпеч. в типографии № 1
Чувашгиза, Чебоксары
Канашская, 16.

ВĂКĂР ÇЫРМИ

ПОВĔÇ

ИЛ. ТУКТАШ

III мĕш пайĕ.

Малтанхи çĕнтерӳ.

1. Тумхахлă çулпала...

Шавласа, кĕрлесе йухат Вăкăр çырми. Аслă çул шыраса малаллаваскат, пысăк тинĕселле ытканат.

Пурнăç та васкат Ваççилийĕвкка поççолккинче.

Пĕтĕмпех улшăнчĕ поççолкка пурнăçĕ. Каççăр Тимака претçетаттĕле уйăрнăранпа колхоçнĕксем советран тухма та пĕлмеççĕ. Хĕрарăмсем те тăтăшах çӳреме пуçларĕç совета. Пĕр Каруксен шайкки çеç хăйаймаст совета ура йарса пусма.

Тимакăн ĕç вĕçи-хĕррисĕр: вăрлăхсене хывса çитермелле, тасатмалла, ака таврашĕсене тӳрлеттермелле.

Пĕр канмасăр ĕçлеççĕ икĕ трийĕр поççолккăра.

Иртен илсе каçченех шаккат вата тимĕрçĕ.

Претçетаттĕл пайан тата икĕ лав йачче МТС-а, çейăлккăсем илме. Татук инкепе Микиш кăвак шуçăмлах тухса кайрĕç тумхахлă çулпала стантсăна. Çирĕм пилĕк çухрăмра, Çарăмсан шывĕн тепĕр йенче ларат МТС. Тĕлĕ тĕлĕпе çĕршыв типсе çитнĕ пулин те, Çарăмсан çинче çап-çута пăр йăлтăртатса выртат.

Çурхи хĕвел пĕр чарăнмасăр çуллат хăйĕн йĕплĕ чĕлхипе йухан шыв питне.

Хăшпĕр вырăнта пăр хусканкаланă, хавшаса çитсе умлă-çиллĕ утланса ларнă пăр катăкĕсем.

Татук инкепе Микиш çăмăллăнах каçса кайрĕç ирхине Çарăмсан урлă. Тăхăр сехет тĕлнелле стантсăна çитрĕç.

* * *

МТС правленийĕн пӳлĕмĕ. Виçĕ чурече. Виççĕшне те санавескăсемпе карнă. Плаккат: **„пришел, спросил, ответ получил и... уходи"**. Плаккат: ашак пысăк перус хыпнă; шлепкепе, туйапа. Тĕпре: **„Здесь курить нельзя, а я курю"**. Стсенă пушах.

1-мĕш курăну (сăмахсăр стсенă).

Шăнкрав сасси. Стсенă хыçĕнче кĕрленĕ сасă. Кĕтмен çĕртенех алăк уçăлса кайат те, стсенă çине пысăк сĕтел шуса тухат. Çтена çинче **„Пуçлăх"** тенĕ вутлă сăмах çутăлса тухат. Сĕтел хăй ăссĕнех çав çтена çумне пырса вырнаçат.

Шăнкрав сасси. Стсенă хыçĕнче кĕрленĕ сасă. Алăк уçăлса кайат. Стсенă çине иккĕмĕш сĕтел шуса тухат. Çтена хыçĕнче

„Çыруçă“ тенĕ вутлă сăмах çуталса кайат. Иккĕмĕш сĕтел çав çтена çумне пырса вырнаçат.

Шăнкрав сасси. Стсенă хыçĕнђе каллех кĕрленĕ сасă. Алăкран виççĕмĕш сĕтел шуса кĕрет. Çтена çинђе **«Машшинисткă»** тенĕ вутлă сăмах çуталса кайат. Виççĕмĕш сĕтел те хăй вырăнне кайса вырнаçат. Кашни сĕтелĕ конвейĕрпа çыхăнат.

Стсенă шăп. Тĕттĕм.

2-мĕш курăну.

Сехет тăххăр çапат. Ђўређе санавескисем уçăлаççĕ. Конвейĕрсем ĕçлеме пуçлаççĕ. Алăк уçăлса хупăнма тытăнат.

Шăнкрав. Стсенă хыçĕнђе кĕрленĕ сасă. Алăкран çемçе тенкел шуса кĕрет. Тенкел çинђе пысăк пуç, кĕлетки çук. Тенкел пуçлăх сĕтелĕ умне пырса ђарăнат.

Шăнкрав. Стсенă хыçĕнђе кĕрленĕ сасă. Алăкран иккĕмĕш тенкел шуса кĕрет. Тенкел çинђе етем кĕлетки, анђах пуçĕ çук. Кĕлетке хăрах аллипе хулăм „дела“-сем хĕстернĕ, тепĕр аллине хулăм портфĕл тытнă. Çурăм хыçне пысăк руђкă, калама та çук пысăк кĕленђепе ђернил çакнă. Ку тенкел çыруçĕ сĕтелĕ умне пырса ђарăнат.

Шăнкрав. Стсенă хыçĕнђе каллех кĕрленĕ сасă. Алăкран виççĕмĕш тенкел шуса тухат. Анђах ку тенкелĕ тўрех хăй вырăнне кайса лармаст. Малтанах тенкел çинђе ларакан хĕрарăмăн урисем кăна алăкран курăнаççĕ. Вăл урасем пурçăн ђăлхапа. Тенкел ђарăнат. Пуçлăх пуçĕпе çыруçă кĕлегки иккĕшĕ те алăк патнелле çавăрнаççĕ. Паусă. Пĕр самантран тенкел вырăнтан хусканса хĕрарăмăн пĕтĕм кĕлетки курăнат. Хĕрарăм тутисене хĕретнĕ, çўçне кăтралатнă. Вăл пуçлăх йеннелле кăмăллăн кулса пăхса илет, унтан хăйĕн аллине ђуптуса пуçлăх çинелле вĕрсе йарат. Çакăн хыççăн тенкел машшинисткă сĕтелĕ умне пырса ђарăнат.

Вăрăмăн шăнкрав сасси. Алăк шартлатса хупăнса ларат. Çекреттар сĕтелĕн сунтăхĕсем уçăлса кайаççĕ. Сĕтел çине „дела“-сем тухса купаланаççĕ. „Дела“ листисем хăйсемех уçăлса хупăнаççĕ.

Машшинисткă сĕтелĕ çине „Ремингтон“ тухса лартат. Машшинисткă ретиккўлĕнђен краскăсем кăларса питне писевлет те, ĕçлеме тытăнат. Машшинисткă пиђетленĕ хутсем конвейĕр тăрăх çекреттар сĕтелĕ патне пырса ўкеççĕ, çекреттар вĕсем çине пысăк руђкипе алпусса пуçлăх патне ăсатат. Пуçлăх пуçĕ унталла-кунталла пăркаланса ларат.

Пăртак ĕçленĕ хыççăн машшинисткă вăрăмăн, хытă саспах анасласа илет. Ун хыççăн çекреттарпе пуçлăх та анаслани илтĕнет.

Машшинисткă сĕтел çине тайăнса сывăрса кайат. Çекреттар хускалми пулса çитет, пуçлăх куçĕсем хупăнаççĕ. „Дела“ листисем уçăлса хупăнма ђарăнаççĕ. Конвейĕр ĕçлемест. Шăп. Пурте йăвăр ыйха путаççĕ...

3-мӗш курӑну.

Стсенӑ хыҫӗнҙе лаплаттарса утнӑ сасӑ. Алӑкран шаккаҫҫӗ. Анҙах шакканине шалтисем туймаҫҫӗ. Татах шакаҫҫӗ.

Сасӑ—Ей, йеӆохха вохха! Уҫӑр етем ывӑӆ хӗрӗсене!

Хӗрарӑм сасси—Шакка, Микиш, хытӑрах. Мӗн кӑнтӑрлаҙҙен те уҫмаҫҫӗ. (Стсенӑ хыҫӗнҙе тата хытӑрах шаккаҫҫӗ, анҙах шалтисем ҫаплах туймаҫҫӗ).

Сасӑ—Турт хытӑрах, Татук аппа!

Хӗрарӑм сасси—Турт хытӑрах, Микиш!

Харӑс—Рас! Рас! Рас! (Алӑк шартлатса уҫӑлса кайат. Шала Микишпа Татук инке кӗреҫҫӗ. Малтанах вӗсем тӗлӗннипе ҫӑварсене кӑна карса пӑрахаҫҫӗ. Иккӗшӗ те пӗр вырӑнтах хытса тӑнӑ. (Паусӑ).

Татук инке (ҙӗтренҙӗк сасӑпа)—Мӗ-мӗ-мӗн ку, Мӗ... мӗ... Микиш?.. А-ӑ... ӑҫта лекрӗмӗр епӗр?

Микиш—Куҫ кӗретех-и ку, йе тӗлӗкре-и епӗр? (Йеррипен пуҫлӑх пуҫӗ патне утса пырса итлесе пӑхат)—Йеӆохха-вохха! Сывлат! Етем пуҫӗ сывлат (ҫтена ҫинҙи „пуҫлӑх“ тенӗ сӑмах ҫине тинкӗрсе пӑхат. Татук инке машшинисткӑ патне ҙӗрне вӗҫҫӗн йӑпшӑнса утса пырса итлесе пӑхат).

Татук инке—И-их, ҫӗр ҫӑтах! Кунӑн та ҙунӗ пур. Йумахра пуӆ епӗр, Микиш?!

Микиш—Тс с... Акӑ пуҫ хускалма пуҫларӗ... (Пуҫлӑха пуҫӗнҙен лӑкаса пӑхат)—Ей, колова! Етем ывӑӆ-хӗрӗнҙенех ӳтленсе пулнӑ-и есӗ, йе сана тӑмран ҫӑрса тунӑ? Тӑмран туман пулсан уҫса кӑтарт хӑвӑн куҫусене. (Пуҫлӑхӑн хӑрах куҫне туртса уҫат).

Пуҫлӑх пуҫӗ—(вӑрӑмӑн анаслат)—А-а-а-е е и-и-й...

Микиш—Аха, сана етем ҙустинҙенех йурса йусманланӑ иккен. (Хытӑ сасӑпа)—Вӑран, йеӆохха та вохха! (Сӗтел ҫине мӗн пур вӑйпа тӑрслаттарса ҫапат. Пуҫлӑх пуҫӗ шартах сиксе ӳксе сасартӑках кӗлетки мӗнӗпех ӳссе ларат те, куҫӗсене ҙышкисемпе йӑвалама пуҫлат.

Татук инке—Ей, майрушка! Ҫитмӗл те ҫиҙӗ тинӗс урлӑ вруҙак-круҙак тухатмӑшсем килсе, ҫитмӗл те ҫиҙӗ кунлӑх тухатса лартман-и сана? (Машшинисткӑна силлесе): йӑраланса тӑр хӑвӑртрах, ҙысласа йар иртен-ҫӳрен хӑнусене.

Машшинисткӑ (пуҫне ҫӗклесе вӑрӑмӑн анаслат)—А-а-а-е-е-и-й...

Пуҫлӑх (хайар сасӑпа)—Сире кам кирлӗ! Камсем есӗр! (Ҙышкипе сӗтел ҫине ҫапат. Ҫекреттар апҙху! Сунаслат. Конвейӗрсем ӗҫлеме пуҫлаҫҫӗ, „дела“ листисем каллех уҫӑлса хупӑнма пуҫлаҫҫӗ. Микишпа Татук инке пуҫлӑх умне пырса тӑраҫҫӗ).

Микиш—Никам та кирлӗ мар пире. Епӗр ҫейӑлккӑсем илме килтӗмӗр.

Пуҫлӑх—Пирӗн ҫейӑлккӑсем ҫук.

Татук инке—Как ҫук? Склат умӗнҙех тӑватӑ машшин ларасҫӗске. Шалта татах та пуртӑр-ха.

Пуçлăх—Пур та, анђах сире вађђи мар.

Татук инке—Кама вађђи?

Пуçлăх—Ăна епĕр йулташлăхсене паратпăр.

Микиш—Колхоссене ашак какри витнă, йеђохха-вохха! Апла пулсан пире мĕншĕн çирĕм çухрăм таран ахалех ханкăртаттарса çўрететĕр?

Пуçлăх—Никам та ђĕнмен сире. Ларас пулатђĕ килте сарăлса.

Микиш—Ей, йеђохха-вохха! Сан çамкуна те тăмран çăрса тунă, те арпа ђыхса тултарнă... Мĕншĕн сырса ђĕнсе йаратăр? Хусамăр ђĕнсе йанă вĕт ха. Акă кур (Микиш кĕсйинђен хут кăларса пуçлăх умне çатлаттарса хурат. Пуçлăх вăл хута тилмĕрсе пăхат)—Обращайтесь к секретарю. (Çекреттарне)—Найдите им реестр исполнений и дайте исчерпывающий ответ. (Микишпа Татук инке çекреттар умне пырса тăраççĕ. Çекреттар Микиш панă хута илсе вуламасăрах сукна хушшине хĕстерсе хурат).

Çекреттар—Ку хута тиректăр сырнă. Кам çырнă вăл тупса патăр сире çейăлккăсем. Епĕ çыхланмастăп ку ĕçе.

Татук инке—А есĕ кам?

Çекреттар—Çейăллккăсем тупса парасси манăн ĕçĕм мар.

Микиш (пуçлăх çине кăтартса)—А вăл кам?

Çекретар —Вăл пухкалттĕр кăна. Вăхăтлăха кăна пуçлăх выранне йулнă.

Татук инке—Советушђине пăхăнатăр-и есĕр, çук и?

Çекреттар—Ун çинђен ыйтса пĕлме ыран килĕр.

Микиш:—Ăçта вара саветушђи?

Çекреттар: Самара кайнă, пĕр 2 кунтан килет. (Татук инкепе Микиш каллех пуçлăх сĕтелĕ умне пыраççĕ).

Микиш—Пулат-и пире машшин, çук-и?

Пуçлăх—Машшинсем валеçесси манăн ĕçĕм мар.

Микиш—Тăмçамка еппин есĕ, урăх нимĕн те мар! Ыран сухана тухмалла, а есĕ пирĕн ĕçе ђăрмантарасшăн. Контрă теççĕ сирĕн пеккисене! йеђохха-вохха!

Пуçлăх (сассине хăпартса)—Есĕ, йулташ, кампа калаçтăн? Пасарта мар вĕт кунта! Каланă сана машшинсем çук тесе, урăх ан ђăрмантар ĕçлеме.

Микиш—Пўрократпа хам та урăх калаçмастăп. Ата, Татук аппа! А сирĕнпе епĕр тепре тĕл пулăпăр-ха (алăка шартлаттарса хупса тухса кайаççĕ).

* * *

— Мĕн тăвăпăр ĕнтĕ хађ?—ыйтрĕ Татук инке Микишран, тула тухсассăн.

— Мĕн тăвăп тетĕн, кĕтес пулат саветушђи килессе.

— Ах, Микиш! Вăраха кайат ку ĕç. Таврăнсан авантарах пулмĕ-ши? Тепĕр икĕ кунтан килнĕ пулăттăмăр...

— Икĕ кунтан кунга лекме пулмаст вара. Çарăмсан алхасма тытăнат. Луђђĕ кĕтĕпĕр, Татук аппа.

— Тавраннă ђух йепле каçса кайăпăр?

— Тен, пăр халех тапранаймĕ-ха. Ирхине йепле те пулин каçкалăпăр. Пуçласа йанă ĕçшĕн пуçа çухатни те пысăк тивлет. Колхос ĕçшĕн епĕ вутпа шыв витĕр тухма хатĕр, йеђохха-воххă'—тавăрђĕ Микиш, ахăлтатса кулса йарса.

---

2. Кам çырнă ку хута?

Кăнтăрла тĕлĕнђе Йуспа Йатрус райĕçтăвкомран таврăнђĕç Питех те пысăк ĕç тутарнă вĕсем районра. Райçĕрпайĕнђен хăватлă хут илсе килнĕ.

„Землю, принадлежащую единоличникам, срочно распределить по едокам"—тесе çырнă çав хутра.

Ђаплăн утса кĕђĕç упполномођђĕннăйсем совета. Унтан претçетаттĕл умне пырса тăрса тӳрех кăларса çатлаттарђĕç районран панă хута.

— Кипиткă! Пире серепене лектеретпĕр терĕр пулĕ те, анђах симĕсрех-ха халĕ. Ав, вула!—тĕллерĕ Йус пӳрнипе хут çине, куçĕсене мăђлаттарса.

— Çавă ĕнтĕ... Рас саккун çук-тăк, мушик çăварне нимĕнле „творккă" та тĕркелесе ђикеймĕн,—шăлат сăмаха Йатрус.

Нумайђђен ăнланаймасăр пăхса ларнă Тимак районран çырнă хут çине. Темиçе хут та вуласа тухрĕ—теççаттитворккă пирки нимĕн те каламан. Хута сахал вĕреннĕ пирки ăнланаймастăп пуљ тесе тата тепĕр хут вулат вăл.

— Ăнланаймастăн? Çапла çав ăнлама йăвăр. Претçетаттĕл пуласси кукăљ сăмси çийесси мар çав вăл... Кипиткă!—тăрăхлат Йус.

— Латнă,—тет Тимак,—раçпиромсă. Çапах та кунта теççаттитворккă çинђен нимĕн те каламан-ха. Тыттарас терĕр пулĕ, йолккипалкки.

Йусăн йанаххисем ђĕтреме пуçларĕç, куçĕсем Тимак çине шăтарас пек пăхаççĕ.

— Так, снађђĕтсă, прет! Çапла иккен. „Утне тивмен—туртине" пулас.

Вула, тăм пуç куçупа! Çав хута та ăнланаймастăн пулсан, мĕншĕн сана претçетаттĕле суйланă?!

— Ăланатăп, санран кайа мар! Неђĕвă вĕрентсе тăрас та,—тавăрат типĕ сасă.

— Йатлаçмасăрах ан вăрçăр ентĕ,—кулкаласа кĕрет тултанах Сурикквăв.—Мĕн уйăрма тытăнтăр капла?

— Ме, вула,—тавăрат Йус сиввĕн.

Тинкĕрсе пăхат машшинпа пиђетленĕ хут çине Суриккăв.

— Кам çырђĕ ку хута?

— Претçетаттĕл.

— Мĕнле претçетаттĕл?

— Райĕçтăвком претçетаттĕлĕ.

— Куçăнах тыттараймăн, тăванăм! Райĕçтăвком претçетаттĕлĕ Титтов, а кунта урăххи ал пуснă.

— Вăл, конешнă, çапла пулĕ те, пирĕн ăçтан пĕлес? Епĕр вĕренмен çынсем, тĕттĕм...—йăраланат Йатрус.

— Ку хута саккунлă хут вырăнне йышăнма пултараймастпăр. Ырă мар шăршă кĕрет ку йапаларан!—касса татрĕ Суриккӑв, райĕçтăвком отношенине портфĕл ăшне персе ҫиксе. Унтан претçетаттĕл йенне çавăрăнҫĕ:

— Халех Шенталла стантсине çитиҫҫен лав хатĕрле. Хам кайатăп ку ĕçе йĕрлемешкĕн.

Йус пиҫĕ çинҫе йун выҫама пуçларĕ.

Вунпилĕк минутрах Суриккӑв стантсăна вĕçтерҫĕ. Çав каçах района çитрĕ Ҫи малтан райкома кĕрсе тухрĕ, унтан райĕçтăвкома пыҫĕ. Райĕçтăвкомра саççетани. Араттăр каласа пĕтерессе кĕтмесĕрех персе кĕрсе кайрĕ Суриккӑв саççетанийе. Унтан райком çекреттарĕ умне пыҫĕ те портфĕлĕнҫен хайхи хута кăларса тыттарҫĕ.

— Мĕн тăватăр есĕр? Мĕншĕн плана срыват тăватăр?

Токлатҫĕк калаçма ҫарăнҫĕ.

— Мĕн пулнă?—ыйтат райком çекреттарĕ.

— Партти политтĕкне улăштарма кам ирĕк панă вĕсене? Партти политтĕкĕшĕн кам ответ тытат: орканисатси-и, йе райĕçтăвкомран çак хута çыракан оппортуниссем-и?

Райком çекреттарĕ Суриккӑва ăнланҫĕ.

— Кам çырнă ку хута?—ыйтрĕ вăл РĔК претçетаттĕлĕнҫен. Претçетаттĕл отношени çинҫи потпĕçе пăхрĕ.

— Акроном Алексçейĕв алă пуснă.

— Халех ҫĕнтерсе кил ăна кунта.

РĔК претçетаттĕлĕ саççетанирен тухса кайрĕ. Токлатҫĕк каллах калаçма тытăнҫĕ. Райком çекреттарĕ ăна пӳлҫĕ:

— Тăхта, Миткин йулташ, вунпилĕк минутлăха перерыв туса илер.

Токлатҫĕк ҫарăнҫĕ. Крафин ăшĕнҫен çур стаккан шыв тултарса ĕçрĕ. Саççетанири йулташсем хăшĕ-пĕрисем тулалла тухрĕç, хăшĕсем пирускисене тивретсе йаҫĕç.

— Мĕнле пулҫĕ-ха ку ĕç?—ыйтат Суриккӑв райком çекреттарĕнҫен.

Райком çекретарĕ ҫĕнмест. Йăвăр шухăша путнă вăл самантлăха. «Хресҫенсене пĕрлешӳллĕ ĕçе хăнăхтарас тесе партти теççаттитворккăсем тума хушнă. Райĕçтăвкомри оппортуниссем райкомăн тирективне улăштараççĕ... Вретиттĕлствă...» ункăланҫĕ шухăш пуç тавра. Шухăш çинех Алексçейĕв акроном çитсе кĕҫĕ. Райком çекреттарĕ ăна сĕтел çинҫе выртакан хут çиме тĕллесе кăтартрĕ.

— Есĕ çырнă-и?

— Епĕ, вара мĕн?

— Как так мĕн!—кăшкăрса тăкрĕ райком çекреттарĕ хайаррăн. Пурте шартах сиксе илҍĕç.

— Никкитин йулташ, епĕ нимĕн те ăнланаймастăп.

— Йепле пултаратăн-ха есĕ райкомăн тирективĕсене улăштармашкăн?!

— Епĕ нимĕн те улăштарман.

— Ку хута мĕн шутпа çыртăн?

Алексçейĕв акроном Никиттин умĕнҍи хута илсе вуласа тухрĕ.

— Ну, кала!—ыйтат Никиттин.

— Ку хута çырнинҍен нимĕн те тĕлĕнмелли çук.—астуса илҍĕ Алексçейĕв.—Ĕçĕ çапла пулҍĕ: ĕнер Ваççилйĕвккă поççолкинҍен икĕ хресҍен килҍĕç. Йалта интивитуаљнăй çектăрсене çĕр памаççĕ, вĕсем çинҍе шутланса тăракан çĕре валеçме ҍарса тăраççĕ,—тесе ӳпкелешрĕç. Манран хут çырса пама ыйтрĕç. Вара епĕ çыртăм та патăм, урăх нимĕн те çук...

— Мĕнле-ха есĕ вĕсен сăмахне итлеме пултаратăн? Санăн проттоккол çине пăхмаллаҍҍĕ...—пӳлет Сурикăв.

— Мĕнле проттоккол çине?

— Вĕсене халăх пуххин проттокколĕн ӳкерҍĕкне панă. Çав ӳкерҍĕк тăрăх татса памалла пулнă санăн вĕсен ĕçне.

— Çу-ук, мана вĕсем нийепле ӳкерҍĕк те кăтартман.

— Апла пулсан йалсоветĕнҍен панă хут çине те пулин пăхас пулнă.

— Нимĕнле хут та кăтартман вĕсем мана. Епĕ вĕсенҍен: „Йалсоветĕнҍен мĕнле те пулин ĕнетерӳ пур-и?" тесе ыйтрăм.— Нимĕнле хут та памарĕç пире,—терĕç вĕсем.

— Кашнин сăмахне тӳрех ĕненес пулмаст çав, Алексçейĕв йулташ. Есĕ комунис. Сана партти полљшевикла тĕрĕслĕхпе ĕçлессе шанса пысăк ĕç панă. А есĕ клас тăшманĕн сĕрекине лекетĕн. Сталă пыт, тăшмансем санран та ҍейерех пулнă,—ăнлантарат Никиттин.

— А мĕн тунă-ха вэра вĕсем?

— Пĕтĕм çураки планне срыват тунă, акă мĕн! Партти умĕнҍе есĕ пысăк айăпа кĕтĕн. Хăвăн йăнăшна халех тӳрлетме хушатпăр.

Алексçейĕв хыпаланса каласçма пуçларĕ.

— Пĕлмен, пĕлмен... Пĕлнĕ пулсан тапсах кăларса йанă пулăттăм. Йалсоветне оппортунисла елементсем кĕрсе ларса уйрăм хуçалăхсем çине çаврăнса та пăхмаççĕ пуљ тесе шутларăм епĕ. Ҍăнахах та тăшмансем пирĕнтен ҍейерех иккен. Халех тухса кайатăп, Никиттин йулташ, Ваççилйĕвккă поççолккине. Хам ответлăхăмпа теççаттитворккăсем орканисатсилесе килетĕп.

— Пĕçернĕ пăтта антарса çийесех пулат ĕнтĕ. Ата, йара пар!— тавăрҍĕ Никиттин. Унăн аллинҍе шăнкрав шăнкăртатрĕ. Уçăлма тухнисем пуçтарăнҍĕç. Токлатҍĕк каллах каласçма тытăнҍĕ. Сурикăвпа Алексçейĕв райĕçтăвкомран тухса стантсăналла утрĕç.

3. Йăшăл-л!.. хумханса йулђĕ пăр.

Шурă мамăк пек лăпсăрка кăтра пĕлĕтсем йухаççĕ тĕпсĕр тӳпе тăрăх. Икĕ талăк хушши хĕвел пĕр лăш курмасăр пĕçертрĕ тĕнђе питне. Пĕђĕк йухан шывсем кĕрлесе çĕмĕрттерсе йухса пырса кĕђĕç Çарăмсана. Çулсем кĕсел пек çăрăлса пĕтрĕç. Виççĕмĕш кунне йăвăррăн анасласа илђĕ—тĕлĕрме пуçларĕ. Хăйĕн кăтра пуçне ђеркуççи çине хуђĕ те, таçта лерс, вăрман уçланкинђе, пĕђĕк ађа пек лăпкăн çывăрса кайрĕ. Кăнтăрла тĕлĕнђе мухтанђăк хĕвел йăвăр тăхлан пĕлĕтсем хушшипе хăйĕн ылттăн шăлĕсене йĕрсе кăтартрĕ, унган каллах куçран çухалђĕ.

Вăрман хыçĕнђен хуп-хура пĕлĕтсем капланса тухрĕç.

Икĕ кун вăрман хыçнелле пăхса ларђĕç Микишпа Татук инке, МТС склађĕ умĕнђен. Виççĕмĕш кунĕнђе Татук инке кĕсел пек çул тăрăх вăрмантан тийевлĕ лавсем мĕшĕлтетсе тухнине асăрхарĕ.

— Пăх-ха, Микиш, вăрман йенелле, тийевлĕ лавсем килеççĕ.

— Ăçта? çук-çке?

— Авă, пăх уçланкăн сулахай йенĕпе. Куратăн-и?

— Нимĕн те çук.

— Ех, куç та çак санăн! Епĕ суккăр куçăмпах куртăм, вăл çаплах кураймаст. Пăх еппин ман пӳрне тăрăх!—Татук инке çул тăрăх пӳрнипе тĕллесе кăтартрĕ.

— Йест! Куртăм, йеђохха-вохха! Кунталла килеççĕ, машшинсем тийенĕ. Пĕрре... иккĕ... виççĕ... пилĕк лав.

— МТС саветушђийĕ пулсан аванђђĕ ĕнтĕ.

— Так и йест. МТС тиректăрĕ. Машшинсем тийесе килет. Ну халĕ, Татук инке, ĕç тухрĕ, йеђохха-вохха!—хавасланса ӳкрĕ Микиш. Тӳсеймесĕр вăл вырăнган сиксе тăрса тийевлĕ лявсене хирĕç ђупма пуçларĕ. Пĕр самантрах Микиш пĕђĕк вар сăмсакне кĕрсе куçран çухалђĕ. Тепĕр çур сехетрен тийевлĕ лавсем МТС склађĕ умне пырса ђарăнђĕç.

МТС тиректăрĕ вăтам кĕлеткеллĕ вăйпитти çын. Преçент наккиткă уртса йана вăл хулпуççийĕсем урлă. Хăй пилĕк таран лађкам шыва кĕрсе ӳкнĕ

— Ăçта йĕпенсе пĕтрĕн ку таранђђен?—ыйтат Микиш кулкаласа.

— Варсемпе васансенђе—шĕлкĕш. Шĕлкĕш урлă çаплипех каçса килмелле пулђĕ. Сирĕн хăвăрăн та иртерех килмелле пулнă машшинсем илме. Халĕ çул питĕ нађар

— Иккĕмĕш талăк ларатпăр ĕнтĕ пусма ларнă кăвакал пек.

— Мĕн шаккаса ларатăр?

— Машшинсем çук.

— Йепле çук?

— Çаплах çук. Пухкалттĕр калаçасшăн та мар, йеђохха-вохха.

— Айта!—терĕ тиректăр хулăм саспа.

Вĕсем кăнтселере кĕрсе кайрĕç.

— Рапоттайĕш, кăнтсеђарскайа крыссă?—ыйтрĕ тиректăр пухкалтĕра тăрăхласа.

— Рат старатсă,—ответлерĕ лешĕ, тиректăр умĕнђе ђĕрĕп пек хутланса кĕрсе. Правленире ĕçлекен согругнĕксем пухкалттĕр çине куç айĕпе вăрттăн пăхса, лĕхлетсе кулса илђĕç.

— Есĕ мĕншĕн çирĕмпилĕк çухрăмран килнĕ çынсене ик-виç кун хушши тытатăн, йытă?!

— Виноват, Йак Митриђ. Ман патăма никам та килмен...—тавăрат пухкалтĕр.

—Ех, йытă-ă!—кăшкăрса пăрахрĕ тиректăр,—колхоссем ыранпайан акана тухмалла, а есĕ волоккитă хутăрне хутăратăн. Пайанах вырăнтан кăларса йаратăп.

—Йак Митриђ! Тархасшăн лăпланăр... Епĕ нимĕн те айăплă мар, снайĕттĕли... Вăл хăй килсе манпала тӳрех харкашма тытăнђĕ.—Тавай пире вунпилĕк çейăлккă!—тет, снайĕттĕли. Епĕ, паллах, сирĕнсĕр тума пултараймарăм ку ĕçе..

—Сысна çури есе, йеђоххă-воххă! Контрă! Паккетламалла сирĕн пеккисене и—ђул мишок ăшне!—хĕремесленсе кăшкăрма пуçларĕ Микиш. Тиректăр ăна лăплантарма тытăнђĕ:

—Есĕ, йулташ, ан сапалан вăл пӳрократ пирки. Унпала мĕн тумаллине епĕ хамах пĕлетĕп. Рапотнĕксем çук пирки çеç пĕр самантлăха ђăткаларăмăр вăл крыссăна...

Тиректăр каллех пухкалттĕр йеннелле çавăрăнђĕ:

—Хушнă ĕçе тĕплĕн тăвас пулат. Тумастăн пулсан—кирлĕ мар. Сапотташнĕксене тытмастпăр епĕр. Хăвăртрах парса йар Ваççилйĕвккă колхосне икĕ çейăлккă!

Çапăнса ӳкес пек сирпĕнсе тухрĕ пухкалттĕр склата. Пĕр самантрах Микишпа Татук инке лавсем çине икĕ çейăлккă тийесе лартрĕç. Пухкалттĕр кăнтселере кĕђĕ. Микишпа Татук инке вăрăм çула тухрĕç

***

«Çиђĕ сут» сăрђĕ çине хăпарсанах Çарăмсан çырми ывăç тупанĕ çинђи пек курăнса выртат. Стантсă çулĕ каçса кайнă тĕлте вăл пысăк куккăр туса илет. Куккăртан анаталла пăр тăнђах тасалнă. Пĕђĕк татăксем кăна çыран хĕррипе тăлăхăн йухаççĕ анаталла.

Микишпа Татук инке «Çиђĕ сут» сăрђĕ çине хăпарса çитнĕ çĕре икĕ пушăлла лав Çарăмсан хĕррине çитсе ђарăнђĕç.

—Пăх, Татук аппа, телей пулат. Çынсем те каçса çӳреççĕ-ха Çарăмсан урлă.

—Çук, Микиш, каçаймаççĕ. Авă çитсе ђарăнђĕç. Микиш тинкĕререх пăхрĕ çул тăрăх.

Пушăлла лавсем ђăнахах та каçса кайаймарĕç. Пĕртакçеç кĕтсе тăђĕç те, вĕсем сулахай йенђи сул йуппипе таврăнса калла уттарђĕç.

—Ах, Микиш! Пустуйах пайан тапранса тухрăмăр. Нийепле те каçса кайайас çук епĕр ку лавсемпе. Луђђĕ ыран ирхине шăнла çăмăлтарах каçса кайнă пулăттăмăр,--ӳпкелет Татук инке.

—Тупнă шухăшламалли. Путсассăн путăпăр, йеђоххă-воххă Анђах ырана йулма нийепле те май çук. Халĕ те ахалех икĕ талăк ĕнтĕ лартăмăр. Сухана та тухрĕç пулĕ ĕнтĕ... йеђоххă-воххă.

Çарăмсан хăрушлăхĕ Микиша нимĕн те мар. Унăн ђунĕ çак самантрах колхосра. Халĕ вăл кайăк пулсा вĕçсе ӳкĕђђĕ поççолккăна, колхосшăн кĕрешме. Çураки çĕнтерĕвĕ машшинсене вăхăтра çитерниньђен килнине пĕлет вăл. Çавăнпа та ăна пайан нимĕнле ђăрмав та тытса ђарайас çук.

Çав тери пысăк хуранта вĕренĕ пек палкаса çаврăнат Çарăмсан шывĕ. Нимле вăй, нимĕнле иксĕлми хăват та лăплантарайас çук пек ăна. Çул касса кайакан вырăнта пăр татăкĕсем пĕђĕккĕн катăла-катăла кайаççĕ. Ђăшкăрса, тулхăрса выртакан йухан шыв вăл пăр тĕпренђĕкĕсене авăра персе ђикет, пысăк варанкка майлă шăтăксем витĕр çăтса тăрат.

Кĕпер... Çарăмсан урлă—çанталăк кĕперĕ. Анђах хаљ вăл ирĕлсе хавшаса çитнĕ, хăрах йăран сарлакĕш кана тăрса йулнă. Акă хаљ çав кĕпер арканса тĕпренсе кайса пысăк авăра путса çухалассӑн туйăнат.

Темĕнле çирĕп ђĕреллĕ сынăн та хал çитеймен пулĕнђĕ çак самантра тĕрексĕр хавшак пăр урлă касса каймашкăн. Çапах та Микиш нимĕн ђухлĕ те шухăшласа тăмарĕ:

—Ата, Татук инке, кĕрсе кай çуран ку лашипе. Ђĕлпĕрĕнђен çавăт. Ку кĕсри вăйсăртарах, манăн хыçалтан тĕксе пырас пулат.

Татук инке шиклене-шикленех кĕрсе кайрĕ пăр çине. Малтан çурран хăйçеç касса пăхасшăн пулђĕ. Вăрахăн, йеррипен пускаласа çыранăн тепĕр йенне тухса тăђĕ те, вăл Микиш çине çаврăнса пăхрĕ.

—Тархасшăн, Микиш, ан кӳрт лавсене. Пĕтетĕн!—тилмĕрет вăл.

Шикленнине кăтартас мар тесе Микиш шӳт тăванçи пулат.

—Ек-кей, тупнă хăрамалли. Ку кĕпер урлă халĕ пуйăс касса кайсан та ђăтмалла-ха, йеђоххă-воххă. Есĕ каçнине ниуштă лашасем каçаймĕç. Лашасем санран çăмăлтарах ђат,—мăкăртатат вăл.

Микиш урапасене тĕрĕслерĕ. Çирĕп. Машшинсене лайăхах çыхса лартнă. Малти лашине пусĕнђен çавăтрĕ те, Микиш кĕпер çине илсе кĕме тытăнђĕ.

—Ну-ну, çавраçкă, пош шо ол!

Лаша хăрах урипе пăр çине пуссанах пăр çатăрт туса çурăлђĕ.

—Харт!—турĕ те хăла кĕсре, кайалла сиксе ӳкрĕ. Микиш ăна татах пусĕнђен пырса çавăтрĕ. Мăйĕнђен супăрласа йăпатрĕ, унтан каллех лашине тилхепе вĕççĕн çавăтса хăй пăр çине кĕрсе тăђĕ.

—Ну-у, çавраçкă, ан хăра!

Хăла кĕсре пĕтĕм çанçурăмĕпе ђĕтренсе кĕрсе кайрĕ пăр çине Микиш ăна вăрахăн йăпатса çыран хĕррине çавăтса кăларђĕ. Тепĕр лаши патне калла каçнă ђух пăр вырăнтан хускалнă пек

туйăнҫĕ Микиша. Вăл хыпаланса тепĕр лавне те илсе кӳртрĕ пăр çине...

Микиш çинҫен нимĕн куç сиктермесĕр пăхса таракан Татук инке сасартăк хăрушă сасăпа çари-и! кăшкăрса йаҫĕ.

—Микиш, тух хăвăртрах! Çăлăн ҫасрах! Пĕгетĕн! Пусна çийетĕн!

Хыçалтан пăр латăртатса çурăла-çурăла кайрĕ. Микиш йăпăр-йапăр урапа хыçнелле тухрĕ те лашине пушăпа тиверҫĕ. Хăй урапа хыçĕнҫен тĕртсе ĕрлеме тытăнҫĕ.

—Ей пойтот! Ей пойтот!

—Ей веçот! Йешҫо рас!

—Ррас!!!

Ырхан кĕсре çыран хĕрринелле тапса сикрĕ...

—Йăшăл-л!—хумханса йулҫĕ пăр лав хыçĕнҫен. Микиш пĕр пĕҫĕк лаптăк варрине тăрса йулҫĕ. Çарăмсанăн хайар, хăватлă хумĕсем Микиша пур йенҫен те çавăрса илсе анаталла йухтарса анса кайрĕç.

Сывă пул, Татук аппа, сывă пул! Мĕн пуласси пулҫĕ, йеҫоххă-воххă... Каруксемпе Йуссенҫен ан парăнăр!—кăшкăрса анса кайрĕ Микиш, карттусĕпе сулласа. Анҫах Татук инке ăна курмарĕ те, илтеймерĕ те. Пуçран вут сыппипе çапнă пек анкăминкĕленсе, вăл кĕсел пек йепресе тăракан пылҫăклă çул çине тĕшĕрĕлсе анҫĕ...

---

4. Кам улталанă? Кама?

Ирĕке вĕреннĕ хайар йытта сăнҫăрпа кăкарса хуратăн та, вăл ниçта кайса кĕрейми туллашат Сăнҫăра туртса татас пек сике-сике ӳкет, асав шăлĕсемпе кышлат çăра тимĕре, вĕҫĕрхенсе çиг-нипе сансăрăн улласа кăшкăрса йарат.

Сăнҫăрти йытă пекех пайан Йус та. Сурикăвпа Алекçейĕв умĕнҫе сиксе туллашат, йĕпе хулăм тутисене мăкăртаттарат, сурҫăкĕсене сирпĕтет.

Сурикăвпа Алекçейĕв ăна пĕтĕмпех хĕстерсе çитерҫĕç. Ик-виç сехет хушши ниçталла пăркаланма памасăр тĕпҫеççĕ.

—Кала ырă сăмахпа ыйтнă ҫух: Кам шăхлиҫипе ташлатăн?—ыйтат Сурикăв.

—Конешнă сирĕн шăхлиҫăрпа мар. Кипиткă!—тавăрат Йус.

—Краштанин Йус! Епĕр санпала выҫама шутламастпăр. Йе есĕ пире халех кайса паратăн, йе çтена çумне кайса тăратăн...

Сурикăв кĕсйинҫен праунник кăларҫĕ.

—Хăратаймăр!—тавăрат Йус хăнк та тумасăр,—сăмахпа хăратайманнине пăшалпа та хăратаймăр. Ирĕксĕрлесе пурпĕрех нимĕн те калаттарайас çук есĕр мана... Кипиткă!

—Апла пулсан ирĕкӳпе кала.

—Нимĕн те каламалли çук манăн.

Районçтăвкомра мĕншĕн улталарăн?

—Кам улталанă? Кама?!—кăшкăрат Йус,—хресҫенсем власа

улталанă-и, йе влаç хресђенсене улталанă? Сотсиалисăм мар креппит тăватăр есĕр хресђенсене! Столыппинсем есĕр, акă, мĕн!

—Ех, тăванăм, ытлашши шултăран калаçатăнçке. Ђĕлхӳне кăшт асăрхарах выђангаркала! —пӳлет Алексçейĕв.

—Нимĕн асăрхамалли те çук. Пĕтĕм тĕнђе илгĕнмелле кăшкăрсан та тĕрĕслĕхшĕн нимĕн те тăваймăр.

—Кăшкăраймăн. Пырнă тĕвĕ ларĕ.

—Кăшкăратăп! Ак халех пĕтĕм поççолккă хускалĕ. Сирĕн колхосăртан тĕпренђĕксем кăна сирпĕнĕç.

—Аха, ах акă мĕн! Есĕ апла иккен! Тавгапуç, тăванăм, тĕрĕслĕхе пытарманшăн. Санпала урăхларах ђĕлхепе калаçса пăхăпăр епĕр—куçне хĕсет Алексçейĕв.

—Кала, суккин сын, ăçта проттоккол?!

—Манра мар, кипиткă..

—Каламастăн-и есĕ?

—Çук!

—Каламастăнах-и?

—Нимĕн те пĕлеймĕр...

Суриккăв Йуса праунинкпа тĕллесе кĕтесселле хĕстерсе лартрĕ. Лешĕ калла ђаксă алăк патнелле шăвăнма тытăнђĕ.

—Йулашки хут ыйтатăп: паратăн-и проттоккола, çук-и?!—кăшкăрса пăрахрĕ хайар сасăпа Суриккăв. Анђах Йус кушак аçи пек йаках сиксе ӳксе алăкран тухса сирпĕнђĕ.—Кипиткă!—тени çеç илтĕнсе йулђĕ ун хыçĕнђен. Суриккăв çара пуçăнах вĕçсе тухрĕ ун хыççăн. Урам хушшинђе хăваласа çитсе тытрĕ вăл сăнђăра татса тарнă Йуса. Пылђăклă çул çине тытăçса ӳкрĕç Суриккăвпа Йус. Харкашнă сасса илтсе халăх ђупса тухрĕ урама. Йуспа Сурриккăва пĕр-пĕринђен аран тытса уйăрђĕç. Ик-виçĕ колхоçнĕк Йуса каллех йалсоветне тытса илсе кайрĕç. Çавăнтах претçетаттĕле ђĕнме йађĕç.

—Мĕн пулнă?—ыйтрĕ Тимак, пăшкăлтатса пырса кĕрсе.

—Çак кайăка района ăсатмалла.

„Аранах алла лекрĕ“ шухăшларĕ претçетатĕл. Унтан Сурриккăв йеннелле ытăрлă куç хĕсрĕ.

— Кайса опăск тăвас пулат. Пытарса хунă тырă нумай теççĕ.

— Епĕ хирĕç мар. Атăр еппин.

— Мĕн шăршласа çӳретĕр?—ыйтрĕ Йус çул çинђе.

— Ата, ут! Çитсессĕн курăн, тавăрђĕ Тимак ун çине пăхмасăрах.

Йус килне çитсен Сурриккăв ун умне тӳрех çакнашкал ыйту кăларса лартрĕ:

— Ну, товариш Йус, кала, хăван ђĕлхӳпе; мĕн ђухлĕ санăн пытарса хунă тырру?

Шырăр. Тупсассăн сирĕн пулĕ?

— Тыррупа кăна хăтăлаймăн. Ĕç шаларах кайĕ, асăрхаттарат, Тимак.

— Ватă çерçийе хывăхпа улталаймăн. Кипиткă!

— Пытарса хунă тырра ирĕккĕн кăларса парас пулат, краштанин Йус. Саккун çавăн пек хушат.

— Саккун ухмахсемшĕн çырмаççĕ. Анҫах ухмахĕ хăй саккун çырса кăларат пулсан—нимĕн калаçмалли те çук вара!—тавăрҫĕ Йус, шăл хушшисене хăйраса.

— Нимĕн те çук тетĕн еппин. Апла пулсан халех ухтарма тытăнатпăр. Пар ампар уççисене!

Йус пилĕк пиçхийĕ çумĕнҫен пĕр çыхă çăраççи салатса вĕçерсе паҫĕ.

— Мейĕр, савăнăр! Вăрă-хурахсем есĕр!

Йуса хирĕç никам та пĕр сăмах ҫĕнекен пулмарĕ. Претçетаттĕлпе упполномоҫҫĕннăйсем ухтарма тытăнҫĕç.

Йусăн мĕн пурĕ виçĕ кĕлет. Çав виçĕ кĕлетрен пĕринҫен те пĕр пĕрҫĕ тырă та тупăнмарĕ.

— Аçта ҫиксе пĕтертĕн, Йус, тырруна?

— Манăн тырă çук. Пролеттарин килкĕн патшалăхĕ шăлса кайрĕ.

— Ан йермеш, краштанин. Тупса парăпăр. Хуна та, патшалăха ваҫҫи те çителĕклĕ-ха санăн тырру,—тавăрҫĕ Тимак.

— Вăтамсене раскулаҫҫĕт тумалли саккун кăлартăр пулсан—хатланăр.

— Пĕлетпĕр есĕ йепле вăтамне...

Килти çуртсене ухтарса пĕтернĕ хыççăн анкартине тухса кайрĕç. Йĕтем çинҫе пушкĕлте капанĕсем çиҫĕ пысăк капан йăтăнса лараççĕ. Арлаççи пуçне тĕктерсе улăмури купаланă.

— Ку капансене хăçан çапнă?—ыйтрĕ Алексçейĕв.

— Пĕлтĕр кĕркунне.

— Миçе пăт тухнă санăн тырру мĕн пурĕ?

— Виççĕр пăт.

— Виççĕр мар, çиҫçĕр пăт ытлашшипех тухнă унăн тырри!—пĕлҫĕ претçетаттĕл,—тата пĕлтĕрхи тырри тепĕр çавăн ҫухлĕ.

«Акă кама кулак тумалла пулнă», шутларĕ Сурикквăв хăйĕн ăшĕнҫе.

— Йус патшалăха тырă мĕн ҫухлĕ панă?—ыйтрĕ Алексçейĕв претçетаттĕлтен.

— Вăтам хуçалăх тесе кăçал ун çине мĕн пурĕ те 80 пăт кăна хунăҫҫĕ. Ăна та вăл тырă çук тесе тўлсе татмарĕ,—ответлерĕ претçетаттĕл.

Çак вăхăтра Сурикквăв капанран пĕр кĕлтине туртса кăларҫĕ. Сулăмлă кĕлте. Пуҫаххисем патăр-патăр тырăллă. Çурри те шĕкĕлҫенмен иккен тулă пуҫаххисем.

— Ей, сăват, мĕншĕн капанусене çапмастăн есĕ?

Йус нимĕн те шарламаст.

— Капансене пĕтĕмпех сўтсе пăхас пулат,—терĕ Сурикквăв.

Поҫаттойсем ĕçлеме те тытăнҫĕç.

Капан тăррисене пушкĕлтесемпе тăрланă. Унтан туллирех кĕлтесем тухма пуçларĕç. Капан тĕпнерехри кĕлтесене паҫах та çап-

мэн. Пĕр капанĕ варрине ђуспа пысăк пурак туса лартнă. Çав пурака хĕррисемпе тан тĕш тырă тултарнă, çийĕнђен сăрансемпе витсе хунă.

Арлаççи пусĕнђи улăм купи айĕнђен сăвăрман тырă йатăнса тухрĕ. Пођаттойсем пĕтĕм улăм купине аркатма тытăнђĕç.

Иусăн сăнсăпађĕ кĕрхи сархайнă çўлçĕ пек тĕссĕрленсе кайрĕ. Унăн сасси йăвашланђĕ, тапхăртан-тахăра çавăртарса килекен çилли лăпланђĕ.

— Сурикқăв йулташ! Хăвăрах пĕлетĕр хресђен кăмăлне. Хăратаççĕ пире—пăртакçах пурнас килет. Капан айĕнђи тыррине хĕлле ваљљи хăварнăђђĕ, а лешне сăвăрма алă çитеймерĕ.

— Латнă. Есĕ каламасăрах пĕлетпĕр.

— Суриккăв йулташ! Тархасшăн хĕрхенĕр. Ыранах колхоса кĕретеп. Ухмахпа турăм. Çемйе.. ађасем... хĕрхенĕр тархасшăн...

— Йурĕ. Урăх калаçмăпăр! Калаçса килленнĕ ĕнтĕ санпалла,— таварђĕ Суриккăв. Унтан сăвăрман тырра сăвăрма, çапманнине çапса тасатма хушрĕ. Хăйсем Алексейĕвпа иккĕн актă çырма ларђĕç...

Хĕвел аниђђенех икĕ молоттилккă пĕр ђарăнмасăр ĕçлерĕ Йус йĕтемĕ çинђе. Çапман тыррисене çапса пĕтерђĕç, улăм айĕнђен тупнине сăвăрса тасатрĕç. 720 пăт тĕш тырă тухрĕ пĕтĕмпе.

Каç пуласпа Суриккăв Алексейĕва вăрттăн паккет тыттарђĕ.

— Ме, пурте çак паккетра. Çул çинђе Йуса алăран ан вĕçерт иксĕре пĕрле йаратăп. Поççолккăри ĕçсене хамăрах майлаштарăпăр.

Тĕттĕм пулса çитсессĕн Йуса икĕ лашапа йалтан илсе тухса кайрĕç. Поççолккăри мушиксем тухмарĕç пайан ăна ăсатмашкăн уй-хапхине. Тĕлĕнмелле хыпар çинђен тĕплĕреххĕн ыйтса пĕлмешкĕн вĕсем совета пухăнса ларђĕç.

— Вот пыр та калаç сыннупа! Епĕр ăна вăтам хресђен тесе шутласа пурнатпăр. А вăл кулакран та кулак иккен.

— Йалти сынна пĕлетпĕр вĕт. Сахал ђиксе пурăнђĕ-и вăл сутăпа. Тырăпа, вăрманпа, лашасемпе çпеккуљатси туса пуйрĕ вĕт вăл...

— Çапла ђейе çав вĕсем.

— Мĕн каласси пур. Пире пăтратса кăна пурăнаççĕ.

— Халĕ хăйĕн те шалђи тулђĕ.

— Çавă кирлĕ ăна!

— Лайăхрах хĕстерес пулат ун пек йуссене саккунăн.

—Иатрусне те кирлĕ!

— Çук, ăна опишат тумалла мар. Вăл ђăнахах та сретњаках ĕнтĕ. Йуспа Карук ултавĕпе кăна вăл пĕртакçех ухмахланкаларĕ. Ăна пирĕн мĕн пулсан та хамăр майлă çавăрас пулат,—ăнлантарат мушиксене претçетаттĕл.

Нумайђђен калаçса ларђĕç çак каç мушиксем советра. Иккĕленсе тăракансенђен нумайăшĕсем колхос йеннелле çаврăнђĕç.

Теççаттитворккăсем çинђен тата тепĕр хут ăнлантарса пађĕ Суриккăв хресђенсене. Йусăн ултавлă ĕçĕсем пĕтĕмпех куç умне

тухса тăђĕç. Хресђенсем хăйсем улталаннине сисрĕç, туйса илђĕç. Çавăнпа вĕсем кăçалхи çуракинђе вуншар килпе пĕрлешсе ĕçлессине хапăл тусах йышăнђĕç.

5. Кĕмсĕрт!.. илтĕнђĕ сасă.

Тĕксĕм ђўређе хушăкĕсенђен ирхи шуçăм йăпшăнса кĕђĕ. Çамрăк уйăх—ылттăн кăвакал—шултăракана лăпсăрка пĕлĕт саплăкĕ хушшине пытанђĕ. Пахђари хурăнсем çурхи хаваслăхпа сывлаççĕ. Çурхи хаваслăхпах сывлат кĕçĕр йалсовет претçетаттĕлĕ Каççăр Тимак та. Кăкрисем унăн паттăрăн çĕкленеççĕ, ђĕри мăлатукпа шакканă пек ĕçлет, витери ăйăр пек тапăртатат.

Пĕђђенех ларат вăл советра. Каçхине унăн киле кайас килмерĕ. Çавăнпа ђăлт куç хупмасăр иртерђĕ вăл кĕçĕрхи çĕре. Пуçри шухăшсем хăвăрт-хăвăрт улшăнаççĕ. Аса илет вăл иртнĕ кунсене, аса илет пайанхи тапхăра. Халђхи кунсем ăна çурхи ђеђек пек савăнтараççĕ. Халђхи кунсем унăн кăкрине хастарлăх вĕрсе кўртрĕç, ăна класла кĕрешĕве илсе тухрĕç. Пĕтĕм массăпа пĕрле вăл çак кĕрешўпе пысăк çĕнтерў турĕ, клас тăшманĕн претставиттĕлне—Йуса çăварлăхларĕ, массăна хăй майлă çавăрђĕ. Çапах та кĕрешў пĕтмен-ха. Татăклă çĕнгерўсем малта тăраççĕ. Вăл çĕнтерўсене алла илесшĕн тата ытларах кĕрешме тивĕ...

Çавăнтах ун куçĕ умне йалти кĕрешўç ĕсен сăнсăпађĕсем тухса тăраççĕ. Пĕр йенђе кулаксем: Карук, Йус, вĕсен йыттисем. Тепĕр йенђе çĕнĕ йалăн паттăрĕсем: Микиш, Сурикkăв, Татук инке, Йатарин пиђђе, Елеçук... Анђах ăçта çухалђĕç-ха çак икĕ кун хушшинђе Микишпа Татук инке? Мĕншĕн çаплах килмеççĕ? Мĕншĕн манса кайрĕç вĕсем татăклă кĕрешў çинђен? Йе мĕнле те пулин инкек пулнă пулсан? Йе ăçта та пулин, пĕр-пĕр васан вĕçĕнђе, вĕсене кулаксем ђăмласа тăкрĕç пулсан... Çук! Микиш тăшмана парăнас çук! Кĕрешў çинђен те манас çук Микиш. Çук! Вĕсем манман! Вĕсем халех çитеççĕ. Çул нађар пирки, йе урăх сăлтавсемпе пĕртакçех ђаранса тăмалла пулнă пулĕ...

Çапла шухăшласа ларнă вăхăтрах таçтан лерен, пахђасем хыçĕнђен, сасартăк темĕскер кĕмсĕрт! туни илтĕнђĕ. Тимак шартах сиксе тăђĕ те, урамалла ђупса тухрĕ. Ту вĕçĕнђе йытăсем вĕреççĕ, такама татса хыпас пек çĕмĕрлеççĕ. Пĕртак тăрсан йытăсем лăпланђĕç.

—Кĕмсĕрт!—илтĕнђĕ каллех сасă.

Тимак ђарăнђĕ, итлеме пуçларĕ.

— Кĕмсĕрт-кемсĕрт!—йăтăнса анђĕ темскер, тахăшин сарайĕ хыçĕнђен. Каллех йытăсем лăйлама тытăнђĕç.

— Мĕн шуйттанĕ ку?

Тимак тăвалла утрĕ.

Хăлхисене ђанках тăратнă вăл, унăн-кунăн пăхкаласа пырат, кашни сассах тинкĕрсе итлет.

Акă вăл Йатрус тĕлне çитрĕ.

Пӳртре такам ӗмӗлтетнӗ пек туйӑнҫӗ.

Тимак ҫаранҫӗ Тинкӗрсе пӑхма пуҫларӗ.

— Кӗмсерт!—тӑват пӳрт урайӗ.

— Мӑкӑр-мӑкӑр-мӑкӑр...—калаҫаҫҫӗ шалта.

Сапур ҫуммипе вӑрахӑн йӑпшӑнса Тимак ҫӳреҫе умне пырса тӑҫӗ.

Шалта вӑрахӑн калаҫаҫҫӗ, пӗр вырӑнтан тепӗр вырӑна темӗн куҫараҫҫӗ. Анҫах мӗн калаҫнине ӑнланмалла мар.

Тимак ҫӗрне тӑрне тӑрса йеррипен ҫуреҫеген пӑхрӗ. Пӳртри саксене пӗтӗмпех вырӑнтан хускатнӑ. Урай хӑмисене уҫнӑ. Пӗри, хӗрарӑмла тумланнӑскер, кӑштах пӗшкӗннӗ, аллине хӑй хунар тытнӑ. Ҫӳреҫе ҫине ҫутӑ ан ӳктӗр тесе хунарне ҫаппанпа пӗркенӗ. Тепри урай хӑми айӗнҫи тӑпраса кӗреҫепе ҫавса шӑтӑк тӑват. Виҫҫӗмӗшӗ тултан пӑтавкапа тырӑ йӑтса кӳртсе шӑналӑк ҫине пушатат.

— Тырӑ пытараҫҫӗ!—шутласа илҫӗ Тимак. Вӑл ҫавӑнтах ҫунат хушнӑ пек Вӑкӑр ҫырми урлӑ ыткӑнса каҫса колхоҫнӗк Елеҫук ҫӳреҫи умне ҫитсе тӑҫӗ.

— Такӑр-тӑкӑр тӑкӑр...—тутарҫӗ вӑл ҫӳреҫерен вӑрахӑн.

— Кам унта?—илтӗнҫӗ шалтан хулӑм сас.

— Ан кӑшкӑр... Йут мар, хамӑран,—ответлерӗ Тимак шӑппӑн.— Уҫ ха.

— Мӗн пулнӑ?

— Ата, тумлан хӑвӑртрах.

— Ӑҫта каймалла?

— Йала кашкӑрсем ҫавӑрса илнӗ. Ил пӑшална.

Елеҫук ҫара пуҫӑн, ҫара уран пӑшалпа тухрӗ.

— Йатрус тырӑ пытарат. Кайса сыхласа тӑр вӑрахӑн. Епӗ Сурикккӑна кайса вӑрататӑп,—ӑнлантарҫӗ Тимак, Елеҫук тула тухсассӑн. Елеҫук пӗр самахсӑрах Йатрус йеннелле вӗҫрӗ.

Пӗр самантрах Йатрус ҫуртнӗ алкарти ҫавӑ, са илҫӗҫ. Шӑппӑн сыхласа тӑраҫҫӗ малашне мӗн пуласса. Анкарти алӑкӗ патне Суриккӑв хӑй кайса таҫӗ—лавпа тырӑ турттарса тухӗҫ тесе шутларӗ вӑл. Анҫах тырӑ турттарса тухни пулмарӗ. Тепӗртак тӑхтасанах Йатрус пӳртӗнҫи сасҫӳ паҫах лӑпланҫӗ.

Суриккав патне претҫетаттӗл ҫупса ҫитрӗ.

— Ата, лӑпланҫӗҫ.

— Ҫим ха, кӑштах тӑхтар. Тен, халех лавсемпе тырӑ тийесе тухӗҫ.

— Нимӗн те ҫук. Пурте ҫывӑрма выртрӗҫ ӗнтӗ.

— Ата еппин,—таварҫӗ Суриккӑв.

Вӗсем хапха патне ҫитсен, хуралтисем пурте пӗр ҫӗре пуҫтарӑнҫӗҫ.

— Ну, атӑр кӗрсе вӑрататпӑр,—тет Тимак.

— Ҫук, вӑратма кирлӗ мар. Ан тив, ҫывӑрҫҫӑр кӗҫӗрлӗхе ҫӑрмантӑрас мар,—ответлет Суриккӑв.

— Мĕн ђăрмантарас марри пур. Çийĕнђе тытмасан кайран хўрине тĕвĕлет вара вăл. Çилхинђен тытса ђарайманнине хўререн хăваласа çитсе тытаймăн.

Тĕрĕс, йаснă!

— Кунешнĕ халех кĕмелле!

— Мĕн вĕсемпе турткаланса тăмалли пур,—шавласа кайрĕç ыттисем.

— Çук, йулташсем! Ку ĕçе питех те асăрхаса тăвас пулат. Васкама кирлĕ мар. Кĕçĕр кĕнинђен пире нимĕн усси те çук. Тыррине вăл пурпĕрех пирĕнтен пытарийас çук. Ыран кĕрсен тата интересленĕрех. Мĕн калаçĕ унта вăл ыран. Акă хайхине сăмахпах тытатпăр вара,— ăнлантарат Сурикăв.

Нумайђен ўкĕтленĕ хыççăн йулташсем килĕшрĕç. Курни илтни çинђен никама та пĕр сăмах та ан шарлађђăр тесе, Сурикăв кашнинех питĕ çирĕп хытарђĕ. Хĕвел тухас умĕн вĕсем килĕсене саланђĕç.

6. Вăкăр çырми леш йенђе.

— Ăçта хăйаматне çухалђĕç ку Микишсем?—ыйтат колхос претçетаттĕлĕ Тимакран.

— Хам та иккĕленн тĕп-ха вĕсем пирки. Виç кун хушшинђе кайса килмелле пекђĕ те. .

— Сĕтĕрĕнсе çўреççĕ çав.

— Çук, сăлтавсăрах ђарăнса тăмаççĕ пуђ-ха вĕсем.

.— Мĕн сăлтавĕ пултăр. Калаçма йуратаканскерсем пуш параппана çапса лараççĕ çав.

— Пуш параппан çапаканнисемех мар та вĕсем.

— Çапаканнисемех марха, асту,—терĕ Йатарин шўтлерех кулса,—пĕри—хусах матрус «йеђоххă-воххă» вăтăр çула çитсе те авланаймарĕ. Те Палтти тинĕсĕ хĕррнђен шыçмак майрасем килессе кĕтсе пурнат? Телейе тата Татук... Мĕншĕн хĕрарăмпа пĕрле йамалла пулнă ши? Туй тăвасшăн çўреççĕ пуђ, мурсем.

— Туйĕ кађки мар тăр-ха та. Татук тенĕрен —ăна Сурикăв йулташ МТС-а йарасшăн пулђĕ. Харсăр хĕрарăм, ăна ĕçе хутшăнтарса йарасах пулат. Ан тив, унти йĕркесемпе пăллашса хĕрарăмсене каласа патăр, терĕ.

— Йури ĕçрен пăрăнса çўреççĕ вĕсем. Пайан пропнăй выйĕст тăвас тенĕђђĕ...

— Тен, кăнтăрла тĕлнелле персе çитĕç.

Тимакпа колхос претçетаттĕлĕ çапла каласса ларнă çĕре Йакур пиђђе пырса кĕђĕ. Темĕн пысăк хуйхă пулнă пек вăл пуçне уснă, куçĕсем мĕскĕнĕн тилмĕрсе пăхаççĕ...

Пысăк хуйхă, йулташсем...

Тимак йаштах сиксе тăђĕ ура çине.

—Мĕн пулнă?

— Кала хăвăртрах!

— Çарăмсан урлă каçнă ђух...

— Микишсем шыва путнă тесшĕн мар-и есĕ?

— ...Пăр ăнсăртран хускалнă... Микиш шывпа йухса кайнă...— ђĕтренсе вĕçленђĕ хурланђăклă сасă.

— Мĕн ес лапăртататăн, Йакур пиђђе? Тĕрĕс мар пулĕ?— ыйтрĕ колхос претçетаттĕлĕ ку йăвăр хыпара ĕненмесĕр.

— Суймашкăн епĕ пĕђĕк ађа мар... Выђамалли ĕç мар ку.. тавăрђĕ Йакур.

— Суйатăн! Ăçтан пĕлтĕн? Кам каларĕ сана ун çинђен?

— Ĕнер çурçĕр иртсен арăм килђĕ,..

— Машшинсем ăçта?

— Машшинсем те, лашисем те хам патăмрах.

— Мĕнле пулђĕ-ха капла? Мĕншĕн пăр тапранасса кĕтсе выртмалла пулнă вара?

Йакур пиђђе вĕсене ку хуйхăллă хыпара тĕпĕ-йĕрĕпех каласа пађĕ. Темиçе мĕлйунлă йĕппе пăталаннă пек касса кайрĕ ку хыпар ђĕрене, Тимакпа колхос претçетаттĕлĕн аллисем лаштах усăнђĕç çĕрелле.

— Мĕн тăвас ĕнтĕ хађ?—ыйтаť Тимак, нимĕн тума аптăраса.

— Алăсене усса лармалла мар ĕнтĕ,—тавăрат Йатарин,—куççуђпе хуйха пулăшаймăн.

— Пирĕн ĕретрен ђи çирĕп, ђи хаклă йулташ çухалђĕ. Пĕр йулташ выранне пирĕн хамăр ĕрете çĕр çын хутшăнтармалла.

Атăр пайанах уй-хире тухса машшинсен ĕçне тĕрĕслер.

Çуракине тухма пирĕн вăрçăри пек хатĕрленсе тăрас пулаť. Подђшевикла иккĕмĕш çуракин çĕнтерĕвĕсемшĕн паттăрăн кĕрешер!—вĕçлесе хураť пĕтĕм каласăва колхос претçетаттĕлĕ Иатарин.

Ђăнахах та, колхосçнĕксем ку пысăк хуйхă пирки пăйкăшса аллисене усмарĕç. Кăнтăрла тĕлĕнђе мĕн пур ĕç хатĕрĕсемпе, лашасемпе совет умне пухăнђĕç.

— Ну, атăр! Мĕн тăратăр?—илтĕнђĕ пĕр сасă.

— Ђимĕр-ха, шкул ађисем тухђĕр. Ку аслă уйава пысăк хаваслăхпа тухмалла,—тавăраť Суриккӑв.

— Йалав ăçта? Парăр кунта хĕрлĕ йалав, кĕрешӳ йалавĕ!— кăшкăраť сакăрвун çулхи старик Аит муђи.

— Аит муђи, сана тухмасан та йураťђе. Есĕ ватă, сана ĕçлемесĕр те тăрантаратпăр,—тет пĕр çамрăк ађа.

— Çапли çапла пулĕ те ывăлăм, манăн ђунăм ђăтмасť. Урамсем утна ђухне сирĕн хыçăнтан ахађ кăна çӳрем хăť. Кун пек хаваслă ушкăна ĕмĕрĕмре те курасса сунман эĕт епĕр. Куçăмсем курса савăнђђĕр,—тавăраť лешĕ.

Акă шкул ађисем те карталанса тухрĕç. Умлă хыçлăн, йĕркеллĕн, кайăк хур пек ĕретсемпе йурласа пыраççĕ.

Йан-йанах ка-айтăр
Пионер йурри-и!
Тĕнђипех çутаттăр
Советăн çут-ти!

Йанрат çамрăксен йурри. Хыçалта икĕ çамрăкрах ађа палалайккăпа „çул çемми" шăрантарса пыраççĕ. Йурĕ-кĕвĕ майĕпе колхоçнĕксем паттăрăн харăс кăрслаттарса кăна утаççĕ. Кун пек пысăк хаваслăха ђăнах курманђђĕ поççолкка халиђђен.

Темонстрантсен йышĕ ўснĕçем ўссех пырат.

Акă хыçала шурă, кăвак, сарă, хĕрлĕ тутăрсем хутшăнђĕç. Татук инке вĕсен кăмантирĕ лек малта хĕрлĕ йалав вĕлкĕштерсе пырат.

Колхоçнĕксем Вăкăр çырми урлă каçса хире тухрĕç. Поççолккă пуçĕнђен пўçланса вăрман хĕррине çитех тăсăлса выртат колхос хирĕ. Кăпка хура тăпра хађ кăна типсе çитнĕ, тĕтĕм пек мăкăрланса пăсланат.

Сурикквăв çейăлккă йешђĕкĕ çине хăпарса тăђĕ.

— Йулташсем! Пайан епĕр хамăр вăйсене тĕрĕслесе пăхатпăр. Ĕмĕр ыйхинђен вăраннă поççолккă хресђенĕ пайанхи кун пĕрĕмĕш хут ушкăнлă ĕçе тухрĕ. Çак ушкăна ђăмăртассишĕн епĕр питех те нумай кĕрешнĕ. Кĕрешўре ђи паттăрăн çапăçакан йулташсем колхос ĕçĕшĕн пуçĕсене çухатрĕç. Манмăпăр, йулташсем, вĕсен ђаплă йађĕсене. Хамăр ĕретсене татах та ытларах çирĕплетĕпĕр. Утарнĕкле ĕçлесе çуракине кĕске вăхăтрах туса пĕтерĕпĕр. Сывă пултăр пољшевикла иккĕмĕш çуракин çĕнтерĕвĕ! Урра йулташсем.

— Урра! Урра-а!
— Урр-ра-а!
— Р-р-ра-а-а!!!

Суриккăв сăмахĕсемпе çĕкленсе кайнă колхоçнĕксем çĕлĕкĕсене çўлелле ывăтса кăшкăраççĕ. Суриккăва пур йевђен те хупăрласа илсе вĕсем пўске пек сиктерме тытăнђĕç.

Хĕвел кулат. Кăмăллăн пуç тайаççĕ çепĕç папкаллă йăвăççем çурхи йăваш çиле. Ђĕвĕлтетсе йурласа мухтаççĕ кайăк-кĕшĕксем çурхи хаваслă уйава.

Кĕтмен çĕртенех Татук инке улăхса тăђĕ урапа çине.

— Тĕрĕс калат Суриккăв йулташ,—пуçларĕ вăл уçă сасăпа,— пирĕн хамăр ĕретсене тата ытларах çирĕплетмелле. Епĕр çак çул çинђен ниçталла та пăркаланас çук. Иĕке-хўресем пире текех пăтратаймĕç. Малалла, йулташсем, малалла!

— Ура Татук икене!—кăшкăрса йађĕ колхос претçетаттĕлĕ савăннипе.

— Урра-а! Урра-а!
— Урра-а!
— Р-р-ра-а-а!!!

Митĕнк пĕтнĕ хыççăнах колхоçнĕксем ĕçе тытăнђĕç. Малта пилĕк сапан нӳрĕ çĕре пăйавлантараççĕ. Стариксемпе çамрăк ађасем йăран тăрăх шăкăлтатса утаççĕ.

Колхоçнĕксем пайан касђенех ĕçлес терĕç. Ыран иртен пусласа çуракине тухма йышăнђĕç.

Пĕр лаптăк сухаласа пăрахнă хыççăн çĕнĕ сейăлкăсене ĕçе йађĕç. Вунпĕр ĕретлĕ çейăлкки çатăртатса кĕрлеме тытăнђĕ. Анђах тăхăр ĕретли шăпăрт сасăсăрах йăрласа кайрĕ сухалса пăрахнă касă тăрăх.

— Ей, Йакур пиђђе! Çейăлккă ĕçлемест!

— Йепле ĕçлемест?

— Ĕçлемест çав. Килсе пăх ха.

— Лартма пĕлмерĕр пуђ.

— Çаплах лартнă. Ахађ пăсăкскер пулнă ку машшин.

— Ан лапăртат пустуй сăмаха. Çĕнĕ çейăлккă ăçтан пăсăк пултăр-ха вăл?

Йакур пиђђе çейăлккă патне пырса пăхма тытăнђĕ:

— Ђăнахах та тĕрĕсех лартнă тем те... Мĕн хăйамађĕ пулнă-ха ăнă?

— Темĕнçке...

— Хрупсова ђéнес. Вăл мехханик хорошший.

— Кайса ђĕнем еппин,— çамрăк ађа суха сухалакансем патнелле ыткăнђĕ.

Пĕр самантранах Хрупсов çейăлккăна тĕрĕслеме тытăнђĕ. Темĕнђђен тĕрмешнĕ хыççăн вăл лашасене тăварма хушрĕ. Унтан çейăлккăн урачисене кăларса илђĕ.

— Ку çейăлккăн шеçтĕрмекĕ çук, снаш,—терĕ вăл йулашкинђен.

— Кам кăларса илнĕ ăна?

— Кам виноват-ха халĕ?

— Кам пултăр, кам кайаканĕ виноват! Кăларса ӳкерес пулман çул çинђе,—илтĕнкелерĕç сасăсем.

— Çук, йулташсем, кайаканта мар айăпĕ. Вăл ниçта та тухса çухалмалла мар. Малтанах пулман, снаш,—ăнлантарђĕ Хрупсов.

— Мĕн тума йурăхлăха ĕнтĕ ку çейăлккă?

— Камит вырăнне кӳлсе çӳре!

— Вăт машши-ин!

— Машшинлантăмăр тăк машшинлантăмăр!

— Çап та çĕмĕр ун пек машшина.

Ӳпкĕленеççĕ колхоçнĕксем. Нимĕн тума та пĕлмеççĕ.

Хрупсов темĕне манса кайнă йапала çинђен аса илнĕ пек пулса нумайђђен шухăшласа тăђĕ. Унтан пӳрнине шарт шаклатрĕ те тутисене мăкăртаттарма пусларĕ:

— Ђимĕр-ха, ађсемсĕр. Манăн çĕмрĕк çейăлккăн шеçтĕрмекĕсем йулнă пулмалла. Йулнă пулсан как рас пулат, снаш...

— Кайса пăх-ха, Хрупсов.

— Майлаштар ађа.

— Есĕ пирĕн мехханĕк харошший.

— Пăрçататлăра пултараймарăн пулсан, хăвăн пултарулăхна колхос ĕçĕнҫе кăтарт!

— Латнă. Кайса кил-ха,—тавăрҫĕ Хрупсов, сăмахсем тĕрткипе кўрĕннĕ пек пулса.

Тепĕр çур сехетренех Хрупсов йуланутпа çурăм хыçне шеçтĕрмек çакса килҫĕ. Вăл каллех машиин патĕнҫе тĕрмешкелерĕ те кўлме хушрĕ. Лашасене вырăнган тапратсанах çейалккă такам çине çилленнĕ пек çатăртатса йатлаçма тытăнҫĕ.

— Вот, пулҫĕ те снаш!

— Хута кайрĕ, йолкки палкки!

— Ех, йатлаçа-ат!

— Йепле çатăртатат вăл.

— Машшинне парса йаракан тăмçамкана йатлаçат вăл, снаш,—илтĕнҫĕ Хрупсов сасси.

Машшинсен ĕçне тĕплĕн тĕрĕсленĕ хыççăн вĕсене йала илсе таврăнҫĕç. Ытти колхоçнĕксем хирех йулҫĕç.

---

7. Йатрус пирĕн.

Шăп кăнтăрла тĕлĕнҫе Сурикқăв, Тимак тата Татук инке Йатрус патне çитсе кĕҫĕç. Кĕтмен хăнасем килсе кĕрсессĕн Йатрус пĕрре хĕрелсе, тепре шуралса кайрĕ. Унтан вăл хавасланса ўкнĕ пек пулса хăнасене хапăллама тытăнҫĕ.

— Ах, хаклă хăнасем! Килĕрах-ха, килĕр. Тĕпелерех иртсе ларăр. Килместĕр пĕрре те. Курман илтмен çынсем пекех пурнатпăр. Анус, нўхрепе кĕрсе тух-ха. Есĕ, Хветле, ҫей лартса йар.

Пăрҫакан пек сиккелесе çўрет Йатрус, хăнисемпе ҫĕкеç пек ҫĕвелтетсе калаçат.

— Есĕ, Йатрус, сăмаварпа ан ҫăрман-ха. Еçпе килнĕҫҫĕ епĕр,—пўлҫĕ Сурикқăв.

— Пулĕ ара, пулĕ... Çаплах ĕнтĕ, ĕççĕрех мар-тăр. Мĕнле ĕçҫĕ-ши тата? Çырмалли пур и? Сетел çаратса памалла мар-и? Хутпа ҫернил кирлĕ мар-и?

— Нимĕнпе те ан ҫарман. Еçĕ çакнашкал: сам патăнта пытарса хунă тырă пур, теççĕ.

— Пытарса хунă тырă-ă-ă?—ыйтрĕ Йатрус тĕлĕннĕ пек пулса.—Кам пытарнă пуҫ вăл тырра ман патăма? Вăт телей! Тур парас йенне кайсан пурлăх хăйех йухса килет иккен!

— Пытарса хунă тырруна хăвăн ирĕкўпех кăлар. Унсăрăн сана аванах пулмĕ.

— Ҫăнахах калаçатăр-и çак есĕр? Мăнăн мĕнле пытарса хунă тырă пултăр... нимĕнле тырă та çук манăн..

— Пахăпăр, курăпăр. Апла пулсан хамăрах шыраса тупăпăр.

— Шырăр ара, шырăр. Кам ухмахĕ тĕллеттерсе йанă-ши ĕнтĕ сире?

— Уй—кусла, вăрман—хăлхалла, Йатрус пиҫҫе.

— Çу-ук, пĕр пĕрҫĕ тырă та çук манăн пытарни.

— Шырама ђармастăн снађђăтсă?—ыйтат Тимак.
— Мĕн ђармалли пур, шырăр.
— Апла пулсан «манăн пытарса хунă тырă çук» тесе çырнă потпискă çине алă пусса пар ха,—сĕнђĕ Суриккăв Йатруса хĕрлĕ кăранташпа çырнă хут татăкки.
Потпискă тесессĕнех Йатрус шухăща кайрĕ.
— Мĕн нумай шухăшлатăн? Алă пусса пар тата!—хыпалантарат Татук инке.
— Шухăшлаттарат, ађа,—ответлерĕ Йатрус, ĕнсине хыçса.— Тен, ăнсăртран кам та пулин килсе ђикнĕ пулĕ те, тасаранах темĕн курса тăрăн...
— Таса çынна нихăçан та айăпламаççĕ.
— Ну, шухăшларăн и?—ыйтрĕ Суриккăв.
Йатрус ура çине сиксе тăђĕ:
— Ну, Суриккăв йултăш, тĕрĕссине тĕрĕссипех калас пулђĕ: çылăхлă. Ĕнер çынсем хĕтĕртнипе каçхине 13 пăт пытартăм. Пытарнă тырă çавă пур. Вара урăх нимĕн те çук. Ђунăм тап-тасах.
— Вот вот. Паçăрах çапла каламалађђĕ.
— Ăçтарах пытартăн-ха?
— Ăна хамах кăларса парăп.
— Кам илĕртрĕ вара сана?
— Вăл сире кирлех те мар пуђ?
— Питех те кирлĕ.
— Хăраıăп çав калама.
— Нимĕн те хăраса ан тăр. Епĕр кашкăрсем мар, çисе йарас çук. Ытлашши тырру ик-виç çĕр пăт мар пулсан сана никам та айăпламĕ.
— Вăл çапла пулĕ те... Çыннисем шăлтах ăнран йараççĕçке.
— Нимĕн пытармасăрах каласа пар. Пирĕнтен ниçта та тухас çук вăл сăмах.
— Каласси калăп, анђах есĕр çирĕп тытăр çăвара. Ӳт ђĕлхенĕн шăмми çук вĕт, темĕн те персе йама пултарат.
— Нимĕн те ан шиклен. Епĕр шанђăклă çынсем.
— Ĕçĕ çапла пулђĕ,—пуçларĕ Йатрус, вăрăман сывласа илсе.— Енер Йус патĕнђе опăск тунă. Çиђçĕр пăт тырă тупнă. Вăл тырра пĕтĕмпех шăлса кайна. Çак хыпара илтсенех Карук мана йатарласах хăй патне ђĕнтерђĕ.
— Куратăн-и,—тет,—йепле шăлаççĕ советсем.
— Çапла тума кирлĕ пулĕ,—тетĕп епĕ.
— Ех, тăмана!—тавăрат Карук мана хирĕç,—çапла кирлĕ пулсан леçсе пар еппин хăвăн йулашки тырруна та,—тет.
— Манăн тырă çук,—тетĕп епĕ,—манăн тыррăм мĕн пурĕ те çирĕм виçĕ пăт кăна йулђĕ.
— Ехе-е... Çирĕм виçĕ пăт тырă мар им? Ан мухтан, сан патва та ђерет çитĕ. Шăлса кайĕç йулашки çирĕм виçĕ пăт тыррува та,—хăратат мана Карук.

Хăрасси ĕнтĕ... ҫăнах та хăрама вĕреннĕ епĕр. Кăмака çинҫе хĕртĕнсе выртнă ҫух маҫҫа çинҫен тараккан татăлса ӳксен те хăранипе сехрем хăпсах тухат вара манăн. Вăт çапла... Çак сăмахсене илтрĕм те, Карукран хăвăртрах тапса сикрĕм килелле.

— Пĕр вунă пăтне пытарас мар-ши, 'карҫăк? Совет шăлат теççĕ,—тетĕп килте арăма.

— Мĕн ес ухмахланатăн! Санăн çирĕм пăт тыррупа темĕн тăваççĕ ĕнтĕ. Совет кĕл çине кăна ларса йулман вĕт, хресҫенсен йулашки тыррине тĕкĕнмесен те çитет пуҙ,—тет хайхи ман арăм. Пурпĕрех ăна итлемерĕм—ҫунăм ҫăтмарĕ. Каçхине арăм сиҫтĕке тухса выртсанах аҫасемпе тăпрас айне вунвиçĕ пăт тыră ҫавса ҫикрĕмĕр. Итлемеллех пулмалаҫҫĕ те арăма... Арăмĕ ухмахах марҫҫĕ те манăн...—пĕтерҫĕ Йатрус хăйĕн сăмахне.

— Тăттă ухмах мар çав. Ирĕк парсассăн арăм сан урлă вунпилĕк хут сиксе каçĕ!—çыпăçтарса хуҫĕ Татук йнке.—Колхосран та арăму кăларман сана, ху арăмна ĕшкĕртсе йанă.

— Как калас,—тет Йатрус пăшăрханарах,—арăмĕ халĕ те проттĕв мар манăн. Хăт пайанах çырăн. Арăм ҫарат пулат-и вара арçынна? Утĕнҫен турти иртейместех ĕнтĕ вăл...

— Апла пулсан мĕншĕн колхоса кĕместĕн?

— Хăраса тăратăпçке. Пире ухмахсене темĕн те пĕр каласа хăратаççĕ вĕт.

— Хаҙхи саманара çăвар карса тăрас пулмаст çав, Йатрус пиҫҫе. Хăвăн пуçупа та шухăшламалла. Ăçта кайас тетĕн-ха есĕ уйрăмлăх çулĕпе? Пуйас тетĕн и?

— Пуйассине калат-ха. Хырăма тăрантарса çипуçа сапласан та тавтапуçҫĕ!

— Кăлар-ха тырруна,—хушрĕ Тимак.

— Çиҫҫас, халех. Кунтахҫĕ ха вăл,—терĕ те Йатрус урай хăмисене хăпăтма тытăнҫĕ. Икĕ хăма сирсе пăрахсанах тăпрас çинҫе çĕнĕ тăпра, улăм пĕрҫисем курăнса кайрĕç. Йатрус кĕреçе илсе кӳртрĕ те, хăвăрт-хăвăрт ҫавса кăларҫĕ тăпра айĕнҫи михĕсене.

— Ну, тепперҫҫĕ, шырăр. Потпискă мар, пуçăма татса пама та пултаратăп халĕ,—терĕ вăл, шăтăка тăпра йарса питĕрсе.

— Урăх ниçта та çук-и вара санăн тырру?

— Шырăр. Хăт пĕтĕм çĕрне таварса сиплĕр. Пытарнă тыră пĕр пĕрҫĕ тулăнсан ман сăмсам йытă кутне пултăр!—ответлерĕ Йатрус хăйуллăн.

Упполномоҫҫĕннăйсем шырама пуçларĕç. Нумайҫҫен шырарĕç вĕсем. Пăхман вырăн та хăвармарĕç. Анҫах пытарса хунă тыră ҫăнахах та пĕр пĕрҫĕ те тупаймарĕç.

— Ниушлĕ ниçта та çук кун тырри? Шырама пĕлейместпĕр пулĕ?—ыйтрĕ Суриккăв претçетаттĕлрен.

— Тупăнманскер çуках пулĕ ĕнтĕ,—тавăрҫĕ лешĕ.

— Ара пĕлетпĕр ĕнтĕ. Хамăр пускиле лайăх пĕлетпĕр. Вăл пĕр арçын ĕçлесе Каруксемпе Йуссем пек нихăçан та ытлашши тыра туман,—çирĕплетнĕ Татук аппа претçетаттĕл сăмахне.

— Апла пулсан шыраса асапланма та кирлё мар,—шухăшласа илђё Сурикkăв.

Вёсем шырама ђаранђёç те, пўрте кёђёç.

— Нумай тупрăр-и?—ыйтрё Йатрус кулкаласа, упполномођђённăйсем пўрте кёнё кёменех.

— Санăн, тусăм, вунвиçё пăтшăн аппаланма та кирлё пулман,—таварђё Сурикkăв.

— Кирлё пулман та, ухмах пуçа мён тăвăн тетён ёнтё...

— Сан пуçу мар ухмах. Сана кулаксем хăйсен тыткăнне йарса илнё. Санăн çулу Каруксемпе мар.

— Те кулак, те питђак. Йалта çынсем калаççё те итлегпёр... Ку тыррине ăçта хывма хушаттăр?—ыйтрё Йатрус айăплăн.

— Никам та илмест санăн тырруна. Совет сойусёнђе йулашки тырра илмелли саккун çук. Анђах пытарса тытас пулмаст. Хăвăра хăвăр улталаса пурнатăр.

— Ну, тавтапуç сана, Сурикkăв йулташ! Есё манăн кăмăлăма ђăнахах тепёр майлă çаварса лартрăн. Тёрёссипех епё Каруксен йытти кăна пулнă. Малашне пёлёп ёнтё мёнле пурăнмаллине, Каруксенђен ђеййерех пулăп. Пайанах çырăр мана колхоса, Каруксене куç умёнђен шалса тухăр. Ан ђăрмантарђђăр вёсем пире пурăнма!—терё те Йатрус, хавасланнипе пуçёнђи карттусне урайне çаварса çапрё.

— Куртăр-и ёнтё, мёнле потхот кирлё?—терё Сурикkăв килхушшинђен тухсан,—а есёр ёнерех кёрсе ухтарасшăн. Каçхине кёне пулсан епёр ăна хăрагма пултараттăмăр, вăл пирёнтен уйрăлса тарнă пулёђђё. А халё Йатрус пирён, пирён Йатрус!

— Çапах та Карука йарса тытма вăхăт пулё. Халё те уш сăпкари ађа пек пăхса усратпăр ăна,—аса илтерет Тимак претçетаттёл.

— Ан васка, çитёпёр ун патне те,—терё те Сурикkăв пумашникё ăшёнђен вётё потђёркпа çырнă хут каларђё:

Стр. секретно.

Участие... вредительской группы... На днях посылаем... До этого в доме гражданина Игнатьева никаких обысков не производить.

— Хăлха илтмен, куç курман пултăр! Сире кăна хам ђёрене курнă пек курса шанса калатăп,—терё Сурикkăв çиреп сасăпа. Тимакпа Татук инке хире-хирёç пăхса илђёç.

8. Ей, малти!..

Тепёр ирхине кăвак шуçăмлах ђăнкăртаттарса тухса кайрёç колхоçнёксем хире. Мён пурё виçё прикатă ёçлет: сухалакансем, сўрелекенсем тата акакансем. Пётём ёçсене малтанах йёркелесе çитернё. Колхоçнёксем кашнийех хăй мён тумаллине тёплён пёлсе тăраççё. Полевот прикатăсене уђваскăсем тёллеттерсе парсанах ёç хута кайрё.

Шăхăрса кăна çÿреççĕ колхоçнĕксем сапансем хыççăн. Сухаланă çĕрне çавăнтах акса сÿрелесех пыраççĕ.

Колхоçнĕксен ĕçри хастарлăхĕ çавгери пысăк. Пайанхи пек икоĕлми вăй-хăват, паттăрлăх вĕсен нихăçан та пулман.

— Н но-о! Йăран хĕррипе!—илтĕнет хушăран тимлĕ сасă.

— Ей, малти! Ţимлĕрех уттар лашуна! Çĕр йăгăнса анасран ан хăра!

— Е-е-ей, веççеле ей!

Уй-хир тăрăх йан-йан сасă хумханса кăна тăрат. Хăшин-хăшин хĕрарăмĕсем те тухнă хире, алăри ађисемпе аппаланса лараççĕ. Унта-кунта вăйпитти çамрăк ађасемех ђупкаласа çÿреççĕ.

— Ей вы, лотăри! Мĕншĕн ĕçлеместĕр?—кăшкăрат айăкран колхос претçетаттĕлĕ.

— Мĕн ĕçлемелле? Пар лашуна, пар сапан.

— Лашасем çитмеççĕ.

— Апла пулсан ĕçлемелли те çук,—илтĕнет çамрăк ађан отвеђе.

Ђăнах та колхоçнĕксен вăйне ниçта та вырнаçтарса çитерме çук Ĕçрен ытлашши вăй темĕн ђухлех.

«Пайанлăха йурĕ. Ыранах ытлашши рапођђисене мопилисатсилесе «Канаш» совхоса пулăшма йарас. Ан тив, ĕçлеђђĕр»—шухăшлат претçетаттĕл.

Колхос лашисем пуççене ухса кăна утаççĕ. Акана тухас умĕн вĕсене питĕ лайăх пăхса усранă. «Санăн», «манăн» тесе пĕрне авантарах, теприне начартарах çитерни пулман. Колхосра пурте хамăрăн, тесе шутланă лашасем пăхма уйăрнă колхоçнĕксем.

Кăнтăрла тĕлĕнђе сухалакансенђен хăшĕ-пĕрисем ÿрĕк-сÿрĕкрех ĕçленине асăрхарĕ прикатир.

— Есĕр мĕн урăрсене аран сĕтĕретĕр? Атăр тимлерех, тайош темппă!—тимлет прикатир.

— Ыгла шăрăх. Кăшт ларса канар-ха,—тавăраççĕ лешсем найанăн.

— Кăнтăрла çитсен канатпăр.

— Вĕсене уйрăм уђăсткă памалла. Епĕр ватă пуçпах çамрăксенђен ытларах ĕçлетпĕр. Еç-и ку? Ан тив, уйрăм уђасткăсем çинђе пăшăхђăр, намăс курђђăр,—сĕнет Аит муђи.

— Тĕрĕс!—килĕшеççĕ ытти колхоçнĕксем те,—кунпала епĕр те соклаçа килетпĕр. Кăнтăрла иртсенех ăмăртмалла ĕçлеме тытăнатпăр. Кам хăйĕн нормине маларах тата ытлашшипех тултарĕ...

— Тавай, штошă... Кам кама!

Тепĕр сехет ĕçлесен лашасене кăнгăрлахи кÿлĕме тăвăрђĕç. Колхоçнĕксем пурте пĕр çĕре пуçтарăнса вăрман уçланкине апатланма ларђĕç.

— Ай-ай апат тутлă, Аит муђи!—тет çамрăк колхоçнĕк Йăкăнат.

— Çапла çав колхосра апат тутлă.

— Епӗр ӗлӗк хуҫа патӗнҗе ӗҫленӗ җух апатне те тăраниҗҗен ҫимен, канлӗхне те курман. Халӗ хамăр хуҫа. Ҫак алăри ҫăкăр татăкне ун җухне хуҫаран кӗлесе илнӗ. А халӗ ҫăкăр хуҫи хамăр,—тет патрак Елеҫук, ҫăварӗнҗи ҫăкăрне паклаттарса.

— Малашне апатланассине те пӗрлех тумалла. Мӗн капла уйрăмăн кушелсем ҫакса ҫӳресе тертленмелле. Еҫӗ пӗрле, хырăмӗ те пӗрлех пултăр.

— Тусан аванҗҗӗ,—килӗшеҫҫӗ колхоҫнӗксем.

— Ку ӗҫ пайанах пулас ҫук-ха. Җăрмавӗ нумай унăн. Хатӗрсем нумай кирлӗ. Маларах ш...тлана пулсан мӗн пулӗҗҗӗ унта,—ăнлантарат претҫетаттӗл.

— Хаҗ пулмаст пулсан, тырă вырнă җухне ваҗҗи те пулин тăвас.

— Ун җухне трукой тела,—илтӗнҗӗ пилӗк-ултă сасă пӗр харăс. Апат ҫисе тăраннă хыҫҫăн пурте канма выртрӗҫ. Претҫетаттӗл кăна колхос җиккисене пăхса ҫӳремешкӗн шутларӗ. Пирускине тивертсе йарса ура ҫине тăрсанах вăл ҫул тăрăх пӗр лутрарах, тапҗам, хура ҫын мӗшӗлтетсе килнине асăрхарӗ. Ҫынни Романăвкка йенҗен килет. Хăй вăл питех те ывăннă пулмалла, урисем аран сӗтӗрӗнкелеҫҫӗ. Претҫетаттӗл тинкӗрсе пăхма тытăнҗӗ.

— Кам ши ку?

Ҫын ҫывхарнăҫемӗн ҫывхарат. Пуҫне ҫӗклесе пăхрӗ те, вăл претҫетаттӗле асăрхарӗ пулмалла, ҫӗлӗкне хывса сулма тытăнҗӗ.

— Кам шуйттанӗ ку?

Пăхат претҫетаттӗл—хăй куҫӗсене те ӗненмест: ăна хирӗҫ Микиш киле парат!

— Микиш! Йолкки-палкки! Аҫа ҫапасшӗ кӗлеткӳне! Есех-и ку?—претҫетаттӗл тӳрех Микиша ыталаса илсе шăртлă йанахӗнҗен җуптума тытăнҗӗ.

— Епӗ пулмасăр кам пултăр! Йеҗоххă-воххă. Стат ҫмирно-ă! Сам матрос с распиттово корапҗа, йеҗоххă воххă!—кăшкăрса йаҗӗ вăл мӗн пур хаваслăхӗпе.

Канма выртнă колхоҫнӗксем йăпăр-йапăр сиксе тăҗӗҫ.

— Микиш, есӗ-и ара?

— Хăш тӗнҗерен ҫуралса тухрăн?

— Епӗр сана тахҫанах вилнисен ҫписки ҫине ҫырса хутăмăр, снаш.

— Асăнса та ҫирӗмӗр ӗнтӗ.

— Ех, йеҗоххă-воххă! Питех те җасах вӗлересшӗнҫке есӗр матруса. Палтти тинӗсӗнҗи аккулăсем ҫăтайманнине Ҫарăмсанри йăпăлтансемех ҫăтаймӗҫке те.

— Каласа пар ха еппин, йепле ҫăлăнтăн?

— Җăнах та, снаш, кала-ха, Микиш.

— Мен йепле ҫăланасси... йухрăм та кайрăм анаталла, шыв майӗпе. Пӗр вунă ҫухрăм кайсанах епӗ тăрса пыракан пăр татăкӗ ирӗлнӗрен ирӗлме пуҫларӗ. Алса тулӗ пек кăна тăрса йулҗӗ, йеҗоххă-воххă. Мӗн шуйттанӗ тăвас? Тинӗсре пулсан йакăр йарса

ларнă пулăттăмăр. А манăн хам çумра нимĕн те çук, йеҍоххă-воххă. Халех пĕтетĕп, аппă тесе шугласа пыратăп. Çыран хĕрри те инçе мар та, çапах та сехре сикмешкĕн. Мĕн пулин пулĕ, пăхса тăрсах вилес мар, терĕм те, йарăнтăм кăна, йеҍоххă-воххă, шывалла. Малтанах сивĕпе шăнăр хуглатса лартрĕ. Анҍах ман телейе ҍасах иртрĕ ку инкек. Вара ишсе тухрăм çыран хĕррине.

— Ах тур! Йепле путса вилмерĕнех?

— Ну маттур та ĕнтĕ.

— Отҍайнăй халăх вăл матруссем!—пакăлтатма тытăнҍĕç колхоçнĕксем.

— Санăн çийессӳ те килет пуҍ, канассу та?—ыйтрĕ претçетаттĕл, халăх пăртакçах лăплансан.—Ме акă, пĕртакçах çырткала та, килне кайса пĕр икĕ кун хушши кан. Кунта епĕр хамăрах майлаштарăпăр.

— Çук, мана халĕ киле йараймар. Манăн кил кунта, сирĕнпе пĕрле. Сире курсассăн манăн пĕтĕм халран кайнă шăмшаккăм патварланса кайрĕ, йеҍоххă-воххă... Вăтăр çухрăм çуран, нимĕн çимесĕр утрăм. Сирĕнпе пĕрле тата çĕр вăтăр çухрăм утмалла пулсан та хăватăм пур манăн.

Микиш çĕрулмипе уйран çырткаларĕ те, вырăнтах тӳнсе кайса паттăрăн харлаттарма пуçларĕ. Колхоçнĕксем ĕçе тытăнҍĕç.

Халĕ ĕнтĕ кахалланса ӳрĕк-сӳрĕкĕн ĕçлекенсене пĕрре те кураймăн. Прикатăсем пĕр-пĕринпе ăмăртса тимлеççĕ. Ҍĕлĕм туртма та тăмаççĕ хĕрӳллĕ прикатирсем.

Тимлесе хĕрӳллĕн ĕçлесе пынă çĕртех, вар хĕрĕнҍе ĕçлекен прикатăран пĕри сасартăк пысăк сасăпа кăшкăрса йаҍĕ:

— Киреме-ет! Кире-ме-ет!

Колхоçнĕксем хăлхисене тăратрĕç. Сасă каллах илтĕнҍĕ:

— Йулташсем! Киремет тухрĕ, киремет!

—Мĕн çăва киремеҍĕ, атăр ха кайса пăхар,—терĕç те колхоçнĕксем вар хĕрнелле ҍупрĕç.

— Ăçта киремеҍĕ?

— Акă, çĕр айне ҍӳлмекпе лартнă.

Пĕр самантрах колхоçнĕксем ҍӳлмеке çĕр айĕнҍен ҍавса кăларҍĕç. Ҍӳлмекĕ ăшне темĕн те пĕр йарса тултарнă иккен: икĕ çăмарта, çалат, хĕрес, кивĕрех саппунпа хăмла ҍĕркесе ҍикнĕ, тата ытти йăх-йахсем те темĕн ҍухлех. «Çак йăх-йах колхоçнĕксен пуçне пултăр»—çырнă тутри çине хура краскăпа.

— Охо-хо! Мĕнпе çийесшĕн вĕсем пирĕн пуçа. Киреметпе тухатса лартасшăн пулнă колхоса! Ха-ха-ха-ха!...

— Тавай, Йăкăнашкă, çап та çĕмĕр киремет пуçне! Мĕн пăхса тăратăн?

— Пĕрҍĕн-пĕрҍĕн аркат!

— Вута хурса çунтарса йарас!

Йăкăнат ҍалăшшăн шăвăнса тухрĕ те ррас! анҍах сулса йаҍĕ киремет урлă, сапан калаккипе. Тăм ҍӳлмек пĕрҍĕн-пĕрҍĕн арканса сирпĕҍĕ сывлăша.

Аит муҫи киремете ҫунтарса йама вут ҫӗртрӗ. Аҫаллӑ хӗрарӑм киремет тугрине алла тытрӗ:

— Тутри аванах мӗн, шеллемен те мӑнтарӑн.

— Колхос пуҫне ҫимешкӗн тутӑр мар темӗн те шеллес ҫук-ха вӗсем,—тавӑрҫӗ такӑшӗ.

— Мӗн тыткаласа тӑратӑн, кин, ҫав йӑх-йаха? Вӑрхӑнтар хӑвӑртрах вута!—терӗ Аит муҫи. Аҫаллӑ хӗрарӑм тутӑра ҫӑмӑрталарӗ те шатӑртатса ҫунакан вут ҫине ывӑтрӗ. Хӗрӳллӗ ҫулӑм хӗрлӗ ҫӗлхисемпе ҫулама тытӑнҫӗ киремет тутрине.

Ҫав вӑхӑтра вут кутне патрак Елеҫук пырса тӑҫӗ. Вут тивсе илнӗ тутӑр ҫине тинкӗрсе пӑхса тӑҫӗ те вӑл сасартӑк ҫухӑрса йаҫӗ:

— Стой, йулташсем, стой!—Елеҫук хӑвӑртрах кӑвате урипе сирпӗтсе тӑкрӗ. Унтан кӑварланма пуҫлӑнӑ тутрине таптаса сӳнтерҫӗ.

— Ан тив, Елеҫук, ҫунтӑр, кӗл пултӑр.

— Киремет пуҫне хӗрхенетӗн-им?

— Ҫук, ҫунтармалла йапала мар ку,—тавӑрҫӗ Елеҫук.—Ку тутӑр ылттӑнран хаклӑ йапала...

— Мӗн йатӑ пӑх хакӗ пулӗ унӑн?—терӗ пӗри тӗлӗнсе.

— Вӑл тутӑра епӗ Карук арӑмӗн пуҫӗнҫе курнӑ. Илессе те ӑна епӗ вӗсем патӗнҫе тарҫӑра пурӑннӑ вӑхӑтрах илсе паҫӗ Карук арӑмне. Ҫавӑнпа та ӑна епӗ паллатӑп. Ҫунтарас мар, йулташсем, кирлӗ кунта кирлӗ пулӗ...

— Вон ка-ак!

— Акӑ йепле!

— Каруксем ҫӳкленӗ иккен!

— Тинех тытӑнҫӗ хайхи ҫейе тилӗ!

* * *

Касҫенех пӗр туймасӑр ҫывӑрҫӗ Микиш.

Колхоҫнӗксем киле таврӑнас умӗн шавлама тытӑннипе тин вӑранҫӗ вӑл. Ҫанталӑк пӗртакҫех сулхӑнлатнӑ. Вӑрман йенҫен ҫил вӑштӑртатат.

Микишӑн ывӑннӑ шӑмшакӗ лӑштӑрах канҫӗ. Тарӑнӑн килленсе карӑнса илҫӗ те, вӑл киле кайма пуҫтарӑнса тӑнӑ колхоҫнӗксем патне пыҫӗ.

— Как тела, прикатирсем!

— Тела—как сашӑ пела!—ответлерӗ Елеҫук кулкаласа.—Есӗ ҫывӑрнӑ ҫухне киремет тупрӑмӑр ха авӑ.

— Кам ухмахӗ тухатат апла?—ыйтрӗ Микиш.

— Нивушлӗ хаҫ те киремет ҫине шанакансем пур?

— Пур ӗнтӗ.

— Хӑйсем ӗненнӗшӗн мар, снаш, колхоҫнӗксене хӑратас тесе хатланнӑ ӑна,—сасӑ паҫӗ Хрупсов,—тутӑрӗ Карукӑн.

— Ех, йеҫохха воххӑ! Вӑйпа парӑнтарайимарӗ те пӑспа хӑратас тет пулӗ ӗнтӗ!—тарӑхса кайрӗ Микиш.

Пурте пухăнса çитсен пайан ĕçленĕ ĕçсене ●ĕтĕçтерсе кĕнеке çине çырма ларђĕç. Пĕрĕмĕш прикатă—4 лашапа 1,85 *ка*; иккĕмĕш прикатă—3 лашапа 1,28 *ка*; виççĕмĕш прикатă—3 лашапа 0,97 *ка* сухаланă.

Виççĕмĕш прикатăра çамрăксем ĕçлерĕç пайан.

— Нуккă, прикатир, каласа пар-ха, кам кама парăнтарат: çамрăксем-и, йе стариксем?

— Паллах стариксем. Çамрăксем ăçтан çитђĕр ваттисене? Аит муђи прикати 1,80 *ка* сухаланă!

— Ай та Аит! Вăт есĕ ăна сакăрвун çулхи старик тесе тăр. Пыр та калаç уипала, çирĕм çулхисене oђка парат!

— Ĕçпе сахалах пиçмен çав.

— Çамрăксем мĕн вĕсем? Симĕс, пиççе çитеймен-ха!—тăрăх, лаççĕ стариксем.

Çав тери кĕвĕçтерсе çитерђĕç çамрăксене ку сăмахсем. Петта нимĕн тума аптăранипе, çаннисене тавăрђĕ:

— Тавай апла пулсан, Аит муђи, кĕрешсе пăхар: Кам кама парăнтарĕ?—терĕ вăл айван сасăпа.

— Нет ăшђĕ, есĕ малтан ĕçпе кăтарт! Ĕçпе парăнтарма пĕлес пулат. Вара кĕрешме те йурат,—ахăлтатса кулса йађĕç колхоçнĕксем Петта айванлăхĕнђен.

— Йурĕ...—терĕ лешĕ кӯренсе,—пĕр кун ĕçленипе нимĕнех те паллă мар-ха вăл. Малашне курăпăр унта...

— Курăпăр!—ответлерĕç колхоçнĕксем.

9. Партти йыхравĕ.

Ыран май уйавĕ тенĕ ђух колхоçнĕксен кантăрла тĕлĕнђе хиртех пĕђĕк пуху тумалла пулђĕ. Райкомран йыхрав килнĕ, май уйавĕн колхосла йыхравĕ. Сурикқăв райкомран йанă йыхрава вулама тыттăнђĕ.*)

Пĕтĕм тĕнђери пролеттарисем, пĕрлешĕр!
Май уйавне колхос присăвĕн кунĕ тăвар!
Колхоса кĕмен ђухăнпа вăтамсем,
колхос ĕретне хăйуллăн тăрар!

Йулташсем!

Парттипе унăн Тĕпкомĕ тата Совет влаçĕ тĕрĕс йертсе пынипе рапођђи класпа ĕçхресђенĕсем сотсиалисăм строиттĕлствинђе куллен кун калама та çук пысăк çитĕнӯсем тăваççĕ. Çав çитĕнӯсенђен ђи пахи, ђи пысăкки—вăл уйрăм пурăнакан ђухăнпа вăтам хресђенсен вак хуçалăхĕсене талкăшпех колхоса куçарса, çав никĕс çинђе харампырсене—кулаксене вĕсем клас пулса танине пĕтерни пулат.

Полђшевикла 2-мĕш çуракине пирĕн Сойус та, пирĕн Вăтам Атăл крайĕ те питĕ пысăк çитĕнӯсемпе тухрĕç. Халĕ

*) Кĕскетсе пиђетлетпĕр.

пирĕн Сойусра вуникĕ мĕлйун ытла хресҍен хуçалăхĕсем колхосра тăраççĕ.

Епĕр халĕ крайра Атăлăн сулахай йенне 81 проҍ., сылтăм йенне 47 проҍҍăнран кайа мар коллективларăмăр ĕнтĕ.

Колхоссем—Совет влаçĕн йалти ҍи шанҍăклă тĕрекĕ. Çавăнпа та пирĕн правительствăпа партти вĕсене пур йенҍен те пысăк пулăшу параççĕ.

Кăçал пирĕн правиттĕлствă йалхуçалăх налукĕн çĕнĕ саккунне кăларҍĕ. Вăл саккун тăрăх колхоссен мĕн пур тупăшĕнҍен тенкĕ пуçне налок виçĕ пус анҍах илĕнет. Вăйсăртарах колхоссенҍе (5-мĕш статйара кăтартнă лҍкоттăсемсĕр пуçне) колхосри йетак пуçне 60 тенкĕ анҍах тупăш пулсан вĕсене налокран пĕтĕмпех хăтараççĕ. Çаплах тата кăçал ӳстерсе акакан çĕрсенҍен те налок илмеççĕ. Вылҍăх-ҍĕрлĕхсенҍен налок илмеççĕ. Техниҍҍĕски кулҍттурăсем акнăшăн т. ыт. те налок илмеççĕ. Совет влаçĕ çаксене пурне те колхос сен колхоçнĕксен пурнăçĕпе вĕсен кулҍттурлăхне ҍасрах çĕ клес, вĕсене нушаран хăтарас тесе тăваççĕ.

Йулташсем! Пирĕн район 2-мĕш полҍшевикла çуракине тухрĕ. Колхос строиттĕлствинҍе пирĕн те çитĕнӳсем пур. Анҍах вĕсем питех те çителĕксĕр. Епĕр Атăлăн сулахай йенҍи районĕсенҍен нумай кайа йултăмăр. Пирĕн район çуракине 54,6 проҍҍăн анҍах коллективланса тухрĕ. Çавăнпа та пирĕн çуракине колективисатси ĕçĕпе таҍă çыхăнтарса, халиҍҍен колхоса кĕмен ҍухăнпа вăтам хресҍенсене колхос йенне çавăрас тĕлĕшпе вунă хут ытла хастарлăхпа, полҍшевикла çирĕплĕхпе ĕçлемелле.

Майăн 1-мĕшне Улҍйанăвск районĕнҍи колхоçнĕксем колхоса кĕмен хресҍенсене колхоса кĕме присăв туса иртереççĕ.

Парттин Ҍаллăпуç райкомĕпе райĕçтăвком çак ĕçе хапăл туса хамăр районра та 1-мĕш май присăвĕ туса иртерме йышăнаççĕ.

Уйрăмăн пурăнакан ҍухăнпа вăтам хресҍенсем халĕ колхос строиттĕлствинҍен, ăна активлăн пулăшас ĕçрен никам та пăрăнса йулма тивĕçлĕ мар. Кам колхоса хирĕç пырат, колхос тума ҍăрмантарат, вăл кулакшăн ĕçлет. Кам колхосшăн тăрăшат, колхос тума пулăшат—вăл ыранхи колхоçнĕк, вăл кулака хирĕç. Ун пек ҍухăнпа вăтам хресҍене кулак пусмăрĕнҍен хăтарса ăна ҍасрах колхоса кĕме пулăшасси пирĕн ҍи пирвайхи ĕç пулса тăрат.

Колхоçнĕксем! Есĕр колхоссенҍи ĕçе тĕрĕс йĕркелесе çтелшҍĕнă çине ҍасрах кӳçса, сăмахпа анҍах мар, ĕçре те сотсиалисăмлă ĕç йĕркипе—сотсиалисăмлă ăмăртула хастарлă ĕçлесе уйрăмăн пурăнакан ҍухăнпа вăтам хресҍенсене хаваслантарса ҍасрах хăвăр ĕретĕре тăма пулăшмалла. Май уйавĕн кунĕсенҍе уйрăмăн пурăнакан ҍухăнпа вăтамсем епĕр ҍĕннине хапăл туса пиншерĕн колоса кĕрсе колхоçнĕк çарĕсен

ĕретне—Ленин кăтартнă çул çине тăрĕç тесе шанатпăр. Мĕн пур пултарулăха, мĕн пур хастарлăха çураки планне ытлашшипех тултарасси, çуракине кĕске срукрах пĕтерессишĕн кĕрешме, коллективисатси ĕçне тата çӳлĕрех пусмана хăпартма мопилисатсилер.

Колхоçнĕксем! Кăтартуллă, хаваслăн ĕçлесе, иккĕленсе тăракансене ђасрах колхоса кĕме пулăшăр!

Уйрăмăн пурăнакан ђухăнпа вăтам хресђенсен хуçалăхсем! Темиçе мĕлйун колхоçнĕксем темиçе тĕрлĕ тĕрĕсленĕ—ђăнђăн çул çине—сотсиалисăм, колхос çулĕ çине пĕр иккĕленмесĕр тăрăр!

Полђшевикла çуракинђе çĕнĕ çĕнтерӳсемшĕн, çураки планне тултарса иртсе кайассишĕн, çураки срукне кĕскетессишĕн хастарлăн кĕрешер!

Района талкăшпех колхоса куçарса çав никĕс çинђе, кулаксем клас пулса тăнине пĕтерер!

Майăн пĕрĕмĕшĕ—колхоçнĕксен çĕнĕ присăв кунĕ сызă пултăр!

Парттин ђаллăпуç райкомĕ.
Райĕçтăвком.

Суриккăв вуласа пĕтерђĕ те, йĕри-тавралла пăхса илђĕ. Колхоçнĕксем шăп. Шĕвĕр сухалĕсене каçăртса тăраççĕ стариксем.

— Ну, йулташсем! Мĕн калăпăр партти йыхравĕ пирки? Сăмах сирĕнте.

— Мĕн каласси пур... епĕр сăмахпа калассине ĕçпех кăтартатпăр, кăтартрăмăр та ĕнтĕ. Малтанах, ĕçе хăнăхса çитеймен пирки, пирĕн прикатă нормăсене те тултараймастђĕ, халĕ пыр та калаç пирĕнпе. Ĕнер епĕр 3 лашапа 1,5 ка сухаларăмăр. Кунашкалах тимлесе ĕçлесен епер акана пур колхоссенђен те малтан пĕтерме пултаратпăр...

— Тĕрĕс, Петта, йелђоххă-воххă!—сиксе тухрĕ Микиш,—тĕрĕс санăн сăмахху!-Ĕçĕн хăвăртлăхĕсене тата ытларах ӳстерме кирлĕ. Пуринĕн те пирĕн утарниксен ĕретне хутшăнмалла.

— Пайантан пуçласа епĕ утарникле ĕçлеме пулатăп. Ыттисене те хам хыççăнах туналама ђĕнетĕп,—терĕ Аит муђи, халăх умне тухса.

— Епĕ те утарник!

— Епĕ тата мĕнрен кайа, йолкки-палкки!

— Çырăр мана та утарнике.

— Сывă пултăр утарник!

— Тайош ăмăрту!

— Йулташсем! — пӳлет колхос претçетаттĕлĕ колоçнĕксен хаваслă сассине,—пирĕн сатађ ытти колхоссене те хамăр примера кăтартса парасси. Çак шутпа епĕ Уçтим йалĕнђи «Молотгăв» колхоса ăмăртăва ђĕнме сĕнетĕп.

— Пайанах ђĕнетпĕр!

— Петта, сыр токăвăр.

— Парăр хут!
— Парăр Петтана кăранташ.
— Ђимер-ха, йулташсем, ан шавлăр. Токăвăр пеккине еп хамах хатĕрлерĕм. Ана вуласа çирĕплетесси кăна йулат,—хирĕнкелесе тухат претçетаттĕл сасси.
— Ата, вула.
— Вуламасăрах йышăнатпăр!
— Мĕн вуласа вăхăта сайа йамалла, ал пусăр та йарăр.
— Çапах та, йулташсем, массăпа çирĕплетес пулат вăл токăвăра,—ăнлантарат претçетаттĕл.
— Ну вуласам еппин, итлĕпĕр.
Претçетаттĕл вулат:

«МОЛĂТТĂВ» КОЛХОС ЂЛЕНĔСЕНЕ.

ЎКЕРЂĔКĔ—ПАРТГИ РАЙКОМНЕ.

«Краснофлоттĕс» колхосăн йыхравĕ

Хаклă йулташсем!

Колхосла уй-хирĕн утарникĕсем! Пирĕн çулпуçăмăр—комуниссен парттийĕ тĕрĕс йертсе пынипе епĕр кăçал аслă ĕçсен пилĕк çуллăх планăн виççĕмĕш татăклă çулĕ çине пусрăмăр. Рапођи класпа ĕçхресђенĕсем кунран кунах çĕнĕ çĕнтерӳсем тăваççĕ. Епĕр, уй-хир утарникĕсем, хамăр хуçалăха хăпартмалли, кулак тыткăнĕнђен хăтăлмалли пĕртен-пĕр тĕрĕс çул—ушкăнлă хуçалăх çулĕ пулса тăнине аванах ăнланса илсе çав çул çинç çирĕппĕн тухса тăтăмăр. Патраксемпе ђухăнсем тата вăтам хресђенсем клас пулса тăракан кулаксене хуçалăха коллективланипе тĕп туса пыраççĕ.

Хăйĕн вилĕмĕ умне çитсе тĕртĕннĕ клас ташманĕ пĕтĕмпе урса кайсах пире хирĕç кĕрешме пуçларĕ. Кулаксемпе поткулађниксем, тата вĕсен йуррине йурлакансем кашни утăмрах пире, колхоçнĕксене, тақăнтарма тăрăшаççĕ, колхоссем çинђен тĕрлĕрен суйа сăмахсем сарса, уйрăмăн пурăнакан ђухăнпа вăтăм хресђенсене хăйсем майлă çавăрма пикенеççĕ.

Анђах епĕр, колхоса пĕрлешнĕ ђухăнсемпе вăтамсем, партти кăтартса панă çул çинђе çирĕп, пагтăрăн тăратпăр. Пирĕн ĕрете клас ташманĕ нихăçан та аркатайас çук. Епĕр вăйлă! Пирĕн вăй—пĕрлешӳре. Клас тăшманĕ пуçне çĕкленине хирĕç хамăр вăйсене тата ытларах çирĕплетнипе ответлер. Çурхи ака планне ытлашшипех тултарар. Утарникле ĕçлесе пољшевикла иккĕмĕш çуракине кĕске вăхăтрах туса иртерер. Сотсиалисăмлă ăмăртупа утарниђђĕстă йалавĕсене çӳлерех çĕклер.

Пĕтĕм тĕнђери пролеттариатăн револђутсиллĕ аслă уйавĕ—1-мĕш май йађĕпе епĕр, «Краснофлоттĕс» колхос ђленĕссем, пурте утарниксен ĕретне хутшăнатпăр, пайантан пуçласа мĕн çураки пĕтиђђенех утарникле ĕçлеме пулатпăр.

Еç нормисене уйрăм хуçалăхрисенђен 1,5 хут ÿстерме, çураки планне ытлашшипех тултарма, пĕрђĕллĕ тырăсене майăн 5-мĕшђен акса пĕтерме, майăн 10-мĕшђен уйрăм хуçалăхсене пĕтĕмпе колхоса хутшăнтарма сăмах паратпăр.

Майăн 1-мĕшĕнђе сотсиалисăмлă ăмăртупа утарниђђĕствă йухăмĕсем пуçланса кайни 2 çул тултарат. Сотсиалисăмлă ăмăртупа утарникле ĕçлес майсене пире Ленин йултăш кăтартса парса хăварнă.

Еçĕн сотсиалисăмла майĕсем—ăмăртупа утарниђђĕствă сывă пулђђăр!

Пођшевикла иккĕмĕш çуракине пысăк çĕнтерÿсемпе иртерер!

«Краснофлоттĕс» колхос ђленĕсем.

— Йурат-и, йултăшсем, çакнашкал ђĕнÿ?—ыйтрĕ претçетаттĕл вулама ђарăнса.

— Йурат, йурат!

— Питĕ аван.

— Шыв пекех йухат!

— Урăх мĕн кирлĕ тата?

— Аванни аван та, анђах пĕртаксçех хушса çырмалла ман шутăмпа. Кунта ĕç нормисене йепле ÿстересси çинђен нимĕн те шарламан. Апла такам та ăмăртма пултарат,—савăлласа лартрĕ Тимак.

— Хушмаллисене хушма йурат, епĕ хирĕç мар, — тавăрђĕ претçетаттĕл.

Колхоçнĕксем татах та сĕнÿсем паркаларĕç. Вăл сĕнÿсене пĕтĕмпех пĕр çĕре пĕтĕçтерсе çĕнĕ ђену çырђĕç. Çав каçах токăвăра йышăнтарма колхоçнĕксенђен икĕ çын уйăрса Уçтимйелне йађĕç.

---

10. Карук тĕввисем—ункă.

Пайан—ахăлтатса кулса тăракан май уйăхĕн пĕрĕмĕш кунĕ. Йĕпхĕм хĕрлĕ тумпа тухса илђĕ Ваççилйĕвккă поççолкки 1-мĕш майăн сутă хĕвелне.

Ирхине ирех велоççипетсемпе виçĕ çын килсе кĕђĕç поççолккăна. Хăйсем симĕс кимнаçторккăсем тăхăннă, пуçĕсене хĕрлĕ кăшăллă карттуссем тăхăннă, ђĕн пысхийĕсенђен накансем çакса йанă.

— Камсем-ши кусем?

— Мĕнле çынсем-ши?

— Мĕн ĕçпеле килнĕ-ши?

Поççолккă çыннисем нимĕн ăнланаймасăрах пăхса тăрса йулђĕç симĕс тумтирлĕ çынсене.

Велоççипетлă çынсем тÿрех йалсоветђĕ умне пырса ђарăнђĕç

— Кам сирĕн претçетаттĕл?—ыйтрĕ пĕри советакĕнĕ кĕменех.

— Епĕ. Мĕн ĕçпелеђђĕ-ши вара?

— Крайуполномоҫҫӑннӑй Сурикксӑва курмалла пирӗн.
— Кирлӗ пулсан халех ҫӗнсе килӗп. Унӑн хваттерӗ кунтан инҫех те мар.
Претсетаттӗл Сурикксӑва ҫӗнме тухса кайрӗ.
— Колхоҫнӗксемпе пӗрле сӳгсе йавмалла пулат ку ӗҫе,—терӗ пӗри, Тимак тухса кайсассӑн.
— Унта куҫ курӗ. Малтан йӗрӗсене шӑршласа тупар,—терӗ тепри, хулӑм сасӑлли.
— Акӑ кунта манӑн хӑшпӗр токкумӗнтсем.
Вӗсем виҫҫӗшӗ те хулӑм сасӑллин аллинҫи хутсем ҫине тӑрӑнҫӗҫ.
Ҫасах Сурикксӑвпа претсетаттӗл килсе кӗҫӗҫ.
Пӗр сӑмахсӑрах ӑнланҫӗ Сурикксӑв ку ҫынсем мӗн шутпа килнине. Хыпаланса алӑ тытса тухрӗ те ыйтрӗ:
Леш ин хыҫҫӑн-и?
— Ҫавӑнпа,—тавӑрҫӗ хулӑм сасли, хуҫӗ ҫинҫен куҫне сиктермесӗр. Унтан вулама ҫаранса:
— Колхоҫнӗксенҫен икӗ ҫын ҫӗнтер. Карп Иппатийӗв килне опӑск тума кайатпӑр,—терӗ.
«Опӑск тума» тесен Тимак та тавҫӑрса илҫӗ ку ҫынсем камсем иккенне.
Ирхи апат ҫисе ларнӑ ҫӗре Карук килне виҫӗ акӗнт, Сурикксӑв, Микиш, Тимакпа Татук инке, тата Елеҫук патрак ҫитсе кӗҫӗҫ.
— Именем РСФСР вы арестованы!—терӗ хулӑм саслӑ акӗнт Карука. Вӑл ура ҫине тӑҫӗ, шурса кайрӗ. Аллинҫи стаканӗ унӑн урайне татӑлса анса ҫапӑнҫӗ, пӗрҫӗн-пӗрҫӗн арканса сапаланҫӗ. Пӗтӗм пурӑнӑҫ ҫак стаккан йевӗрлӗн сапаланса кайнӑн туйӑнҫӗ ҫак самантра Карука.
— Саккун нимӗн айӑпсӑр ҫыннах арӗслеме хушат пулсан—пӑхӑнатӑп.—Парӑр ортӗр на арӗс,—тавӑрҫӗ Карук, сӑмах вӗҫӗсене ҫӑмласа. Акӗнт ӑна ортӗр кӑларса кӑтартрӗ.
— Хӑвӑн контрреволҫутсиллӗ айӑпусене йышӑнатӑн-и, краштанин Иппатийӗв?
— Ҫук! Мӗншӗн тесен епӗ нийепле айӑп та туман.
— Саккунтан вӑрттӑн тытса усракан йапаласем ҫук-и санӑн килӗнте?
— Нимӗн те ҫук!
— Краштанин Иппатийӗв! Хӑвӑр айӑпа есӗр йышӑнмарӑр. Опӑск тӑватпӑр сан килӗнте.
Карук ҫӗнмерӗ. «Лекрӗм!» тенӗ шухӑш ҫиҫсе кайрӗ унӑн пуҫӗнҫе. Ку ӑнсӑртлӑха вӑл нийепле те кӗтменҫӗ. Колхос хуме урарав ҫапса ӳкерессе тӗплӗн пӗлсе тӑнӑ пулин те, контрреволҫутсиллӗ ӗҫсемшӗн айӑпласси унӑн шухӑшра та пулман. Кетмен ҫӗртенех уйар аҫи ҫитсе ҫапнипе унӑн куҫӗ умӗнҫи йапаласем пӗтӗмпех хутшӑнса кайса пӑтранма пуҫларӗҫ. Умра акӑ унӑн тӑшманӗсем, ун ҫине, ҫак кил-ҫурта ӗмӗртен хӑватлӑ тымарсем ярса

ларнă Карук çине йĕрĕнђĕклĕн пăхса тăраççĕ. Вăл сасартăк урнă кашкăр пек пулса кайрĕ, урмăш аскăн сасăпа кăшкăрса йађĕ:

— Савăнатăр? Йĕрĕнсе пăхатăр? Ех, çĕр хурђĕсем! Камшăн шăтăк ђаватăр? Ман тымарăма кăклама килтĕр пулĕ?!

Карук куçĕ умĕнђи йапаласем-каллех пăтранса кайса нимĕн тăрлавсăр çаврăнма пуçларĕç.

— Краштанин Иппатйĕв, лăпланăр. Есĕр шанђăклă алăра,—хултан тытса лартрĕ ун умĕнђе тăракан акĕнт. Карук хăштах сывласа йађĕ, ђăмăртаннă ђыйкисем хăйсемех сарăлса кайрĕç. Çав «çĕр хурђĕçем» умĕнђе вăл хăй çав тери вăйсăррине кура куçĕсем йулашки хут тискерĕн çиççе илђĕç, унтан вăр...н сӳнме пуçларĕç.

Карук пӳртĕнђе опăск пуçланђĕ.

Темĕн ђухлĕ шырасан та нимĕн те тупаймарĕç пӳртре. «Йапаласене пытарнă» шутласа илђĕ Микиш вĕђĕрхенсе.

— Мĕн ђухлĕ тупрађђĕ Карукăн, мĕн ђухле тупрађђĕ! Камăн йунне сăрхăнтармантăр вăл? Камăн вăйне ĕммен-тăр? Ăçта халĕ вăл тупрасем? Ăçта вăл ĕмĕртен хăй тавра тимĕр карта тытса, ђухăнсемпе патраксене çав тимĕр карта тыткăнĕнђе асаплантарнă хура йунлă ерешмен? Вăл çук. Пайан вăл хăйĕн сăнсăпатне улăштарнă. Ñысăк хырăмне каçăртса, хура сухалне шăлса тăракан кулак çук пайан куç умĕнђе. Урине те вăл çăпата кăна сырса йанă авă. Вешшăлккă çинђе те лăстăр-лăстăр çĕтĕк тумтирсем кăна çакăнса тăраççĕ. Ĕлĕк вăл çĕтĕк-çатăк тумтир Елеçук патрак çийĕнђен тухманђђĕ.

Елеçукăн ђĕри çурăлса кайас пекех сурма пуçларĕ. Вĕђĕрхенсе çитнипе хăрушшăн, хайаррăн çĕкленђĕç унăн куçĕсем Карук çине.

— Мăшкăл, йулташсем! Кулак йапалисене тупаймастпăр—мăшкăл! Хăçан Карук лаççи пушă арпа лаççи пек ханкăртатса ларнине курнă? Хăçан Карук çак саплăклă пир пиншакпа çӳренĕ? Калăр мана—хăçан?! Тăхăнађђĕ-и вăл ĕлĕк çак лăпсăрти саплăклă пир пиншака?! Тăхăнађђĕ-и, е?—Елеçук алăк патĕнђе çакăнса тăракан пиншака илсе мађђана çитех çĕклерĕ те, мĕн пур вăйпа урайне çатлаттарса çапрĕ.

— Ђанк! турĕ темĕскер пиншак ăшĕнђе. Карукăн усăннă пуçĕ йаштах çĕкленђĕ, сӳнсе ларнă куçĕсем татах та тискертереххĕн çиççе илђĕç.

— Ку мĕн?

Акĕнтсем пиншак/кăсйисене ухтараççĕ. Нимĕн те çук кăсйесенђе. Айăкри кăсйинђен хытнă çăкăр татăкĕ кăна тухрĕ. Çапписем ăшне хыпашласа пăхрĕç—нимĕн те çук...

— Ех, йеђохха-вохха, çавна та тупаймастăр!—терĕ Микиш, пиншака тепĕр хут урайне çавăрса çапса.

— Ђанк!—туса-çатлатрĕ пиншак урай хăми çумне.

— Саплăксене сӳтсе пăхăр! Пусăма паратăп—укçа çĕлесе хунă унта.

Пурте çĕтĕк пиншакăн саплăкĕсĕнђе ђаваланма тытăнђĕç.

— Охо! Çуттийех сиксе тухрĕ!—кăшкăрса йађĕ Елеçук, вунă

тенкĕллĕх икĕ ылттăн укçа туртса кăларса.—Акă ăçта вăл пирĕн йун.

— Кунта тата тепре!—çухăрат Татук инке çинçе сассипе.

—Акă татах!

Пиншак çĕтĕкĕсенђен вунă тенкĕллĕх ылттăн виççĕ, пилĕк тенкĕллĕххисем улттă кăларђĕç.

Карук ни вилĕ, ни ђĕрĕ.

...Анкартинђе Карукăн—çĕнĕ петтисҫтеннăй пӳрт. Ни туса пĕтереймен ăна вăл, ни сутма ĕлкереймен. Никам та пурăнакан çук унта, нимĕнле йапала та тытмаççĕ. Ларат усăсăр, хăвăл йуман пек, йанраса петтисҫтеннăй шурă пӳрт.

Акĕнтсемпе Сӳриккăвсем çак пӳртре те ухтарма пуçларĕç.

— Нимĕн те çук кунта! Кунта пытарса хума майĕ те çук,— терĕ Тимак, пĕргаксçех пăхкаланă хыççăн.

— Тĕплĕрех шырас пулат. Кулак вăл таçти хушăка та пытарĕ,—тавăрат акĕнт.

Микиш мађђа çине улăхса кайрĕ, анђах пĕр самантранах калла анђĕ.

— Питех те лайăх пăхрăм, нимĕн те çук,—шантарђĕ вăл.

— Апла пулсан ухтарас та мар. Атăр пӳрте кĕрсе проггоккол çырар.

Акĕнт утма пуçланăђђĕ, анђах ăна Елеçук ђарђĕ.

— Йулташ акĕнт! Манăн тата тепĕр хут шырас килет мађђа çине.

— Хăпарса пăх еппин.

Елеçук вĕшле йытă пек сиксе хăпарђĕ мађђа çине.

— Тимĕр туйа парăр-ха!—кăшкăрђĕ вал пăртак тăхтасан..

— Тимĕр туйа çук!—ответлерĕ Тимак, ăна алă туйи ывăтса парса.

Елеçук мађђа хăмисем тăрăх шаккаса çӳреме тытăнђĕ.

— Хăнт-хăнт-хăнт!—тăват пĕр вырăнта мађђа.

— Шак-шак-шак!—сас парат тепĕр вырăнта.

— Стой, йулташсем! Илтетĕр-и?—кăшкăрат Елеçук мађђа çинђен.

— Мĕн пур?

— Мĕн тупрăн?

— Итлĕр, шала кĕрсе итлĕр.

Елеçук каллех шаккама тытăнђĕ.

— Тӳнт-тӳнт-тӳнт!—тăват пĕр вырăнта мађђа.

— Шак-шак-шак!.. Сас парат тепĕр выранта.

— Илтеттĕр-и?—татах кăшкăрса ыйтат Елеçук.

— Илтетпĕр!—ответлеççĕ шалтан.

— Хăпарăр-ха хăвăртрах кунта!

Пйкамран малтан акĕнтсем кушакла сиксе улăхрĕç Елеçук патне. Вĕсем хыçĕнђен ыттисем те ђаваланкаласа хăпарђĕç.

— Мађђа хăмисене пĕтĕмпех уçмалла—икĕ хутлă,—хушрĕ Елеçук.

— Пĕрĕшсем, пургăсем илсе килĕр. Унсăрăн уçма çук.

Микиш икĕ пуртă, пĕр пĕрĕш илсе хăпарђĕ.

Пурте пĕрĕшрен уртăнса мађђа хăмине хирме тытăнђĕç.

— Уçăлат! Уçăлат!

— Хытăрах! Хытăрах!

— Харăсрах, рас!

— Ррас!—хирђĕç пурте, пĕр харăс мекĕрленсе.

— Хррăп!!!—çурăлса кайрĕ темĕнле хăрушă, хайăр хăватлă вăй. Мађђан сылтăм кĕтессинђен тусанпа тĕтĕм пĕрхĕнсе тухрĕ, тимĕр çивиттийе çўлелле çĕклентерсе.

Пуринĕн те хăлхисем хупланса ларђĕç. Татук инке шари! кăшкăрса йађĕ те вырăнтах лăђăрканса анђĕ. Ыттисем нимĕн ăнланаймасăр пĕрне-пĕри куçĕсенђен сăхса илђĕç...

— Помпă... Помпă лартнă! Ех, сволăђ!

— Пăхăр, йулташсем, никам та аманман-и?

— Татук инке... Татук ин... ке...

Татук инке кăштах пуçне йăшалантарђĕ. Унган, такамран пулăшу гилмĕрнĕ пек, аллисене малалла кăнтарђĕ, анђах вăл алăсем самантрах хутланса ларђĕç. Ђышкисем хăйсемех ђамăртанђĕç. Татук инкен кăкри йăвăр çĕклемĕн çĕкленђĕ те, сывлама ђарăнђĕ. Шурă тутăр тăрăх ђĕрĕ йун, етем йунĕ пăлкаса йухса анђĕ.

— Татук инке... пĕтрĕ. Татук инке.

Ăна вăрахăн алă çине илсе йеррипен курăк çине антарса вырттарђĕç.

...Кĕрслетсе çурăлса кайнă сасă пўрте çитсе çапăнсан, Карук арçури пек тискерĕн ахăлтатса тулалла ђупса тухса кайрĕ. Ăна хураллакан акĕнт наканне йĕннинђен туртса кăларса ун хыçăнђен сирпĕнсе тухрĕ.

— Краштанин Иппатйĕв, ни с места!

Карук нимĕне пăхмасăрах анкартинелле çиçрĕ.

—А-а-а, тупрăр-и?! Тупрăр-и куђђенеçĕме?—ахăлтатса туллашма тытăнђĕ вăл, курăк çинђе выртакан Татук инкене курсан.

— Краштанин Иппатйĕв!—кăшкăрса пăрахрĕç акĕнгсем, ун çине вичĕ йенђен накансемпе тĕллесе. Анђах Карук ухмаха иернĕ сын пек пушшах ахăлтатса йађĕ.

— Ха-ха-ха! Перĕр! Мейĕр—перĕр çĕрме пуйан кулака! Мĕншĕн пеместĕр, йе алăрсем ђĕтĕреççĕ-и? Перĕр—йуна хирĕç йун! Епĕ хам ĕçе турăм, сирĕн пек шикленсе тăмарăм. Йулашки хум çитсе çапиђђенех çирĕп тăтăм хам çулăм çинђе. Халĕ те, сирĕн алăрта йытă вилĕмĕпе вилессинђен нимĕн ђухлĕ те шикленмесĕр, паттăрăн тăратăп хам вилĕм умĕнђе. Хамăн çулăма кĕрешўсĕр памарăм епĕ... Çавнашкал вăл есĕр хартакан клас, сирĕн тăшманăр—кулађђĕствă...

Карука урăх калама памарĕç. Икĕ акĕнт икĕ йенне тăрса йалсоветне илсе кайрĕç ăна. Татук инкене килне ăсатрĕç. Вĕсене илсе кайнă хыççăн ыттисем каллех ĕçе тытăнђĕç.

Ҫĕнĕ пӳрт маттине ттăнахах та икĕ хутлă тунă. Матта хăмисем ҫумне шал йенттен шăлтăрмасем ҫапса тултарнă. Вăл шăлтăрмасем тăрăх шпакатсем шуҫса ҫӳренĕ. Кирек хăш хăмине ҫĕклесен те шăлтăрма тăрăх шпакат туртăнса авăрласа хунă помпă персе йамалла тунă. Карук хăй кĕнĕ ттух помпă персе йамалла ан пултăр тесе маттан пĕр хăмине шпакатпа каркаламасăрах хăварнă. Хăш хăмине уҫмаллине вăл пĕр хăй кана пĕлсе тăнă, ҫавăнпа матта ҫине кĕрсе ҫӳреме те, авăрланă помпине ĕҫерсе илме те пултарнă.

Пĕр пӳртĕн матти ҫинтте туллийех тулă. Теприн матти ҫинтте—тĕрлĕрен шур тумтирсем, ылттăн-кĕмĕл йапаласем. Ҫавăнтах виҫĕ винттовккă, 196 патрон тухрĕ.

Кулак йапалисене тĕплĕн оппĕҫ туса пĕтерсен тепĕр хут тĕплĕреххĕн опăск тума пӳрте кĕттĕҫ. Кĕтесри турăшсем хыҫĕнттен хулăм кĕнеке сиксе тухрĕ. Славенла саспаллисемпе „Пипли" тесе ҫырнă унăн хуплашки ҫине. Микиш кĕнекене алла илттĕ те йатса пăхрĕ.

— Ох, йеҕохха-воххă, хăшин йăвăрĕш вăл!

— Ăшне уҫса пăх, мĕн те пулин пулман-и?

Антах Микиш пиплин ҫийелти хуплашкине уҫрĕ—сасартăк, хуртка персе анса ттăх ттĕппине тытса кайнă пек, Карук арăмĕ туртса илттĕ кĕнекене.

— Таса мар аллăрсемпе тытма тивĕҫлĕ мар есĕр, ангихриссем, вăл кĕнекене! Ан варалăр ҫветтуй сывлăш ковттекне!

— Арăмĕ те пулин сантăрти йытă пек туллашатҫке. Пар кĕнекене, йеҕохха-воххă!

— Сире париттен лутта таса вутпа ҫунтарса йарса тура алтине парам!—терĕ те Карук арăмĕ, кĕнекене кăмакана, шатăртатса ҫунакан вут ăшне вăрхăнтартĕ. Антах ăна вут тивме ĕлкĕриттенех Елеҫук калла туртса кăларттĕ.

Микишпа Елеҫук пипли листисене уҫса хупма тытăнттĕҫ. Пĕр-так уҫкаласа кайсассăнах листа хушшинттен темĕнле тĕлĕнмелле ҫыру сиксе тухрĕ. Микиш ăна алла илсе сăнама тытăнттĕ.

— Йеҕохха-воххă, мĕнле ттĕлхепе ҫырнă кана?—ыйтрĕ вăл йулташĕсенттен.

— Киттайла ҫырнă пуҕ ку хута,—тавăрттĕ Суриккăв, мĕнле ттĕлхепе ҫырнине хăй те ăнланаймасăр.

— Парăр-ха кунта. Тен, епĕ мĕн те пулин шăршласа пĕлĕп,— илттĕ ҫырăва акĕнт.

Нумайттен урла-пирлĕ тыткаласа ҫыру ҫине пăхса ларттĕ акĕнт. Тем вахăттен тишкĕрнĕ хыҫҫăн тин вуласа тухрĕ пулмалла та, савăнăҫлăн кăшкăрса йатĕ:

— Еврикка! Тупрамăр! Киттай ттĕлхи мар ку, ттăвашлах ҫырнă. Акă, вулăр. Ҫырăне хăйаккăн тытса сылтăм йенттен ҫӳлтен аялалла ҫырнă. Ăнлантăр-и? Вот, вот...



Хисеплĕ Карук!

Пирĕн шутлă кунсем çывхарса килеççĕ. Мана арĕслерĕç. Сыхланарах пурăн. Опăск пымалла. Йапалусене пытарса хур. Санăн тусу Вĕшле.

— Аха, кунта иккен-ха вăл вĕшлен тымарĕ!—тата ытларах хавасланса ӳкрĕ акĕнт.

— Кам вăл, йеђохха-вохха, Вĕшле?

— Вĕшле вăл „промпартти“ ђленĕ пулнăскер, вретиттĕл. Вăл малтанах Мускавра теменле савăтра ĕçленĕ. Кайран, промпартти ђленĕсен суђĕ пуçлансан, суйа токкумĕнтсемпе ђирĕн Вăгам-Атăл крайне килсе лекнĕ. Йулашки вăхăтра вăл МТС-ра, главбухра ĕçленĕ. Ун çинђен пире Мускавран уйрăм хутпа пĕлтерђĕç. Аранах тытрăмăр епĕр ăна.

— Йелоххă-воххă! Лекрĕ-и вăл хађ? Вот молотсысем! Вĕшле вĕт пире те кăçал лартрĕ, ђавса таранах лартрĕ. Кăштах машшинсемсĕр тăратса хăвараттђĕ. Йуса пулах хям та кăштах шывпа йухса кайаттăм епĕ, йеђоххă-воххă.

— Ку кĕнекенне кашни листинех уçса тухас пулат. Теи татах та тухĕç çакнашкал токкумĕнтсем

Микиш малалла уçма тытăнђĕ.

— Ой, йеђоххă-воххă! Кĕнеке листисем уçăлмаççĕ.

Хытăрах турт.

— Туртсан та уçăлмаççĕ. Çилĕмпех çыпăçтарса лартнă.

— Турт та ђĕр!

Микиш мĕн пур вăйпа туртса кĕнеке листисене тăпăлтарса кăларђĕ. Листасем айĕнђен çап-сутă çӳхе тимĕр йешђĕк сиксе тухрĕ. Йешђĕкне кĕнеке листисене тăваткăл касса кăларса вырнаçтарса кӳртсе лартнă. Йешђĕкĕ ăшĕнђе—вĕрçĕнĕ праунинк.

— Ай-вăй-вăй!—кăшкăрса йађĕç пурте.

— Акă мĕнпе пытарат тăшман хăйĕн класла сăнсăпатне! Ђăнахах та тăшман тăтăшах пирĕнтен ђейерех иккен!

11. Ҫӗнтерӳ пирӗнте.

Кӑнтӑрлахи кӳлӗмре пайан хирте миттӗнк тӑвас тенӗҫҫӗ. Анҫах Карук патӗнҫе аппаланнӑ пирки миттӗнк тума пулмарӗ.

Пайанхи хыпара илтсен акари ҫынсем лашисемпех ҫаранҫӗҫ Татук инкесен килӗ тӗлне. Йакур пиҫҫене арӑмӗ вилни ҫинҫен каласа парсан, вӑл тӳрех, хӑй тӗлне хӑй пӗлмесӗр пӳрте ыткӑнса кӗрсе кайрӗ.

— Ех, Татук, Татук! Кӗрешӳре пуҫна ҫухатрӑн...—улласа йӗрсе йаҫӗ вӑл, арӑмӗн кӗлетки ҫине тӗшӗрӗлсе анса. Йакур пиҫҫен пыр шӑтӑкне куҫҫуҫ капланса тулҫӗ. Хӑвӑрт хашкаса сывлама пуҫларӗ вӑл. Анҫах шывлӑ куҫӗсем унӑн ҫасах типрӗҫ, шатра питҫӑмартисем тӑрӑх мерҫен куҫҫуҫ тумламӗсем кусма ҫаранҫӗҫ.

— Ҫук, йӗрме кирлӗ мар. Хисеплӗ вилӗмпе кӗрешӳре пуҫ хунӑ паттӑр умӗнҫе куҫҫуҫ ан тӑкӑр!—йанратма пуҫларӗ вӑл, пӗгӗм халӑх умне тухса тӑрса.—Ман арӑм Татук мухтавлӑ вилӗмпе вилҫӗ.

— Унӑн йатне епӗр пулас кунсен ҫаршавӗ ҫине ылттӑн саспаллисемпе ҫырса хума тивӗҫлӗ...

Хиртен 10—12 лашапа уйрӑм хуҫалӑхсем таврӑнҫӗҫ:

— Мӗн пулнӑ?—ыйтрӗ пӗри.

— Пухӑ тӑваҫҫӗ пуҫ...—тавӑрҫӗ тепри.

— Атӑр-ха епӗр те кайса пӑхар. Пире те йурат пулӗ унта пулма.

— Пуху мар,—ӑнлантарма тытӑнҫӗ пӗр хӑлхасӑртарах старик,—хӑмпӑ ҫурӑлнӑ.

— Мӗнле хӑмпӑ?

— Йакур арӑмин хӑмпи ҫурӑлнӑ.

— Мӗн кирлӗ мара каласатӑн, ылмаш илтрӗн пулӗ?

Ҫак вӑхӑтра уйрӑм хуҫалӑхсем патне колхоҫнӗк Петта пыҫӗ.

— Карук патӗнҫе помпӑ ҫурӑлнӑ... Татук инкене лекнӗ...—терӗ вӑл йӑвӑр кӑмӑлпа.

Старик хӑлхасӑр пирки „помпӑ" тенине „хӑмпӑ" тенӗ пек ӑнланнӑ мӗн.

Уйрӑм хресҫенсем Йакур пиҫҫе пурҫӗ умне кӗпӗрленсе тӑҫӗҫ. Йакур пиҫҫе вӗсене курсан тата ытларах кашкӑрма пуҫларӗ:

— Уйрӑм хуҫалӑхлӑ хресҫен йулташсем! Сире кулаксем улталаса пурӑнаҫҫӗ. Турӑ йаҫӗпе, йеванкӗлпе пипли хыҫнӗ пытанса вӗсем тискер ӗҫсем тӑваҫҫӗ.

Уйрӑм хуҫалӑхлӑ йулташсем! Пирӗн умра икӗ ҫул кӑна: пӗри колхосла ҫул, талккишпех колхос туса кулаксен класне тымарӗпех кӑкласа ывӑтмалли ҫул, тепри вал—каллех кулак тыткӑнне илсе тухакан ансӑр сукмак. Кулакан ирсӗр аллинҫен пурнӑҫне ҫухатнӑ йуратнӑ арӑмӑм вилли умен ҫе ыйтагӑп сирӗнтен: камсемпе есср? Колхосла-и, йе колхоса хирӗҫ и?

Йакур пиҫҫен хуйхӑллӑ сӑмахӗсене илтсен уйрӑм хресҫенсем карттусӗсене хыврӗҫ. Калигкӑ ҫине ППУ акӗнтсем тухса таҫӗҫ.

— Хресҫен йулташсем! Пайан епĕр хĕпĕртесе, савăнса пĕтĕм тĕнҫери пролеттариатăн аслă уйавне—майăн 1-мĕшне уйавлас вырăнне клас тăшманĕн йунлă парни умне йалавсене тайатпăр. Хайĕн вилĕм умне çитсе тăнă клас тăшманĕ уççăнах пуçне çĕклерĕ. Тăшмансем сире уйрăм хуçалăхсене тĕрлĕ сăмахсемпе илĕртсе улталаса пурăннă, ĕмĕртенхи нушатлă, хĕнхурлă пурнăçăн вăлашкине çапса ватса савăнăçлă аслă çул, колхос çулĕ çине тухма ҫăрмантарса тăнă. Клас тăшманĕн тискер ĕçĕсем пайан пĕтĕмпех сирĕн куç умĕнҫе. Карукпа Йус колхоса салатасшăн тĕрлĕ меслетсемпе кĕрешнĕ. Йал тăрăх ыйткалакансем кăларса йанă, колхоçнĕксен кăмăлне пăлхатас тесе киремегпе хăратма шутланă. Вретиттĕлсемпе çыхăну тытса Карук МТС ĕçне ҫăрмантарса пынă...

Çак самантра уйрăм хресҫенсенҫен пĕри уйăрăлҫĕ те, хăвăрт-хăвăрт калиткă çине улăхса тăҫĕ.

— Çук, Карук мар! Карук мар киремет тăкаканни. Киреметне епĕ кăларса тăкрăм. Карук хатĕрлесе паҫĕ кăна, епĕ итлерĕм...— терĕ вăл ҫĕтренҫĕклĕ сасăпа.—Айăплă епĕ, йулташсем, сирĕн умăрта. Вăл мана Суриккăвпа Микиша вĕлермĕ те ĕрлерĕ, укçа парап тесе илĕртрĕ. Анҫах епĕ килĕшмерĕм. Халĕ манăн куçăмсем уçăлҫĕç. Пайантан пуçласа епĕ хамăн уйрăм хуçалăх тăллине туртса татса сирĕнпе пĕрлешетĕп...

Йулашки сăмаххисем çак старикăн ăраснах уççăн, хăватлăн йанраса, Вăкăр çырми тăрăх таçта çитех каçхи тӳлек сывлăша хумхатса кайрĕç. Уйрăм хресҫен калиткă çинҫен анҫĕ те, хăйĕн лашине колхоçнĕксем йенне çавăтса кайса тăратрĕ.

Унтан халăх умне Микиш тухса тăҫĕ.

— Иеҫохха-вохха! кăшкăрса йаҫĕ вăл нимрен малтан,—тăшман уменҫе пуçа таймалла-и? Кулаксен ирсĕр ĕçĕсем пирĕн хăвата тытса ҫармалла-и? Епĕр вăйлă! Пирĕн вăй—коллектив, колхоçнĕксен масси. Тăшманан ирсĕр ĕçĕсене пойккотласа хамăр ĕçри ӳсĕмсене тата ытларах çирĕплетме пулатпăр. Утарнĕкле ĕçлесе колхос происвотствине тата ытларах тĕреклететпĕр. Пире нимĕнле тăшман та парăнтараймĕ!

Микиш сăмахĕсене итленĕ хыççăн уйрăм хуçалăхсем пурте, пĕрин хыççăн тепри, колхоçнĕксем йенне куçса тăҫĕç. Вĕсем тăнă вырăнта хытхурапа вĕлтрен тĕмĕсем кăна тăлăххăн, хурлăхлăн хумханса ларса йулҫĕç.

— Йулташсем! Пайан пирĕн поççолккă колхосĕ çĕнтерĕве алла илҫĕ. Анҫах ку пирĕн—малтанхи çĕнтерӳ кăна-ха. Пирĕн умра татах та пысăк сатаҫсем тăраççĕ. Пирĕн колхосăн шалти происвотствине çирĕплетессишĕн, колхосри ĕçе тĕрĕс йĕркелессишĕн, таврари йалсене те хăвăртрах коллективлассишĕн паттăрăн çапăçмалла. Комуниссен парттийĕ тĕрĕс йертсе пынипе епĕр малашнехи кĕрешӳсенҫе те татăклă çĕнтерӳсем тăвăпăр!— вĕçлерĕ Суриккăв хăйĕн сăмахне.

12. Тăван масарĕ.

Татук инкене тепĕр ирхине, йăлтăртатса хĕвел тухнă вăхăтра, Вăкăр çырми хĕррине, колхоçнĕксемпе уйрăм хуçалăхсен çĕрне ђикĕлекен кран пуçне шăтăк ђавса ђикрĕç. Унăн тăпри çине хĕрес-масар лартмарĕç, çурхи йăваш ђеђексенђен илемлĕ кăшăлсем туса кăна хуђĕç. Унăн тупăкне шăтăка йарас умĕн сăмахсем каларĕç. Унтан пурте лашасемпе умлăн-хыçлăн, ĕмĕртен нушаллă кĕлмĕçлĕ пурнăçра тытса усранă йăрана сухаласа аркатма кайрĕç.

Çапла ванаççĕ хресђенсене темиçе ĕмĕр хушши уйрăмлăх, харпăрхăйлăх тыткăнĕнђе усранă ватă йăрансем.

Виђкĕн çил улласа йермест Татук инкен масарĕ çинђе. Йарапаланса ылттăн-кĕмĕл тĕрĕсемпе çутăлса тухакан ирхи шуçăм мерђен сывлăм тумламсемпе çуса тасатат масар çинђи ђеђексене, тата ирсерен сывлăм кайăкĕсем вăл ђеђексем çине ларса темĕнле хурлăхлă йурăсем кĕвĕлеççĕ. Вĕçен кайăксем Татук инкен паттăрлăхне асăнса мухтав йурри йурлаççĕ. Татук инкесен йађĕсене ĕмĕртен ĕмĕре хаклă парне пек астуса пурăнма вĕренгеççĕ...

Масар айăккипе нимĕн татти сыпписĕр шăнкăртатса йухат Вăкăр çырми. Паттăрăн йухат вăл. Çыран хĕррисене çите-çите çапăнат, урлă хунă сăвайсене йăвантарат, шурă кăпăк сирпĕтет. Васкат Вăкăр çырми, сарлака çул шыраса малалла, аслă тинĕселле ыткăнат.

Самар—Хусан—Шупашкар.
Март—август, 1931 ç.

ШУРИЛЁН КЕРОЙ

ПОЕМĂ

ИЛ. ТУМИЛИН.

Çапла пуçланат
Ман çак сăввăн
Пуçламĕш:
Вăйран талпăнса
Хырђăклатăп сăвва,
Умри сăмаха
Уйран йевĕр туçлатăп,
Асанне сĕт сунă пек
Сăмаха сăвап.

Çĕршыв кăшкăрат:
Ђасрах пилĕкçуллăх,
Ђасрах тимĕр-тăмăр,
Ђукун,
Ђасрах кунта нехтă,
Прокул çине—çулăм,
Парăр вăрман,
Кауђђук!

Парăр компайнă,
Пăта,
Çепараттăр,
Пойĕссем,
Çул,
Машшинсем,
Вăрлăх йатса тулђђăр
Мĕн пур елеваттăр,
Ђасрах ĕçе кĕђђĕр
Пушă çĕрсем.

Çĕршыв кăшкăрат:
Çĕн утарнĕксем парăр,
Утарнĕк хăй—
Происвотствă ђĕри...
Ман çĕршывра
Пур вĕсен
Пинлĕ çарĕ,
Манăн керой—
Вĕсенђен пĕри!..

Сăмах вакланса
Купалланăçем
Киллĕм,
Еп хам керойа
Калап акă йатран:
Çынрь сăмахпа
Ђысласассăн:
Шурилĕн,
Йатпа
Тимахви—шатра.

Тахçан ђеђђерен
Ађаранах
Шатраллă,
Ăна ђеђђерен
Ыткăнтарнă ђапа:—
— Шатра.
Ун станок
Пайĕсем пек
Ик алă,
Пăхсан—етем мар,
Машшинис—çапах!..

Пăх-пăх пăравус,
Пăравус
„Р—105“
Нурри—тупăлха,
Кĕввийĕ—кĕсле.
Хуран—пасмана
Пăс пырçихиллĕ—
Çак хуранта
Тимахви ĕçлет.

Етем хушшинҫе
Кахалсем кивӗленңнӗ,
Шурилӗншӑн паллӑ
Хастарлӑх тени.
Шпалсем тахҫанах
Хатӗрленӗ
Ленин,
Ҫулне кӑтартат
Наркомҫул—Ентри.

Кашни пӑравус
Ӑмӑртушӑн вӑраннӑ,
Кашни кустӑрма
Ҫавӑнийех—
Поххот.
Сӑнат Тимахви
Ӑҫта тормӑсӑн кранӗ,
Хӑҫан пуҫне
Каҫӑртат ҫемаххор.

Шатра куҫӗсем—
Сахалран
Ик ҫут кантӑк,
Ырсан—
Ырмасан та
Тухмаҫ йапӑха;
Унри пӑравус
Хыт урсан—
Урмасан та
Инертси саккунӗн
Йалине пӑхат.

Унри пӑравус
Пӑрӑна-пӑрӑна ҫех,
Йӗп пек витрӗнет
Пур амаклӑ тӗле,
Меншӗн тесессӗн
Кашни вырӑна вӑл,
Вӑрӑ кушак пек
Сӑнама пӗлет.

Куллен Тимахвин
Шатрисем палӑрмаҫҫӗ,
Пит-куҫӗ тулат
Хура ҫуллӑ шыва;
Ҫӗнмест Тимахви—
Еҫре ҫух калаҫмаст вӑл,

Машшинӑ кашнишӗн
Ҫӗлӗкне хыват.

Хашкат пӑравус
Ун сасси ӑмӑртуллӑ:
Ех, ҫашкӑртӑттӑм
Хам вӑйӑма!
Сисет Тимахви
Ун вӑйӗ
Вутпа тулнӑ—
Ӑна ирӗк йама
Вӑйӑ мар.

Машшин ҫашкӑрат,
Унӑн ӑмӑртнӑ сасӑ,
Кӑшт ҫех ӗҫ тӑрсан та
Вӑл тулхӑрат:
Сыхлан, Тимахви,
Ман йата варласассӑн,
Ҫӗршыв умӗнҫех
Хам ҫинҫен хырап!..

Машшин ӳкӗтлет—
Мана «Правда»
Ҫиленнӗ,
Кайра еп,
Ҫампа та ҫӗнеп,
Мана тӑхӑнтартӑр
Утарнӗк йӗвенӗ,
Еп луҫӑркас ҫук
Хам ҫӗршыв ҫӗнне.

Хашкат пӑравус,—
Унӑн ӗҫӗ
Хӑйшӗн-им?—
Вӑл ҫыншӑнваскат
Сотсиалисӑм патне;
Куллен сийенсем те,
Куллен кун крушшени
Ҫӗршывра варлаҫҫӗ
Пӑравус йатне...

Ҫӗршыв тӑшмана
Пӗтермешкӗнех хӑйрӗ,
Йуласшӑн пулмарӗ
Тӑшманӑн кулли,—
Тӑшман мӗлкисем
Муталаҫҫӗ-ха шайрӑк,

Татах ĕрĕхесшĕн
Ăçта та пулин.

Пурах çĕршывра
Леш сăтăрçăлла ташă,
Машшинă питне
Çĕлеççĕ кĕççе,
Апат вырăнне
Çĕклемпе
Тирĕк-ђашăк,
Тумтир вырăнне—
Вăйăсем
Леçеç.

Пĕлет Тимахви:
Пушанман мăшкăллаçĕ,
Çынна кăтартсах
Шăхăраççĕ кĕç,
Тăшман мĕлкисем
Шатрана кăтартаççĕ:
„Ĕçшĕн – ухмах,
Ухмахшăн – ĕç".

Çапах мĕлкесем—
Мĕлкесемех,
Конешнă,
Вĕсем пăравусшăн
Шап шакăр кăвайт.
Хашкат пăравус,
Шăхăрат вĕскĕн поршĕн:
Контакт пар,
Тавай!
Контакт пар,
Тавай!

Шатра пăравус—
Ђистийех пĕр кунтăк,
Вĕсем татăлмаç
Партти сулпă йĕртен.
„Нумай—çухрăмсем,
Сахалрах кăмрăк çунтăр!"—
Унтан... Илтетри,
Тимахви мен тет.

Шатра тунсăхлат:
„Пăравус ђыллай каннă,
Еççĕр,
Ăмăртусăр—
Сис—
Пурнăç хăла"...

. . . .

Çампа çĕршывпех
Хаçатсем
Каварланнă:—
Шурилĕн
Ĕлкĕртнĕ
Профинплан.

Сисмен çĕртенех
Хапхаран хăна килнĕн,
Уйав пек асса,
Пит хаваслăн кăна,
Ђармак паллăсем
Сасă панă—
«Шурилĕн»—
Ăна хапăл тунă
Хĕрлĕ хăма.

Хăшсем ĕненмен,
Ун ĕçне курман тийĕн,
Ăçтан тавçаратăн тăрук?
Шатра—шатраллах,
Тамахви-Тимахвийех,
Тата такам хушнă:
„Çуламан пăру".

Хăма ăнланман—
Мĕнлескер ку Шурилĕн,
Анђах тапăргатнă
Такам сăмаххи:
— Ку пирĕн шатра вĕт,
Ку пирĕн вĕт,
Пирĕн,
Ку пирĕн йерой
Тимахви!

Кĕтмен йапала!
Ха кам
Асăрханă,
Ха кам-ха
Тавçăрнă мура!
Тавай—тăскалар!—
Тимахви вĕçен мамăк,
Çынсем харăслатнă
— Урра!

Çумра пăравус
Ђашкăртатнă:
Атсемĕр,
Ак вăл утарнĕк!
Ак вăл ĕçлет!

. . . .

Сăнат Тимахви
Куçĕсем—çăлтăрсемех,
Шатраллă пит
Пĕрлĕхен тĕслех.
Пăхат Тимахви
Пăравус та шатраллă,
Унăн та тумтирĕ
Хăрăм та тусан,
Вăл кашнинех
Хăйса парĕђђĕ алă—
Унăн çынсем пек.
Аллисем пулсан.

Шпалсем кĕвĕлеç,
Йалан хăнăхнă кĕвĕ
„Р—105"—ала,
Стантса,—такана,

1931—32 ç.

Шатра Тимахви
Ĕçшĕн вĕçкĕн те
Кĕвĕç,
Пире ăсатат:
Ђулхула—Канаш.

Вакун хĕпĕртет.
Шатра—пĕђђен çын-и?
Шатра хисепне
Мĕлйунăн кĕнĕ,
Çынна кулленех ак
Çывăх машшинă,
Шатра пăравусшăн
Йертекен тенел.

Çĕршыв васкатса
Ăмăрту кăтартат-и,
Йе пысăк сатађђă
Хускатса лартат—
Вĕсем—йăвăр мар,
Шатрана çывăх партти,
Хăй парттишĕн шăп
Çывăх вăл Шатра.

КУНРАН КУН...

УСМАН *)

Мартташав Микулине—
електромонтора.

I.

Кăвак шуçăм. Нӳрĕ сывлăша çурса пăравусăн çвистукĕ уççăн йантраса кайрĕ. Йăвăррăн сывласа пăравус ĕçлекенсемпе тулнă вакунсене вырăнтан хускатрĕ.

Пăс çунатлă пуйăс сывлăша çурса васканăран васкаса пырать. Хура тĕтĕм вакунсене йăпатса, сывлăм ӳкнĕ çĕр çине сарăлса, хыçалтан кăвак шуçăмра куçран çухалать.

Вакун урапи çирĕп ритмăна пăхăнса шпалсемпе хастарлă калаçать.

Телехвон, електритсă, трамвай йуписем, ĕçлекенсен лутра пӳрђĕсем çинђе, хĕвелтухăç йенђи кĕрен пĕлĕтре тĕтĕрлекен савăђăн хӳра труписем, ишĕлсе аннă авалхи кирпĕђ савăђĕ вакун ђӳређинђе екран çинђе карттинсем вĕлтĕртетнĕ пек ылмашаççĕ.

Ирĕкĕн, майĕпе хăйĕн аслă, вăйлă шывне сăрт, çаран, хир, вăрман виттĕр тĕппипе хăвалакан, кăвак шуçăмра тĕкĕр çулĕ пек йăлтăртатса, çĕлен пек авкаланса выртакан Атăл çумĕнђи пушă хир лаппийĕ. Вăл—йупа вăрманĕпе, урлă пирлĕ щăна каррилле тытăннă пралукпа, йавăнса, çутăлса выртакан, кăвакарса айăкра пытанакан ређссăсемпе витĕннĕ.

Ĕçлекенсен пойăсĕ вăрман пек çăра йупасенђен иртсен, „Паррикатă“ корпуссене хыçала хăварсан—çамрăк пуђвар урлă ĕçлекенсен поççолккинђи виç-тăватă хутлă шурă пӳртсем ђĕрене хытăрах таптараççĕ.

Крусовиксем хашканипе, ĕçлекенсем васкаса çӳренипе—хађтерех пысăк, çамрăк савăтăн вăйне курас килсе ђĕре хыпса илет.

Пойăс ђаранђĕ. Умра: савăт управленин тăватă хутлă çурђĕ, хапрăк-савăт шкулĕ, виçĕ хутлă пожарнăй теппо, умлă-хыçлă тăват хутлă пĕр пек пӳртсем.

Пойăс пушанђĕ. Темиçе пин çын пуçĕ, çулахи ăшă варкăшра саралса çитнĕ ыраш пуђаххисем пек, хумханса контрођ хапхи йенелле ђăсăлђĕ.

Куток... Пайан малтанхи хут кăшкăрса йађĕ. Кăвак шуçăмра ĕçе ђĕнекен, ĕçлекенĕн ĕçхалĕпе пулнă çĕнĕ савăтăн кутокĕ... Вăл ирĕксĕр ĕçе, ђураллăх ĕçне хăваламасть, ĕçлекене ĕçсн çотсиалисăм-

---

*) Сталинкратри трактăр савăтĕнђе ĕçленĕ, халĕ Çĕмĕрлери „Пођшевик“ савăтри литкрушок ђленĕ.

лă çĕнĕ йĕркисемпе сотсиалисăм никĕсне хунă çĕрте çĕнĕ хăватлă çĕнтерӳсене ђĕнет. Ăна ĕçлекенсем аванах ăнланни паллах. Ирхи уçă сывлăшпа ирхи куток пурне те ыталат.

Кам тувĕ пайан, кам ĕненмĕ çирĕм виçĕ пинлĕ ĕç кварти ирĕклĕхпе ӳссе, пайан хăватлă савăт ĕрете тăнине? Ӳпкеленђĕр тăшмансем... Еклеклеђђĕр вĕсем. Пирĕн ответ: ĕççыннин хастарлăхпе çуралнă савăт хăйĕншĕн хăйех калат.

Ан ĕненђĕр тăшмансем хастарлă комсомолăн вăйне. Вунăвунпĕр уйăхра купачаса, пирĕн комсомолĕссен вăйпе монтташланса ĕрете кĕрекен, технĕкĕн йулашки сăмахĕпе тумланнă савăт пирĕншĕн ответ тытат.

2.

Темиçе пин строиттĕл, монтташнĕк çарĕпе улшăннă происвотствĕннĕксен квартийĕ вунă минут хӳшшинђе вырнаçрĕ. Ĕç пĕр çын хăвармн йышăнђĕ.

Савăт... Епĕр савăтсенђе курма вĕреннĕ пĕлĕте тĕтĕрлекен трупасен ширинкисем кунта çук, кунта çук корпуссен çӳллĕшĕсем. Контроль хапхинђи проЉотĕнђенех çĕр çуммипе ђăсăлнă пĕр хутлă корпуссем куранса кайаççĕ.

Тсехсен тикĕс çийĕсем урлă икĕ хутлă вăй стантси пысăках та мар 4 трупапа çӳхенĕн ђĕтренет.

Савăт ђĕрине „Вестинкхаус" кампанийĕ туса панă. Унăн пĕрремĕш хутĕнђе пăс хуранĕ тăваттă, тăватă кăмака, хурансене тăрантаракан насуссем.

Иккĕмĕш хутĕнђе виçĕ турпокенераттăр шăхăрса ларат. Ик-виç хут виçев припорлĕ ђантăрланă валеçмелли щђит. Кунтан тешурни иншенер, тĕрĕсĕн йун тымаррисем пек тоннелпе—пăс йарса, нервă шăнăрсем пек пралуксемпе—ток йарса пĕтĕм машшин, станок ĕçне йĕркелет.

Тимĕрçĕ тсехĕнђе хуçламлă вĕркĕђĕ асра та çук. Епĕр хăнăхнă сунтал та, мăлатук, кувалтă та çук. Туптамалли машшин соопаркри слон пек йавăрăн мĕшлет. Вĕсен шуђĕ—16. Ђĕрђун пек хашкаççĕ штамп прессем. Вĕсен йышĕ—40. Пусав вăйĕ 775 тоннăна çывхарат. Ђĕтренет пĕтĕм тсех пăспа ĕçлекен 34 мăлатук ĕçленипе. Ђăрласа кăна çӳреççĕ електритсă кранĕсем, хăпарса анакан шторлă, кантăклă çтенасенђен тытăнса.

Тимĕр петтон конструксиллĕ виçĕ кектар йышăнакан ђукунпăхăр шăратмалли тсехе „пураласа" пĕтернĕ. Формовăђнăйĕнђе пункĕрсем шавласа конвейăрсемпе тăпра, хăйăр параççĕ. Шампалла талăкра утмăл вакун хăйăр, тăпра, меттал çăтат. Томнă ђукунĕн формăсăр хуçаксем, шихтăсем вакранăксенђе тĕппипе çисе йаракан çулăмпа шăранаççĕ. Вакранаксем—9,електритсă кăмакисем—4. Талăкра вĕсем виттĕр 294 тоннă ђукун, 2,4 тоннă туптамалли тимĕр. ултă тоннă пронсă шăратмалла. Шăратнă метталла кăмакаран ман куркасене тултарса формă машшинĕсене йараççĕ. Вĕсен йышĕ—148.

Конвейăрсем, електрокрансем вырăнта тăмаççĕ. Ўпке-пĕвер пек тасатат тсехри йăвăр каспа тусана вăйлă венттиљатси.

Пуçтару тсехĕ умĕнђе инструмент тсехĕ. Калама çăмăл: унта Америкрен илсе килнĕ стануксем 272 хисепленеççĕ. Међђенкĕ йенелле—ремонт, електритсă тсехĕсем...

Кам çак савăта ĕлĕкхи пăнтăхнă савăтпа танлаштарĕ? Мĕн ăна унăн çывăхне çывхартĕ? Никам та! Нимĕн те! Тсехсен хушшинђе кунта пуљварсем, симĕс курăк, ђеђексем...

3.

Хĕвел шурă-кĕренĕн куçа ĕçтерекен суттипе технĕкĕн йулашки сăмахĕпе хатĕрленĕ 933 станука витекен йăрăман-йăрăмăн карăнтăкпа тимĕр витнĕ пуçтару-мехханиђĕски тсехĕ çинђе. Инçете ђăсăлса мăн çул пек айăкра пăнђăланат. Уçăлса çўреме аванран та аван çул...

Улиђе пек пысăк тсех. Тепĕр веçнелле пăхсан хĕвел тухат тейĕн... Пĕр пăнђăран хĕвел урисем пек сарăлат... Ак, ăçта перçпектив саккунĕ!

Станусксем кĕрлеççĕ, шавлаççĕ... пропăллă кĕрешĕве хапăл.

Кунта инструментсем хăйраççĕ. Çамрăк комсомолкка ăш кăмăллăн кулкаласа супилă хăйрат. Калама хĕн, хăшĕ куçа ĕçтерет! Наштак çаврашки хĕмĕсем и, йе унăн хĕмленекен куçĕ?.. Анђах, айкалла кайма çук! Ђĕлхи çивĕђĕ, токкăр станукĕн реçеђĕ йевĕрлех! Унăн станукĕ Тўççелторфран, хăй Калмăк оплăçĕђи тĕттĕм кишлакри ўплерен.

Ђулпа хурçăн тытăçăвĕнђен хĕм сыххи çуралат, супăњ струйийĕ кирлĕ мар фейерверке сўнтерет, комсомолккă аллине кăпăклат. Çамрăкран „сынсем патĕнђе" пурăннă, йалан происвотствăна туртăннă. Тинех, происвотствăра, халђхи вăхăтăн вăйĕ—ĕçлекенрине, ĕнтĕ, ăнланнă.

Станусксем хушшинђе сăран куртка, шлепке тăхăннă иншенерăн хура куçĕсем тараккан пек выљаççĕ. Тсехре вăл çеç нихăçан та кулмаст пек курăнат.

— Трактăрăн тиферентсиалне хатĕрлекен станук,—каласа кăтартат,— унашкал ĕçе урăх станусксем çинђе пысăк квалификатсиллĕ ĕçлекен çеç ĕçлеме пултарнă, ку станукпа вĕренекенсем те ĕçлеме пултараççĕ.

— Рамăсем хатĕрлекен нумай штимппĕллĕ станук... Алă улттă штимппĕл... Пĕр вăхăтра çирĕм саккăр шăтăк шăтарат...

— Ђăсăлуллă — шпонă станукĕ. Ĕлĕкхи станусксенђен çĕр хут хăвăртрах шăтарат.

Пур станук та харпăр хăй стантартлă теттаљ хатĕрлеççĕ.

Трактăр ваљљи войлăк пусаракан вайлă прес. Америкрен килне рапођђи Фатти вутта кĕнĕ пек ĕçлет. Пăтранђăк тар тумланђăк шĕвĕр сăмси вĕçĕнђен тумланат. Прўккин хыçалти кăсйинђен виçев инструментсем, сăмса тутри вырăнне, станука шалмалли тутар татăкĕ курăнат...

Ёнер çеç платформă çинђен ангарнă шăратмалли „Натко“ станук, пайан пуçне варахан айалла усат. Унăң уçă çăварĕнђе ђĕлхесем — пăрасем меттала ĕмеççĕ. Çăварĕнђен, сурђăк пек, пăрасем тăрăх шура емуљсон анат.

Тсехре пĕр ђĕн те çук. Кашнийĕн хăйĕн пĕђĕк моттор çавăрат. „Start“ (старт) — хĕрлĕ кнопка, ăна пуссассăн ĕçлеме тытăнат; „Stop“ (стоп) — хура кнопкă, ăна пуссассăн станук ђарăнат.

Савăт, станук, машшин çинђен çырнă темиçе томлă кĕнекесем пекех, ĕçлекенсем, станукран Технĕккă Универçиттетсене, Тетройта йанисем çинђен çырнă кĕнекесем те хулăм, сотершанилле пулмалла. Пĕр тсехрех „ĕç паттăрĕсен хĕрлĕ йалавне“ илме тивĕçлĕ кăнтитатсем çĕртен иртеççĕ.

4.

Пайан виçĕ сехетре конвейăр çинђен малтанхи трактăр аңтармалла. Конвейăр слессăрĕсем тимлеççĕ. Çиђђĕмĕш тар вĕсен сăмси вĕçĕнђен тумлат. Пурин те нервăсем пĕр пек ĕнерĕннĕ. Шутра пурин те: йепле те пулсан савăта хăвăртрах йарасси.

Çак шутран пĕри (ун çинђе вулакана кăшт тытасшăн): çиђĕ пин шутĕнђи комсомолĕс—Шуç Маркĕ. Йаштам çамрăк ђăваш кађђи, малтанхи трактăр çине лартмалли кăнтитат слессăр—тракторис. Пайан вăл ђăлăм куç хупман пулсан та, вутта кĕрсе ўкнĕ пек, кĕçĕр платформă çинђен пушатнă „Отљ-кир“ марклă станука вырнаçтарнă çĕрте ĕçлет. Пĕрремĕш, иккĕмĕш прољотри „Натко“ марклă стануксене пайан ултă çиђĕ сехет хушшинђе вырнаçтарнă.

...Каçхине кăна, тсехăн сарлака алăкĕ умĕнђе пысăк, çирĕп йешђĕксемпе ултă платформăђђĕ. Татах пăравус йăвăрăн сывласа йăвăç куписем хыçĕнђен тухрĕ, тсехсем хушшинђе ђарăнђĕ.

„Кейне-пелт“ кран сăннипе итлесе реçинпе таканланă трактăршăн кăкарнă тимĕр листи çине анђĕ.

Шеллемен лом Канатă йăвăçĕнђен тунă йешђĕке хăйпăтрĕ, „Амсутти-Тракторстрой“ çурăран çурăлђĕ.

Комсомолĕссем супотнĕкре конвейăр пайсене тирпейлĕ тытса тсехе йăтаççĕ: аван çу сĕрнĕ конвейăр, прахутсен трўмисенђе тусанланнă. Хаклă, кĕтнĕ йапаласем.

Вентиљаттăр, станук хăйсен вырăнсене вырнаçрĕç. Тоннелре тимĕрпе карса пĕтернĕ мађђа çумĕнђе слессарсем, електромонторсем монташларĕç.

...Çурçĕр иртсен ик сехетре комсомолĕссен пуххи... Кăнтăрларанпа çимен выçă пыршăсем харкашма пăхнине те сисеймеççĕ, Умра сатаđă—савăтри ĕçе мĕнле йĕркелесси, ђарăнмалла мар, мĕнле тапратса йарасси.. Ирхи сменăран йулсан виççĕр космомолĕс виççĕр çитмĕл тăватă станук пушатса вырнаçтарнă пулсан та, пĕрне те ывăннă сăн çапмарĕ.

Пуху ђылай вăхăт çăтрĕ. Клас тăшманĕ ђылай йăпăлтатрĕ. Çапах та пуху кулак ывăлĕ (йусанă токумĕнтпе комсомола лекнĕ)

Савйалăв вăтăр виççĕмĕш проҙотра станукăн мотторне йури çĕмĕрсе хыптарса йанине таса шыв çине кăларҙе. Касхи çменăра сывăракан найан Рыккина, ўссĕрпе прокулсем тăвакан Таттура комсомолĕссен ĕретĕнҙен кăларҙе. Вĕсен вырăнне—пĕр сын пусне вунă ĕççамрăкĕ, ĕçре сăнанă утарнĕк комсомол ĕретне кĕртме ыйтса ответлерĕ.

— Савăта ĕрете тăратма, ыранхи куна—хатĕр!—терĕ пуху.

5.

Пайан комсомол квартийĕ мопилисатсиленнĕ. Вĕсене кăнтăрлахи куток кăна канмашкăн вăхăт паҙĕ.

Шуç та çиме утрĕ. Нимле спетсиалисе пĕлмен тăлăх Шуç, ĕçлекенсен лаввинҙе шăранса, вĕренсе слессăрç тухрĕ. Çĕпĕрте усравра пурăннă ҙух вилесрен çеç сăкăр татăкĕ ĕçлесе тупнăскер, сотсиалисăм никĕсне хунă ҙух ăмăрту урлă ĕçпе писнĕ комсомолĕс утарнĕксен ĕретне тăҙĕ.

Кам паллĕ ăна хаљ—çамрăк ўсен йаш аҙана? Çĕпĕрте нимĕскер пĕлмесĕр сапкаланса çўренĕскер—сўллĕ йаштам, хастар каҙҙă. Пысăк кепкă айĕнҙен кайалла усна йăпкам хура сўçĕ курăнат. Тўрĕ, пропортсионаллă кĕлетки çинҙе шăратса йанă пек хура кăмпинатси, урара—ĕç путтинкки.

Çемçе сăнсăпат—хастарланҙĕ, ҙăсăклăрах пит йаҥахран сухалпа шăлăнҙĕ. Мăнтăр, сарлака тесен тĕрĕс пулмĕ, наҙар тесе те каламалла мар, вунсакăр сулхи йаштам кĕлетке мăн сынла тарăн шухăшланҙĕ.

—Ырă кун.. савăта ĕрете тăратас прасиĕкпе!..—терĕ Шуç столовăй умĕнҙе вăй стангсири Шеффĕр машшинис йулташпе ал тытса.

—Сывă... прасиĕкпе ыр сунатăп..,—ответлерĕ Шеффер.

Сĕтел хушшинҙе. Сĕтелсем çинҙе ҙеҙексем кашнă, ĕçлекене ваљљи икшер пљутă лартса тухнă.

— Ыр сунатăп, Шуç... Савăтра Колеçнĕккăв платникĕн малтанхи шалҙинҙенех ĕçлекен—утарнĕксенҙен малтанхи трактăр çине ларма сан кăнтитатурăна уйăрнине хапăл...—хушрĕ Шеффĕр—сывлăхна ҙылай ес савăтшăн хутăн... Ĕçлекен ăна ахалех иртермерĕ...

— Тĕрлĕрен ситменлĕхпе тĕл пулса ĕçрех тўрлетсе пытăмăр...—лапшу йашкине хуллен сыпкаласа калама тытăнҙĕ Шуç Маркĕ,—сак, пысăк мехханиҙĕски тсехри станукссм ĕçленине курсанах ир аса килет,..

Пĕрремĕш ир. Хура кĕркунне. Йĕп пек тирекен сивĕ сил. Савăт патне ĕçлекенсен пойĕсĕ килет. Унтан, трамвай, шоççе тăрăх вунă-вуникĕ пин ĕçлекен хапхана тухса пĕрлешеççĕ. Пĕр шут тытнă пек пулса хастарланса пурте територине саланаççĕ. Куç умне ĕçлекенсем, малтан пуш хирте писенсем хушшинҙе сайра хутра арлан, суслĕк курăнкаланă пек кăшт-кашт, кăна курăнкалаҙҙĕç.

Çĕмĕрк, сăмалалла, пушă пиҫкесем, ҫемĕнт, исвĕç мăйăххисем, кăшăлсем, лапҫăннă витресем, çĕмĕрĕлнĕ урапасем, каткасем купан-купан купаланса выртаççĕ.

Шпал, реҫссă, пĕрене, кирпĕҫĕ, тоҫ ҫăркисем, ҫул, йешҫĕк, трупа, турпас — тĕммĕн-тĕммĕн, урамра пулса иртнĕ паррикатăна аса илтереççĕ.

Çĕрне ҫавса выртнă: тăшман „така таках" тăнă — оккопсем ҫавса выртнă. Ку шăтăк-çурăкран тăшмана пăшалăн, пулеметăн мушкийĕ çине илме аван... хире хирĕç пеме хаҫ çеç ҫаранна пек курăнаҫҫĕ.

Çук, ҫарăнман! Ĕçе хăвăртлатмалла, кĕрешӳ вăйлатмалла. Çавăн пек сатаҫҫă!

...Строиттĕлствăн хаклă ăшă кунсем иртсе кайаççĕ; хĕл сăмса вĕçĕнҫе. Савăта йур ӳкеҫҫен купаласа пĕтерсе хĕлле витĕнсе ĕçлемелле тумаллах тсехсене. Вăхăт кĕтмест.

Ĕç хушшинҫи тистсиплинă, сотсиалисăмла ăмăрту умра тăрат.

Çесоннĕксем савăта тунă çĕре йалти тĕттĕмлĕхе, вак пуршуаçи хирĕçевне ĕçĕн çĕнĕ йĕркисем патне илсе килҫĕç.

Çитменни çине, ватă иншенер Шах ĕçе тĕрлĕрен пăсма, йĕркесĕрлетме тăрăшнă. Маттериалсем ешшалон-ешшалонĕпе территторинҫе тăнă вăхăтрах камĕншҫĕксене ĕççĕр тăратнă.

Рапкоп та ĕçе ҫăрмантаракансен аллинҫе. Пăнтăхнă, пăсăлнă протуктăсене те пулсан кăртăнкăн пĕçерсе ĕçлекенсен шухăшĕне пăтратаççĕ.

Çесонĕксем харпăр хăй ваҫҫи пек мар, ҫурасем пек ĕçлеççĕ. Килти пурлăх ваҫҫи ăçтан та пулин, йепле те пулин татса илме пăхаççĕ.

— Спетсовкă парăр...

— Укçа вăхăтра тӳллĕр...

— Расрет хăпартмасан, вăлтасене пуçтаратпăр та—аҫо!..

Çакнашкал ыйтусем лартса çесоннĕксем ĕçлеме пăрахни мана хытă хумхантарҫĕ. Комсолол сыхăланҫĕ.

Ăна ответ—комсомолĕссен пуххи. Пуху хĕрӳ... Ĕçпе писнĕ комсомолĕссем савăта хăвăртрах ĕрете тăратасшăн çунмалипе́х çунса хыпаççĕ.

— Ватă иншенерсене улăштарма, пирĕн комсомолĕссен технĕккăна пĕлес пулат...

— Çесоннĕк-камĕншҫĕксем „пысăккăн—хыпайман"• пирки пăрахса кайнине ответлеме пурте мопилисатсилленсе камĕншҫĕксен прикати тăвас! Йулашки ăшă кунсене çухатас мар! .

— Строиттĕлсвăн ĕçри хăвăртлăхсене ҫарса лартма парар мар!

— Пур комсомолĕс те утарнĕк!

Çакăн пек хĕмлĕ сăмахсем сирпĕнҫĕç пухура.

Çакăн хыççăн...Йалан асра тăракан пĕрремĕш ир... Кирпĕҫĕ хурас йенҫен комсомолĕссем камĕншҫĕк-çесоннĕксенҫен пĕри те йулса каймаççĕ.

Çак хастар çамрăксенђен йулни, аййкра тăни тăшманпа пĕр пулнине сисрĕм. Паттăрлăхсене кăтартса ĕçлекен çирĕп çамрăксен лаввинђе ирĕясе, комсомолĕссен ĕретне тăрса ĕçлеме, кĕрешмешкĕн вĕренме сăмах тытрăм."

— Çак ир мана хаљ те асра, — тесе пĕтерђĕ вăл пĕр пљутине çисе теприне илсе.

6.

— Комсомол йаланах малта, кунта та малти ĕретре пырса...— ответлерĕ Шеффĕр, пĕрђĕн-пĕрђĕн кăвакарнă мăн уссисене йусаса айккăн вăрăм сĕтел тăрăх пăхса. Шартлама сивĕ... Хирте йука... Тсехсем çинђе ĕçлекене çил тапхăрĕн тапхăрăн килсе ӳкерме те пăхат. Анђах, ĕçпе пиçнĕ комсомолĕсе сивĕ-ăшă та витмест.

Айалта „çиђĕ пин" шугĕнђи комсомолккă шарланккăна çавăрат. Вĕркĕђĕ кăмрăка кăварлантарса полтсене хĕртсех тăрат Полт хатĕр... Çулăм пек çунат. Çамрăк хĕр шипђипе илсе конçервăпа пулнă çӳлтен çакнă коропккă ăшне хурат.

Коропккă çӳлте... Полт комсомолĕс аллине кĕрет... Хаљ çеç шăгарнă шăтăка тирет, хăма çине ђӳкенсе (кунтан ӳксе çĕмĕрлме те ђасах) кĕрсе вырнаçиђђен мăлатукпала çапат.

Урлă тыттарнă палккă çине угланса ларнă клеппелшђĕк йулташĕ, куштан, йăвăр пневматтĕк мăлатукне кăвакарма тытăннă полтпа ђуп тутарса хăлхана çурас пек шăтăртаттарса ђĕтĕретет. Сасă хуплат пĕтĕм тсеха. Кунĕпех çакнашкал тапхăрăн-тапхăрăн, пулемет ленгтине кăларса йанă пек, мăлатук хирĕлсе илет, каљђех ђаранат... лăпланат...

Çак мăлатука тытакана кам тейĕн?..Епĕ утарлă ĕçлекен комсомолĕс... тен, Шуç çинђенех каламастăп-и-ха?...

— Ха-ха-ха-а.. — кулса илђĕ Шуç. — Ăçталла халаха хуçса илђĕ..

— Ху та аванах астăватăн, — хушрĕ Шеффĕр—йепле пĕринђен пĕри ăмăртса комсомолĕссем урайне тортсовкăпа сăмаласа сарнине... 22 кратăс сивĕре тсехсене карăнтăкланине.

— Тĕрĕс... —хăйĕнне тапратрĕ Шуç,—Иккĕмĕш ир. Трамвай çине ларнă ђух кускаласа хыпаланса хаçат сутакан ађаран „Борьба" илтĕм. Трамвайра. Вулатăп. Ђăтма çук, хăвăртрах çитмелле çĕре çитес килет. Вулатăп. Хама хам ĕненместĕп. Халђенех пире пултараймаççĕ, теççĕ-ши?..

Унта ак мĕн çырнă:

„Нйу-Йорк-Таймс" номĕрĕнђе:

„Тетройтри Аљперт Кан архиттектăр, Сталинкрат çинђен пирĕнпе калаçнă ђух, Кан фирмийĕ савăтăн тĕп тсехсене проектсемпе вĕсене йепле тумаллине кăтартса парат. Хамăр патăмра тăватă йе пиллĕк уйăхра туса пĕтермелле савăта, маттериалсене илсе пыма йăвăр, квалификатсилленнĕ ĕçлекенсем çитеймен пирки Кăнтăр Раççейĕнђе савăта тума вун сакăр уйăх патнелле кирлĕ, тесе пĕлтерђĕ," тесе çырнă.

Йулташсене каларăм. Трамвай çинђен ансан (пĕр çĕр çын пулĕ) хамăрăн савăт комиттетне. Ответлă çекреттар каланă пек, пĕрне

наҫҫаљнĕк патне йатăмăр, хамăр ĕҫе ҫупрăмăр. Комсомолĕҫсем ыйтнипе атминистратси Амсуттинне ҫакнашкал телекрам йатăр, терĕмĕр:

— Ҫăнласах ҫуртсене, корпуссене хатĕрлесе пĕтермелли вăхăта апрелре монтташласа, ийуҫре савăта ĕрете тăратмалла шутпа улăштарăр. Аљперт Кан иншенерĕсене телекрам патăр. Трактăрстрой—Новороҫҫийск,—иртенех шаккарĕ телекраф... Вунпилĕк талăк, ĕнтĕ, иртрĕ:

— Амерĕкрен „Таљҫас", „Понни", „Руссойљпрот" т. ыт, прахутсем савăт хатĕрĕсем Новороҫҫийск портне кайма тухрĕҫ"... тесе пĕлтерни.

Новороҫҫиск... пĕр минут та ан кахалланăр... пĕр минут та портра, ҫукун ҫул ҫинҫе опорутованисене ан тытăр...

Ҫак иртенех тсехсенҫе, уҫҫаскăсенҫе, параксенҫе прикатăсем йĕркеленҫĕҫ. Комсомолĕссем тешурнисем. Каварларĕҫ: машшинстанук ҫĕрле ҫитсен тешурнирен пĕлтерӳ илсенех—тсехе ҫитмелле...

Ҫакăн хыҫҫăн тинех Новороҫҫийскри ĕҫлекенсен прикатисем маршрут хыҫҫăн маршрут хăвлама тытăнҫĕҫ. Малтанхи вунтăвата платформă ҫитнĕ. Комсомолĕссем хапăл, монташлама хатĕр!

Ҫак кунсенҫе комсомол ҫывăрмасăр ĕҫлерĕ. Ҫакăн пек, мана аса килекен иккĕмĕш монтащлама тытăннă ир...—каласа пĕтерҫĕ, Шеффĕр ҫине йăвашшăн пăхса.

Пĕр сехет ҫитесси татах вăтăр минут. Хĕрлĕ кĕтесе кайса канма шутларĕ Шуҫпа Шеффĕр.

Хĕрлĕ кĕтес. Хаҫатсем, шурналсем, сĕтел ҫинҫи ҫеҫексем хушшинҫе выртаҫҫĕ. Рӧйаљ ҫинҫе пĕри хулленрехҳĕн револютсиллĕ кĕвĕ шăрантарат.

7.

Хĕрлĕ кĕтесре Шуҫпа. Шеффĕр калаҫăва калех ҫĕнетеҫҫĕ.

— Пĕрне пĕри тахҫантанпах паллатпăр, хире хирĕҫ тĕпленех пĕлсе каймастпăр..,—терĕ Шеффĕр куҫлăхне йусаса лартса. Ăсти ҫынне, епĕ пĕлместĕп... Ҫавăнпах та пулĕ епĕр хирĕҫ хисеплетпĕр...

— Телейсăр пурнăҫамăн тĕппе йĕрпех асгуса каймастăп...—ответлерĕ Шуҫ,—анҫах, хаљхи пекех асра тăван Паланкасси. Вăрман пек йăваҫлă, куккăр маккăр урам... Уҫă сывлăш... Хĕвеланăҫĕнҫи аҫа ҫапса килекен ҫăмар, ҫуллахи илемлĕ шăрăх кунăн илемлĕхне кăмăлантарат... аса илтерет...

Лапсăрка кивĕ пӳртĕн пусма вĕҫĕнҫе, выҫăпа турткалашакан пыршăсене лăпалтарас, тесе симĕс, вĕтĕ пăнулмисемпе выљаса ларатăп. Тахҫантан варах сĕт курман. Ҫакăр та пĕтнĕ. Пĕҫĕк кĕлет, пилĕкĕ хуҫăлнă пек аванса аннă, виттĕр курăнакан сарай. Ҫакă —кил. Уна атте сухара ҫухне пăхма хăварнă.

Ҫиҫĕм ҫиҫсе кĕмсĕртетсе шултра ҫăмăр пуҫри веҫкĕн шухăшсене улмащтарҫĕ... Аттепе анне те киле таврăнҫĕҫ. Аттенĕн сăнĕ кайнă... кăвакарат... шуралат... Анне пуҫне йăтаймасăр йĕрет.

— Халех пуçтаран:—хăваларĕ йал старăсти,—пайанах хулана çитмелле.

Çăмăр виттĕрех „пĕр вăхăтрисемпе" хулана тухса кайрĕ.

— Сывă йул, ывăлăм, тен... кураймăпăр... çитĕнсен вĕренме тăрăш... ман пуçа сухапуçех çирĕ...—тесе ыталаса ђуптурĕ, кайас умĕн. Аннепе иксĕмĕрĕн пурнăç кунран кун çинçелђĕ.

—...Шуç Ксенофонђĕ шуррисемпе хастарлă çапăçса пуçне хуђĕ..—тесе пĕлтерђĕ, салтака кайни тăватă çул тулнă тĕле, йунпа вараланнă çыру.

— Камшăн? Мĕншĕн?..—ответ шырарĕ çамрăк пуçăм,—пĕлме çук... хăçан пелейĕп?..

Аннепе çын патĕнђен тухаймасăрах ĕçлерĕмĕр. Çуклăха—сыпма çук. Выçлăх ĕмĕлки—çăтлăх.

... Тĕксĕм пÿртре, тĕпелте çурта йерипен шăранат... Тенкел çинђе шурăпа витнĕ тупăкран... анне сарăхнă сăнĕ куçа кÿрентерет... Тутийĕ хусканмаст. Куçĕ—сÿннĕ...

— Аçта çамрăк кĕлеткеме ђикес?.. Куç ăçталла курат—çавăнталла...

...Тĕтĕм. Тоннел сăнсăрăн уласа кăна йулђĕ... „Йăтă арђинђе" сывлама çук пăђă... Пуçăмран çак кунсем нихăçан та тухас çук." Маркăн кашнă сăмахĕ Шеффĕре çÿçентерђĕ. Куçĕ ђарăлђĕ. Ђĕри хыпса илђĕ.

—...Выçлăх çул...—татах хушрĕ Шуç:—Епĕ Çĕпĕрте. Йĕри-тавра кашласа ларакан ђăтлăх, сĕм тайка уçланкинђи пĕђĕк йалта... Колђак çĕмĕрсе кайнăран вара вăй илеймен шăтăк тăрлă çуртсем.. пире Йурийпе икксĕмĕр „усравра" усракан Йухносăр пуçсăр йалта партисансен талăх арăмĕсем нађар пурăнаççĕ.

Йухно пурăнасса çителĕклĕ пурăнат пулсан та, пире аван апатçимĕçпе ахăртмарĕ. „Кăвас ђерес"—хамăр хушăра йат панă, упăшкине хăратса пурăнакан, каскăн „анне"—ир çĕрулми шÿрпипе тăм пек тађка çăкăр, кăнтăрла —купăста шÿрпипе ик-виç шăмă, пилĕк-ултă сехетре тăпăрђă шывĕпе типсе кайнă çăкăр парат.

Ман йулташ: Иурий—Раççейрен пырса лекнĕ тăлăх, пĕтĕмпех çынран тытăнса тăмалла ађа, вырăс, вунă çулхискер.

Хĕлле—выђăхсем пăхмалла, йур ђавмалла, шыв ăсса килмелле, кăç пулсан тайкаран вунпилĕк-çирĕм тырă лавĕ,йе тийесе килетђĕç, йе тийесе кайатђĕç. Пушатмалли, тийемелли, пуринђен ытла Иурийпе иксĕмĕр çинђе.

Çулла та кун-çĕрĕн ĕç. Суха вăхăтĕнђе пĕђĕкскерсемех сухалаттăмăр, сÿреттĕмĕр. Каç утсене çитерме тайкана.

Çапла пĕрре сухаран таврăнсан Йурийпе хамăр выртса тăнă пĕђĕк пÿлемре кĕнекесем тытса лартăмăр.

Ђÿређерен хыçалти картаран шăрш кĕрсе, икĕ хутлă нарăсем çинђе выртакан çĕтĕк-çатăкран пÿлĕмре йăвăр шăршă. Епĕр ывăннă шăмшаксемпе сисмесĕрех тĕлĕрсе кайнă.

Кĕтмен çĕртенех пÿлĕм алăкне уçса ÿссĕр Йухно „аттепе" спекуђант йулташĕ тискерĕн кăшкăрса кĕрсе ÿкрĕç. Хăрамалла

тулта кусне ҫарса, йалан йерĕк, ҫалăш тутине ҫалăштарса кăшкăрсан-кăшкăрсан ҫаҫăсма тытăнҫĕҫ. Епĕр хăраса йĕрсе йатăмăр.

Унҫҫен те пулмарĕ, ҫĕн пушăпа пирĕн „анне" ҫитсе кĕҫĕ. Кам „ҫĕмĕрнине" пĕлмесĕрех.

—Ак сире йĕртем, тĕпĕртеттерем...

—Ҫăвашҫонок... мат...

—Кĕлĕмҫĕ...—тесе „ҫунтарма" тытăнҫĕ.

Епĕр куҫҫуҫ витĕр аран-аран кăвакарса пĕтнĕ шăмшаксемпе утсем ҫине утланса тайкана ҫитерме тухса кайрăмăр... Ҫăгаймарăм... Йурий манпала пыма итлемерĕ... Епĕ ăна ҫуп турăм... уйăрлтăм...

...Кăвак шуҫăм... Умра: пĕр ҫĕре пĕрĕнекен ҫăтлăх тайка ҫулĕ йĕрленет. Йăвăҫсем канашласа ик айккинҫен кĕҫ-кĕҫ паҫăртас пек... Мăйăм тапхăрăн-тапхăрăн пăвăнса илет... Урасем иглеме пăрахрĕҫ. Пуссăн-пуссăн хал кайса килет. Малаллăха пуҫăм ĕненме пăрахрĕ. Шухăш минутран-минута шĕвелет...

...Стантсăра. Хашкаса пуйăс пыҫĕ...Епĕ ӳкрĕм реҫссă ҫине... Ансăр пулса выртнă. Виҫ кунтан аҫа ҫуртĕнҫе ăна кĕгĕм...

Шеффĕр Шуҫа каласа пĕтерме памарĕ. Камăн капланса килнипе ыталаса ҫуп турĕ. Шуҫ тĕлĕнҫĕ. Куҫ-пуҫ ҫутăлҫĕ.

—Мĕн пулҫĕ сана?...—тесе ыйтрĕ.

Шеффĕр ҫылайҫҫен нимĕн те калаймарĕ. Халҫен (хĕрĕх ҫул хушшинҫе) унашкал вăл кӳренмен. Пырĕ типнĕ. Сасси ҫĕтнĕ.

—...Халҫ...—хуллен сыхланса калама тытăнҫĕ Шеффĕр—халҫ... ҫав кунсене аса илсен, хама хам ĕненмесĕр шутлатăп: ҫăнах ҫаппала пулнă-ши?.. Хĕрлĕ салтаксемпе йалан кăмăллă, тăшмансемшĕн шелевсĕр, вăрҫă ĕҫне тĕплĕн пĕлекен, ман ҫи ҫывăх йулташ ҫăннипех пуҫне хуҫĕ-ши?.. Анҫах, ҫавнашкалах пулса.

Пĕр ерне ҫуман питсем йунпала пылҫăкланнă: ҫĕрле, йур ҫинҫе йăванса пыратпăр... шрапнелсем ҫĕмĕрĕлсе ҫурăлаҫҫĕ пирĕн ҫинҫе. Такам ваннă урине сĕтĕрсе йăнăшат... Лĕкленсе ҫăвар туллин хăсăк килет...

Пулĕсем ҫăралҫĕҫ... ывăну хуплат... Кăвак шуҫăм сăнĕ ӳкрĕ. Йепе Меҫеткă урлă каҫса, ҫак халҫхи трактăр савăҫĕ вырăнне шăвăнса ҫитрĕмĕр. Сасартăк Тениккĕн ҫарĕ siksе тухрĕ. Штыксене пирĕн ҫине... Епĕр хирĕҫ... Атгакка... Салппăн-салппăн свинетсă ҫулăмĕ хыпат... Шрапнел... кăшкăру... йăнăшу... Шуррисене ҫылайĕшне хуҫĕ... йулашкине хăйне штык ҫине лартрĕҫ. Епĕ вĕсене... Ҫавăнтах ним пĕлми ӳкрĕм...

Тĕлĕкри пек асра... Путонăвтсăсем вĕҫсе иртрĕҫ... Пăшал сассисем айкалла кайса ӳкрĕҫ... Йун сăрхăнҫĕ... Кăкăрĕ хăпарса анҫĕ... Сылтăм алли вăрахăн ҫăмăртанса уҫăлҫĕ...Ласаретрен епĕ Паланкассине ҫыру ҫырнă, есĕр ăна илнĕ...

Темле тĕлĕнмелле пулсан та...Ҫак трактăр савăҫĕн территоринҫе краштăн вăрҫинҫе пуҫне хунă ҫывăх йулташăм—сан аҫу пулнă...Ҫĕпĕрте пуйăс айĕнҫен еп турса илнĕ аҫа—есĕ...йепле...ăҫта тĕл пултăм.

Шеффĕр Маркăн ытамĕсенҫе урăх ним те калаймарĕ. Марк вĕтрет...Ним калама пĕлме çук çакнашкал сарăмсăр пĕрлешĕвре. Кӳренсе иккĕшĕн те куççем айĕнҫе çуг шăрçа пек кuççулĕсем...

—Ан йĕр, Марк! Аçу ĕçлекенсен ирĕклĕхшĕн пуçне хуҫĕ...Хир кĕрлисен йунне пĕр тумлам та çăгаймарĕ...Çапăçса илнĕ ирĕке çирĕп алра тытма пайан виç сехегре савăгсен ĕретне çĕн савăт тăрат...Малтанхи тракгăра конвейăр çинҫен ангаракан хисеплĕ тракторис—есĕ...

Урăх ним те пĕр-пĕрне ҫĕнеймерĕç. Çакнашкал пуçланҫĕ вĕсен тăванлă пурнăçĕ. Çакăнган, çивĕҫленҫĕ ĕç хушшинҫи хăвăртлăх, хастарлăх...

8.

Шеффĕрпе Шуç хаҙ ĕçре. Пур ĕçлекенсенни пекех вĕсен ĕçре „хул-çурăм хăпарат". Пуринпе пĕрех вĕсен пĕтĕм Сойуса пултарулăхпе ответлĕс килет.

Сехет çăмахĕ пĕр май ыгкăнат. Трактăрсем 197 метгăрлă конвейăр çинҫе пĕр вырăна хăварса тепĕр çĕре шăваççĕ.

Моттор вырнаçтармалли тĕл. Малтанхи тракгăрăн тата ултă вырăн анҫах. Пур те кĕтеççĕ.

Конвейăр тăрăх партги, правиттĕлствă, комсомол, профсойус, колхос, ĕçлекенсен претсгавиттĕлĕсем. Пурин те ҫĕресем йулнă çеккунтсене шутлаççĕ.

Инспекси вырăн... Трактăр хатĕр. Шуç Маркĕ руҙрен тытса хăпарса ларҫĕ. Рыҫакне хускатрĕ.

Карпӳраттăр витĕр сывлăш тасалса, пенçинпе клаппăн уçса çилинтăра сирпĕнҫĕ... Макнето хĕмĕпе тивсе поршшĕне тĕкре, шаттунпа коленҫҫатти вала хускатрĕ. Моттор ĕçре. Трактăр сыхă!

Сехет çеккунтран çеккунта виçĕ сехет кăгартат. Конвейăр çинҫен ҫи малтанхи трактăр анҫĕ.

Орккестăр Инттернатсионалпа витрĕ.

— Кай, ес хире!..

— Çĕмĕр аваптан пăнгăхнă симĕс йăрана!..

— Çул парăр, пире йаланлăха теплĕн пĕрлеш герекен, çуклăхран, тĕттĕмлĕхрен çăлакана!..—кăшкăрҫĕ колхоçнĕк.

— Сталин йулташран çиçĕм...—пĕлтерҫĕ Иванов наҫҫалнĕк.

— Ĕç паттăрĕсене салам!.. Аллă пин тракгăр!..

— Иалти вак-пуршуаçи тымарне тĕппипех кăкласа салатса йарас аллă пин снарет!..

— Ур-ра!.. ур-ра!..

— Кунта пĕтĕм партти, комсомол, пĕтĕм ĕçлекенсен класĕ, пĕтĕм Совет сойусĕ!..

— Савăт—хатĕр!..

— Савăт—ĕретре!.., ответлерĕ утарнĕк партти пĕтĕм Сойусри парттин вунулттăмĕш сйесне.

Сталинкрат—Сталино.
1930-31-мĕш çулсем.

ПАРТТИ

ПОЕМĂН СЫПĂКЕ

А. ПЕТТОКИ.

Шавлă тинĕс алхаслăвĕ виттĕр
Ахăрса çухăран тăвăлра
Илтетĕп, сисетĕп, сĕм виттĕр—
Аслă Руҫҫă сасси тулхăрат:
Тинĕс хумĕн хайарлăхĕ виттĕр
Пулас тапхăр йенне çул хурат.

Хурăç çипĕн выртан ҫукун çуллăн,
Çĕрĕн ҫăсăмĕн шутне те манса,
Пырат пойĕс—саманăн кунçулĕ,
Машшинисĕ—курман тăр канса,
Машшинисĕ—хăй ĕçшĕн хăйуллă
Пĕр ҫарусăр хăвалат пойăça.

Партти!.. Сана ак еп куратăп:
Ес шавлă тинĕсри Аслă Руҫçă!
Ес пойĕс хуçи—машшинис!..
Партти,
Сан еллупа аманнă пур мулçă,
Партти!.. Туйатăп сана:
Мĕлйун та мĕлйун сăнлă,
Ратиохумĕн
çиçенлĕ миме!
Партти!.. Ес харăсăн,
Пĕр тытăман
Тапан вут ҫĕре!
Харăс,
пĕр утăмăн
пыран пĕр отрет!
Парттийăм
Партти!.. Мĕлйун та мĕлйун аллăн
Хурăç тилхепен
Çĕр ҫăмăрăн çулне
Çавăран вăй-хал!
Парттийăм...
Сана ак еп куратăп:
Сан сăнна,

Сан тăнна,
Санăн вĕççĕр çулна—
Пултаруна
Ак еп тăнланма тăрăшатăп!..
Акă есĕ:
Ăсхакăл ытампе çаврăнми,
Çил-тăвăл вăйпе ђарайми,
Шутăн вĕçĕ-хĕррипе виçейми,
Ĕмĕр ђĕрĕ—нихçан пĕтейми,
— Пыратăн тумхахлăха ватса
Аслă партти!..
Сан ђĕрӳ—
Етемлĕхĕн тапăмĕ,
Сан куçу—
Пролеттарийĕн сисĕмĕ,
Сан миму—
Ленинăн ăсхакăлĕ!
Ес пыратан ак, пыратăн... пыратăн...
Ĕнерхи ылханлă ĕмĕр тымарне
Сан хыççăн таптарĕ,
Таптаре те ватрĕ
„Пайанлăх", „Ыранлăх" патне,
Сан хыççăн пыран вĕççĕр массă,
Мĕлйун та мĕлйунлă массă,
— Камăн йађĕ—
Пролеттари,
Ылханлăха
Таптаса ватсах
Тумхахпа пĕр тан такăрларĕ,
Çăрларĕ,
карĕ...
Парттийăм...
Партти!.. Ес шавлă тинĕсри Аслă Руђçă!
Хăрушă шквал тытăмĕнђен
Ес кăлартăн карапа
Лăпкă кавăне!
Сапаларăн тăшмана
Кĕрхи шулçăн,
Ђашкăран
Контр-револђутсин
Карланкине
Пусса хутăн хурçă урупа!
Партти!..
Ак ес хађ машшинис,
Çĕн тӳпе çулĕпе
малалла
Хăвалатăн пойĕса.

Ес хăйуллăн хăвартлан
Експреса,
Ђукун çулĕ--
Иртен петтилеткă!
Сотсиалисăм—умри стантси!
Куратăп:
Ак умрах „пайанлăх" çиçет
Халиђђен те курман електро çиçĕмпе.
Ак „пайанлăх" тивлеђĕпе
Тăван çĕр çиййĕпе
Шăтаççĕ,
Тăраççĕ,
Карлаççĕ,
Сарăлаççĕ...
— Пĕррех-и?!
Иккех-и?!
Виççех-и?!
— Çук!
Пĕрерĕн ан шутла!
— Вĕсен ўсĕмне пиншерĕн хутла!
Пиншерĕн,- пиншерĕн Улăпсем—
Хурçăпа, петтонпа шăнăрланнă,
Сар хĕр пиђĕн çунан кирпĕђпе
Тимĕр листтăн та йĕсĕн хупланнă
— Ак тсехсем,
— Савăтсем,
— Корпăссем...
Еп куратăп:
Уйăхшерĕн, теккатăн ўсеç,
Куншерĕн, сехетĕн çитĕнеç...
Еп куратăп:
Лађака тăмлăха пусăрнса
Пĕлĕте туртăнаç трупасем.
Корпăссем сарăлаç тăсăрнсах,
Çитĕнеççĕ, ўсеç савăтсем.
Еп куратăп:—
Кунран кун мăкăрлаç,
Сарăлаç
Уралта, Çĕпĕрте,
Шăтăнаç пур çĕрте
Вут ђĕлхен рутана шăратан,
Тимĕр-тăмăр тăван томнăсем.
Тонпасра,
Куспасра,
Хулăм çĕрĕн хутлам айĕнђе
Тăсăлаç çухрăмшар штолђнăсем,
Тарăна ялтăнаç шахтасем.

Еп куратăп:
Уйсем, хирсем урлă,
Куратăп хура вăрман урлă,
Тинĕс урлă куратăп:
Паккура скваш̆енрен „хура пурлăх"—
Хура пĕлĕт çумнех сирпĕнсе,
Хура пĕлĕт сăнне тĕрлесе—
Хура нехтă
Варкăнат,
Сăрхăнат...
Пушхир урлă куратăп:
Капкас тăвĕ
Пилĕкне пиççихленĕ пайан—
Трупа виттĕр
Хура нехтă Паккуран
Йешĕл симĕс Паттума кайат.
Тăван çĕршывĕн
Вĕри йунĕ хура—
Хура нехтă—
Тĕнҫен сĕрме çăвĕ.
Ĕмĕр выртнă çĕр айĕнҫи ырлăх,
Виçепе шутлайми мĕн пур пурлăх
Хускалат,
Ак çӳле туртăнат...
Партти!
Пар приккас рутана!
Приккас пар нехтăна,
Кăмрака!
Ирĕлмешккĕн,
Пулмашкăн йан-хурç!
Таталмашкăн—
Тухмашккăн-машшин!
Партти, кала!
Хыççăнах
Епĕр хатĕр
Ирĕлмешккĕн томнăра
Çĕр-ай парăмĕ!—
Рута пĕтсен!
— Ҫарăнтар—ан лартăрҫҫĕ
Томнă!
— Çунтăрҫҫĕ, ан сӳнтĕрҫҫĕ
Томнă!
Партти!
Хушсамҫҫĕ кăмрăкне!
Хушсамҫҫĕ нехтăна
Ҫарусăр хĕртме!
Çунтăр пин кратăссăн томнă!

Томнăн
    Револ̧утси çулăмĕ
        Вĕттĕр, кĕллентертĕр
            Кивĕ тĕнђене!
Çунђђĕ, пăлханђђĕ
    Алхаслăвăн томнă!
Пĕлместĕни ес, томнă?!
    — Хурăç сăн илен
    Сарлак, тăван çĕр шыв,
    Хурçăн, петтонăн
    Ÿсен савăтсем,
    Тимĕрĕн витĕнен
    Йанравлă йалсем,
    Хурçă кĕввипе
    Шăранан уй хирсем
Кĕтеççĕ,
    Кĕтеççĕ,
        Хурăç та ђукун.
Çунђђĕ-ха, томнă,
        Пăлхавлăхăн çун!
Томнă!
Куратни,
Сисетни,
Пĕлетни!
  — Сөтсиалисăм йенне çул уçнă çĕр-шыв
    Тимĕр-тăмăршăн, хурăçшăн выçă?
Томнă,
Сисетни?
    Пиншерĕн, çĕршер
    Çĕр пинен те мĕлйун тоннăв
    Хурçă çимĕç ыйтат çĕр-шыв!
            Астăватни,
                Томнă!

Партти!
Мĕн пур сассăма,
Мĕн пур мимери ăсăма,
Паратăп сана сăввăмра.
Вутлă поемăн çунтăр сăмах!
Хурăçăн çивђĕ пултăр ђĕлхе!
Сарăмсăр анлăн, шухăш, вĕлкĕш!
Йунпа хĕрелнĕ тарăн Тнеппăра
Хура тарăн çăрнă петтонпа
    Епĕр пĕветпĕр, ĕçхĕллĕ йухма;
Ватă Атăл хумне те талăкран
    Кутăн çаврăпăр—
        Мускава;
    Çĕн çул уçăпăр Атăла—

Хура тинĕс çине
Тӳр тухма.
Ђарăпăр
Тек харамăн йухма
Тнеппăра та,
Атăла та,
Анкара...
Хушăпăр
Мĕлйартăн пухма
Мĕлйарт киловатăн çĕн-вăй
— Електрă-вăй
Шывран!
Тытăпăр алла çил-вăйне,
Кӳлĕпĕр ĕçе хĕвеле!
Алтăпăр тĕппĕн
Çĕр сăйне,
Тăвăпăр çу майлăн
Хĕлĕ!
Ак хурçăллă ретĕн
Тăраççĕ, тухаççĕ парата:
Сотсиалисăм кĕретĕн
Тăван çĕр-шыва вăратат.
Çĕнĕрен илем кӳреççĕ
Çĕре çĕнĕрен... стройсем:
Куллен ĕçе кĕреççĕ
Трактăр-авто-стройсем.
Çана ак раппăртлаççĕ
Çĕнтерĕвлĕ çулсем:
Сăмах парат ак Харккăв,
Путтилăвĕсваскат,—
Кикантлă Сталинкраđĕ
Пултаравлăн пырат:
Кунсерен ак çĕнĕ своткă:
Вунпилĕк...
Аллă...
Çĕр...
Пайан—
Çĕрллă трактăр
Кăларђĕ Сталинкрат!
Çĕршер, çĕралă трактăр,
Çĕрала хурçă ут
Кайаççĕ çенĕ трактăн
Сеçен хире çĕнме.
Тапаççĕ шавлă тактăн
Мотторлă кĕвĕпе...

Партти!
Куратăп çĕнелнĕ хире!
Аваллăха сирсе
Вăранҫĕç йалсем.
Машшиншăн куљљаннă çĕре
Ак трактăр мухтавлăн кĕрет
Мотторлă çил-тăвăл кўлсе...
Еп куратăп—
Çĕр сăнĕ улшăнат.
Еп куратăп—
Пĕрлешнĕ ушкăнра
Вуник мĕлйун хресҫен!
Еп куратăп—
Пултарăв пусăмпа
Утаççĕ колхоссем.
Еп куратăп—
Сарлак утăмпа
Кашлаççĕ совхоссем!
Еп куратăп—
Çĕршыв пуç тайат
Сана—çĕнтерў çулпуçне—
Сана—
Аслă партти!
Еп пĕлетĕп—
Çĕнми ĕççем çук
Çĕнме тухнă квартишĕн.
Полљшевикшăн
Илми креппăç çук,
Çук çĕнми вăй
Парттишĕн!

– ОЂЂЁРК

В. ÇАВАÇ

Мускав шывĕ урлă каранса выртакан петтон кĕпер урлă касрĕ те, пĕрремĕш ђарăнăва хăварса иккĕмĕш ђарăну тĕлĕнђе ђарăнђĕ „В“ трамвай. Епĕ трамвай çинђен антăм. Сулахайалла, Клементовскăй тăкăрлакпа кăшт. аллă-утмăл утас утасласанах

„МОСКОВСКИЙ ГОСУДАРСТВЕННЫЙ МАШШИНОСТРОИТЕЛЬНЫЙ ЗАВОД № 3 им. М. И. КАЛИНИНА“

тесе пысăк саспаллисемпе çырнă вывĕскă инçетренех курса:

— Кунта! Кунта!—тесе йыхăрнăннах туйăнђĕ мана. Епĕ васкаса савăт йенелле утрăм. Практĕккăна килетпĕр.

Ђасси сакăр хут шанкăртатса илђĕ. Пире кашнинех спетстумтирсем, алшăли, сутăњ валеçсе пађĕç.

— Хатĕри?—терĕ иншенер.

— Хатĕрех,—терĕмĕр епĕр.

— Атăр ман хыççăн,—терĕ иншенер.

Малыкĕн иншенер хыççăн савăт килкартине тухрăмăр.

Вăл çамрăк иншенер—савăт иншенерĕ. Хăй ĕçне аллинђи килĕк пўрнине пĕлнĕ пекех пĕлни унăн сăмаххисенђенех паллă.

Çур сехете йахăн пулĕ тсеха кĕриђђен пĕр-пĕринпе палашмалла савăт килкартинђе калаçса тăгăмăр. Сăмах майĕпе Малыкĕн савăт историйĕ çинђен те асăнса илђĕ.

— Вата йапала ку. Микула патшађђенхийех. 1868-мĕш çултанпа, кашăгсă, ĕçлет вăл,—тет иншенер Малыкĕн:—хађхи темпсене çырлахтараймаст çав.

— Çĕнĕрен рекконструксилемелле! тет. Епĕр ыйту хыççăн ыйту тăвăнтарма пуçларăмăр.

— А рапођђисем пурнăçĕ йепле?

— Промфинплана мĕн ђул тултарнă?

— Сталин йулташăн ултă условине пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе мĕн туна?

— Хосрашђот çине куçнă и?

— Утарнĕђђĕствăна миçе прођђан йавастарнă?

— Хут пĕлменнисем нумай-и? Иншенер ответлеме ĕлкĕрсе çитерейместь. Ахађ те васкасарах калаçма йуратаканскер, сăмахсене ђĕреслетсе çăвакан пăрлă çăмăр пекех сапма пуçларĕ.

— Промфинплана октапӗр уйӑхӗ тӗлне 93 процӗнтӑн тултарнӑ. Уйава (Октапӗр уйавне) 100 процӗнтпа тухас тетпӗр.

— Хосрашчӗота хӑшпӗр тсехсем кусайман-ха...

— Кун пек ҫеҫ пулмалла мартӑнхӗ пирӗн. Ийуӗ-ийуӗ уйӑхӗсенче пысӑк прорыв пулни хупларӗ. Ийуӗ сатанине 25 процӗнтӑн ҫеҫ тултарнӑ вӗт...

— Мӗншӗн?—хушӑран ыйту кӳртсе лартса хӑваратпӑр.

— Пӗр йенчен, рапочӗисем ҫитмен пирки,—тет иншенер:— тепӗр йенчен—кивӗ рукковотствӑ тӑрӑшман пирки. Сырйо ҫителӗклӗ тӑрагма шутламан. Рапочӗисен пурнӑҫӗпе инттересленмен. Епӗр ӗҫе спетсиалисатсилесшӗнчӗ,—тиректӑр чарса тӑрачӗ. Промфинпланшӑн кӗрешес вырӑнне рукковотствӑпа кӗрешсе вӑхӑта иртермелле пулчӗ.

— Кивӗ ҫӗрӗк рукковотствӑна тасатрӑмӑр, ҫӗнӗ рукковотствӑ турӑмӑр. Йертсе пыракан професҫисене уйӑртӑмӑр, ӗҫе спетсиалисатсилерӗмӗр—ӗҫ тухӑҫӗ хӑпарчӗ, ҫулталӑк планне 93 процӗнтӑна ҫитертӗмӗр...

— Парттийнӑй состав мӗн чул?

— Ҫӗнӗрен илнӗ рапочӗисем нумай-и?—пирӗн ачасем чатаймаҫҫӗ, ыйтусем ывӑтсах тӑраҫҫӗ.

— Парттийтсӑсемпе комсомолӗссен йышӗ пӗрле 45 процӗнтӑн шутланат.

— Ҫӗнӗрен 400 рапочӗине йахӑн илнӗ.

Ыйтусем тӑрӑх ответсем илсе пӗтерсен литтейнӑй тсеха кӗтӗмӗр. Литтейнӑйпа куҫнечӗнӑй тсех савӑтӑн йертсе пыракан тсехӗсем вӗсем. Вӗсенче чи хастарлӑ рапочӗисем ӗҫлеҫҫӗ.

Симӗсӗн-кӑвакӑн мӑкӑрланса тӑракан тӗтӗмпе тусанлӑ сывлӑш ҫитмӗл те ҫичӗ сасӑпа кӗрлекен машшинсен сасси халчӗен, сывлӑшра ӳснӗ ӳпке-чӗрене мака ҫӗҫӗпе каснӑ йеверлӗ ыраттарса ҫурса кӗрсе кайрӗҫ.

Пуҫа—хресчӗенсем час-часах хӑйсен ӗҫне йӑвӑр та йӳнӗ, рапочӗисен ӗҫне ҫӑмӑл та хаклӑ пӑхнӑ шухӑш пырса кӗчӗ.

Пурте хӗрсе кайса ӗҫлеҫҫӗ. Пире те маҫтӑр прикатӑн уйӑрса пӗр-пӗр рапочӗи ҫумне ҫыпӑҫтарчӗ.

Мана хампа пӗрле литфакра вӗренекен почак хӗрӗпе пӗрле тӑпра ватакан машшин патне илсе пычӗ.

— Вӑт сана помошнӗксем... Есӗ вӗсене вӗрент, ӗҫлеттер, ӗҫлеттер вӗрент, терӗ маҫтӑр пирӗн рапочӗисене.

Рапочӗи пире пур пек камӑлӗпех хапӑл туса илчӗ. Ӑҫта вӗреннине, мӗнле вӗреннине ыйтса пӗлчӗ. Епӗр хамӑр ҫинчен каласа патӑмӑр.

— Иншенер-петакӑк! Аван, аван! Вӗренес пулат. Пире хамӑр катӑрсем кирлӗ. Вӗреннӗ пулсан епӗ те ҫакӑнта ҫеҫ тӑрас ҫукчӗ...

Унӑн питӗнче пӗр хӗпӗртенине, тепӗр хурланнине кӑтартакан паллӑ пурри курӑнчӗ.

— Епе хам та питӗ вӗренесшӗн те пайӑн кунах йамаҫҫӗ вӗт, терӗ ни хурлӑ, ни савӑнӑҫлӑ сасӑпа.

— Мисе султанпа ĕçлетĕр кунта есĕр?

— Ђылайранпа ĕçлетĕп... пĕррĕ вĕренме кĕнĕђђĕ—калла ђĕнсе илђĕç. Маçтăрсем çителĕклĕ марри пĕтерет!..

— Ниђђово. Кайа мар хаљ. Сăн-сăпатăр çамрăк кăтартат-ха сирĕн,- тетĕп епĕ.

— Уйăхне мĕн ђул илетĕн? Çтелнăй пуљ.

— Çтелнăй... Укçи çитет... 200 тенкĕрен калла илмен ку çывăхра...

Пĕр саманљ паллашмалла, çапла каласса илтĕмĕр. Амăртмалла машшинсем те шавласа кăна лараççĕ.

—, Ну, вот, тесе пуçларĕ вăл каллех:—хаљ епĕ сире ĕç хушатăп. Акă кунта хăйăр, кунта тăм, кунта хура тăпра, есĕр вĕсене çак кĕреçесемпеле 20 шер кĕреçе клиномйалккă çине ăсса йарăр, терĕ ăша кăмăлĕпе .Епĕр йăпăр-йапăр кĕреçесем илсе тăпрасене ывăтма тытăнтамăр.

— Астăвăр, ытла ан хыпаланăр, тўрех. хыпаланса ĕçлесен ђас ывăнатăр, тет вăл.

— Ниђђово-о,—тет ман хĕр йулташ, каккой пуçтак!..

Кĕреçене тăпра ăсса хамăрпа йунашарах йанраса ларакан машшин çине сапасси „пуçтак“ пек туйăнђĕ пире. Çвешăй вăйсемпе нимне пĕлмесĕр сирпĕтсе кăна тăратпăр. Машшин пысăк çăварĕпе кап хыпат те, унђђен те пулмаст—ђăмлак туса сурса кăларса парахат. Опшур çăварне тăкса çитермелле мар.

— Мĕн тума кирлĕ ку пылђак?—тет пољак хĕрĕ.

— Çтершыасем тунă çĕрге кирлĕ вăл. Ак ĕçлесен хăвăрах куратăр,—ответлет рапођђи.

Кăнтăрла çитесси тата 45 минут. Пилĕк ыратма пуçларĕ пек. Ман хĕрĕн хытах ыратат пулмалла. Кĕреçи тăпра ăсайми пулђĕ. Хăй те сисмест—пилĕкне тытса пăхса илет.

Пĕр кĕреçе ăсса ывăтат те тăрат, тепĕр кĕреçе ăсса ывăтат те, ывăç тупанне çулласа илет.

— Кçç апат çиме кайатпăр... Есĕр пирĕн апата çисе курман пуљ ха, тет хушăран рапођђи.

— Епĕ урăх пултарaймастăп, Ваççа, терĕ хĕр.

— Мĕншĕн?

Вăл ђĕнмерĕ. Ывăç тупанне кăна ман йеннелле çавăрса кăтартрĕ. Ĕçпе пиçмен хĕрĕн алли шыçса шăтма та ĕлкĕрнĕ. Хăмписенђен çинçе йĕркепе тăмлă, тăпраллĕ йун пăђăртатса тухат.

— Вăт çемçутка!—тесе илтĕм хыттăнах хам ђĕлхепе.

— Што-о? тет хĕр.

— Йăвăр ĕç тесе калап,—тетĕп вырăсла.

— Ĕçпе пиçмен çын... мари. Çийелтен пăхма ђăнах та мăнтăр, шыçмак вĕсем—темле ĕçе те лаша пек ĕçлемелле пек, ан ваx хуппи кăна мĕн вĕсен, тĕшши ытах та пĕђĕк. Вăт рапотнĕтсăсем, пирĕн хресђен хĕрĕсем колхоçнĕтсăсем —покранимĕр, кунĕ-кунĕпе çерем катмаклаçан та мăнаг та тумаççĕ!—тесе шухăшларăм иртнĕ çулла хамăр „Кунер“ колхосри хĕрарăмсем 19—20 кектар çереме кĕреçепех ним мар катмакласа тăкнине аса илсе.

— Ђăнк-ăр-ăр!—свонок шăнкăртатрĕ.

— Апат çиме!—терĕ пире рапођђи.

Алсене çукаларăмăр та, сынсем хыççăн столовăйне утрăмăр.

Çап-çутă та тап-таса пысăк пÿлĕм. Пÿлĕм варринђе пĕр ĕрет ђеђексем. Çтена çумĕнђе Ленин сăнĕ алăк мăнĕш çакăнса тăрат. Унпа йунашарах кромккоковориттĕл çăварĕ. Кун пек столовăй епĕ Мускава килнĕренпе те «Evropa» ресторанђа кĕрсен курнă. Вырнаçса ларнă-ларманах пире апат пырса пађеç. Лайăх апат. Унђен те пулмарĕ кромккоковориттĕл çухăрса йађĕ.

— Алло!—Алло!

— Радиоузел машиностроительного завода им. „Калинина“.

— Слушайте! Слушайте!

— У микрофона инженер Малыгин...

— О выполнении октябрьского плана...

Апат çисе тухсан рапођђисем пурте киоскăран хаçатсем илсе вулама пуçларĕç. Епĕр те хаçатсем илсе хамăр машшин патне кайса тăтăмăр..

— Ну мĕнле? Апат пырат-и?—тет пирĕн рапођђи.

— Тĕлĕнтĕмĕр епĕр. Кун пек апат çитереççĕ, тесе шугламан, тетпĕр.

Нађартарахђĕ.. Хађ промфинплана тултарма пуçларăмăр та, лайах çитерме пуçларĕç-ха. Пирĕнпе перле машшинсем те канаççĕ. Ратио çеç пĕтĕм тсеха йанрат.

— Хĕрен апат çинĕ хыççăн кăмăлĕ улшăннă.. Те ĕçлемелли нумай йулманнине кура, хĕпĕртенĕ.

— Ваççă, сана практĕккă килĕшети?—тет вырăсла.

— Килĕшет!—тетĕп.

— Мана килĕшмест!—тет.

— Мĕншĕн, тетĕп.

— Пĕлетне, Ваççă, манăн сана каламалли пур.

— Мĕн?

Калама тăрат, каламаст, калама тăрат каллех ђарăнат.

— Ну, кала, кала!..

— Ну, епĕ сана йулташла çеç калатăп. Пирĕн круппăра кам ђи хитре пек сан шутупа...

Хĕрсенђен кам хитрине ыйтса пĕлме тытăнђĕ. Хăйĕн сăнĕпе мухтанат.

— Ман шутпа—есĕр, тетĕп...

Пĕре пĕтĕм тсеха çурса пăрахмаллах çăвар тулли кулса йараç килет, тепре—йĕрсе йарас килсе тăрат манăн.

— Ех! пур çав тенђере! Темле пулсан та Совет шкулĕнђе те вырăн тупаççĕ мĕн весем!—тесе сынна илтĕнмеллех шухăшласа илтĕм.

— Ђăнкă-ăр-ăр! свонок йанрарĕ. Машшинсем паçăрхи кĕввисене тăсса йађĕç. Тсех ĕç вăйĕпе тулса ларђĕ.

Кăвар йухат.

Савăт çинђен епĕ нумай илтнĕ. Рапођђисен пурнăçĕ çинђен нумай вуланă. Анђах ку таранђђен те хам куçпа савăта кĕрсе курманђђĕ, рапођђисен ĕçĕ мĕн йăвăрĕшне хам хулпуççи çинђе тайтарса курманђђĕ. Хале савăта хам килсе, хам куçпа куртăм. Рапођђисен ĕçĕ тайăмĕшне хам хулпуççи çине хурса виçсе пăхрăм. Партти, Ленин парттийĕ рапођђи класа асла хурса хисепленине, револютсисенђе малти ĕрете тăратнине çирĕп ăнланса илтĕм.

Пирĕн хресђенсем хушшинђе ђас-ђасах:

—Ей, рапођђисен пурнăçĕ кути вăл. Кунне 7 сехет анђах ĕçлессĕ пулин те, шалуне темĕн ђул илессĕ, а есĕ пур, кунĕн-çĕрĕн тенĕ пек ĕçлетĕн, çемйуна тăрантарса хĕл каçармаллăх та тăваймастăн!—тенине илтме пулатђĕ. Хресђенсем хĕсĕр виçĕ пусăллă уйĕнђе пĕђђенишерĕн кунне 16—17-шер сехет ĕçлессĕ пулин те:

—Ах!—тесе хуйхăллă, кулђанмасăр хĕл каçмаллăх тырă тăвайман пиркй, ӳпкелешетђĕç, ђанах та. Хăйсен ĕçне ылханатђĕç. Çук, пайан апла мар! Пайан ђухăнсемпе вăтамсем пĕрлешсе, кулаксене çĕмĕрсе тăкса ушкăнлă хуçалăхсем туса хуђĕç. Трактăрсемпе ĕçлессĕ. Анђах çапах рапођђисемпе колхоçнĕксем хушшинђе пысăк уйрăмлăх пур-ха хаљ.

Ђи малтанах кунта мана рапођђисен иксĕлми хастарлăхĕ, тĕпсĕр кăмăллăхĕ тĕлĕнтерђĕ. Пирĕн хресђенсем хушшинђе ĕмĕртенпех пĕр пĕрне кураймасăр, çилленсе пуранас йăла пур. Вăл йăла колхоçнĕксем хушшинђе те пĕтмен-ха, ушканпа ĕçленĕ çĕрге те хĕрарăмсен ушкăнне пырсан, мăкăр-мăкăр тунине:

—Çав çапла тет, çавăн арăмĕ çапла, тет;

—Çавăн упăшки, çапла, тет, тесе пĕр пĕрине çимесĕр ĕçленине тĕл пулмасăр çук.

Вăл урăхла пулма та пултарайман çав. Мĕншĕн тесен, вак хуçалăхлă хресђен çулĕ—кăпиталисăмла çул, етемпе етеме çитерекен çул пулнă. Çук, савăтра апла мар! Кунта ун пек пĕр-пĕрне курайман, мăкăртатас йăла çук. Кунта пурте кăмăллă, пурин питĕнђе те пурнăçпа çителĕкленнине хăйсен ĕçне ђунтан йуратнине, ĕçлеме тăрăшнине куратăн. Лотăрсем, прокулшђĕксем пулсан, савăт вĕсене хăйех суйласа, кăларса, пăрахса хăварат. Меншĕн тесен вĕсен йышшисем кирлĕ мар ăна. Тӳрленме тăрăшакансене тӳрлетет. Нимĕн те мар мана,—рапођђисем пĕр-пĕрипе питĕ кăмăлли, ĕçĕсене йуратни инттереслентерђĕ.

Ку йенђен пăхсан—пирĕн колхоçнĕксен рапођђисенђен вĕренмели нумай ха.

Тĕрлĕ станоксем, машшинсем хăйсен кăмăла кайакан кĕввисемпе манăн ђĕрене хăйсем йенелле çаварђеç.

Çапласке вăл машшин тенĕ йапала!

Вăл та санăн хуçу. Ес те унăн хуçи. Çыврарах тăрсан, куçна урăх çĕрелле йарсан, йе хăш майне пĕлеймесен, вăл сана пĕтĕм-

пех хăй тыткăна илет. Кирлех пулин алсăр-урасăр та хăварат. Майне пĕлмесен, тупсăмне тупмасан, кнопкине кăна пусатни, йе рыҫакне антаратни вăл сана нимрен те йăваш ҫĕрҫун пекех итлет.

Ванас-мĕн тăвас пулассăв есĕ ăна тӳрлететĕн, йусатăн—çĕлекен тăватăн. Санăн мĕн те пулин пăсăлсан, картран сиксен—вăл сана йусат.

Çынсем, ҫирлесен, пăсăлсассăн Крыма, Хура тинĕс хĕрне кайса, камăс ĕçсе, тинĕсре шыва кĕмесер йусанма май çук тесе шутлаççĕ. Тĕрĕс мар вăл. Вĕсем курорт тĕлне пĕлмеççĕ. Нумайăшĕн ҫирне хапрăк-савăтра ниçти курортри пек те мар ҫас йусама пулат. Пуринҫен ытла итеолоки ҫирĕпе асапланакан çынсене Тонпаса, Макниттостройа, Автосавăта йамалла ман шутпа.

Вăт ăçта вăл ҫăн-ҫăн курорт!

2

Ĕнер ăшаланса ĕçлени пайан та аса илтерсех тăҫĕ.

—Пайан ҫукун шăрататпăр, есĕр кирпĕҫсем çĕклеме пулăшăр,—терĕ тсех пуçлăхĕ.

Епĕр вакранккă тавра кирпĕҫсем купаласа çаврăнтамăр. Икĕ рапоҫҫи вĕсене вакранккă ăшне тăмпа сĕрсе купаласа пыраççĕ. Кантăрла тĕлне вакранккăна хатĕрлесе çитертĕмĕр. Ĕнтĕ калошник тултарасси те ҫĕртсе йарасси кăна йулҫĕ.

—Шăратаççĕ.

—Шăратса йанă пек.

—Шăранат, тенĕ сăмахсене илтмен мар, нумай илтнĕ епĕ. Анҫах пиҫҫе тăхлантан йĕрĕлҫе шăратнине курнисĕр пуçпе нимĕн те курманҫьĕ. Çавăнпа ҫукун шăратнине курас кăмал аҫаранпах хаваслантаратҫĕ мана. Ĕмĕтлĕннĕ ĕмĕте çитерме халҫҫен, ĕмĕтсĕр патшан саккунне пула, промышлĕнпăç вăйсăрри, ун пирки политтехнисăма ăнтарса йама май пулманни çула пӳлсе тăнă пулсан, пайан коммуниссен партти йертсе пынипе, пĕтĕм вăйпа сотсиалисăмалла пĕрхĕнтерекен промышлĕннăçа пула ăнса пыракан политтехнисăм тивлеҫĕн ĕçхалăхĕн хĕрлĕ столитсинҫи пĕр пысăк савăтра пулса курма телейлĕленнишĕн хĕпĕртемесĕр мĕн ле тӳсес-ха манан?

Ку çеç те мар! Пайан манпа пĕрле тăван ҫăваш ĕççыннисем пĕр Мускаври савăтсенҫе пин çын ытла ĕçлет. Автосавăтра, Уралта, Сталинкратра сахал-и вĕсем—ҫăваш рапоҫҫийĕсем! Есĕр çак кĕрешӳпе çапăçу хушшинҫе шăранса ӳссе, çирĕпленсе пыракан сотсиалисăмлă пурнăçра ҫи телейлĕ! Çĕнĕ пурнăçăн уççи çирĕн аларга. Çак уçça аларан вĕçертес марришĕн, Ленинисăм йалавне аллăра хытă тытса тата çӳлерех, çӳле йăтса пысăк утăмсемпе çĕнĕ çĕнтерӳсем патнелле, ытти пур рапоҫҫисемпе пĕрле хăйуллăн кайса, ăмăртса ĕçлесе тăванлă паттăрлăха кăтартăр!—тес килет манăн пайан.

Пире ĕç вăйĕсем нумай кирлĕ. Натси катăрсем кирлĕ пире!..

Тĕрлĕ халăх ађисем хушшинђе тăракан сирĕн ывăлу çак „Калинин" савăтне çынсем мĕн тунине çăвара карса пăхса тăма килмен, ĕçе вĕренме, вăйа аварлама çеç ђеђекленекен ђăваш промышленнăçне пулăшма пултаракан çын пулас тесе килнĕ вăл кунта...

Кăнтăрла апађĕ хыççăн виççĕмĕш хутран варканккă ăшне айала вутă, унтан кокăс, тимĕр, тĕрлĕ ванђăк-вĕнђĕк, каллех кокăс, каллех тимĕр йарса тултартăмăр та, вакранккăна ђĕртсе йатăмăр. Шăп 23 минутран вакранккăн пĕђĕк тутинђен кăвар палкаса тухса вăлак тăрăх шĕрлесе йухса анђĕ.

—Кăвар йухат!

—Кăвар! тет манпа йунашар тăракан уçпек ађи тĕлĕнсе.

Ђăнах кăвар пекехçке вăл!

—Ара ђăнах пулмасăр, 1200 кратăс вĕри вĕт вăл!—тесе тăнлантарат рапођђи.

Рапођђисем, витресем лартса çитереймеççĕ, ылттăн тĕслĕ кăвар лиђке пăккинђен пĕрĕхекен шыв пек йăпăрт çеç тулса ларат.

Пĕр витрене тултарса тепĕр витре пырса лартнă ђух йухакан кăвар витре хĕррине пырса перĕнет те, ылттăн ђăмрашкине ђул çине персе тĕпĕрех сапаласа йанă пек тавраналла хĕм сирпĕнет. Хĕм пĕрђи рапођђисем çине пайтах сиксе ÿкет. Епĕр, ăнсăртран сăмса-çăвар хĕм тĕпренђĕкĕ пырса ÿкесрен хăраса 4—5 меттăр тарса тарса тăратпăр. Вĕсене вăл нимех тĕ çук. Вĕсем кăвар тĕпренђĕкĕсем мĕн ђул айакка сирпĕнеççĕ, çавăн ђул çывăха пырса, вут пек, пăрăç пек ăшаланса ăсса кайаççĕ, хатĕрлесе хунă мотелсем çине кайса йухтараççĕ. Ирхине ваљђи вăл кăварсенђен ђип-ђипер турпинăсем пулса лараççĕ.

—Рапођђи тесе ахаљ каламан çав! Вăл сăмаха епĕр хаклама пĕлместпĕр...—тесе шухăшласа тăратăп епĕ.

3

Манăн пиђђе таçтан илтнĕ вара, епĕ пĕђĕк ађа ђухнех: Тимĕре касма та май килет, пирĕнни пек вутă татакан пађкăпах татаççĕ, тетђĕ. Манăн ăна ĕненес килмен. Унтан кулаттăм.

—Тимĕре мĕнле касма май килтĕр! Вутта касма та питĕ йăвар та, тимĕре ăçтан касайрăн!—теттĕм. Пурăна-киле, канаш ирĕкĕн тивлетне пулă, пĕрене пек тимĕрсене пађкăпа шарлататарсах каснине хам куçпах курма тиврĕ.

Мехханиђђĕски тсехра ытам тулли тимĕр пĕренесенех верстак хушшине хĕстерсе хунă та, пăђкă хай тĕлĕнех шарлаттарат. Рапођђи пăђка иртĕнсе кайасран кăна айаккинђе хурал тăрат. Пютйомнăй кран темиçе çер пăтлă тимĕр турпинăсене хисепсĕр çăварĕпе кап хыпат те, рапођђи ăста илсе кайма хушат—çавăнта кайса парахат.

Строкăљнăй станок ик-виç меттăр тăрăшшĕ тимĕре сĕвелеткăна.

Кайалла-а-а ҫакат те, пӗтӗм вӑйне пухса хыттӑн малалла ҫупса пырат. Алса тулӗ пек трупасем туса тимӗре саваласа илет. Ун хыççӑн тимӗр йап'йака та çап-çутӑ пулса йулат.

Сакӑр сехетре пуçласа 3 сехет çурӑҫҫен кашнӑ кун çавӑн пек хурçӑ, тимӗр етем сассипе кӗрлесе ларат „Калинин" саваҫе. Макниттострой ваҫҫи тӗрлӗ теттаҫсем, турпинӑсем туса пама хыпаланат.

Самана машшин ыйтат.

Партти: машшин парӑр, тет.

Партти Макниттострой ыйтат.

Макниттострой турпинӑ ыйтат.

Калинӗнтсӑсем кӑна илтеççӗ. Уççӑн ответлеççӗ:

—Пур!

—Хатӗр!...

Октапӗр уйавӗ кунӗ кӑларса çапнӑ хӗрлӗ хӑма çинҫе ытти паттӑр хапрӑк-саватсен йаҫӗсем хушшинҫе: "Машиностроительный завод им. Калинина №3--105%" тесе çырнӑ сӑмахсем ҫылайҫҫен йалкӑшса тӑҫӗç.

Мускав хули.

РОТ ФРОНТ!*)

ЕСРЕЛ

Керманири пулас пролетарилл̆е револьутсийе

АВТӐР

Ђĕтрет тĕнђе веçех.
Çĕр ђăмăрне ават сивле**).
Совет çĕршывĕ çех
Ĕçлекене сĕнет тивлет.
—Хĕвел пекех выђђат шевли.
Ĕççĕр тĕнђе йĕрет,
Ĕçрин—куççулĕ çук!
Ун умĕнђе пĕр аслă çул—
—Сотсиалисăма каçу.
—Çĕр хĕрелсе хĕрет—
Пĕтĕм тĕнђе—ясап,
Харам пырсен хайар кулли.
Совет кăна таса,
Ĕçлекенсен выђђат хулли.
— Ђăн-ђăн телей çĕршыв тулли.
Кĕрлет тĕнђе веçех.
Харам пыра ават сивле.
Совет çĕршывĕ çех
Çĕр йĕр тавра хăмăç шевле
Ĕçе хăтăлтарма тĕрлет!

Хĕвеланăç Йевроппă, хули.
Тĕттĕм каç. Çил. Çăмăр. Лађака.
Ђирлĕ сас:—„тăранма ĕç пули?..
Çирĕп аллăм антрана ђакак.
Çиђĕ уйăх тухни савăтран,
Çиђĕ уйăх ĕçрен катерни!
Унтанпа никам та çак вутран
Ĕçлеме илекен çук пĕрне.
Арăмпа ађасем шăмă çех,
Кунĕ-кунĕн ларас выçăллах.
Каларсамăр, тутти хађ миçен?
Хађ миçен ĕçрен пурлăх çĕлаç?!
Ак ĕнер миттĕнкра пĕр йĕкĕт
Ђĕринђен ђăтма хушрĕ кăштах.

*) Хĕрлĕ фронт!—Керманири револьутсиллĕ рапођђисен ласăнкĕ.
**) Сивĕ ђир.

Хырăмне шăтарасҫĕ йěке,
Пĕвĕнҫеи шăратасҫĕ кашта!
Унăн хыҫҫăн каласрĕ тепри;
Сăмаххи халĕ те ҫĕрере.
— Пирĕн варлă сатаҫҫă, тĕпри—
— Ҫулăмпа ҫуласси ҫир-ҫĕре!"

* * *

Хĕвеланăҫ Йевроппă хули.
Ҫӳлĕ, сутă ҫуртлă урамсем.
Куҫта пуҫ политсейски хулли,
Йĕр тавра ун йунлă турамсем.
Пурăнаҫҫĕ, асаҫҫĕ куҫта
Шурă ӳтлĕ „пуҫлăхсем" кăна.
Хутран ҫех, йĕрĕнсе саккунтăн,
Хапрăк-савăт йышĕ вут—хăна.
Ун ҫухне тасисем йăвинҫен
Вилĕм сăхиă кайăк пек пăхаҫ.
Ёҫлекенĕн хĕрӳ кĕввинҫен
Куҫĕ-пуҫĕ тухнă йапăха.
Аптраса йыхăраҫ йыттине:
— Тутлă татăкшăн ĕҫне кăтарт—
Хаҫатсем пĕлтереҫ ыттине:—
—„Шутсăр вилĕ. Урнă йыт хатар..."
Анҫах ĕҫ шурă алăллă мар,
Тимĕр-хурăҫ хатĕр аллинҫе,
Унăн пуҫлăхĕ Ленинпа Маркс,
Тӳрĕ тусĕ—пур ĕҫри тĕнҫе!

* * *

Тĕнҫере шурă террăр асат.
Тĕрмесем ҫурăлаҫ тăвăртан.
Йухиă й,ншăн йĕртеп купăса:
— Йулнă Кенрих пеҫҫен тăххартан.
Тĕрме алăкĕ ҫирĕп, таҫка,
Ватă Кенрих аляи ҫĕмрейми.
Уйăх ҫех йăпатат хăш каҫна
Виҫĕ утăм тавра ҫӳреме.
Телĕрет:—ывлĕсем... миттĕнкра...
Ёҫлекен туллийех плошҫĕгре...
Хулара ĕҫ йурӳи йаптăрат,
Мул хуҫи урнă йыттăн ҫетрет.
—„Ак!.. Политси!... Политси килет!.."—
Сасă ҫурҫĕ кĕрхи сывлăша.
Ҫитеймереҫ нумайĕш киле:
Касрĕ пуҫă... Таптарĕ лаша
Сакăр ывлĕ ăсанҫĕҫ ҫĕре,
Ашшĕне йăпатат сив тĕрме.

Масара кĕме каман ђерет?!
Хатĕр кам тĕнђене сиктерме?!.

* * *

Кам ĕçлет, кам нуша аллинђе—
Пурте тытăр пашал! Итлĕр!
— Пĕттĕр Кинтенпурк—Прўнĕнк тĕнђи, 1)
Пĕтђĕр Çевĕринкпа Китлĕр. 2)
Кĕршеçински фашшис- сотсиаллă,
„Сотсиаллă çулпуç"—çĕлен.
Иун çинђе çитĕнет вăл căвайлăх,
Пролеттари ђул мих3) çĕле!
Тĕрлĕ йатлă вĕсем. Тĕрлĕ ушкăн,
Анђах пуçлăхĕ—Капитал.
Кив тĕнђешен ĕçхалăхĕ йушкăн,
Комунисăм пире итеал.
Шеллесе пуçне усĕç хăшши,
Манĕç мĕн тĕслĕ çын, йытă.
Анђах кам сотсиаллă-фашшис
Çын марне тусĕнђен ыйтĕ?!
Ђĕлхисем вĕсен çуллă, йака:
—„Йунсăрах çĕнелет пурнăç"...
—Урамра вăлах вилĕм акат.
Йулашки харам пыр урнă.

* * *

Вĕтĕ çăмăр çĕр питне тĕрлин,
Аслă плошђĕт тинĕсле шавлат.
Сан хуçу, пайан, ĕçлĕх Перлин,
Револђутси сывлăшра сывлат.
Йалавсем ђĕр йун çинђе пĕветнĕн
Йалкăшаççĕ шутсăр—вĕççĕрех.
Мускав çилĕ амĕшĕн—тўлеккĕн
Ађашлат çĕнелекен çĕре.
Çўл трипун çинђе кеноççе Теђмăн, 4)
Хыптарат вут-хал итлекене.
— Çунтарса шăлар пур лĕкĕне,
Унсăр çук çĕн пурнăç! Лосăнк тĕл ман.—
Плошђĕт çурăлат „Рот Фронт!"-пала.
Тĕршĕнет политси айккинђе.
Пур Перлин пайан „Рот Паласс",5)
Пур Кермани çунакан тĕнђе.
— Çул пĕрех: Компарттипе Октапĕр,

---

1) Кинтенпурк—Кермани преçитенђĕ, Прўнĕнк—аслă министăр.
2) Китлĕр—фашшиссен пуçлăхĕ, Çевĕринкпа Кĕршеçински—сотсиал-фашшиссем (политси пуçлăхĕсем).
3) майах
4) Теђман йулташ—Кермани компарттипе пролеттариађĕн çулпуçĕ.
5) Хĕрлĕ аслă пулĕм.

Пулăр хатĕр йуланики штурма!
Пайан мар, ыран кивве иретпĕр,
Ленин йалавне тытар умра.—

* * *

Фашшисăм тапăнат. Фашшисăм урнă.
Сотсиал-фашшисăм ђупкалат.
Хĕрлĕ фронт хытат проњ ђышкăлла...
—Сехетваскат,васкат çутта çĕн пурнăç.
Фашшисăм тапăнат. Йун сыпнă Кампурк,
Кампурк ђĕринђе вут шторм пиçет.
Револђутсишĕн пăшал—виçе,
Рапођђи клас, санран вăйли халђ кам пур?!
Фашшисăм тапăнат, пĕлĕт тăртаннă,
Çевĕринк таврашне ĕнсерен...
Фон-парон хутра пайан сĕре,
Ват пурнăç—тинĕс—ырра мар пăтраннă.
Фашшисăм тапăнат, Вилкелђăм хатĕр
Пулăшма рапођђи палађне;
Китлĕрĕ пайласшăн мар влаçне,
Пĕђђен ишме майлат вăл йунлă каттĕр.
Фашшисăм тапăнат. Фашшисăм урнă.
Хĕрлĕ фронт отпор парат йытта,
Хĕрлĕ фронт йытта тăкат вутта,

* * *

Рот фронт ђĕри Компартти—çĕнĕ пурнăç!
Хăт кун, хăт каç—пурте пĕр,
Револђутси ăна сăнамаст.
Тулта сапа, Октапĕр,
Тулта куçат темте пĕр,
Хĕрелсе йалкăшат самана.
    Пролеттари, тыт пăшал,
    Пуршуйа çапма васка!
    Хатĕрле çиçен кинжал,
    Йĕр тавра тăшман йăскат!
Кĕрлет... çунат Кермани...
Çĕнĕ пурнăç вутра çуралат.
— Сыхлан, çăвар кармани
Хăшши? Пуршуй гармани?..—
Кин тĕнђен ђул ђĕри çуралат.
    Паттăр та, тура та, патша та—
    Пире никам та çăлас çук!
    Çăлăнăça епĕр тупатпăр
    Хамăр алапа анђах!

ВУТ ĂШĔНҪЕН

„ЛУККА ПЕТĔРĔ“ ПОВĔÇРЕН.

М. ТАНИЛАВ-ҪАЛТУН

Вăл—ку шухăшпа мар, ĕçрен таврăннă май, Йакур ăçта çӳренине ыйтса пĕлме çеç пырса кĕҫĕ вăл унтя.

Çĕрле. Кĕрлеттерсе асляти авăтат, тупăпа пенĕ пек шарт та шарт! тутарса аçа çапат; тĕттĕм сывлăш ăшĕнҫе йăлтăр та йалтăр! çиçĕм вуҫĕсем вĕри çĕлен пек йавкаланса вĕçсе илеççĕ. Ура айĕнҫи çĕр такана çинҫи шыв пек калле-малле ҫӳкенет.

Урпă çанталăк çавхатĕр хăрушăрланса çитрĕ; вăхăтăн-вăхăтăн урама тухса çӳреме мар, паракра ларнă çĕрте те сехре хăпса тухмалла пулса çитет, кунĕн-çĕрĕн выçă кашкăр пек:

— Ш-ши-ууу!..

— Ас-ту-ууу!..

— Ш-ш-иии!...—туса çил çанталăкпа туллашат.

Анҫах, çанталăк йепле хăрушă пулсан та, шахторсем паракесенҫе хăраса лармаççĕ. Çĕрĕн-кунĕн урам тулли халăх, калле-малле кăткăсем пек вĕркеççĕ: хăйĕ ĕçе кайаççĕ, хăшĕ ĕçрен таварнаççĕ. Хутран-ситрен хăшĕ ӳсĕрпе, хăшĕ урăллах:

„Вырăссем-вырăссемпе çапăçаççĕ, ҫехсем сахăрпа сутă тăваççĕ... Ĕненмесен пырса кур, суйатăп пулсан куçран сур“!.. тесе пыр тĕпĕсемпе кашкăрса йурласа çӳреççĕ. Çавăнтах ҫех салтакĕсем те пăшалĕсене йатса сӳреççĕ, çиĕсенҫе—Анкли френҫĕсем, урисенҫе—хрантсус путтинкисем, пуçĕсенҫе—нимĕҫ каскисем, çăварĕсенҫе—вырăс пирусĕсем. Анҫах, вырасла пĕлменскерсем, хăйсен çинҫен măшкăласа йурланине те ăнланса илеймеççĕ. Ахвигсерĕсем анланаççĕ пуль те... Темшĕн ҫармаççĕ çав „карма çăвар“ вырăс, ҫăваш, тутар, хаххул шахторĕсене...

Ăçтан ҫаран?.. „Халăх çăварĕ—хапха“. Пĕр йурлама вĕреннĕ йурра—ҫехсем мар, акăлҫансем, хрантсуссем, нимĕҫсем, йаппунсем, киттайсем килсен те ҫарнас çук...

* *

... Çĕмĕрлет Çĕпĕр. Авăтат аслати. Çиçет çиçĕм. Çават çамăр. Кĕрлет çил.

Ав, Лукка Петĕрĕ пĕр хăрамасăр, кайлипе тимĕр-кĕреçине хулпуççи çине хурса, кукăр-макăр шахтă урамĕ тăрăх, ҫĕркуç таран пылҫăк ашса, çиллĕ хутăшлă ҫашлаттарса çăвакан çăмăра хирĕç парăнмасăр ĕçрен таварнат; çиййĕнҫи преçен пиншакĕпе

сарлака çунатлă шĕлепки тăрăх шăпăртатса шыв йухат; пăрçа пĕрђи пек шултра çăмăр питçăмартийĕнђен хулăпа çапнă пек çапат. Петĕр парăнмаст... йалан малаяла утат. Так ım хурлантарнă ăна кĕçĕр. Нихăçан та капла пулакан марђђĕ. Сăнĕ ывăннă тĕслĕ—салху, икĕ пĕрђĕ çĕмĕрт пек—ăслă куçĕсем шăтарас пек каллĕ-маллĕ пăхкаласа, тем çинђен шухăшласа пыраççĕ; йуман кисипсем пек урисем урамри пылђăка: лаі-лап... тутарса çăраççĕ. Хулпуççийĕ çинђи кайлипе кĕреçи: тин-тин, шк-шк, „хăтарăпăр"... туса шакăлтатса калаçса пыраççĕ.

Асат хуçнă лаша çурăме пек аванса аннă тăраллă кивĕ парак тĕлне çитрĕ Петĕр. Куçлă ђўређисенђен шăши куç лампă йăл-йăл туса çунни курăнат. Петĕр тăп ђарăнса: „Мĕншĕн сывармаст-ха ку Марйе инке? Кĕрсе, Йакур пиђђе ăçта çўренине ыйтса пĕлемха", тесе шухăшларĕ те, сылтăмалла вĕлт пăранса, пăлтăрсăр парак алăкĕ умне васкаса утса çитрĕ. Кăрт туртрĕ. Çук, алăк уçăлмарĕ (шалтан çаклатса хунă). Унтан кайли аврипе: шак-шак!.. шаккарĕ майĕпен.

Шалтан çинçе сасăллă хĕрарăм:

— Кам унта?—тесе йăвашшăн ђĕнђĕ.

— Епĕ! Уç алăкна,—терĕ Петĕр хуллен.

— Кам апла есĕ? паллаймарăм. Иатна кала,—тесе тепĕр хут ыйтрĕ хĕрарăм Петĕре хуллен сассинђен уйăраймасăр.

— Епĕ, Марйе инке, Петĕр.

— Е-е-е-... мĕн çĕр варринђе, сывăрма пĕлмесĕр, пылђăк ашса, çăмăр çинђе шўсе çўретĕн.—тесе алăкĕ патне хăвăрт утса пырса, çаклатнине вĕçерђĕ Марйе.

— Петĕр паракалла хăвăрт кĕрсе кайрĕ. Унтан Марйе алăкне каллех çаклатса хуђĕ.

* * *

ПаРакра та тулти пекех нўрлĕ, ђĕрĕ сывлăш: çĕрĕк мађђи хăмисен хушшисенђен пылђăклă хутăшлă тумла шапăртатса йухат; çĕмрĕк ђўређин куçĕсенђен вăшăлгатса çил кĕрет. Плиттинђе кĕрлесе çĕр кăмрăкĕ çунат пулсан та, нўхрепри пек сулхан. Урайĕнђен пĕр шит çўлĕшĕ—саваламан хамасенђен тунă нарă çинђе Марйен виçĕ çулхи Улђки, ђĕрĕп пек хутланса ўкнĕ те, ашшĕнђен йулнă çĕтĕк шахторккине 1) витĕнсе сыврат, çине пат-пат тумла тумланат.

— Хăратним?!. Лампăна сўнтериђђенех алăка çаклатса лара-тăн! —терĕ Петĕр кайлипе тимĕр кереçине шăпăр шăтăкне тайăнтарса хурса.

— Хăрамасăр!.. Мĕн Йакур шахтăран тухса кайнăранпа кашни каç сыхлаççĕ „лешсем". Ђўређерен киле-киле пăхаççĕ. Çавăнпа сыварсан та лампа сўнтерместĕп,—терĕ Марйе, хăй хăранă пек ун-кун пăхкаласа илђĕ.

---

1) Шахторккă—шахтăра тăхăнмалли тумтир

Петĕр „лешсем“ тенĕ сăмаха ăнланса илеймесĕр:
— Камсене калатăн есĕ „лешсем“ тесе?—ыйтрĕ.
— Ху куçă умĕнчен çӳреççĕ вĕт, çавсене те курмастăни елле? Чехсемпе касаксене калатăн,—терĕ Марйе шăлĕ витĕр.
— Е-е-е... Ав-камсене калатăн есĕ „лешсем“ тесе. Вăл тăшмансене!.. емел пулсан епĕ вĕсене пайантан тем туса, таткаласа тăкăттăм. И-и! . Мăнтăр сысчасем! Пуршуйсен йыттисем... Пурнăç-и ку?“
— Вырăс пуршуйĕсем йуна ĕçни çитмен. Йулашкинчен чехсем ĕçме пикенчĕç ĕнтĕ... Ĕçхалăхне чĕрĕлле хыпса çăтма тараççĕ вĕт тăшмансем. Ку хурлăха ăçтан тӳсес?.. Пайан нимсĕрех нухача çирĕм вĕт... Шахтăран тухрăм та, пуçа чиксе шухăша кайса утса пыратăп. Çĕр тĕттĕм. Паг çитсе перĕнтĕм. Пуçа çĕклесе пăхрăм, Чех салтакĕ тăра парат; чĕнмесĕр-тумасăр нухалине туртса каларчĕ те, пуç урлă çапрĕ. Куçран вуткĕм сирпĕнчĕ. Татах çапатчĕ, аран тарса хăтăлтам,—тесе аллисене чăмăртаса, алăкăн-тĕпелĕн уткаласа çаврăнчĕ Петĕр.
Улчки те вăранса, те ăйхи тĕлĕшпе:
— Ен-не!.. хик, хик... сивĕ... пуç çине... ы-ы-ы,—майпен чăстарса йĕре пуçларĕ...
Марйе Улчки çумне ларса:
— Ан йĕр, ачам, ан йĕр, çывăр! Çывăрсан сивĕ пулмĕ.
Пай-пай...—тесе çийĕнчи шахторккине тӳрлетсе витсе, ачашласа çывăртарасшăн пулчĕ.
Улчки чылайччен ĕсĕклесе выртсан-выртсан, аппăшĕ çупăрланă май, майĕпен лăпланса, çывăрса карĕ.
— Ăçта çӳрет-ши ку Йакур пичче? Тĕплĕн пĕлесчĕ те, вара епĕ те ун патне вĕçтерĕттĕм,—тесе ыйтрĕ Петĕр Марйепе йунашар ларса.
— Пĕлместĕп. Тухса кайнăранпа килсе кайман. Çыру таврашĕ те çук. Те чăн, те суйа: „Тайкара çӳреççĕ“ тесе калаçкалаççĕ çынсем,—терĕ Марйе хуллен.
Йакур шахтăран тухса кайни час çур çул тулат ĕнтĕ: ăçта çӳренине никам та тĕплĕн пĕлекен çук. Чехсемпе касаксем, тин çуралнă Совет влаçне йун ăшне путарса, шахта хăйсен аллисене туртса илнĕ кунсенче—Йакур Хĕрлĕ кварти отречĕн кăмантирĕччĕ. Чехсемпе касаксене шахта кӳртесшĕн мар пулса хастарлăн çапăçрĕ. Анчах урса çитнĕ тăшмансене хирĕç чăтса тăраймарĕ, вăхăтлăха тăван шахта пăрахса тухса каймалла пулчĕ.
— Тайкара çӳреççĕ пулсан, ыранах тухса вĕçтеретĕп. Мĕн кунта хама хам тулаттарса пурăнас. Ирĕк тайка варринче, ирĕккĕн сывласа пурăнса пăхас,—тесе чуречe витĕр урамалла пăхрĕ Петĕр.
Тĕттĕм сывлăш ăшĕнче йăлтăр та йăлтăр çиçĕм вучĕсем вĕççе çӳреççĕ. Çил выçă йытă пек ахăрса, урса çитнĕ çанталăкпа туллашат; çĕрĕк парака шăтарса кĕрес пек:
— Ту-ту-ууу!..

— Шу-ууу!..

— Ăс-туу-уу!.. туса ҫите-ҫите ҫапăнат. Таҫта айакра йытăсем вĕреҫҫĕ, сасăсем тĕпсакайĕнҫе пек илтĕнеҫҫĕ.

Сасартăк, ҫўреҫе умĕнҫен кăшт пĕшкĕнсе пĕр вăрăм пуллĕ хура мĕлке васкаса иртсе кайрĕ. „Хайхи - тăшмансем сыхласа ҫўреҫҫĕ,“ тесе шухăшларĕ Петĕр хăй ăшĕнҫе. Ҫамрăк ҫĕри сиксе тухас пек тапа пуҫларĕ. Тĕсĕ, те кăшт хăранипе, те ҫиллипе, пĕрре хуралса, тепре шуралса кайрĕ.

— Кам пулҫĕши вăл?—тесе ыйтрĕ Марйе хуллен Петĕртен васкарах.

— Кам пултăр?! Лешсем ĕнтĕ! Сыхлаҫҫĕ. Ман кайасха; вăрах лартăм,—тесе ури ҫине тăҫĕ Петĕр.

— Ах, хăратăп епĕ! Ан кай, Петĕр. Кунтах сывăр. Шелле мана. Пĕҫҫенсĕме тем те тума пултараҫҫĕ вĕсем,—тесе Петĕр аллинҫен йарса тытрĕ Марйе.

Петĕр Марйен питҫăмартийĕсем тăрăх пăрҫа пĕрҫи пек куҫҫулĕсем йухса аннине курсан:

— Йурĕ еппин, каймăп, кĕҫĕрлĕхе ҫакăнтах сыврăп,—терĕ йăпатса.

Унҫен те пулмарĕ, алăка шак-шак шаккани илтĕнҫĕ.

Марйе хăвăрт утса пырса:

— Кам унта?—тесе майĕпен ҫĕнҫĕ.

Петĕр кайлине тытса, алăкран кĕнĕ майпа тăрăнтарма хатĕрленсе тăҫĕ.

— Епĕ, уҫ хăвăртрах, Марйе,—тенĕ сасă илтĕнҫĕ тултан.

Марйен выҫасан, ҫăмха пек ҫăмăр кăкăрĕсем хăварт-хăварт сике пуҫларĕҫ. Йакура сассинҫен палларĕ. Савăннипе вĕҫерсе, уҫса йанине те сисмерĕ. Йакур алăкран кĕнĕ-кĕменех ун ытамĕ ăшне кĕрсе ӳкрĕ Марйе. Мăкăҫ ҫеҫекĕ тĕслĕ, хĕрлĕ тутисем ирĕксĕрех Йакурăн мăйăхлă тутисем ҫумне ҫитсе ҫыпҫрĕҫ. Телĕкри пек:

— Ҫунăм!.. килтĕним?—терĕ Марйе. Унтан нимĕн ҫĕнмесĕр пĕрне-пĕри ыталаса, пĕтĕм хуйхисене манса ҫылай тăҫĕҫ.

Петĕр майĕпен утса кайса, ҫўреҫе йанаххи ҫумне тайăнса тăҫĕ.

— Фу! Аран-аран ҫитрĕм... Те палларĕҫ, те ҫук ĕнтĕ,—терĕ Йакур сывлăшне ҫавăрса.

—Камсем?—тесе ыйтрĕ Марйе, унтан алăкне хыпаланса ҫаклатса хуҫĕ.

— Ав унта ҫехсемпе касак аттаманĕсем калаҫса тăраҫҫĕ. Аран-аран пытанкаласа иртрĕм,—терĕ Йакур тĕпелелле иртсе. Унтан ҫийĕнҫи йĕпе тумтирне хывса, плитта ҫумне пăрахрĕ.

— Вĕсем, есĕ мĕн шахтăран тухса кайнăранпа,—кашни каҫ тенĕ пек сыхлаҫҫĕ,—терĕ Марйе. Унтан Йакурăн йĕпе тумтирне илсе, плитта тĕлне—типме ҫакса хуҫĕ.

Йакур тĕпелелле иртсе, ҫўреҫе йанаххи ҫумне тайăнса тăракан Петĕре курсан:

— Кам ку?—тесе хăвăрт утса пыҫĕ умне.

— Епĕ, Йакур пиҫҫе. Аван çÿрегни?—тесе сылтăм аллине ҫăсрĕ Петĕр.

Йакур кĕтмен çĕртрен Петĕре курсан, ним тума пĕлмесĕр, тăнă çĕрте йупа пек хытса кайса, пĕрре Петĕр çине, пĕрре Марйе çине пахса тăрсан-тăрсан „Ав мĕнле ĕçсем кунта сирĕн“... тесе шухăшларĕ хăй ăшĕнҫе. Унтан

— Аван! Ху йепле...—тесе Петĕрĕн куçĕнҫен шăтарас пек пăхса, аллинҫен хыта ҫăмăртарĕ.

Петĕр çамрăк пулсан та, вăйĕ Йакурăннинҫен кайа мар иккенне пĕлтерсе—хирĕç таваăрҫĕ.

— Çапла... Йулташсем ирĕклĕхшĕн çапăçса, пуçĕсене хураççĕ. Е, есĕ çамрăк ҫĕрÿне хĕрарăмсемпе йăпатса пусаратăн пулас... Йурат... Вал та ĕçех. Йулташу килте çук хутлăхра самеçтиттĕл пултăни?—тесе кăшт кутăн ҫакрĕ Йакур.

Марйе тĕлĕннине, нимле сăмах тупса калаймасăр:

— Апат хатĕрлеми, Йакур... хырăму выçнă пуҫ—тесе Йакур патне утса пыҫĕ.

— Çук, епĕ тутă!.. Ак, куна авантарах çитер, ăна вăй нумай кирлĕ,—тесе Петĕр çине мăлатук пек аллин паттăр пÿрнисемпе ҫăсса кăтартрĕ.

Петĕр çак сăмахсене илтсен, ҫĕри йĕппе ҫикнĕ пек ыратса, сивĕ тытнă пек ҫĕтре пуçларĕ; тĕсĕ пĕрре кĕл пек кăвакарса, тепре çĕр пек хуралса кайса, аййăпсăр куçĕсем сиксе тухас пек выҫаса, Йакуран куçĕсенҫен шăтарас пек пăхрĕç. Унтан аллинҫи кайлине урай хăми çине тăрăнтарса лартрĕ те;

— Е-е, Йакур пиҫҫе! Епĕ сана халиҫҫен таван вырăнне хурса пурăннă! Епĕ, есĕ... ав мĕн шухăшлатăн... Аййăплă пулсан... Ме! çакăнтах персе парах!—тесе кăкăрĕ çинҫи кĕпине уçса хурса, аллисене çÿлелле çĕклерĕ Петĕр.

Йакур нимĕн ҫĕнмесĕр, тутисене çыртса, сылтăм аллипе капурĕнҫи накан авринҫен йарса тытрĕ.

— Апла шухăшлатăн пулсан...— Йакур умне пырса тăҫĕ Марйе.

Пĕр вăхăта виçĕ мĕлке йупасем пек хытса кайса, нимĕн ҫĕнмесĕр, пĕр-пĕрин куçĕнҫен шăтарас пек пăхса тăҫеç. Сасартăк йăлтăр-йалтар çиçĕм çиçсе, инçетре те мар шартлаттарса аçа çапрĕ. Парак шыв çинҫи кимĕ пек ҫÿхенсе: тр-р-р ҫетресе кайрĕ. Нимĕн пĕлмесĕр, хăрăлтатса çывракан Уҫки тутлă ăйхинҫен вăранса:

— Ат-те, ат-те... тавăйăнтăним?...—тесе çийĕнҫи шахторккине сирсе пăрахса, сиксе тăҫĕ те, тÿрех кушак çури пек амăшĕн мăйĕнҫен ыталаса илсе, мăйăхлă тутисенҫен вĕçĕмсĕр ҫуптăва пуçларе.

Уҫкана курсан Йакурăн çилли çавăрăнҫĕ пулас: капурĕнҫен кăларнă наканне калле ҫиксе хуҫĕ те, Уҫкине ыталаса йатса, ылитта çуменҫе тăракан тенкел çине ларҫĕ.

— Айăплă пулсан мĕншĕн, йытăсене персе пăрахнă пек, персе пăрахмастăн... Ме! Вĕлер! тесе тата нумайрах уçса хуђĕ Петĕр кăкăрĕ çинђи кĕпине.

Йакур ђылайђђен шухăша кайса, пуçне ђиксе ларђĕ.

Уљка темиçе хут та: Атте мĕншен çиленнĕ есĕ? Ма аннепе пиђђене вăрçан? Ма каласмастăн?—тесе селĕпрех пакăлтатрĕ, Çук, Йакур Уљкана хирĕç ђĕнмерĕ.

— Вĕлерместĕним? Сывă пул еппин! Анђах Марйе инкене ан айăпла. Епĕ ун патне вăл—ку шухăшпа мар, есĕ ăçта çӳренине ыйтса пĕлес те, сан патна, сана пулăшма пырас,—тесе ыйтса пĕлме çеç кĕтĕм. Мана ĕненмесен аллунти ађунтан ыйт, вăл каласа парĕ сана..., терĕ. Унтан кайлипе тимĕр кĕреçине илсе алăкран тухма тăђĕ Петĕр.

— Ђим! Кăшт ђэрăн-ха!.. Ан васка... Калаçмалли сăмахсем пур. Епĕ кăшт хĕрӳленнишĕн ан çилен. Ху та пĕлместĕн, вĕт. Рапођђи... алăри ђатăка сынна парас килмест... Епĕ пĕлетĕп—мана Марйе никампа та улăштарас çук. Сана та шанатăп,—тесе тухса кайма тăнă Петĕре ђарђĕ Йакур. Унтан ăшă куçĕсемпе Марйе çине çавăрăнса пăхрĕ.

Марйе çавăнтах Йакурăн çилли çавăрăнниие сиссе, майĕнђен ыталаса илђĕ те, каллех иккĕшин те тутисем пĕр çĕре çитсе перĕнђĕç

— Ђунăм!.. Есĕ вĕт мана шанатăн... епĕ нихăçан та, никампа та улăштарассăм çук. Петĕрĕн пĕр айăпĕ те çук, вăл мĕн есĕ шахтăран тухса кайнăранпа мана тăван пек пулăшса пăхса тăрат,—тесе, ђух илтĕнмелле пăшăлтатса, вĕлле хурђĕ пыл ђеђекĕ çумне сыпăçнă пек—Йакур çумне сыпăçрĕ Марйе.

Петĕр алăкран тухма тăнăскер, Йакурăн кăмăлĕ çавăрăннине сиссен, тăп ђарăнса пуçне ђиксе тăђĕ

—Йе, çитĕ Марйе. ун çинђен кайран... халĕ кирлисем çинђен калаçар. Ман вăхăт пит сахал. Çире курас килнипе, çул май çеç кĕрсе тухас, терĕм. Çутăлиђђен калле тухса кайас пулат ман шахтăран... унсăрăн йулташсем кĕтсе ывăнĕç,—тесе Марйене хăй çумĕнђен майĕпен уйăрђĕ Йакур.

— Атте, атте! Есĕ каллех пайахса кайатним?.. Ан кай! Епир аннепе хăйатпăр!—тесе ашшĕ çумне, çулçă пек сыпăçрĕ Уљки.

Петĕр алăк хăлăпĕнђен тытса, ђылайђђен шухăша кайса тăђĕ. Унтан Йакур умне хăвăрт утса пырса

—Есĕ кĕçĕрех кайатним? Апла пулсан епĕ те санран йулмастăп!—терĕ татса.

— Анђах ман пĕр пысăк мар ĕç пур, çавна тума пулăшха, вара манпа пĕрле пыма пултаратăн,—терĕ Йакур.

—Мĕнле ĕç? Ревођутсишен пулсан—вута кĕме те, шыва сикме те хатĕр епĕ,—терĕ Петĕр.

—Пар аллуна! Пайантан есĕ пирĕн отретре пулан! Мана йăвăр пулсан, есĕ пулăшăн. Сана йăвăр килсен епĕ пулăшатăп,—терĕ Йакур Петĕрĕн аллине ђăмăртаса.

Акă вăл—икĕ шахтор аллисем пĕтĕçрĕç. Иккĕшĕ те—ту çĕмĕрнĕс керсем. Ку алăсене револђутсине хирĕç пыракансем çитсе лексен...кам ђелет, тŷссе тăрайĕç-ши?..

— Йурĕ, Йакур пиђђе. Пайантан епĕ санпа пĕрле,—терĕ Петĕр.

— Ман отрет кашни кун ŷсет; рапођђисемпе хресђенсем вуншарăн-вунпилĕкшерĕн пыра пыра хутшăнаççĕ. Анђах хĕç-пăшал çитмест; нумайĕшĕ ђукмарсемпе, сенĕксемпе, çавасемпе çŷреççĕ... Ђехсемпе касаксен склатра хĕç-пăшал таврашĕ нумай; кĕçĕр пирĕн мĕнле те пулсан çав хĕç-пăшал склатне хамăр алла илес пулат,—терĕ Йакур ун кун пăхкаласа.

— Ку ĕçе тăвасси нимĕн те мар, склат панђе кĕçĕр пĕр ђех—салтакĕ çеç хурал тăрат. Çĕр тĕттĕм...—терĕ Петĕр.

* * *

Çил пушшех урса çитрĕ пулас, Парак хађ йăванса кайас пек ђĕтресе ларат. Сасартăк мăлатукпа çапнă пек алăка кĕмсĕртеттере пуçларĕç. Марйе васкаса утса пырса:

— Кам унта? Мĕн кирлĕ? тесе ђĕнђĕ.

— Уç алăкна! Мĕншĕн питĕрсе ларагăн... сволăђ!

тесе ерех-ĕçнипе хăрăлтатакан пырлă сасă илтĕнђĕ тултан.

— Лекрĕмĕр... Есĕ таврăннине сиснĕ тăшмансем,—терĕ Петĕр кайлине тытса.

Йакур тин çеç пăс тухса, типме пусланă пиншакне плитта тĕлĕнђен илсе тăхăнђĕ те, наканне капурĕнђен кăларса аллине тытрĕ:

— Кай алăк умĕнђен,—терĕ Марйене.

Марйе Улђкине йатса кăмака умне пырса тăђĕ.

— Уç хăвăртрах! Унсăрăн алăкна çĕмĕретĕп!—тесе пушшех ахăра пуçларĕ.

— Кам есĕ? Мĕн кирлĕ сана? Кай алăк умĕнђен!—терĕ Йакур. Унђђен те пулмарĕ, пăшал сасси кĕрлесе те карĕ. Пуђђи алăк витĕр кĕрсе, сĕтел çинђе хĕр йĕнĕ пек калла-малле пăркаланса çунакан шăши куç лампа çитсе лексе—ђăлпар салатса пăрахрĕ.

Паракра ахађ те тĕттĕмђђĕ, лампа сŷнсен пушшех тĕттĕмленсе ларђĕ. Плиттара кăмрăк кĕрлесе çуннипе çеç, кăшт çутатат.

— Анăр тепсакайне,—терĕ Йакур урай хăмине уçса. Марйе Улђкине йатса васкаса анса кайрĕ тĕпсакайне. Ун хыçĕнђен Петĕр сикрĕ.

— Ђуређерен тухса ан тарђђĕр! хытă сыхлăр,—тенĕ сасă илтĕнђĕ тултан.

Парак йĕриткавра авăн çапнă пек тупĕлтетсе ђупкаллин илтĕне пуçларĕ. Унтан тагах пăшал сасси кĕрлесе карĕ; пуђђи ĕне пукри пек найласа кăмака трупине ситсе лекрĕ.

Йакур плиттапа кăмака хушшине ларђĕ те, хирĕç тавăра пуçларĕ.

— А́й!—тенĕ сасă илтĕнђĕ тулта. Унтан лап туса пылђак ҫине ӳкрĕ пĕр ĕмĕлке.

— Ҫывăха ан пырăр!

— Ђĕрĕлле парăнас ҫук вăл.

— Краҫҫин сапса вут ђĕртес. Ан тив пурте ҫунса пĕтђĕр,—тене сасăсем илтĕнђĕҫ. Пăшал сасси ҫăраран ҫăра кĕрле пуҫларĕ.

Ҫак: „Краҫҫин сапса вут ђĕртес" тенĕ сасса илтсен, Йакур тӳрех тĕпсакайне сиксе анђĕ те:

— Мĕн тăвас?... Йепле хăтăлас? Парака краҫҫин сапса вут ђĕртеҫҫĕ... Ђуређерен тухса тарма май ҫук... сыхлаҫҫĕ,—терĕ васкасăр.

— Апла пулсан, тĕпсакайĕнђе ларас пулмаст. Йепле те пулсан хăтăлма тăрăшас пулат, терĕ Петĕр кăшт шухăшла кайса.

— Ах, ађам! Хуг те мĕнле вилĕмпе вилсен те, вугра ҫунса вилес марђђĕ... Йакур, Петĕр! Йепле те пулсан хăтăлма май ҫукшим вара, тесе Улђкине кăкăрĕ ҫумпе хытă хĕстерђĕ Марйе.

Хатăлмалли май пĕрре. Урăх май ҫук. Акă ҫакăнтан тĕпсакай никĕсне ђавса тухас пулат. Унсăрăн апла та, капла та—вилĕм, терĕ Петĕр. Хăй ҫавăнтах кайлине илсе, никĕс тăприне ђавма пикенђĕ. Йакур та вăрах шухăшласа тăмарĕ, кĕреҫе тытса, Петĕр ђавнă тăпрана ăса-ăса илсе айккинелле ывăта пуҫларĕ.

II

Кивĕ парака хĕртĕ ђĕлхеллĕ вут-ђасах—хăйĕн ытамĕ ăшне тĕркелесе ђиксе хуђĕ. Урса ҫитнĕ ҫил вĕркĕђĕ пек: ш-шу-уу.. вĕрсе вушшех астарат. Пĕтĕм ҫĕр йалт ҫугăлђĕ.

Таврари параксен ђуређисенђен шевле ӳксе, нимĕн пĕлмесĕр ҫывракан шахтерсене айхисенђен вăрагрĕ. Унтан та, кунтан та, хăшĕ ҫарамас, хăшĕ ҫаруран сике-сике тухса.

— Пушар!

— Пушар-р-р!...

— Ар-р... тесе кăшкăрса пылђаклă урам тăрăх, ӳке-ӳке, кĕрлесе ҫунакан парак йеннелле ђупаҫҫĕ.

Парак йĕри таврă ђех салтакĕсемпе вăрăс касакĕсем аллисенђи Йăппун пăшалĕсене хатĕр тытса калле малле уткалаҫа ҫӳреҫҫĕ.

Ҫунат парак, кĕрлет—ҫуламĕ, тĕтĕмĕ пĕрре ҫӳле кайса, пĕррĕ ҫĕре ҫитсе ҫапăнса—ђăтпар сăлăнса пĕтет. Ђашлаттарса ҫăмăр ҫăват пулсан та, лăпланмаст. Сӳнтерме пыракан шахторсене касаксем йахăна та йамаҫҫĕ. Таҫтанах:

— Ҫывăха ан килĕр,—тесе кăшкăрса тăраҫҫĕ.

Шахторсем нимĕн пĕлмесĕр тĕлĕнсе:

— Мĕншĕн сӳнтерме ђараҫҫĕ? тесе купан-купанп уҫтарăнса тăрса пĕр-пĕринђен ыйтаҫҫĕ.

Ав. паракăн тăрри аҫа-ҫапнă пек шатăртатса ишĕлсе анђĕ.

— Мĕн пăхса тăратăр! Марйепе Улђки ҫунса вилеҫҫĕ вĕт, тесе пыр тĕпне хытарса кăшкăрђĕ пĕр вăрăм сăмсаллă, ҫаруран шахтор..

Унҫҫен те пулмарĕ, тĕлĕнсе тăракан шахтёрсем ҫехсемпе касаксене пăхăнмасăр, пĕтекен парак ҫатнелле кĕшĕлтетсе ҫупрĕç. Лешсем мĕн ҫул ҫарасшăн пулсан та, ҫараймарĕç. Ҫехсем, касаксем, шахтёрсем — арçынсем-хĕрарăмсем пурте пер çĕре пăтранса пĕтрĕç. Йăрмăнкăри пек калле-малле ҫупкалу, кăшкăрашу-акăрашу пуçланса кайрĕ...

Сасартăк çил кăшт лăпланҫĕ. Шахтёрсем хăшĕ витрепе, хăшĕсем шĕлепкисемпе, шыв туласа çунакан парака сÿнтересшĕн сапаççĕ. Ҫехсемпе касаксем çÿнтерттересшĕн мар тăрăшаççĕ. Çук! шахторсем пăхăнмаççĕ. Вут лăпланнă çемĕн лăпланат.

— Склата çĕмĕрсе, хĕç-пăшалсене тийесе карĕç, вашроти! — терĕ пĕр калмăк тĕслĕ, аллисене хыçалалла туртса сыхнă ҫех салтакĕ, хашкаса ҫупса çитсе.

— Хăçан? Камсем?—терĕ çара йанахлă, урлă мăйăхлă касак аттаманĕ тĕлĕнсе.

Халĕ анҫах... Паллаймарăм, вашпăлроти! Хама çыхса пăрахса хăварҫĕç ..

— Мĕншĕн кăшкăрмарăн. Сволăҫ! тесе аллисене хыçалалла çыхнă салтакăн пит çамартийĕнҫен шартлаттарса çупрĕ аттаман. Леш кутăн кутăн ҫакса пылҫăк çине йăванса кайрĕ. Ҫылай выртсан:

— Виноват, вашăроти!—тесе сиксе таҫе.

— Пурте кунга!—тесе кăшкарҫĕ урлă мăйăхлă аттаман. Ҫехсемпе касаксем труках аттаман тавра пустарăнса илҫĕç. Пăртак, шахторсем илтмелле мар пăшăлтаса калаçса тăҫĕç те, унтан склат йеннелле васкаса утрĕç.

Парак йăлтах çунса пĕтрĕ; вутпуççийĕсем анҫах мăкăрланса выртаççĕ, тата кăмаки тăрна пек мăйне ҫăсса ларат. Шахторсем: Марйепе Уҫки çунса вилнĕ пулĕ тесе, виллисене шыраççĕ. Çук, ниçта та тупаймаççĕ. Çунса вилнĕ пулсан ÿҫĕсем пулмасан та, шăмми—сем пулĕҫҫĕç.

— Ай-уй, мĕскĕнсен, ..Иакур килтс пулсан хапла та пулмĕҫҫе,—тесе хаш-ш сывлаççĕ хĕрарăмсем.

— Ан кулҫанăр, иккĕшĕ те ырă, сывă,—терĕ Петĕр таçтан сиксе тухса. Унтан каллех параксем хушшине кĕрсе кайса курăнми пулҫĕ.

Кăшт тăрсан шахторсем те саланса пĕтрĕç.

Çĕр иртсе, çутăлас май кайрĕ.

Çĕпĕр, Минуççинск

ТЕАТТĂР

4 пайлă, 6 карттинлă трамă.

Н. АЙСМАН

ВЫЉАКАНСЕМ:

1. **Иван Степпанђ**—решиççор. Куштанскер. Ђассине тек текех кăларса пăхат.
2. **Саљљи**—актор. Ĕçђен, тўлек, искуствăна хытă йуратаканскер. Траматурк.
3. **Вуслан**—актор. Унăн куç-пуçне пăхсан, çав тери тискерлĕх палăрат, такама çисе йарас пек пăхат, çўçĕ вăрăм, малалла усса йанă. Тумланасса зван тумланат.
4. **Серне**—актрисса. Хитре, çамрăк. Саљљийа кађђа тухни те нумайах пулмаст.
5. **Маруççă**—пуп хĕрĕ, вырăнтан вырăна куçса, ĕççĕр çапкаланса çўрекен хĕр.
6. **Никколай Никколайђђă**—Саљљи ашшĕ. 65—70 çулалла çывхарнă, çемçе кăмăллă старик. Çуçесем шураларах панă, пысăк сухаллă.
7. **Римăђкă**—Саљљи йăмăкĕ. Питĕ хăйуллă пионер. 14—15 çулта, вĕренекенскер.
8. **Тимкка**—тутăрсемпе йунашар пурăнакан ђăваш, йут токкумĕнтпа тарса çўрекенскер.
9. **Темйан**—колхос ђленĕ, колхосри вретиттĕл (поткулатпек), 50 çула йахăн.
10. **Йăван**—реквиçиттăр.
11. **Пĕррейкин**—
12. **Ђилимăв**— } акторсем.
13. **Петтуçкин**—
14. **Решиççора** пулăшаканĕ (помреш)—актор.
15. **Аптанăв**—актор.
16. **Лайăххинă**—актриссă.
17. **Сăпани**—колхосри карђăк, ватăскер.
18. **Рыпакков**—парикмаххĕр, актор.
19. **Раман**—колхос пуçлăхĕ.
20. **Таçă**—коçтумершă.
21. **Комсомолĕс**.
22. **Карсакков**—хĕрлĕ салтак
23. **Тумуç**—пиантсă.

Колхосникĕксем, милитси, стсенă çинђе ĕçлекенсем 2, т. ыт. те.

ПӖРРЕМӖШ ПАЙЕ.

Хулара Станислав Никколайӗвиҫ пурнакан хваттер. Ҫывракан пӳлӗме кӗмелли алӑк. Стсенӑ ҫинҫе никам та ҫук. Саҫҫипе Вуслан ӳрӗккӗн кӗреҫҫӗ.

Саҫҫи. Ӗнерхи хаҫат ҫинҫе „арттиссем самайах ураланма пуҫларӗҫ" тесе ҫырнине вуланӑранпа пӗтӗм шухӑш хӑвасланса карӗ.

Вуслан. Та ниҫҫево. Хаҫ ӗнтӗ 24-мӗш ҫулхи мар, ҫирӗпленҫӗ ҫӑнахах. Ман шухӑшпа тата акӑ мӗн-ҫине ҫаврӑнса пӑхмалла...

Саҫҫи. Мӗн?

Вуслан. Кашни пйессӑнах уйрӑм ҫӗлхепе выҫаттарас пулат.

Саҫҫи. Мӗнле уйрӑм ҫӗлхепе?...

Вуслан. Конешнӑ, франтсус ҫӗлхипе мар. Калӑпӑр, пйессӑна вирйал ҫавашӗ ҫырнӑ пулсан, вирйал ҫӗлхипе лартас, Шуртансынни ҫырнӑ пулсан, шуртансем калаҫакан ҫӗлхепе лартас.

Саҫҫи. Ҫук, Вуслан йулташ: есӗ йӑнӑшатӑн, пирӗн ҫаваш кашни районрах урӑхларах калаҫат. Ак, Куславкка районнех илерха, унта „Кмоко тӗрне улхойнӑ» теҫҫӗ, „калаҫат вӑл"—тессине „калаҫат-у" теҫҫӗ.

Вуслан. Ха-ха-ха!..

Саҫҫи. Шуртан таврашне илер-ха, унтан вара йараҫҫӗ-тӗк, ӑнланса та йулайман. „Сыснӑ пуснӑ, сӑрӑ тунӑ, сӑрӑ ӗҫме пыр" теҫҫӗ. Ак тата вирйалсене илер,—„калаҫаҫҫӗ" тес вырӑнне „калаҫҫӗ" теҫҫӗ, тата „ҫампак полмарӗ, хӑнҫа, ати, апи, аттей, апай"... тем те пӗр. У-у ун пек кашни йен мӗнле йумахланине вӗренсе те ҫитерес ҫук.

Вуслан. Пирӗн, пӗтӗм ҫаваш халахӗн калаҫуне театтӑрӑн хуранне ҫавӑрса кӳртсе шӑрантарса кӑларас пулат.

Саҫҫи. Апҫах вӑл йапала лӗтӗмпех пйессӑна ҫыракантан килет. Пйессӑра автӑрӗ мӗнле типсем кӑтартас тет, мӗнле ҫӗлхепе выҫҫатарас тет, ҫавӑн пек ҫырат, епӗр арттиссем вӗсем ҫырнине ҫӗлхе йенҫен нийепле те пӑсса урӑхлатма пултараймӑстпӑр.

Вуслан. Тавай-ха, Саҫҫи, ку ыйту пирки трамагуркссмпе йумахласа пӑхар, хстат-вӗт есӗ ху та траматурк?

Саҫҫи. Йурат, ҫапла тӑвӑпӑр.

Вуслан. Станислав Никколайӗвиҫ, мӗнле есир хаҫ ҫӗнӗ пйессӑсем ҫыркалаттӑр и?

Саҫҫи. Хаҫ ҫинех ҫырман, вӑхӑт нихӑҫан та тупаймастӑп, пӗр кунтарах пӗр пӗҫик пйессӑ ҫырнӑҫҫӗ. Хаҫ тытса та пӑхман.

Вуслан. Пӗҫик пйессӑ? Кӑтарт-ха.

Саҫҫи (*илсе парат*). Акӑ пӑх.

Вуслан. Мӗн ҫинҫен ҫыратӑн?

Саҫҫи. Йалти клас кӗреш ӗвӗ ҫинҫен.

Вуслан. Та, интересна, интересна. (*Уҫкаласа пӑхат*).

Саҫҫи. Акӑ пӗр ҫӗрте питӗ интересна пулса ларҫӗ - Хамӑр потшефнӑй колхос претҫетатӗлне вӗлернӗ пек, кӗпер

çинҫе колхос претçетаттĕлне поткулаҫнĕксене вĕлерттертĕм.

Вуслан. Ку?.. Интересна, интересна.

Саҫҫи. Тепре потшефнăй йала çпектаккăҫ лартма кайас пулсан, çак пйессăна илсе кайма сĕнес шухăш пур-ха, йала ваҫҫи ку пйессă аван пек туйăнат. Пĕрре хăйсен колхос претçетаттĕлне вĕлернĕ пеккине выҫҫаса кăтартар.

Вуслан. Пурнăçра пек, аван пйессă пулат ку пирĕн йал çынписемшĕн. (*Телефон шăнкăртаттарат*).

Саҫҫи (*трупкăна илсе*). Кам калаçат? Ну-ну, аха!.. Ну-ну, пыратăп еппин халех. (*Трупкине хурат*).

Вуслан Кам вăл?

Саҫҫи. Алексеййĕв, çекретгар комсомола, пĕр минутлăха хăйĕн патне ҫĕнет. Есĕ вулакаласа лар-ха, епĕ халех килетĕп. (*Тухат.*)

Вуслан. Йунашар çуртран телефонпа калаçаççĕ, а? интересна. (*Пйессана вулама пуçлат*). Карас. „Пирĕн Тумуç ăçта тарҫĕ. Вот шан шуйтана, татах вĕт пирĕнтен пĕр литр ерех ĕçрĕ. Тата вăл çитменнине çынсем хушшинҫе пекĕлтетсе çӳреҫе йуратат. Пĕрте пĕр кирек кама каласа парсан"... Илле.—„Ун çинҫен маларахран шухăшламаллаҫҫĕ çав. Ну ăна епир ыран та хамăр майлă çаварма пултаратпăр. Кĕçĕр ĕнтĕ ăна шанмалли пĕтрĕ, пирĕн хамăранах тăвас пулат ку еçе (*кайалла пăхса*). Вэн такам килет, пирус çути курăнҫĕ". Карас: „колхос пуçлăхĕ Микита пулмалла, вăл пирĕнтен ытла кайарах марҫĕ вĕт". Илле. „Айта йăвăç тĕмми кутне". Карас: „айта". (*Пытанаççĕ. Пауса. Кĕпер варне çитсенех Карас Микитана нерсе укçрет. Микита йăванса кайат. Пйессине вулама пăрахса шухăша кайат*).

„Ҫорт восми"... Ку пйессана пирĕн ĕç çинҫен çырнăçке? (*Пауза*). Кăна вăл пĕлсех çырна-ши? Йе хăйĕн пуçĕпе шухашласа кăларнă-ши? (*Пауса*). А вçотаки ку пйессă ман ҫуна çиреппĕнех пырса çитрĕ. Ку ĕç çинҫен Йемеç хăй вилиҫҫен каласа хăварнă пулмалла. Вот шуйтан... Хам аллăпа çынна вĕлерме аван мар тесе укçа парса, мĕн ҫухлĕ ерех ĕçтерниш̆ĕн те йулашкинҫен хăвнахсутаççĕ, сволăҫсем!... Манăн аттене çаратса, киленҫен хăвалас йапăшăн, епĕр те çителĕклĕ тавăрăпăр. Ман аттене тĕпренех пĕтерес тесе çине тăракан Каврила, колхос туса „нумай пурăнатăп" тере пуҫ ,çук епĕр те çывăрмастпăр, епĕр те вăй çитнĕ таран лайăх тавăратпăр. Епĕ хаҫ хам аттерен уйрăм пурăнатап тесе хуттунă пулсан та, аттесемпе хутăшмастăп пулсан та, манăн ҫун аттепе пĕрлех. Анҫах епе хамăр театтăрта пĕҫҫен кăна, манăн мĕнле те пулсан хам майлă ытти артиссене çаварма тăрăшас пулат, артиссем хушшинҫе те пирĕн танатана кĕрсе ӳкекеннисем тупăнаççех. Çав пуп хĕрпе, Маруççăнз театтăра темле вырнаçтарас, вара татах манăн вăй хушăнаҫҫĕ.

Саҫҫи (*кĕрет*). Ну, мĕнле, пйессăна вуларăн-и? Кăмăла кайат-и?

Вуслан. Есĕ мана ку пйессăна вулама киле парса йамастн-и. Кăшт-кашт пăхкаларăм та, питĕ интереснă пек туйĕнҫĕ.

Саљљи. Илсе кай, илсе кай. Анђах вăхăтлăха çех. Тӳрлетмеллисем самайха унта, çав потшефнăй йалта колхос претçетаттĕлне вĕлерни çинђен аванрах ыйтса пĕлмелле-ха. Пĕрре ђан пурнăçран илсе çырас терĕм-ха—историђђĕски токкумĕнт пулса йултăр.

Вуслан. Ну, йурĕ-ха, киле кайса рођ вӳлас. Ну „пока“ тесе каларĕ тет арăмне Лукка. (*Кайат*).

Саљљи. Сывă пул! Ман хамăн та рођ вĕренес-ха. Ђим ха! (*Сĕтел çинчe рођ шырат, Макçимăвăн „Шинђăк“ пуррине мăнласа пăрат*). Çук, ăçта çăва патенђе пулђĕ-ха вăл? Ну, рођсĕрех пултаралпи, 3-мĕш пайĕнђен пуçласа пăхас. (*Сывăрмалли пӳлĕме çухалать Наусă. Хăвăрт кĕрет те, савăнăçлăн*). Филитсиаттă... Филитсиат, тă... Вăл çук. Çак вырăнах килме хушнăђђĕçке вăл мана. улталамарĕ пулĕçке. Вăхăтрах çитрĕм-ши йе çитеймерĕм-ши? Çитеймерĕм пулсан Филитсиаттăн ђухне кӳрентертĕм пулĕ... вăхăтлах çитрĕм пулсан... Филитсиатта! (*Хĕнĕртесе*). Филитсиаттă. (*Ђупса пырса сывлăша ыталаса илет те, ђуп-тăват*). Филитсиаттă, каçамана тархасшăн, епĕ вăхăтрах çитеймĕрĕм пулĕ. (*Наусă. Филитсир аттă ман каланине итлесе пек пулат*). Ах, Филитсиаттă, тахçантанпах епĕ сана курасшăнђĕ... Темишĕн есĕ мана çак йулашки çулсенђе манма пуçларăн. (*Наусă.*) Ма есĕ нимĕн те шарламастăн? (*Наусă*) А-а!... Урăххине... урăххисемпе йерсе кайрăн-и? Есĕ мана çав терийех суйса пурăнатăн пулсаң, еп сана... (*Наусă, йăвăшшăн.*) А-а, каçар-и? Ӳ кĕнетĕн? Ну, йурат, каçарам еппин... (*Наусă*). Ха-ха ха!.. Апла есĕ, аçусем ĕлĕкхи пупсем пек тăвас тесен те, вĕсен майлах. кайас тетни? (*Итлет*). Ха-ха-ха!... (*Сасартăк кулма тăрăнат. Сын хулнине курнă пек туса, хăйулăрăнат.*) Сана мĕн кирлĕ кунта? (*Филитсиатта патне*) Филитсиаттă!.. Филитсиаттă, меншен халех кĕретĕн? Филитсиаттă, Филитсиаттă! (*Наусă*). Çук, кĕрсе кайрĕ. (*Сын çине пăхнă пек тусa*). Ну, есĕ мĕн каласшăн? Колхоса илменшĕн? Вара мĕн? (*Наусă*). Ех, хаљ çăварна çапса салатам, хăвна хаљ кайса хупман—спаççипа кала. Çавăншăн? (*Наусă*). Ах... та... сан револвĕр те пурçке. Мĕн есĕ мана хăратас терĕн-им? Пер. Ну ма пĕместĕн? Пер.. (*Пашт сиксе ӳкет*). Ах, пĕтрĕ пуç, пĕтрĕ!.. Филитсиаттă!... Филитсиаттă"... Есĕ маншăн тавăр тăшмансене"... Ах... ах... (*Хытă тулласа. асапланса вилни. Наусă. Тăрат те çамкă çинчи тăрне шăлса*) Фу, шуйтан илесшĕ!.. тар тухсах кайрĕ. (*Çута сӳнет, Саљљи—нитиң хунарпа çутатмалла. Пупликăна*) Ак тор мĕн иккенне ăнланаймансем, нумайĕшĕ çапла калаçаканнисем те пур. „Мĕн вал актор. Вĕсен пĕтĕм пурнăçĕ те вăйă кулăпах иртет. Вĕсен пурнăçĕ пекки çăмăлли тĕнђере те ...урăх çук пуљ "теççĕ. Çук. Ма çăмăл мар искуствă тĕлĕшпе ĕçлеме (*Стсена çинчe çута, Маруççă кĕрет*).

Маруççă. Срасгвуйте!

Саљљи. А-а, сторовă, йулташ Маруççă.

Маруççă. Сан пата килсе курас терĕм-ха. Ну, мĕнле пурнатăн?

Саљљи. Ниђђево, йулташ Маруççă, пурăнкалатăп майспе.
Маруççă. Та... Есе пĕђђенех и мĕн?
Саљљи. Пĕђђенех.
Маруççă. Сĕрне ăçта кайнă?
Саљљи. Театтăрта пулмалла, унта вăл тиректăра курмалла ха, тесе карĕ-ха. (*Паусă*) Ну, ăçта ĕçлеттĕр?
Маруççă. Ниçтах та мар.
Саљљи. Ăçта ĕçлеме шухăшлаттăр?
Маруççă. Аçта май килерех парат.
Саљљи. Апла есĕр хăвăр йуратман ĕç патне лекме пултараттăр.
Маруççă. Çапла та. . (*Паусă*)
Саљљи. Мĕнле кĕнекесем вулаттăр?
Маруççă. А а... епĕ вулама питех йуратсах каймастăп çав.
Саљљи. Камăн проиçветенисене йуратарах параттăр. Ивановăнне-и, Красновăнне-и?
Маруççă Красновăнне.
Саљљи. Хăшне?
Маруççă. „Йеркĕне".
Саљљи. „Йеркĕн" вăл Шупуççынин вĕт, Красновăн мар.
Маруççă. Красновăн мĕн еппин?
Саљљи. „Тавалла". Есĕр çак вăхăтри вырăс писсатĕлĕсенђен хăшне килĕштерех паратăр? Иеççенина-и?..
Маруççă. Максăм Корккийе.
Саљљи. Унăн проиçветенисем мĕн йатлађђĕ-ха?... -
Маруççă А-ă-ă... ха, ђĕлхе çинђех, нийепле тĕ калаймастăп, ă-ă-ă!
Саљљи. Ех ты .. Мат...
Маруççă. Ой, Стаçик, есĕ хĕрарăм умĕнђе усал сăмахсем калатăн.
Саљљи. „Мат" усал сăмах-и вара. Епĕ Коркки „Мат" - не аса илтересшĕн. -
Маруççă. М-м-мта ђăнах та „Мат" çке-ха. (*Кăштах патне пырсa*) Станислав Никколайĕвиђ, пăх-ха, йепле йăвăç виттĕр хĕвел ылттăн пек йăлтăртатса курăнат?
Саљљи (*Маруççă патнерех пырса*). Итле-ха, Маруççă, сана питĕ аван монолок пĕр пйессă çинђен каласа парам. Илтетни?
Маруççă Хаваслансах.
Саљљи Ех, Филитсиаттă!... Пăх ха тата икĕ улмуççи хушшинђе йепле илемлĕн курăнса ларађ çеремрем тунă сип симĕс тенкел. Ех, ларатăн вара тепĕр ђухне çавăн пек вырăнта, çумра кăвак куçлă сарă хĕр, йĕри тавра пĕр сас-хура та çук, пур çĕрте те шап, пурте çывăраççĕ. Анђах пĕр пĕрне йуратакансен çех, çав тенкел çинђе ларакансен, ыйхи çук. Вĕсем шурăмпуç сути килмесĕр те килĕсене кĕмеççĕ, йавашшăн пĕрпĕрин аллисене ђăмăртакаласа лараççĕ. Пĕлĕт çинђи уйăх та, çав мăшăр çине улмуççи çулçисем виттĕр вăтанса çех пахаť. Ех, Филитсиаттă!.. Есĕ мĕнле йышăнăн-ши, епĕ сана каçхине çав тенкел çинђе ларма ђĕнсессĕн...
Маруççă (*хуллен*). Ой!..
Саљљи. Унта епĕ сана, санăн клĕшўллĕ пўне ыталаса илсен..

Маруççă (*хытă*) Ой!..

Саљљи. Ех, Филитснаттă!... (*Маруççă Саљљи сине тайăнат*). Маруççă, мен пулђĕ сана? (*Укесрен тытат*).

Маруççă Ах, Стаççик!... (*Саљљине ыталат*).

Саљљи (*Маруççăран вĕççренсе*). Маруççă, мĕн пулђĕ сана? Мĕн ухмахланатăн есĕ?

Маруççă (*кайса ўкме тăрат*). Ой, ой, ой!.

Саљљи (*пырса тытат*). Мĕн пулђĕ, Маруççă, мĕн, вар ыратат-и?

Маруç (*Саљљийе сирсе*). Кай, кай ман çумран, ан асаплантар мана.

Саљљи. Нимĕн те асаплантармастăп. (*Йарат*). Маруççă, кала, мĕн пулђе сана? (*Маруççă патне пыма тарат*).

Маруççă. Ан кил тархасшăн. Епе сана кураймастăп?... епĕ сана паллаймастăп та.

Саљљи (*айаккалла*). Те тытса пăрахрĕ ĕнгĕ-куна... Мĕн пулђĕши? Тухтăр патне свонит тăвас пулĕ.

Маруç а (*кĕсйинтљсн сăмса тутри каларат, сăмса тутрине пĕрле пĕр хут кăларса ўкерет*). Ах!. ах!.. (*пусне тутарна тытат*).

Саљљи (*нимĕн тăча антăраса*). Маруççă!..

Маруççă.-Кам есе?

Саљљи. Епĕ.вĕг. Маруççă, Никколайĕв. (*Маруççăна тытат*).

Маруççă. Никколайĕв, тархасшăн ан асаплангар есĕ мана.

Саљљи. Епĕ хам та куратăп есĕ асапланнине, халех пољнитсăна чеçме лаша кўлтерĕп.

Маруççă. Ах, Стаççик... (*Саљљи çине тайăнат*)

Саљљи. Халех, халех, Маруççă. Çав тери хыт ыратат пулсан та ђăг ентĕ, Маруççă. Анђах мĕнле ђир-ха санăн вăл?

Маруççа. Ой, ой, ой!.. (*пуçне вилнĕ çын пек капалла йарат. Саљљи тытса тăрат*).

Саљљи. Çакăнта выртарам-ха, тен, кăшт тăрсан иртсе кайĕ (*выртарат*.) Ђасрах тухтăр пагне свонит тăвас пуљ. атту вилсе те кайĕ, пĕрте пер вилсен... ну арăм пĕтерет вара. (*Трупкăна илсе*) Ђентраљнăй!.. Ђентраљнăй, тфу, шуйттан пусĕсем, сывăраççĕ шголĕ. Ман кунта çын вилет. (*Çилленнипе хăвăрт утса çўрет*). Сасартăк арăм килсе кĕрсен, нийепле Маруççă ђирленине ененес çук, пур пĕрех ĕнтĕ кĕвĕçет. Ах, шуйтган илесшĕ! (*Çўресен-çуресен телефона силенсе çавăрат*). Ђентраљнăй... Ђентраљнăй! Дайте пожалуйста три тридцать три, двадцать три... З нято! Ах, ђорт воçми! Кайса лаша кўлме калас хĕвăртрах (*кайма тăрат*).

Маруççă (*йăпăлтатса*). Стаççик.

Саљљи (*хĕрхеннĕ сасăпа*). Мĕн, Маруççă?

Маруççă. Çук, лаша кўлме кирлĕ мар. Епĕ сывалма пуçларăм.

Саљљи (*çилленерех*). Йулашки вăхăтра есĕ пĕтĕмпех тарахтарса çитертĕн мана.

Маруççă (*шорт сикее тăрса*). Асатăр мана. Епĕ сирĕн пек арçынсем патĕнђе ларма пултараймастăп.

Саљљи. Мĕн есĕ апла калатăн?

Маруççă. Ухмах есĕ, урăх, нимĕн те мар.

Саљљи. Тавтапуç... анђах мĕншĕн?

Маруççă. Ну, сыва пул! (*Алăк патне çитсен, çаврăнса*). Ах, йепле тĕлĕнмелле арçын! А?.. (*Кайат*).

Саљљи. Ну-и-ну! Кун пек ђирпе аптракан хĕрарăма нихçан та курман епĕ. Вăт çавăн пек хĕре кађђа ил, пĕтĕмпех пĕтес пулат унпа. Макаçăна кирек мĕн илме кайсан, ђеретре тăнă ђухне сасартăк çавăн пек тытса пăрахсан... вот ăна килте кĕтсе лар вара, ун пек хĕрарăмпа пуp пĕрех выçса вилес пулат. (*Маруççă ўкерсе хăвар нă хута илсе*). Ку мĕнле йапала?... (*вулат*). „Директору театра. Я гр-ка Супостатова Мария заявлени... прошу принять меня в труппу... в качестве актрисы, т. к. я это от души люблю. К сему — Супостатова Мария". Так... Тĕлĕнмелле, тĕлĕнмелле. Пирĕн ђăваш артисĕсем сахал пирки пурте кунта килсе тарăнасшăн. Вĕсемшĕн пулсан театтăр пур килле мар елементсене те пухат, теççĕ пуљ. Çук, пулаймĕ. Çак кашни кун вырăнтан вырăна куçса çўрекенсем, пуп хĕрĕсем сайаьлени пани мана ытла та кўрентерет. Çук, пирĕн пата ђасах лекеймĕн. Епе сана ĕлĕк шкулта вĕреннĕ ђухнех есĕ мĕнлине сиснĕ. (*Аса илсе*). Ăхă-ă! Вон мĕншĕн ман çумра унăн ађашланмалла пулнă. Унăн пирĕн пата ĕçлеми кĕрес шухăш пулнă, çулне уçасшăн... Тăнлантăм. Вăл сывă мар пулман. Вăл мана илĕртсе хăйĕн майлă çаварасшăн пулнă, кашкар сурăх тирне пĕркенесшен"... ăхă... Ну паçăр ђирлĕ маррине пĕлнĕ пулсан, кунтан тапсах кăларса йанă пулăттăм.

Сĕрне (*Саљљине*). Ну, Стаççĕнка, тутаня хĕретмелли илтĕн-и?

Саљљи. Есĕ килте çав красасем çинђен асăнатни?

Сĕрне. Илсе памастăн та?

Саљљи. Çитет ухмахланма.

Сĕрне. Илсе памастăн.... та?...

Саљљи. Конешнă, илместĕп.

Сĕрне. Ну, апла пирĕн çулсем уйăрлаççĕ. (*Айăкалла кайса тăрат*).

Саљљи (*айăкалла*). Пер виç сехетрен иртет пуљ, те-ха (*Сĕрне патне пырса*). Оља!..

Сĕрне Кай, кай ан çыпăç! Ан кил ман çывăха.

Саљљи (*айакалла*). Ех, çакна та çавăрмасан, мĕнле актор пулăп вара епĕ. (*Хуллен хысне пырса тарат те, хулпуççи урлă йăвашшăн калат*) Оља!.. ђунăм!.. Есĕ те ман çине çав тери çилленме пултартăн-и? Тархасшăн каçар. Хăвăнпа пĕрле пурăнакан çынна та, пĕр ст-сенă çинђе ĕçлекен мăшаруна та каçармастăн-и, Оља!..

Сĕрне (*хуллен кулат*). Лăх-лăх-лăх!..

Саљљи. Оља, епĕ сана çилленĕ тесе, есĕ çилленмен иккен?

Сĕрне. Мĕншĕн ман çилленес?

Саљљи. Çилленмен пулсан, мĕншĕн çав терийех тархаслаттаратăн? Фу гр тухсах кайрĕ.

Сĕрне Ех, ты... Стаççĕк... хаљ мĕнле карттинă выљђарăмăр, ăнланган-и?

Саљљи (*кăшт шухăшласа*). Тфу, ђорт! Алакĕр пйесси çинђен-и?

Сĕрне. Çавă.

Салъѣи (*выъѣакаласа*). Ых, ты, ѣорт! (*Тытса ыталат*).

Сĕрне. Ну-ну-ну!..

Салъѣи. Мĕн тата Алакĕр пйессине выъѣас тетĕн-им? Ну, тавай. Ех, Анка! (*Сĕрнене ыталаса тъуп тăват. Çав вăхатра Римă кĕрет*).

Римă. Страс-с-с-с-с-с... (*айăкалла пăрăнат*)... те. (*Салъѣипе Сĕрне хăвăрт уйăрлаççĕ*).

Салъѣи. А-а, Римăѣкă? Сторовă. (*Алă тытат*). Ак ку (*Сĕрнеçине кăтартса*) санăн инкӳ пулат. Паллашăр (*Рима çине кăтартса*). Ак ку ман йăмăк.

Римă. Сторовă, апла пулсан, инке!

Сĕрне. Сторовă, сторовă, Римăѣкă!

Салъѣи. Епĕр куита инкӳпе репетитси турăмăр.

Сĕрне. Алакĕр пйесси çинѣси... есĕ Алакĕр пйессине пĕлетĕн пулĕ вĕт.

Римă. Пĕлетĕп.

Сĕрне. Есĕ-и-ха, кăвакарѣăнăм, „инкене пысăк салам" тесе çыраканни?

Римă. Епĕ.

Сĕрне. Ну-ву, ылттăнăм, айта лар. (*Малалла çĕклесех кайса лартат*).

Салъѣи. Вот, вот, çапла ăна. Ха-ха! Есĕ, Римăѣкă, ан хăра.

Римă Çук епĕ хăрамастăп. Епĕ пионерккă вĕт.

Сĕрне. Çапла кирлĕ те, ну, есĕ пиѣѣӳпе калаçса лар, епĕ сăмавар ăшăтам. (*кайат*).

Салъѣи. Ну, Римăѣкă, инке мĕнле пек туйăнат?

Римă. Халех нимĕн калама та пултараймастăп. Те правый уклонист, те левый.

Салъѣи. Уп çинѣен мар, епĕ кăмăлĕ çинѣен калатăп, мĕнле сана кăмăла кайат-и? Епĕ авланура пысăк йăнăш туман-и?

Римă. Пионерсен линипе пăхсан—мешѣенлĕх кăшт палăрат. Опываттĕлски йенѣен пăхсан...

Салъѣи. Мĕнле-ха есĕ çынна пĕр минут хушшинѣех мешѣенлĕх палăрат тесе калама пултаратăн. Унăн çамки çине çырман пулĕ вĕт?

Римă. Çамки çине мар, тути çине çырнă.

Салъѣи. А-а шыраса тупрĕ.

Римă. Мĕншĕн пионерккă тетĕн.

Салъѣи. Ха-ха-ха!..

Римă. Епĕр вăл ыйтăва пионерсен пуххинѣе такçанах сӳтсе йавнă.

Салъѣи. Тата мĕн?

Римă. Тата-и? Ну... ну-ă-ă!.. çук, урăх нимĕнле вопрос та пулман.

Салъѣи. Ну, йурат, епĕ санпа килĕшетĕп. Мешѣенленесси кашт пулѣе-ха, анѣах епĕ ăна çине тăрсах пăрахтаратăп. Есĕ пĕѣѣенех-и? Çуран-и, лашапа-и?

Римă. Ух-ти!.. Епĕ аттепе çинѣен мансах кайнă.

Саљљи. Атте?

Римă. Атте çав. Епĕ сирĕн патра кăшт каниккул вăхăтĕнђе пурăнас терĕм, вăл мана леçме килђĕ.

Саљљи. Ну? Ăçта вăл? Ма пўрте кĕмест?

Римă. Лашине тăварат пуљ-ха.

Саљљи. Ма есĕ паçăрах каламарăн, лашине тăварма хамăн тухмаллађђĕ. (*Тухма тарат. Ашшĕ хирĕç кĕрет*).

Саљљи. Ну, вот, атте те çитрĕ.

Ник. Ник. Килсе курас терĕм ха перре. Хам пĕђђен пулсан тĕлне те пĕлес çукђĕ те... Римă пĕлнипе çех (*хыпăнса пĕмерсе*). Ну, мĕнле сывлатăр? (*Алă парат*).

Саљљи. Ниђђево, пурăнкалатпăр-ха (*Сĕрнене*). Ођă, сăмавар ђас пулат-и?

Сĕрне. Халех, хатĕрлетĕп. (*Керет те, сăмаварне лартат*). А-а, атте килнĕ, лайăх пурнатăр и?

Ник. Ник. Пурăнкалатпăр йерипен. Пурте сывах.

Римă. Пер кун епĕ, сывă мар пулнăђђис.

Пурте. Ха-ха-ха!

Сĕрне. Хал: сывах пуљ?

Римă. Хаљ ыратмаст.

Сĕрне. Есĕ кашăксем илсе кил-ха кухђăран. (*Хай шкапран стаканоем илсе лартат*).

Римă. Йурат. (*Тухат*).

Саљљи. Тавай лар, атте!

Ник. Ник. Манăн ĕçесех те килмест те. (*Ларат*). Мĕнле ара, ывалăм, епĕ ђас-ђасах килсе çўременнипе есĕр ăçта слушит тунине те тĕппипех пĕлместĕп, есĕ çав... хаљ те „артист" текеннинђех пурăнагнии? (*Ђухтарaççĕ*).

Саљљи. Çавăнтах арăмпа иксĕмĕр те, театтăргах ĕçлетпĕр.

Н. Никол. Епĕ сана тахçанах пĕр сăмах каласшăнђђĕ-те...

Саљљи. Мĕн апла? Кала.

Н. Ник. Турра тархаслана пек ыйтатăп санран, ывăлăм, мĕнле те пулин пăрахăха есĕ çав „артист" тенĕ йапалана. Пур йал йышран та аван мар ĕнтĕ. Сана паллакан хăшпĕр стариксем çапла калакансем те пур: Мĕнле-ха çав сирĕн Стаçка çав тери ырă кăмăллă çын театтăрта артисра пурăнат, теççĕ. Михал Хватейђђă калат: артист тенинђе унта ырă çынах пуранмаст пуљ?—тет. Вот епĕ ратах вĕсене тавăрса калăттăм, мĕнле каламаллине хам та пĕлейместĕп. Есĕ мана нерех хуђђен театтăр вал мен тума кирлĕ йапалине ăнлантарса пар-ха хăçан та пулсан. Атто Михал Хватейђђă пеккисем сире тем вырăнне шутласа мăшкăлаççĕ.

Саљљи. Михал Хватейђђă пек кулаксем йаланах çавăн пек вĕсем, есĕ вĕсен халаппине ан итле. Есĕ вĕсене театтăр мен иккене анлантарас тесессĕн те сана итлес çук, вĕсен ђухăнсенђен мăшкăлас шўхăш çех, есĕ Михал Хватейђђăпа нихçан та ан туслаш, вăл пирĕн çын мар.

Н. Ник. Есĕ çапах та мен ыйтăва ответ памарăн

Саљљи. А-а... халех... театтăр вăл... нимрен малтан театтăр ĕçне çак йенђен пăхса пахаламалла. Театтăра епĕр клас кĕрешĕвенђи вăйлă орутисенђен пĕри, тетпĕр. Мĕншĕн? Мĕншĕн тесессĕн—вăл, ытти искуствăсемпе пĕрлех, класлă сатађсене пăхăнат, вăл опђăллахăн пĕр-пĕр сийĕн сатађђисене пурнăçа кĕртме пулăшат.

Н. Ник. Ытти ĕçсем çинђен калаçнă ђухнехи пекех, улпут-хуçасен хăйсен, ĕççыннисен хăйсен театтăрĕ тесшĕн-и есĕ?

Саљљи. Тĕрĕс!.. Тĕрĕс!.. Театтăр хăйĕн ăрасна мелĕсемпе тĕрлĕ сăйсен тĕрлĕ шухăшĕсене, ĕçĕсене вĕсен сатађђисене уççăнах хире-хирĕç куç умнĕ кăларса тăратат те, куракансене, ну... тăшмансен йурăхсăр шухăшсене, киревсĕр ĕçсене хирĕç мопилисатсилет.

Н. Ник. Пур театтăр та çавах пулĕ ĕнтĕ вăл?

Саљљи. Тĕппиперех пăхсассăн—пурте çавах, анђах тĕрлĕ майсемпе. Хăшĕсем—клас кĕрешĕвне витсе хурасшăн та хăтланаççĕ. Куракансен клас сисĕмлĕхне çывăратса йарасшăн... Сăмахран: рапођђисене кăтартаççĕ пулсассăн, рапођђисен сисĕмлĕхне... Анђах, апла пулсассăн та, вĕсем клас ĕçнех тăваççĕ... Ђиркӳ çинђен сана каланăђђĕ. Ăна астăватăн пулĕ. Улпут-хуçасем кунта та çавнашкалах ђейе ĕçлеççĕ.

Н. Ник. Пирĕн халђхи театтăр рапођђисен, ĕççыннисен ĕçне туса пымалла-и?

Саљљи. Тĕрĕс. Совет театтăрĕ—клас тăшманĕсене стсенă урлă тăрă шыв çине кăларакан, вĕсенĕ хирĕç çапăçса çĕнтерсе илнĕ ӳсĕмсене кăтартакан, театтăр, вăл—сотсиалисăмла пурнăç тунă çĕрте, халăха çутта кăларас çĕрте те пысăк оруги пулса тăрат.

Н. Ник. Театтăр ĕçĕ, апла, çак вăхăтра та питĕ кирлĕ йапаласенђен пĕри пулса тăрат иккен.

Саљљи. Çапла çав, атте, çапла.

Н. Ник. Пирĕн йалта Михал Хватейђђă каланă тăрăххăн хăшпĕр стариксем театтăра ăна... хĕрарăмсем хушшинђе калама та аплах мар та... (*Саљђийа хăлхаран калат*).

Саљљи. Ну?

Римă. Михал Хватейђђă вăл кулакла пăхат.

Н. Ник. Есĕ ан шарла-ха, Станислав калатăр. (*Саљђиа*) Апла есĕ Михал Хватейђђăпа калаçма та хушмастăн?

Саљљи. Конешнă, кирлĕ мар. Вĕсем хăйсен танатине çавăрса кӳртеççĕ сирĕн пек стариксене, вара хăйсен туткипе ташлаттараççĕ. Ăнлантăн-и?

Н. Ник. Халђ ĕнтĕ тĕппипех çавăрса илтĕм.

Саљљи. Ну, вот, питĕ аван. Есе, атте, пайан васкамастăн пулсан, кĕçĕрлĕхе кунтах çывăр-ха.

Н. Никол. Çĕр выртсах кайас-и?

Сĕрне. Пĕрер çĕр вырт ĕнтĕ.

Н. Никол. Епĕ хам пурăнкалăп та, лаша апађĕ хурса килменçке.

Салдьи. Лаша апаӑёшён кулӑланмалли çук, утине те, сёллине те тупăпăр. Сана кĕçĕр хамăрпа пĕрле театтăра илсе кайар.

Н. Ник. (*кулкаласа*). Кайӑӑĕ, ан калаç. 65 çула çывхартăм ĕнтĕ, халиӑӑен ун пек çĕре ура йарса пусманпа... Маншăнах, ун пек çĕрте укçа тăкса çӳремесен те йурĕ.

Римă. Кай, кай, атте, тен есĕ те искуствăна маркçисла тĕрĕс ăнланапуçлăн.

Салдьи (*ашшене*). Унта епĕр сана укçасăрах кӳртсе кăтартăпăр, çитменнине кĕçĕр тата, хамăр выдьатпăр, ӑăвашла.

Н. Ник. Ну, есĕр выдьаттăр пулсан пырса курас еппин мĕн хăтланнине, кайран йала кайсан стариксене каласа ăнлантарăп.

Римă. У-у! Сана ун ӑухне пропакантиса кӳртетпĕр вара.

Н. Никол. Есĕ, Римă, ан шарла-ха.

Салдьи. Акă мĕн, Римă, есĕ аттене кăç пулиӑӑен муçейе илсе-кайса кăтарт-ха.

Римă. Халех, халех. Епĕ каçӑен ăçта кайасши тесе лараттăмӑĕ. Ну, вот, айта, атте, тăхăн карттусна. (*Илсе парат*). Ӑăваш тĕп муçейне илсе кайса кăтартам, кайран, тен, „научный работник" пулăн.

Никколайӑӑă. Ек-кей çак, Римă шӳт тăвассипехçке вара... Ну айта, кайса курар еппин. (*Кайаççĕ*).

Сĕрне. Илтрĕн-и ĕнтĕ, Станислав, йалти çынсем искуствăна мĕнле ăнланнине? Илтрĕн-и вĕсем пире мĕн выранне хунине? Атте сана хăлхаран шăппăн каларĕ пулсан та, епĕ ăнлантăм вăл мĕн каланине. Вĕсем пире „проститутка" выранне шутлаççĕ, илтетни „проститутка"... (*пауса*) иртнĕ петитневкă йулашки кунĕнӑе пĕр шкул çук йала, Пĕӑик Анаӑа кулӑтвыласкăна кайсан колхос йухăмĕпе искуствă çинӑен каласа пама тăтăмăр та, хăшĕсем пĕр сăмах та итлесшĕн мар. „Мĕн вăл артиссен сăмаххине итлемелли пур, ырăрах çынсем килсе каласан татах хут, пур „ахăрма" пуçтаранса килнĕ те" тесе кăшкăрат пĕр карӑăк. (*Айак ыла пĕр утăм утса*). Мĕн шуйтанĕ тума епĕ çак артиса вĕрентĕм-ха, а? Мĕншĕн епĕ урăх шкула каймарăм. Акă хамăн йулташсенех илер: хăшĕ уӑителнитсăра.., хăшĕ ВУС-ра вĕренеççĕ. Епĕ, епĕ çак искуствăна йуратса çаканта килсе пуçа ӑикрĕм, кам ухмахĕ хушрĕ пулӑ мана, ну кам ухмахĕ?.. (*Салдьина кăшкăрса*). Есĕ, пĕгĕмпех есĕ айăплă çак ĕçре. Сан сăмаххусене итлесе сан хыççăн кайман пулсассăн, хамăн йулташсенӑен уйăрăлман пулăттăм.

Салдьи (*кулараx*). Ех, Олӑă! Есĕ ӑăнах йулашки вăхăтра ухмаха туха пуçларăн иккен. Неушели ĕнтĕ саншăн пулсан театтăр киревсĕр йапала? Неушели есĕ те хамăр йалти кулак танатине кĕрсе ӳкнĕ стариксем пекех çак тарана çитсе те театтăр мĕн иккенне уйăрса илеймен-ха?

Сĕрне. Епĕр, артиссем, ăна пĕлетпĕр, анӑах йалти халăх пĕтĕмпех урăхла ăнланат.

Салдьи (*иллесе*). Йалти халăх... Çав 200—300 çын çинӑен пĕр какой нипут поткулаӑнĕк матки арттиссене „ахăрмасем" тенĕ те,

çавăнтан сăмсасене усса йанă, картаран кутăн çакăнма хатĕр. Ех, вы!.. вĕрнипех кайса ÿкекен йапаласем. Пирĕн йалти трамкрушоксем стсенă йĕркине тĕплĕн пĕлменни пйессăсене клас сисĕмĕпеле тĕплĕн шăл витĕр ђăмласа кăларманни йапăх выђани, питсене хăрăмсемпе сĕрсе стсенă çине тухни пурте, пурте, искуствăна урăх майлă ăнланма пулăшаççĕ, çпектаккăле урăх майлă ăнлантарса клас тăшманĕсене усă кÿреççĕ. Çак ĕçсене пуҏне те тÿрлетес тесессĕн, пирĕн çамрăк артиссен пĕр ывăнмасăр ĕçлемелле. Çаксене тума пирĕн вăй çитмест пулсан, вăйне çитерес пулат, вара епĕр стсенă урлă колхос йухăмне те ÿстерĕпĕр, клас тăшманне пĕтерсе йалти ђухăнпа вăтам хресђене трактăр çине утлантарса лартăпăр. Нимĕн пуçа ђиксе лармалли те çук унта. Хăшпĕр стариксем пире çын вырăнне хумаççĕ пулсан, ку ĕçре епĕр хамăр айăплă, вăл пĕтĕмпех хамăр йалпа сахал çыхăну тытнинђен килет. Ну, мĕн пуçна ђиксе ларатăн? Пĕлместним есĕ, театтăр вăл ĕçхалăхĕн шкулĕ.

Сĕрне. Çапла. „Ĕçхалăхĕн шкулĕ".

Салђи. Хутошĕствăллă проппакантăпа акитатси трипунĕ çинђе пĕтĕм вăйа хурса ĕçлесе, малалла та массăсене сотсиалисăмшăн кĕрешме мопилисатсилесе пыратпăр тесе, кÿр аллуна! (*Аллине тăсат*).

Сĕрне. Ме, тыт! (*Аллине парат*).

Салђи. Ну, вот, çапла калаç. (*Тытнă аллипе Сĕрнене хăйĕн патне туртса илет те, ђуп тăват, çав вăхăтра Римă кĕрет*).

Римă. Каллех репетитси. (*Салђипе Сĕрне хăвăрт уйăрлаççĕ*). Аттен туйи манса йулнă. (*Тупа илсе тухса каиат. Салђипе Сĕрне пĕр перин çине пăхса кулаççĕ.*)

Туршав.

2-МĔШ ПАЙĔ. 1-мĕш карттинă.

Театтăрта репетитси. Арттиссем пурте стсенă çинђе. Решиççор пуплĕккă ларакан çĕрте. Решиççора пулăшаканни стсенă çинђе хыçалта хут татĕк тытнă, кускаласа çÿрет. 1-мĕш планра, сылтăмра пĕр пĕђĕк пÿлĕм кримированђнăй пулмалла, пĕр сĕтел, пукан, стсенă çумĕнђе пысăкрах тĕкĕр. Ђарлав усăлиђђен йурлани илтĕнет. Колхосçнĕксен ĕç йурриĕ (кĕрик мĕнле йурă йурласан та йурат). Йурланă хăхăтра ђаршав усăлат.

Решиççор—Иван Степанђă (*сардлса ларакансkер, пукан çинђен сиксе тăрса*). Ни к ђорту не стойăт." Пйессă вăйне çухататтăр çех. Пйессăна кирек хăçан та çирĕппĕн пĕтерес пулат, штопă пăхса ларакансем, театтăрта ларнине манса, сирĕнпе пĕрле выђама пуçлађђăр. Йулташсем, епĕр хамăр выђакан рођсене клас куçĕпе пăхса сăнлас тĕлĕшпе нађар ĕçлетпĕр. Тиалектĕкпа материалисăм меттăтне çавăрса илес тĕлĕшпе, автăрăн тĕп шухăшпетарăнăн кăтартас тĕлĕшпе, пирĕн, йулташсем, ытларах ĕçлемелле. Вĕт ку çитменлĕх çинђен пĕр кун хутошĕственнă-политтиђĕскисовет та çивĕђђĕн кăтартса хăварђĕ. Вот çакăн пек массăллă стсенăсем, автăр револђутсиллĕ çĕкленÿ, вăй-хастарлăх кăтартас-

шăн пулнă пулсан, хађ есĕр йурланă пек áран-аран йурласан, вăл пйесăнне хутошĕствă йенђен вăйне çухатни çех мар, пйессăн итеолокине те çухатни пулса тăрат. Пйессăри вăйлă вырăнсене, халăхăн настройенине хăпартакан вырăнсене аран аран туни вăл клас сисĕмлĕхне шута илменни, стсенă урлă клас тăшманне çĕнтерейменни пулса тăрат. Çавăнпа та çак пйессăра, колхоçнĕксем ĕç патне хавассăн йурласа тухнине кăтартас тетпĕр пулсан, ăна ђăнах та настройенине хăпартмалла. Нук-кă çирĕпрехххĕн.

(*Артиссем хастарлăн йурласа стсенă çинђен айаккалла тухса кайаççĕ.*)

Ив. Çтеп. Пайан çакăнпа пĕтерĕпĕр. (*Ађасем стсенă хыçнелле кайсанах, хăшĕ керешет, хăшĕ пирус туртат, хăшĕ сиккелет, хăшĕ çаплах йурлат. Ив. Çтеппанђ стсена çине кайса.*) Нук-кă, йулташсем, пуçтарнăр-ха. (*Халĕ кăмăллăн калаçат*).

Пуртє. Мєн тумалла, Иван Çтеппанђ. (*Пуртє Ив. Çтеппанђăна йĕри таврă пуçтарнаççĕ*).

Ив. Çтеппанђ. Акă мен, ађасем, епĕ пайан пĕр хут илтĕм, питĕ савăнăçлă хут.

Пуртє. Ăçтан? Мĕнле хут? Кам çырат?

Ив. Çтеп. (*кăларса*) Акă пăхăр (*парат*). Хамăр потшефнăй колхос, пире тыр вырмалли машшин илсе панăшăн тав-тăват, тата пире çак кунсенђе кăçал пĕрер çпектаккăђ лартса пама ђĕнеççĕ. Ну, мĕнле, йулташсем, кайатпăр пулĕ вĕт?

Пуртє. Кайас, кайас.

Лайăххина. Кайасси, кайас та-ха, анђах мĕнле пйессăпа кайас, пирĕн йалти стсенă вађђи пйесси те çук.

Саљљи. Ман пĕр пйессă пур.

Лайăххина. Пйесси мĕн çинђен калат? Хађхи пурнăçа кăшт та пулин çакланат-и?

Ђилимăв. Епĕ вуларăм вăл пйессăна. У-у... пĕтĕм 120 прођђăнĕпех йурăхлă, çĕнĕ йухăмлă пйессă.

Вуслан. Мĕнле пйесса?

Саљљи. Ара, есĕ илсе кайни.

Вуслан. Мĕнле пйесса? Неснай, епĕ санран нихçан та пйессă илмен.

Саљљи. Мĕнле илмен?

Вуслан. Ах та, астурăм. Вот што, Станислав Никколайĕвиђ, епĕ сан умăнта питĕ айаплă çын, вăл пйессăна епĕ еан патран киле таврăннă ђухнех çухатрăм.

Саљљи. Çухатрăм? Ну што ты, йулташ Вуслан. Йеçли ман ђерновик пулман пулсан ман пйессă ĕмĕрлĕхе пĕтеђђĕ вĕт?

Алтанăв. Ђерновик пур-и?

Саљљи. Пур.

Алтанăв. Апла пулсан макăрмаллийех çук.

Петуçкин (*Вуслана*). Ну, Вуслан, сирĕн йала кайатпăр ентĕ, есĕ Толиккăвăсем вĕт?

Вуслан. Маншăн пулсан, не стойăт.

Петуçкин. Ара потшефнăй йал, вăл сирĕн йал вĕт?

Вуслан. Çапла. Пирĕн йал.

Петуçкин. Кайатпăр пулĕ. Мĕн ара есĕ пайан пуçна уснă.

Вуслан. Ну... ну... маншăн мĕн. . йурат... анђах çанталăк питех аван мар. Пире ирĕксĕр хăвалакан çук вĕт. Тата мĕншĕн-ха опесатĕљнă пирĕн йала?.. Нумай пулмаст вĕт унта кайса килни.

Ђилимăв. Кайса килнĕ те вĕç...

Вуслан. Çитменнине тата çавăн пек пысăк пĭессăпа. Йалти стсенă çинђе кĕпер мĕнле тăвас тетĕр-ха есĕр?

Ђилимăв. Ниђђево, тăватпăр.

Вуслан. Саљљи пĭессисĕр урăх пĭессă çук-и мĕн?

Ђилимăв. Пĭесси çук мар, куна хаљ çырнăçке-ха.

Вуслан. Мĕн, потшефнăй колхос тесе, кашни ернерех кайаймăпăр ĕнтĕ. Пирĕн пĕр йала çех мар вĕт тухса çӳремелле.

Ив. Çтеп. Вăхăт çитсен пур йалсене те тухса çӳрĕпĕр, анђах хаљ пирĕн пата хамăр колхосран ђĕнӳ хуђĕ килнĕ пулсан, кунта кайса килмеллех.

Саљљи. Конешнă, каймалла.

Вуслан. Кайас текене кам ђарат, йара парăр.

Саљђи. Çакан пек икĕ вĕçлĕ çынсем кирлĕ мар пирĕн хушăра. (*Вуслана*) „Кашни ернерех каймалла мар вĕт". Епĕ калатăп кайас пулат. Кирлĕ пулсан ернере çех мар, кашни виç кунтах кайас пулат.

Пурте. Тĕрĕс. Кайас пулат. Çак ернерех каймалла тăвас.

Саљђи. Епĕр, йулташсем, çанталăк мĕнлине пăхса ларма мешђенсем мар вĕт. Епĕр пурте йалтан пухăннă, пурте хресђен ађисем. Епĕр вутра та пиçнĕ, сивĕре те хытнă.

Алтанăв. Йулташсем, Саљђи тĕрĕс калат, епĕр кунта çанталăка кĕтсе ларнипе нумайах колхоçнĕксемпе çыхăну тытаймăпăр. Пайан çанталăк усал пулсан, ыран аван пулма пултарат. Çанталăк çинђен калаçма та кирлĕ мар.

Вуслан. Ну, епĕ çав терийех хирĕç мар вĕт, каймаллах пулсан кайас.

Лайăххина. Укçа парсан ма кайас мар?

Саљђи. Укçа? Çавăнта пĕр каçлăх кайнăшăн-и?

Лайăххина. Мĕн есĕр выçă вĕлерес тетĕр-и мĕн?

Ив. Çтеп. Кунта, йулташсем, тем, хаљхи пек каласан, рвађĕствă шăрши кĕрет.

Вуслан (*айăкалла*). Ну, тупăнђĕ тепĕр утарнĕк, сăмсуна шăл.

Алтанăв. Кунта пирĕн пуху та мар та, анђах ман сире пĕр сăмах калас килет, сăмахĕ ĕç çинђен, пурне те кирлĕ йапала.

Ив Çтеп. Кала, кала.

Алтанăв. Йулташсем, пĕлетпĕр, пирĕн театтăр урапи шăлĕсене хуçма тăрăшаканнисем сисĕнкелеççĕ. Епĕр хамăр та сисместпĕр, хамăр хушăрах, такам пире пăтратат, такам хирĕçтерет, такам пире пĕр пĕринђен сивĕтет. Епĕ нумайранпах çавсене сăнаса пыратăп та, анђах йулашкинђен çапах та, çав тери хирĕçте-

рекен шăрша хăш кăмакаран тухнине ăнланса илме пуçларăм. Çавăн пек çынсем пирĕн утарнĕксем хушшинче пулмалла мар.

Саҫҫи. Кам ун пекки пирĕн труппăра?

Алтанăв. Пирĕн труппăра пĕтĕм ĕçе кайалла йама тăрăшаканни (*Вуслан çине кăтартса*) ак çак йулташ пулат.

Вуслан (*сиксе тăрса.*) Мĕншĕн? Мĕн пирки есĕ мана пĕтĕм йулташсем умĕнче намăса кĕртен? Хăçан епĕ коллектива хирĕç пытăм?

Алтанăв. Есĕ хуллен, ан шартлан, халех каласа парам, йулташ Вуслан сана, пире хирĕç пынине, пирĕн ĕçе хирĕç пынине, пайан çех мар куратпăр. Сан пирки нумай ĕçсем чаранса тăркаларĕç. Сăмахран, иртнĕ çура Куславккара, кам пирки афишшăсем çапăннăскер спектаккăл пулмарĕ? Сан пирки мар-и? Сан пирки. Есĕ пире ун чухне вар ыратат тесе суйса хваттерне пăрахса кайрăн та, хваттерне çитсенех санăн вар тўрленнĕ. Кĕсйене ерехсем чикрĕн те, йара патăн çапкаланчăк Маруççăпа Атăл леш йенне. Йулташсем, çак ĕç туни пулат-и? Çак вретиттăлствă мар-и? Пирĕн артиссен çапла ĕçлемелле и? а? Артиссен пур çĕрте те примерлă пулас пулат: стсенă çинче те, пурнăçра та.

Пурте. Правеҫна! Тĕрĕс!

Ив. Степ. Йулташ Алтанăв. Есĕ Вуслан çинчен тата мĕн те пулин пĕлместни? Тавай каласа пар.

Пурте. Кала, кала.

Алтанăв. Пĕлетĕп, татах пĕлетĕп, йулташсем, епĕ ĕнер пасара аш илме кайсассăн Вуслансен йенчи çынпа, унпа пĕрле çарта слушиг тунă çынпа калаçрăм. Вуслан вăл шур офитсер пулнă.

Пурте (*тĕлĕнсе*). Ну-у-у!.. Вот шуйтан!

Вуслан. Алтанăв пĕтĕмпех суйат, епĕ сире хам çуралнăранпах ăçта, хăш вырăнсенче пурăннине, веçех хут çинче кăтартса паратăп. Йулташ Алтанăва, çакăн пек çынсем умĕнчех кўрентернĕшĕн сута паратăп.

Алтанăв. Кам çинчен малтан парăпăр. Каласа пар-ха есĕ, Вуслан, и йулĕн 28-мĕшĕнче ăçта пулнă?

Вуслан. Кунта, ни сутра мар, ни КПУ-ра мар. Сирĕн умăрта ответ тытма шухăшламастăп, кирек ăçта пулнă пулам, сире ĕç çук.

Алтанăв. Ну, йурĕ, кайран калаçăпăр. Йулташсем, епĕ малтанхи сăмах çине тавăрнатăп, епĕр хамăра-хамăр утарнĕк йатне панă пулсан, çак Вуслан пек çынсене хамăр çул çинчен шăпăрпа шăлсах тасатмалла. Потшефнай йала кайса, спектаккăл лартса тата ытти ĕçсене те тума пулăшмалла.

Лайăххина. Кам ара пирĕн пуху пуçлăхĕ? Мана сăмах парăр-ха.

Ив. Степ. Пухăвăн пуçлăхĕ çук. Айта, кала

Лайăххина. Епĕр кунта хамăр колхоса кайасси çинчен калаçма пуçăннă пулсан, ман шутла Вуслан мĕнле çын пулни çинчен калаçма кирле те мар.

Ив. Степ. Ĕç çинчен калаç.

Лайăххина. Ку ĕç çинђен мар-и? Епĕ çпектаккăђ лартма кайас мар теместĕп вĕт. Вусланăн, кайас килмест пулсан, йултăр, çынна вăйпа ăçтан илсе кайан? Мĕн тăвас тетĕн, кашни çынăн харпăрхăй ăсĕ.

Саљђи. Пăрах-ха есĕ ухмахланма. Кунта аçу патĕнђе мар вĕт. Кунта ĕçре, çитменнине ху профсойус ђленĕ.

Лайăххина. Мĕн унта профсойус?

Саљђи. Ĕçлес пулат, йулташ Лайăххина.

Лайăххина. Ĕçлетпĕр!

Саљђи. Ну, ĕçленĕ ђух çапла калаçмаççĕ.

Ђилимăв. Мана калама парăр-ха. Есĕ, йулташ Лайăххинă лайăх пĕлетĕн пирĕн ĕçе мĕнле ĕçлемеллине, труппăра пĕр çын çех çук пулсан та, пĕтĕм ĕç ђаpăнса тăма пултарат. Ĕçлес килмест пулсан, тасалма та пултараççĕ.

Вуслан. Йулташсем, епĕ пĕрре те ĕçе ђарса тăрас теместĕп, каймалла пулсан кайăр, анђах кăшт ман пурнăç çинђен калаçнине илтсессĕн, манăн та хирĕç калас килет.

Ђилимăв. Çитет, айтăр саланар, 5 сехет çывхарса килет, 8-та çпектаккăђ пуçламалла.

Вуслан. Каласа пĕтерме парăр. Мана ђĕререн çĕçĕпе ђикеççĕ пулсан, ман нимĕн те шарламалла мар-и?

Ив. Степ. Халех калаçăпăр, йулташсем! Тавай еппин пĕђик пуху туса илĕпĕр.

Пурте. Тавай!

Ив. Степ. Пре̇çитиума кăнтитатсем парăр,

Ђилимăв. Пери есĕ ху, тепри Станислав.

Ив. Степ. Хирĕç çук-и?

Сасăсем. Çук.

Ив. Степ. Акторсен тсехăвăй пуххине уçăлнă шутлатăп. Кун йĕрки çинђе виçĕ ыйту. 1-мĕш—Потшефнăй йала кайасси. 2-мĕш Вуслан çинђен. 3-мĕш—Пирĕн труппăна кĕрес тесе сайавлени пани пур, çавна пăхса тухăпăр. Урăх никамăн та кăлармалли хушмалли çук?

Сасăсем. Çук.

Ив. Степ. Пуçларăмăр. 1-мĕш ыйту çинђен пайан самай калаçрăмăр. Сасăлатăп. Кам потшефнăй йала спектаккăђ лартма кайас тет, алăсене çĕклĕр. (*Пурте çĕклеççĕ*). Ку пулђĕ. 2-мĕш Вуслан çинђен сăмах хускатнă майăн, пирĕн хамăр йенђен пĕрик сăмах каласа, хамăр шухăшсене протоккол çине кӳртсе хăвармалла, унта ак çапла çырмалла. Ку ĕç çинђен Р. А. П. И. С. пухăвĕнђе кун йĕрки çине лартас тесе, çапла йурат-и?

Сасăсем. Йурат.

Ив. Степ. Кунта епĕр хамăр йенђен калаçма та пултаратпăр. Ну, Вуслан çинђен кам мĕн калас тет.

Петуçкин. Ман шухăшпа, Вуслана первайлăха выкăвăр парас.

Сĕрне Ман шухăшпа пĕтĕм ĕçе сут аллине парас.

Ив. Степ. Икĕ сĕнӳ. Хăшне йышăнас...

Сасăсем. Сĕрненне. Сута парас. Пирĕн ĕçсене срыват тунăшăн ответ тыттăр.

Ив. Степ. Сасăлатăп. Кам Вуслана çакăн пек ĕçсем тунăшăн, тата вăл мĕнле çын иккенне тĕпђесе пĕлес тесе, сута парас тет, аласене тăратар. (*Çĕклеççĕ*). Куна пĕтертĕмĕр. 3-мĕшĕ Супостаттăвăна труппăна илме йуралли-йураллă марри çинђен кам мĕн калас тет?

Ђилимăв. Мĕн калаçмалли пур ун çинђен. Пурте пĕлетпĕр вĕт, Маруççăна такам та паллат пулĕ.

Ив. Степ. Сасăлатăп. Кам çак Супостаттăвăна труппăна илмелле тет... (*Вуслан пĕтђенех астумасăр çĕкленĕ пек çĕклет те, кайалла хăвăрт антарат.*)

Салђђи. Нў, çав çĕлене илеттĕр пулсан, епĕ пайанах кунтан тарап.

Ив. Степ. Ну, кам мĕн калас тет. Епĕр хамăр шухăшсене протоккол çине кĕртсе тиректăра паҫа пултаратпăр, тиректăр пирĕнсĕр те илме пултарат, анђах вăл апла ĕçе пĕђђен тумаст, малтан есĕр пăхса тухăр тесе пађĕ вăл мана. Кам мĕнле претлошени парат?

Пурте. Кирлĕ мар вăл пуп хĕрĕ, пурте аван пĕлетпĕр вĕт ăна... кирлĕ мар. (*Шавлаççĕ*).

Ив. Степ. Кам çак Супосттатăвă Марийана труппăна илмелле тет, аласене çĕклĕр. (*Никам та çĕклемест*). Так илмелле мар, тетпĕр еппин.

Пурте. Кирлĕ мар, кирлĕ мар.

Ив. Степ. Йулташ Вуслан, кĕçĕр пĕр турткаланса тăмасăр çпектаккăђ выђђамалла. Пухăва хупатăп.

Ђаршав.

II-МĔШ ПАЙĔ. 2-мĕш карттинă.

(*Вуслан пĕтђенех стсенă варĕнтç тăрат. Салђи стсенă çинђе крим сĕрет*).

Вуслан. Так, ђаваланма пуçларĕç. Ну-у, нимех те тăвайрас çук. Ун пек маррисене куркаланă. (*Пауса*). Анђах пире тытаççĕ пулмалла. (*Çўлелле хăпарса кайат*).

Помреш. (*Рапотђисем теккоратси лартма тытăнаççĕ*). Çакăнтарах лартăр. (*Лартаççĕ*). Сукнине туртса çывăхартас. (*Сукно хыçала караççĕ*). Тайтĕ первăй свонок... (*Параççĕ*). Иван, тавай сĕтел, пукан. (*Иван сасси „халех“. Иван сĕтел илсе тухса ларат, тата пуканссм, сĕтелли çине çитти сарат, урайне ковер сарат. Рапотђисем çĕмĕрлеççĕ. Помошникпе Иван умлă хыçлă темиçе хут стсена урлă ђупса каçса кайаççĕ, кравап çĕклесе тухаççĕ. Вырăнне караççĕ*). Кун пек пулђĕ. Так. (*Стсенă лартса пĕтереççĕ. Вуслан стсенă варне тухат те, шухашласа тăрат. Вăл шуррисен охвитсерне сыђђат, тумне охвитсерле тумланнă. Питне сăрлакаланă.*)

Маруççă (*куллĕккăран кĕрет*). Сторовă, Çитăр Алексейĕвиђ.

Вуслан. Сторовă, Маруççă.

Маруççă. Мĕн есĕ питĕ сăнсăрланса кайнă?

Вуслан. Хуйхă.

Маруççă. Ну, мĕнле мана труппăна илеççи?

Вуслан. Илеççĕ.

Маруççă (*хĕпĕртесе*). Ой, апла пулсан пирĕн ĕç тухат!

Вуслан. Питех ан сик.

Маруççă. Мĕн, илмеççи вара?

Вуслан. Иксĕмĕре те илеççĕ, анђах кунта мар.

Маруççă. Ăçта?

Вуслан. Аçу театтăрне.

Маруççă. Мĕн, сисме пуçларĕç-и-мĕн?

Вуслан. Есĕ пĕлетни ман çине йепле тинĕс хумĕ сывхарат...

Маруççă. Мĕн?

Вуслан. Колхос прстçетаттĕлне вĕлерни çинђен Саљљи пйессă çырнă. Çав пйессăна пирĕн йала кайса выљљаса парас, теççĕ. Ех, пĕтрĕ пуç.

Маруççă. Вуслан!..

Вуслан. Епĕ шуррисен охвитсерĕ пулнине те пĕлнĕ. Ех, пĕтĕмпех сисе пуçларĕç!..

Маруççă. Саљљи, ăçтан илтсе çырнă пйессине?

Вуслан. Пĕлместĕп, анђах Алтанăв паçăр есĕ 28-мĕш ђислара ăçта пултăн тесе çатлаттарђĕ. Вăл ăçтан та пулин илтнĕ пулĕ. Иккĕн-виççĕн тунă ĕç кирек хăçан та халăх çине тухат вăл. Ка- ларăм вĕт епĕ ун ђухне ку ĕçе пĕђђен тăвас пулат тесе.

Маруççă. Мен тăвас тетĕн-ха ĕнтĕ, нĕтетĕн вĕт?

Вуслан. Ытла вĕрипех кайса ÿкес мар-ха, Маруççă. Йулашки минутђенех кĕрешес пулат. Кунта ĕç тухмаст пулсан, епĕ вĕсене пирĕн йала пырсан пурне те пуçĕсене çапса салататăп. Хамăр йалта пире майлă çынсем те тупăнĕç, анђах унђђен тĕрмене лекес мар. Ниђђево, Маруççă, вĕсем пире куçăн каçаççĕ пулсан, пирĕн те касас пулат, анђах хуллен, йавашшăн, тĕке майлă шăлас пулат, ăçта хирĕç шăлмалла пулсан пĕре те хĕрхенме кирлĕ мар. Есĕ, Маруççă, хĕрарăм, санăн йала кайсан хĕрарăмсем хушшинђе авантарах ĕçлес пулат. Епĕ май килнĕ таран йала кайассине ђарма тăрăшăп. Есĕ Саљљи патне кĕрсе мĕнле те пулин пирĕн майлă çавăрма тăрăш, асту пĕр кунхи пек ђирлесе ан кăтарт. Епĕ кримириватсă тăвам. (*Çухалат*).

Маруççă. Ку Станислава мĕнле çаврам-ши? (*Ретикуљне уçса тĕкĕр çине пăхса пусанат те, Саљљи патне кĕрет. Йавашшăн.*) Страствуйте, Стаçик! (*Саљљи пђĕнмест*). Сторовă, Стаçик!

Саљљи (*çаврăнса пăхса*). Сторовă, Маруççă.

Маруççă. Вот тăк мушик, хăй арттис тет, çапах та хĕрсене йышăнма пĕлмест.

Саљљи. Пĕлесех те килмест.

Маруççă. Мĕншĕн есĕ ман çине çавăн пекех çиленнĕ? (*Саљљи пђĕнмест, сăрласа ларат*). Стаçик!.. А Ста-çик... (*Чаувă*). Илтетни. Стаçик, епĕ сана пĕр новăç каласа парам.

Саҫҫи. Есӗ пӗр кунхи пек сывӑ мар пулса кӑтартас теместӗн-и?

Маруҫҫӑ Фи, йепле калаҫат, мушик так мушик.

Саҫҫи. Ӗҫлекен ҫынна ан ҫӑрмантар, кайма та пултаратӑн. Санпа ахӑрса ларма епӗ йаш ҫын мар, авланнӑ ҫын.

Маруҫҫӑ. Епӗ авланнисене пушшех йуратарах паратӑп.

Саҫҫи. Тухса кай!

Маруҫҫӑ. Ах, йепле тӗлӗнмелле арҫын.

Саҫҫи (*хыттӑн*). Тухса кай!

Маруҫҫӑ. (*Тутисене мӑрт-март тутарса тухат те, стеснӑ варне ҫитсен, кӑшт ҫаврӑнса тӑрат, унтан макӑрса стеснӑ хыҫнелле тухса кайат*).

Вуслан (*хыҫалтан стеснӑ ҫине тухса шухӑшласа тӑрат те унтан хӑвӑрт Саҫҫи патне кӗрет*). Станислав Николайӗвиҫ, есӗ манӑн ҫи сывӑх йулташҫӗ, пӗр пытармасӑр кала-ха, есӗ те манран сивӗнетни?

Саҫҫи. Елӗк епӗ сана тӗппипех пӗлмен ҫухне йулташ пулнӑ пуҫ, ӗҫре, епӗ санӑн йулташу мар.

Вуслан. Та-а, апла иккен... (*тухат*).

Ив. Степ. (*стеснӑ ҫине тухса*). Ниҫҫево, аван. (*Ҫухалат*).

Таҫӑ (*стеснӑ ҫине тухат те Саҫҫи упорнӑй алӑкне шаккат*). Йурат-и?

Саҫҫи. Йурат. Мӗн ыйтса тӑмалли пур?

Таҫӑ (*кӗрет*). Ак, сана ваҫҫи хӗрлӗ кӑмантирӑн френҫӗ.

Саҫҫи. Пит аван.

Таҫӑ. Акӑ картусӗ.

Саҫҫи. Йурат, йурат, спаҫҫипӑ.

Таҫӑ. Ку френҫне тӑхӑнса пӑхас пулаҫҫӗ, тен ҫухи тӑвӑр?

Саҫҫи. Халӗ епӗ сӑрланса пӗтеймен ха, алӑсем те вараланҫӑк.

Таҫӑ. Сана тата атӑ кирлӗ пулас.

Саҫҫи. Ҫук-ҫук, кирлӗ мар, атти манӑн урарийех пырат, епӗ йӗмне те килтенех тӑхӑнса килнӗ.

Таҫӑ. Аван, аван. Кун пек мана та канӑҫлӑ (*Ҫилимӑв сасси: Татйана, кунта кил-ха*). Халех пыратӑп. (*Тухат*).

Саҫҫи (*тӗкертен кӑшт айӑкрах кайса тӑрат те пӑхат*). Так, так, кӑшт усси кирлӗ пулат, тата шакла парик. (*Парикмахӗрс ҫӗнет*). Рыпакков, йулташ Рыпакков. (*Рыпакков сасси: А?*) Есӗ йерҫетни? (*Рыпакков сасси: Халех пыратӑп*). Ҫорт воҫми, кӗҫӗр ҫар ҫыннине выҫҫамалла-ха, военнӑй тесен епӗ питӗ йурататӑп.(*Утат*). Рас, тва, три... Рас, тва, три,.. (*Стеснӑ хыҫӗнҫе помреш сасси: Тайте 2-ой свонок: 2-мӗш свонок параҫҫӗ.*) Мат ҫеснайа, иккӗмӗш свонок! (*Френҫне хыпаланса тӑхӑнат*). Йулташ парикмахӗр, хӑвӑртрах.

Рыпакков (*кӗрет*). Станислав Никколайӗвиҫ, тархасшӑн васкарах лар-ха. Манӑн татах виҫӗ ҫын патне ҫитмелле.

Саҫҫи (*ларат*). Епӗ сана хыпалантаратӑп, есӗ мана!..

Рыпакков (*нарик тăхăнтартат*). Ик айăккинҫен тыт. (*Тытат*). Ҫапла (*лакпа ҫыпăҫтарат*). Тыт, пус хытăрах, авантарах ҫыпăҫтăр. (*Хут ҫине пăхса*). Сана мĕнле уссиҫҫĕ-ха?

Саҫҫи. Пĕҫиккĕ пулас.

Рыпакков. А-ха, „Саҫҫи пĕҫиккĕ усси". Халех усси туса йаратăп. (*Лак сĕрет*).

Саҫҫи. Фу, шуйттан лакĕ, сăмсана тавăрсах пăрахат.

Рыпакков. Тыт! Так, урăх нимĕн те кирлĕ мар пулас. (*Тухат*).

Саҫҫи. Риквиҫит хаҫ те алла памарĕҫ-ҫке?! Ей, Иван!!!

Иван (*пҫупса пырат*). На сана револҫвĕр, урăх нимĕн те ҫук пулас. (*Кайат*).

Саҫҫи. Урăх кирлĕ мар. (*Капурĕне наканне сĕтел ҫине хурат*). Йулташ Ҫилимăв, санăн туртмалли пур-и? (*Ҫилимăв сасси: Пур!*) (*Саҫҫи кайат*).

Вуслан (*стена ҫине кĕрет те, Саҫҫи кримироватсă тунă упорнăй папне йăпшăнса пырат. Хуллен алăкне уҫат. Никам та ҫуккине кура кĕрет те, йĕри тавра пăхкалат, сĕтел ҫинчи накана курат те илет*). А-хă, тăхта! Епĕ сана асăнгарăп. (*Накан ăшне пуҫĕ пҫиксе хурат*). Хаҫ ёнгĕ курăпăр, мĕн пулнине (*наканне вырăннех хурат те, йăпшăнса тухса кайат*).

Помреш (*кĕрет*). Виҫҫĕмĕш свонок парăр! Актгорсем, тухма хатĕрленсе тăрăр! (*Виҫҫĕмĕш свонок параҫҫĕ*).

Саҫҫи (*пҫупса кĕрет хăйĕн упорнăйне*). 3-мĕш свонок. (*Наканĕне илет те тухса ҫухалат*).

Помреш. Пуҫлатпăр. (*Вусланпа Сĕрне тухса сĕтел патне лараҫҫĕ. Сĕрне кил хуҫи хĕрĕ пулса выҫат, ăна Ҫупă тесе пҫĕнеҫҫĕ. Вуслан турриссен охвитсерне выҫат*). Пĕррĕмĕш кон паратăп (*кайат*).

Сĕрне. Мĕнле выҫас пайан, халăх питĕ нумай теҫҫĕ: (*Помреш сасси. „Санавĕҫ!" выҫама пуҫлаҫҫĕ*).

Вуслан. Хĕрлисем ҫак хулана тапăннăранпа пĕр канăҫ та памарĕҫ.

Сĕрне. Мĕн тăвас тетĕн, хоспотин Тумантсов, вăхăтлăха тӳсес пулат.

Вуслан. Каҫ пулсанах мĕнле те пулин ку хуларан малалла шăвас пулат. (*Сĕрнене*). Епĕ ултă ҫул хушши вăрҫăра пулнă салтак, халиҫҫен тăшман аллине лексе курманҫҫĕ, ҫапах кăҫал пĕрре лекмелле пулҫĕ. Аран-аран вĕҫерĕнтĕм, хĕрлисем патĕнҫе халăх ҫав тери усал.

Сĕрне. Епĕ хам та акă ҫав тери хĕрлисене йуратмастăп. Ҫак вăхăтра, есĕ ман патра ҫухне хĕрлисем килсе кĕрес пулсассăн, епĕ сана нимĕн те мар ҫăлма пултаратăп. Епĕ тыткăна йулакан салтаксене сахал мар усрана.

Вуслан. Хĕрлисем йунашар хулана илни икĕ кун ҫитрĕ, анҫах вĕсем пур-пĕр вăл хулара нумай вăхăт пурнас ҫук, пурĕ-пĕр хăвасласа йаратпăрах. Сасартăк ҫакăнта хĕрлисем килсе тухас пулсассăн епĕ пĕҫҫенех пур ҫарне ҫапса салататăп!

Сĕрне. Хăвна ху питĕ паттăра ан хур ĕнтĕ, паттăрăн пуçĕ ўкнĕ теççĕ, çакна ан ман.

Вуслан. Есĕ пирĕн майлă пулса, пире пулăшма пултараймастăн-ши?

Сĕрне. Епĕ шуррисемпĕн пайан вилме те хатĕр, шыва йарас çук, епĕ вĕт ĕçлемен мар, вăрçă шăршине ђылай шăршлакаланă.

Вуслан. Пĕлетни, Љупá, çакă икĕ кун хушшинђе есĕ çав тери ман кăмăла кайрăн, тăван йăмăк пекех йуратас килет сана. (*Љупă аллине тытат*).

Сĕрне. Епĕ сана кун пек йăваш сăмахсем калаçма пĕлмест тесе. (*Вуслан çывăхне лăпђанат*).

Вуслан. Апла пулсан есĕ мана ăнланатăн?

Сĕрне. Ăнланатăп.

Вуслан. Апла пулсан... (*Љупăна варăмăн ђуп тăват*).

Сĕрне. Сывлама пар.

Вуслан (*картăђкă парат*). На, Љупă! Асăнса пурăн, хамăн сăна парам, пурăнсан, тен, манăн сăна та курас килекен пулĕ. Пăхса пурăн, усра.

Сĕрне. Есĕр ку сăна ăçта ўкернĕ?

Вуслан. Томскинђе. Аван фотокрăф.

Сĕрне. Аван, питĕ ђаплă ўкнĕ.

Вуслан. Ех, Љупă! Хаљ вăрçă вăхăђĕ мар пулсан епĕ сана хамăн çывăх йулташ тунă пулăттăмђĕ.

Сĕрне. Есĕ çав тери аван çын. Анђах йуратăва вăрçă ђарма пултараймаст вĕт?

Вуслан. Апла пулсан есĕ манпа пыратăн?

Сĕрне. Пыратăп. Анђах...

Вуслан (*хăйĕн çумне туртса илсе ђуп тăват. Çав вăхăтра пăшал сасси 2—3 çине-çине пени илтĕнет. Вусланпа иккеш те кантăка ђикĕнеççĕ.*) Камăн?

Сĕрне. Хĕрлисем пулмалла.

Вуслан (*кусне пуçне саматнă*) Ăçта?

Сĕрне. Веçă, Катыковский урамран шуррисене хăваласа тухрĕç.

Вуслан (*ђупкалат*). Ых, вĕсене...

Сĕрне. Тумантсов, тархасшăн ан тух, вилме çех тухатăн...

Вуслан. Пурĕ-пĕр пĕтес пулат.

Сĕрне. Есĕ асту, тепĕр алăкĕпе тар, кунти алăкĕпе пур-пĕр тытаççĕ.

Вуслан. Ну, сывă пул, Љупă. (*Тухат*).

Сĕрне (*ђупкалат*). Ах, мĕн тăвас-ши?.. (*пуççапат*). Ей çўлти турă, есĕ хăвăн хăватупа çав хĕрлĕ шуйттансене пĕтер.

Карсакков (*кĕрет*). Фу ты, йапонскайа ҍоттă!.. Есĕ мĕн хăтланан? (*Ку роле Рыпакков выљат*).

Сĕрне. Ну, кала-ха тархасшăн, есĕ вĕсен-и, хамăрăн-и?

Карсакков. Хамăрăн.

Сĕрне. Мĕнле хамăран?

Карсакков. Çаплах хамăрăн.

Сĕрне. Хĕрлисене хăваласа йатăр и?

Карсакков (*анакăлла*). Вот, ухмах... (*Сĕрнене*) паçăрах к ђорту хăваласа йатăмăр.

Сĕрне. Хĕрлисене йатăр пулсан (*сĕтел çинтђен кукăљ илсе парат*). Ме-ха çи, çи!

Карсакков. Есĕ ху малтан çи, унтан епĕ çийĕп, тен есĕ унта вилмелли тултарнă.

Сĕрне. Йейпоху, нимĕн те хуман, акă пăх еппин (*хусса çийет*).

Карсакков. Ну, йурат, илем еппин (*илсе тђикет*). Тавтапуç.

Сĕрне. Хĕрлисене хăвалама лайăхрах вăй кĕтĕр.

Карсакков. Хĕрлисене?

Сĕрне. Хĕрлисене çав.

Карсакков (*полушупкă айĕнтђен, кăкăри çинтђи хĕрле ленте силлесе кăтартат*). На, акă, вăйу çитет пулсан кăшла (*тухса кайат*).

Сĕрне (*тĕлĕнсе хытса йулат*). Пӳлĕхçĕ сыхлатăрах, хĕрли... (*лăштах пукан çине ларат*). Епĕ шурри тесе... Епĕ хĕрлисем çав тери усал çынсем тесе шухăшланă, вĕсем çав тери кăмăллă иккен. Шуррисем умĕнђе—хĕрлисене мухтасан... Çавăнтах персе пăрахĕç. Хĕрлĕ ђалкине силлесе кăтартмзн пулсан, шурри тесех йулаттăм. (*Урамра пăшал сасси*). Ах, турă, шуррисем çĕнтерђђĕр пĕрех хут.

Вуслан (*тђупса кĕрет*). Љупă, Љупă!.. Петрĕм вĕт, пытар мана хăвăртрах, тытаççĕ. Хĕрлисем çĕнтерђĕç, епĕ пĕђђенех тыткăна йултăм.

Сĕрне. Ах, ĕçта хурам-ши?.. (*тђупкалат*).

Вуслан. Ых, пемелли те çак вăхăтрах пĕтрĕ, (*револьвĕрне алăк патне перет*).

Сĕрне. Вăхăтлăха çак пӳлĕмри шкапа кĕрсе лар.

Вуслан (*пуççапса*). Хоспоти Иисуççĕ Христе! (*Тепер пӳлĕмс кĕрсе кайат*).

Сĕрне (*кантăкран пăхса*). Ах, хĕрлисем кунта кĕреççĕ (*пуççапат*). Ей, тура, турă хăвăн çунату айĕнђе лăпкă, сыхă, çак ђурана усра! Тумангсова та, мана та вилĕмрен хăтар.

Сальљи (*кĕрет, унпа пĕрле икĕ хĕрлĕ салтак. Сальљи хĕрлисен командирне выльђат, хĕрлĕ салтаксене, Петуçкинпа Алтынăн выльђаççĕ.*) Епĕ вăхăтлăха çаканга вырнаçатăп, есĕр красноармейтсене кайса пĕлтерĕр. Урамсенђе пĕр çын та ан çӳретнĕ пултăр. Кашни переулках хурал тăратас. Ђирку тăррингђи тыткăна илнĕ пулеметсем унтах пулђђăр, тата салтаксем килĕрен-киле ан çӳренĕ пултăр. Малалла çăкăр-тăвар çителĕклĕ пулат. Тăнлантăр-и?

Петуçкинпа Алтанав (*пĕр харăс*). Ăнлантăмăр.

Сальљи. Халĕ кайăрах (*кайма тăраççĕ*). Нет, стой! (*Лечисем çавăрнаççĕ*). Лашапа çӳрекенсене, исвошђĕксене пĕрне те хулана кӳртмелле-кăлармалла мар. Кам хирĕçети-мĕни, ниме хăрамасăрах тӳррех ман пата. Тăнлантăр-и?

Пет па Алтанӑв. Тӑнлантӑмӑр.

Салђђи. Кайӑр (*кайма тӑраҫҫӗ*). Нет, стой! (*Чеигсем каллех ҫавӑрнаҫҫӗ.*) Ђи кирли манса йулнӑ. Леш шуррисен охвитсерне, ҫакӑнти переулкӑна тарса ҫухалаканнине шыраса тупса „немедленно", парӑнмаст йе тарат пулсан, тӳррех ҫатлаттарӑр. Тылӑран вӑй хушса кӗҫӗр татах малалла кайатпӑр. Ну, хаљ кайма пултараттӑр. (*Петуҫкинпе Алтанӑв тухаҫҫӗ*).

Салђђи. Вот, ҫапла, йулташ хӗрӗм, епӗ сирӗн патра вӑхӑтлӑха пурнас терӗм.

Сӗрне. Йурат епӗ питӗ хавас. Хӗрлисене тахҫантанпах кӗтет-тӗмӗр, аран килсе ҫитрӗҫ.

Салђђи. Йулашки вӑхӑтра тем ывӑннӑ пек туйӑнат, пӗр кун канма вӑхӑт ҫук, йе таратпӑр, йе хӑвалатпӑр.

Сӗрне. Хоспоти... Тфу ты, товаришђ краснӑй кӑмантир, сирӗн салтаксем нумай-и?

Салђђи. Йулташ хӗрӗм, пӗрремӗш—пирӗн салтаксем мар, красноармейтсӑсем. Иккӗмӗш—пирӗн ҫынсем нумай-и, сахал-и ҫинђен, сана мар, тӑван аннене те каламастӑп.

Сӗрне (*айакалла*). Вот, шуйтан, сисмести-ха ку. (*Паусӑ, Салђђийа*)... А-а-а-ем!.. Есӗр мӗн йатлӑ?

Салђђи. Йат хунине астӑваймастӑп ҫав, пӗђикрех пулнӑ. (*Паусӑ*).

Сӗрне. А-а-ем!.. Йулташ кӑмантир... есир ерех ӗҫместӗри?

Салђђи. Ҫук, йулташ хӗрӗм, ерех ӗҫме вӗренеймен-ха.

Сӗрне. Нађар. Мӗншӗн вӗренеймен-ха?

Салђђи. Ӗҫме вӑхӑт та пулман, тата ӗҫни вӑл питӗ сиенлӗ йапала, ҫавӑнпа та ӗҫмен.

Сӗрне. Нађар, нађар! Есӗр паҫӑр ывӑнтӑм терӗри ҫав, выртса канас теместӗри? Хам вырӑн ҫинех выртарма пултаратӑп.

Салђђи. Ҫук хӗрӗм, ҫакӑн пек хӗрӳ вӑхӑтра пирӗн ҫывӑрма йурамаст, ђатас пулат. (*Утса ҫӳрет. Алӑк патӗнђи выртакан револђвӗре курат те илет. Сӗрнене хытӑн*). Кам пур купта? Кам пур? Кала?

Сӗрне. Ҫук, каламастӑп.

Салђђи. Каламастӑн?.. (*Хӑйӗн револђвӗрне кӑларса*) Асту, вырӑнтах хуратӑп.

Сӗрне (*охвитсер кӗрсе кайнӑ алӑка аллисемпе каркаласа*). Пурӗ-пӗр ҫывӑха йамастӑп.

Салђђи. Аха-а!.. вон мӗнле йапала. (*Сӗрнене пырса тулкӑштарса йарат те, пӳлӗме кӗме тарат. Вуслан хирӗҫ тухат те Салђђийе тӳрех кӑкӑртан тђышкапа парат те, Салђђи урай варне кут ҫине кайса ларат. Вуслан тђупса пырса Салђђи ҫине хӑпарса ларат. Сӗрне ҫав вӑхӑтра сунтӑхран револђвӗр кӑларат те, Салђђина перет, анђах револђвӗрӗ осетђкӑ парат, Салђђи Вуслан айӗнђен тухса Вуслана пусса ларт-ат те Сӗрнене перет, леш ӳкет. Ҫав вӑхӑтра Вуслан Салђђийа ацила тӑват, тапалашаҫҫӗ. Хӗрлӗ салтаксем, Петуҫкинпа Алтанӑв кӗреҫҫӗ. Раппӑрт пама аллисене тытнӑскерсем тапаланнине*

кураççĕ те, Вуслана Салдирен уйăраççĕ. Салдьи тăрат. Вуслан вĕçернессĕн).

Петуçкинпа Алтанăв: Пирĕн алла ленксен,—çук, тараймăн.

Салдьи. Молотсы репеттă.

Чаршав.

ИККĔМĔШ ПАЙĔ.

3-мĕш карттинă.

Çав теккоратсийех. Чаршав уçăлат. Салдьи, Петуçкин, Алтанăв пурте халăха пуçĕсене тайаççĕ те, стсенă çинчен çухалаççĕ. Сĕрне (Люпă) çавăнтах выртат.

Ив. Степпанч. Молотсы, репетта! Питĕ аван тухрĕ. (*Кĕрет. Сĕрне выртнине курсан*) Олькă Петровнă! Олькă Петровнă! (*тчупса пырат*). Ах, йун! Вăл чăнахах вилнĕ. (*Салдьийа тчĕнет*) Станислав Никколайĕвич, Станислав Никколайĕвич!

Салдьи (*стсенă хыçĕнтче хĕпĕртесе*) Мĕн?

Ив. Степ. Кил-ха кунта.

Салдьи. Ниччево тухрĕ вĕт (*тчупса кĕрет*). Аван тухрĕ вĕт?

Ив. Степ. (*шăрикен*). Аван, питĕ аван. (*Сĕрне çине кăтартса*) Авă пăх.

Салдьи (*Сĕрнене курса*). Ой!.. Ольă!.. Ольă!.. (*тчупса пырса тчеркуçленет*). Ольă!.. Ольă!.. Мĕн пулнă сана? Ах йун... йун... (*Сĕрне çине йăванса кайат. Макăрат*). Вăл... вăл... вилнĕ... (*Макăрат*). Ольă!.. (*Салдьи макăрнине илтсен, Чилимăв, Петуçкин, Алтанăв! Рыпакков, Тачă, Иван пурте тчупса кĕреççĕ. Чи кайран Вуслан ирĕксĕр тухат те, айакра пĕтчтченех тăрат. Помреш тата рапоттчисем кереççĕ*).

Пурте. Мĕн? Мĕн пулнă?

Ив. Степ. Станислав Никколайĕв хăйĕн арăмне персе пăрахнă.

Пурте. Персе пăрахнă?!

Ив. Степ. (*куракан халăха*). Ей, милитсионер, кил-ха кунта (*Шуплĕккăран милитсионер пырат*).

Милитсионер. Станислав, мĕнле пулчĕ санăн ку ĕç?

Салдьи. Епĕ нимĕн те пĕлместĕп. Револьвĕр ăшĕнче пулдă пуррине пелмесĕр çаптартăм епĕ.

Милитсионер. Çак ĕçпе кам айăплине тĕрĕсличчен, сире пурне та арĕсленĕ шутлатăп.

Чаршав.

ВИÇÇĔМĔШ ПАЙĔ.

Театтăр шефа илнĕ колхосăн клупĕ. Стсенă çинче тата клуп стсени пулмалла Чаршав уçăлнă чух, клуп стсенин чаршавĕ хупă. Клупра артиссемпе колхоçнĕксен пухăвĕ. Преçитнума артиссенчен—Иван Степпанăв, колхоçнĕксенчен —Раман тата Лариван. Клуп тулли́ех халăх, колхоçнĕксем, хĕрсем, каччăсем, ачасем те.

Раман. Колхоçнĕксем йенчен епĕр ак çапла çыртăмăр (*вулат*). 1) Стелшчĕнă ĕçне тĕрĕс çулпа йĕркелесси, 2) прикатăсем хушшинче сотсиалисăмла ăмăрту ĕçне вăйлатасси, 3) колхосри ĕç укçине

тĕрĕс пайласси, 4) колхоçнĕксем хушшинђе хуг пĕлменлĕх пур пулсан, çулталăк хушшинђе вĕрентмелле. Ну вот, кунта 4 пунктă. Кам хушас, йе улăштарас тет?

Сăпани. Ман пĕр сăмах калас килет.

Сасăсем. Кала, кала.

Сăпани. Малалла, ĕçлеме вăхăтра тухманнисем пулмалла мар.

Сасăсем. Сăпани тĕрĕс калат.

Сăпани. Малашне тата, ерех ĕçекен пăйантсăсем колхосра пулмалла мар, вĕсене хытарас пулат. Колхос йатне çĕртсе пурнаççĕ. (*Пурте алă çупаççĕ*).

Раман. Çак халђ вуланă тата Сăпани каланă сăмахсене, кашни пунктипех уйрăм йышăнса тухатпăр-и йе пĕтĕмпех йышăнатпăр?

Колхоçнĕксем. Йышăнас! Йышăнас!

Раман. Хирĕç калакан çук?

Колхоçнĕксем. Çук.

Раман. Халĕ артиссем хăйсен пунктисене вуласа параççĕ.

Ив. Степ. 1) артиссен квалификатсине тата весен политтĕкла пĕлўне хăпартасси, 2) артиссен-ăсталăхне хăпартасси, 3) мĕн пур политтĕкла кампанисене çирĕп хутшăнса пођшевикла иртерессн, 4) арттиссен колхоçнĕксемпе тађă çыхăнса тăрса вĕсене кирлĕ кунсенђе пулăшасси. 5) ĕç тисђиплинĕне хăпартасси, 6) промфинплана 100%-пех пурнăçа кўртесси. Пирĕн пĕтрĕ.

Раман. Так, пурте илтрĕр-и? Халђ мĕн вуланине хушас-улăштарас текенсем пур-и?

Артиссем. Çук. Йышăнас.

Раман. Йышăнатпăр еппин?

Артиссем. Йышăнас.

Раман. Епĕр хамăр йенђен йышăннă пунктсене пурнăçа 100%-пех кўртетпĕр тесе артиссем уменђе сăмах парса алă пусатăп. (*Алă пусат*).

Пурте (*алă çупаççĕ*).

Ив. Степ. Епĕр те колхоçнĕксем умĕнђе сăмах парса алă пусатпăр (*алă пусаççĕ*). Сывă пултăр „пролеттарлă искуствăпа, ушкăнлă хуçалăхлăх—колхос“. (*Раман алă парат*).

Пурте (*алă çупаççĕ*).

Раман. Халĕ ĕнтĕ ĕç пĕтрĕ.

Ив. Степ. Тепĕр 20 минутран çпектаккăђ курăпăр. Унђен, тавайха, ађасем, ахалђ ларинђен колхос хĕрĕсене çĕнĕ йурă вĕрентер-ха.

Салђђи. Тавай йурлатпăр.

1-мĕш хĕр. Тытăнса йурлас, тавай хĕрсем, тытăнăр, тăрăр, тăрăр. (*Артиссем, хĕрсем, çамрăксем пурте карталанса тăраççĕ. Çавранма пуçлаççĕ. Артиссем айăкра тăракан хĕрсене картана тăма туртаççĕ*).

Лайăххина. Ну, мĕнле йурă йурлатпăрха? Пуçлăр хăвăртрах.

1-мĕш хĕр. Есĕр пире епир пĕлмен йурăсене йурласа парăр, мĕнлеђђĕ-ха çав... тăрри йурра йанратсанђђи-ха çав?.. (*урăх йурă йурласан та йурат*).

Салђђи. Ну-ну, çавăн пек. Айтăр пуçлатпăр.

Лайăххина. Тон пар.

Салђђи. Ре-е-е... çи... солђ... Ре... (*пуçлат. Артиссем пурте хыç-çăн шарантараççĕ*).

Ив. Степ. Нук-кă, Сăпани аппа, есĕ мĕн çынсенђен кайа-и- мĕн? *уртса пырат*).

Сăпани. Мĕнле ара, ађасем, кап пĕ. . . мана есĕр тепĕр хут ракплатас тĕместĕр пулĕ те. . .

Ив. Степ. Çамрăклатас та пулат.

Сăпани. Ата еппин. (*Пурте кулаççĕ*).

Ив. Степ. (*карта варĕнђе*). Тавай-ха пурте пĕлекен йурра шăрантарар.

Пурте. Тавай, тавай! Мĕнлине, хăшне?

Ив. Степ. Кай, кай Ивана!

Пурте. Тавай.

Ив. Степ. (*пуçлат*). Кай, кай. . . (*пурте йара параççĕ*). Нук-кă, Сăпани аппа, есĕ пиређи авалхи йурра йурласа кăтарт-ха? (*Карта варне каларат*).

Сăпани. Епĕ мĕн пĕлетĕп ара; ав çамрăксенђен ыйт, вĕсем пĕлеççĕ. Пирĕн ĕлĕкхи йурăсем кивелсе çитрĕç пулђ ĕнтĕ.

Пурте. Йурласа пар ĕнтĕ, Сăпани аппа!

Ив. Степ. Çамрăксем пĕлнине епĕр хамăр та пĕлетпĕр, есĕ вăт, епĕр пĕлменнине йурласа пар-ха.

Пурте. Йурла ĕнтĕ, Сăпани аппа!

Сăпани. Йурлам штолĕ еппин. Манăн сасси те сирĕнни пек йантрамаст те ĕнтĕ.

Салђђи. Тиркекенĕ никам та çук. Айта пуçла.

Сăпани. Итлĕр еппин, епĕ сире ђи авалхи ђăвашсен çын вилсен 40 кунне асанна ђухнехи йуррине йурласа парам-ха. Ку йурра ĕнтĕ „поминка йурри“ теççĕ.

Ив. Степ. Шăп. (*Пурте шăп тăраççĕ*)

Сăпани (*йурлат*).

2/4	3	36	75	675	3	36	5	3	2 хут
	Вĕлт	— рен	çин	— ђи	ай	сар	ка	— йăк	
	Ай	— хай	пиђ	— ђе,	Кор	— ти	пиђ	— ђе,	
	Е	— пир	са	— на	а	— сă	нат	— пăр	

2	2	5	6	5	3	1	2	31	6.
Сас	— си	пур	та	йа	— лан	та	хăй	— йĕ	çук
Йа	— ђĕ	пур	та	йа	— лан	та	хăй	— йĕ	çук
Е	— сĕ	пи	— ре	ан	а	— сăн	ан	а	сăн

Сăпани. Ĕлĕкхине асăнсан манăн пĕтĕм куççулĕ тухат. Ку йурăсене йурласан, ĕлĕк патша аллинђе пулнă ђухнехи йăвăрлăхсем аса килеççĕ (*шăп*). Есĕр мана ват çынна ан пăхăр, йурлăр, ташлăр.

Лайăххина. Есĕ мĕн йурлама хушатăн, çавна йурлатпăр.

Ив. Çтеп. Тавайха, ађасем, епĕр ăна хађхи пурнăçа аса илтерекеннине йурласа парар. (*Пуслат*). „Малалла утар", м. т.

Пуртв. Харăс... харăссăн утар!.. т. ыт.

Сăпани (*ыттисем йурласа пĕтерсен*). Ĕнтĕ манăн ыйтмалла-и-ха?

Пуртв. Санăн, санăн!

Сăпани. Манăн мĕн çинђен ыйтас-ха? (*шухăшласа тăрат. Сасартăк алăкран „пушар, çунатпăр" тенĕ сас илтĕнет. Цурте ђупкалаççĕ. Хăшĕ тухса ђупаççĕ, хăшĕ кантăкран пăхаççĕ*).

Комсомолĕс (*ђупса кĕрет*). Йулташсем, ан пăшăрханăр (*комсомолĕс хыççăн тула тухнисем пурте кĕреççĕ*). Нимĕн пушарĕ те çук, ăна йалти клас тăшманĕçем, хулари çапкаланђăк пуп хĕрĕ Маруççă сирĕн çпектаккĕле срыват тăвасшăн пулнă, вĕсем мĕн шухăшланине епĕр малтанах сисрĕмĕр, вĕсем тĕрмере ларакан Вуслан хушса йанипе хăтланаççĕ. Вĕсене епĕр хађ пурне те тытрăмăр, йалсовет претçетаттĕлĕ хулана ăсатат. Тавай вырнаçăр, нимĕн хăрамалли те çук. Вĕсем, пирĕн пата артиссем килсе пире вĕрентсе пырасран хăраççĕ.

Ив. Çтеп. Апла пулсан епĕр спектаккăђ пуçлатпăр (*Ив. Çтепанђ çухалат. Халăх вырнаçат. Алă çупаççĕ. Стсенă çинђи стсенă ђаршавĕ уçăлат. Теккоратси: кĕпер леш йенђе сылтăмра катаран вăрман курăнат. Мăн çул çинђе сулахайра йăвăç тĕмисем. Километр йупи. „1-мĕш çынне" Рыпакков выђђат. „2-мĕшне" Помреш выђат. 3-мĕшне Пĕррейкин выђат. Колхоснăк—поткулађнĕк Темйан пуплĕккăра ытти колхоçнĕккеемпе пĕрле пăхса ларат. Рыпакков, помреш, Пĕррейкин, виççĕш хуларан ĕçленĕ çĕртен тавăрăнакансккерсем, мăн çул тăрăх киле кайаççĕ, хăшин те пулсан çурăмĕ çинђе—кутамка, аллинђе пуртă, пăђкă, т. ыт. те.*

Рыпакков. Вот вĕт, мĕн шухăшласа кăларђĕç. Таçта Мускавран калани кунта илтĕнет.

Помреш. Ей, каларĕ, Мускавран çех-и, акăлђан çĕрĕнђен, нимĕçсем патĕнђен те илтĕнет.

Рыпакков. Кам шуйтанĕ шугласа тупнă-ха çавна? Епĕ çавăнтан питĕ тĕлĕнетĕп.

Пĕррейккин (*кайаратран тухса*). Тавай-ха çакăнта ларса канар. (*Лараççĕ.*)

Помреш. Ђăнах та ларсă ђĕлĕм çавăрар-ха.

Рыпакков. Ех, епĕ хам асаттене ђĕртсе тăратăттăм та, катартăттăм. Ратио калаçнинђен тĕлĕнсе, хытса шок! тепĕр хут вилсе кайĕ çав.

Помреш. Асаттесем пур-пĕрех ĕненес çук. Малалла çынсем пĕлет çинђен вĕçме пуçлаççĕ тесессĕн ĕненеђђĕç-и? Çук. Халĕ пăх-ха мĕнле йăрăнаççĕ. Мĕн ђухлĕ йероплан кĕрлесе тукрĕ.

Пĕррейккин. Не то йероплан, çĕр çинҫе ҫупакан ахтопусне каласан та ĕненес çук.

Рыпакков. Ай-йай, аван ҫупат-çке колатник ахтопусĕ! Пĕркунтарахха вăйĕ пĕрре, çăва йенҫен тырă вырса килетĕп те, çак мăн çул çине çитрĕм, епĕ унҫен ахтопус тенине илтмен те. Йероплан сасси илтĕнети... мĕни... тесе çӳлелле, çăвара карнă та пăхса тăратăп йероплан шыраса. Ахтопус ман хыçа çитерехпе, сасартăк „ларик! ларик-и-ик! тутарҫĕ. Хос-с-споти, çӳç-пуç йаштах çӳлелле тăрса кайрĕ, мĕн шуйттанĕ пулҫĕ тетĕп, кайалла çаврăнса пăхрăм та, тур çырлахах, çапçутă çуталса килет. Вăр-р-р-р-рих! тутарса иртсе кайрĕ, аран-аран пăрăнса йултăм, кĕçех тапгаса кайаҫҫĕ. (*Кулаççĕ*).

Помреш. Ну?

Пĕррейккин. Кайран вара леш... „хоспоти çпиртне“ те кăшт сыпас терĕмĕр. Кăнтăрла иртни пĕр виç сехетсем тĕлнелле епир Михалапа килелле шутарас, терĕмĕр.

Рыпакков. Çавăн ҫухне пуҫ-ха вăл...

Пĕррейккин. Çавăн ҫухне çав. Хĕвел пĕçертет, йĕрсĕр ăша, хай «хоспоти çпиртне» сыпнăран нийепле те пуçа çĕклес килмест. „Лорик, лорик“ тутарҫĕ, тор ҫон илтĕр, пуçа тăратса пăхрăм та, леш, ахтопусĕ килет кĕрлеттерсе, паҫҫушки мой!.. Хайхи ӳсĕр пуçпа тилхепене хыпаларăм хыпаларăм, нийепле те алла лекмест. Ахтопусĕ, ухмах, ман патах çитсе тăҫĕ. Лорт!.. лорт!.. тутарҫĕ. Ман лаша хăранипе „хăрт-хорт! тутарҫĕ те (*шăпăсем кулаççĕ*) йара паҫĕ уй урлă. Вĕçетпĕр çав... Маттĕрне кантăрвăрри, тен ахтэпусран хытă кайрăмăр-и. Пĕртак кайсан кайалла çавăрăнса пăхрăм та, ман Михалан картусси вĕçнĕ йулнă (*кулаççĕ*). Хăй ик йенелле урапа креслинҫен çавăрса тытнă та, унталла та кунталла çапкаланса пырат çав... Епĕ хам та нимĕн тума аптраса çитрĕм, пĕтĕм сехре хăпса тухрĕ. Урапи çинҫен анса йулас теп, ура хуçăласран хăратăп. Лаши кайат ман, тăрçырлах... çунатлă пекех, анҫах•таçталла кайатпăр—хамăр та пĕлместпĕр, айакаллă-майăккалла пăхкаласа пыратпăр çех. Пăрулкă йуписем, вăшт! вăшт! çех курăнса йулаççĕ. Хăранипе пĕтĕм ĕçни иртсе кайрĕ. Тепĕртак кайсан кайалла çаврăнса пăхатăп та, манăн Михала урапа çинҫе çук та... Лаша ытла хытă ҫупнипе анса тарнă пулмалла (*кулаççĕ*).

Рыпакков. Хăй ирĕккĕнех анса йулман пуҫ та-ха... аҫин, те хырăмĕ ыратнă-ха, те...

Пĕррейккин. Хайхи, кайсан-кайсан ман лаша ҫупма ҫарăнҫĕ, ывăнҫĕ иккен. Пăхатăп, пĕр сăрт çинҫе шап шурă ҫиркӳ ларат. Ăçта çăвапатне çитсе çапăнтăм? тесе шухăшлатăп.

Рыпакков. Ăçта çитнĕ пулнă?

Пĕррейккин. Апаш тăвайккине. (*Кулаççĕ.*) Хамăр йалтан вунă çухрăм иртсе кайнă. Ну мĕн тăвас тетĕп, лашана кайалла çавăртăм та, йурттаратăп килелле, вара хĕвел аннă çĕре аран-аран киле çитрĕм, вот вĕт есреллĕ ахтопусĕ. А-а, киле çитсен...

Помреш. Мĕн пулҫĕ тата?

Пĕррейккин. Шайттан матки, леш, тепĕр „килти ахтопусĕ“ çĕмĕрĕлђĕ анђах.

Помреш. Мĕн турĕ апла?

Пĕррейккин. Нихăçан курманçутă кăтартрĕ.

Рыпакков. Мĕн туре апла сана матку?

Пĕррейккин. Матка-и? Килти ахтопус-и?

Рыпакков. Ахтопусĕ çав.

Пĕррейккин. Пӳрте кĕтĕм çех,—„есĕ“... терĕ,—килкарти умне çитсен, ăçта çăвапатне, каçа хирĕç тĕркĕштеретĕн? терĕ. Шорт! çупса йађс... А, ппађђушки! питрен-куçран вут тухсах карĕ...

Помреш. Такки матку çупкине çирĕн?

Пĕррейккин. Мĕн тăвас тетĕн есĕ, „равноправи“ теççĕ те, епĕ ăна висĕм çул пĕрре çупса йанăђђĕ, çавăншăн пултăр терĕм вара.

Рыпакков. Ха-ха-ха!.. Ну, айтăр, уттарăпăр, кунта ларса çул кĕскелес çук. (*Тăраççĕ*).

Помреш. Кайăпăр. (*Кайаççĕ*).

Тумуç (*айакран Тумуç йурлани илтĕнет, çывхарат, йурласа керет. Ку роле Иван выђать*). Молђат, йа первăй револђутсионер йа, йа, йа, вас... Молђат! йа с Катыковым вместе рапотал... йа, йа!.. Катыковпала пĕрле ĕçленĕ! Йа первăй револђутсионер. (*Никам та çук, вăл пĕђђенех хăйпе хăй çĕмĕрĕлет*). Молђат (*йурлат*). Çатан карта çăтăрт тет, хĕрсен тути ђăпăрт тет (*ташлат*). Ай-ну!.. (*кут çине ларат*). Ох, кĕçĕр ман пурĕпĕр ĕç тухас çук, хоттa мана вĕсем ĕçтерђĕç... Ну, ну, кăшт ытлашширех ĕçтерђĕç. Ну, йурат, хăйсем айăплă (*тăрат*). Хоттa епĕ икĕ çĕр тенкĕ укçан, поллитровкă ерех тенĕђђĕ. Вĕсем мана пĕр литтăрпех ĕçтерђĕç (*паусă*). Епĕ хам та ухмах çав. Хамăр пиђђен ывăлне вĕлерме килĕшрĕм. Пиђђен ывăлне, а? Ђим-ха, ђим-ха... „Куçмана вĕлерсен, хамăр урăх колхос тăватпăр, сана колхос претçетаттĕлне лартатпăр“, теççĕ. Манран мĕн претçетаттĕлĕ пулма пултартăр-ха. Епĕ ни вулама, ни çырма пĕлместĕп. Тăхта, тăхта вĕсем хăйсем асла тухасшăн. Колхоса салатасшăн. Çук, çук. Ман алă Куçма çине нийепле те çĕкленес çук. (*Кайма тăрса пĕр тĕмĕ кутне сулăнса ларат те, пуçне пђиксе йурласа çывăрса кайат. Паусă. Петуçкин Вуслан рођне выђат. Ђилимăв Темйан рођне выђат. Иккĕшĕ стсенă çине кĕреççĕ*).

Петуçкин. Пирĕн Тумуç ăçта тарђĕ? Вот шан шуйттана. Таках вĕт пирĕнтен пĕр литтăр ерех ĕçрĕ. Тата, çитменнине, вăл çынсем хушшинђе пекĕлтетсе çӳреме йуратат. Пĕрте-пĕр кирек камакаласа парсан...

Ђилимăв. Ун çинђен маларахран шухăшламаллађђĕ çав. Ну, ăна епĕр ыран та хамăр майлă çавăрма пултаратпăр. Кĕçĕр ĕнтĕ ăна шанмалли пĕтрĕ, пирĕн хамăрăн тăвас пулат ку ĕçе. (*Кайалла пăхса*). Вон такам килет, пирус çути курăнђĕ.

Петуçкин. Куçма пулмалла, вăл пирĕнтен ытла кайарах марђђĕ вĕт.

Ђилимăв. Айта йăвăç тĕмми кутне.

Петӳçкин. Айта (*ыйтанаççĕ, паусă*).

Саҫҫи (*Кусма роҫне выҫҫат. Кĕрет*).

Ҫилимăв. Стой! (*Саҫҫи тапах тăрат. Саҫҫийа перет. Саҫҫи йăванса кайат*).

Саҫҫи. А-ах! (*Пусне çĕклет*).

Петӳçкин (*йăвăç тĕмми кутĕнҫен сиксе тухат те Саҫҫийе кăкринҫен перет. Саҫҫи виле кайат*). Айта хăвăртрах вăрмана.

Ҫилимăв. Айта! (*Çухалаççĕ*).

Тумус (*вăранат те киле кайма тăрса Саҫҫийа тĕл пулат.*) Ах!. Куçма, сана вĕлернĕ. (*Хытă макăрса Саҫҫи çине ӳкет*).

Стсенă çинҫи стсенă ҫаршавĕ хупăнат. Халăх алă çупат. Темйан ларнă çĕртех хытса кайнă.

Комсомолĕс. Йулташсем, куртăр-и ĕнтĕ йалти клас тăшманĕсем мĕн хăтланаççĕ. Кун пек ĕç пирĕн йалта та пулса иртрĕ, вот вĕт вĕсем йепле сынсене пĕр хĕрхенмесĕр персе вĕлереççĕ.

Темйан (*хăранипе, саланса кайнă*). Ăна... Ăна, епĕ мар... епĕ мар. Ăна... Вуслан пеҫĕ.

Комсомолĕс. Мĕскĕр? Вуслан? Кама пеҫĕ?

Темйан. Колхос пуçлăхне, Куçмана.

Пурте. Куçмана?

Темйан (*пĕр Куçмана*). Халăх, тархасшăн каçарăр! Епĕ, епĕ вĕлересшĕнех марҫҫĕ. Мана Вуслан хăй майлă çавăрҫĕ.

Комсомолĕс. Апла Куçмана есĕр вĕлернĕ?

Темйан. Мĕнле-ха... мĕнле-ха ку капла пулҫĕ? Çук епĕ...

Комсомолĕс. Ну, пĕрре персе йатăн пулсан, кайалла çавăрса илеймĕн.

Темйан. Çук... епĕ, халăх, турă пек тархаслатăп сире (*макăрса йатуе*).

Комсомолĕс. Çитменнине, пирĕн пата колхоса лекнĕ тата, сволăҫ!

Сăпани. Çапла, тĕрĕс. Ку ĕç çинҫен ĕнер Йемеç те хăй вилиҫҫен çапла каласа хăварҫĕ.

Комсомолĕс. Так, пĕтĕмпех паллă. (*Пĕрине*) Есĕ халех хамăр колхос лашине кӳл. (*Темйана*) Ку çĕлене халех хулана ăсатас. Айта, илсе тухăр. (*Илсе тухаççĕ*).

Саҫҫи. Йулташсем!..

Колхоçнĕк. Вот, спектаккăҫ вăл мĕнле йапала, пĕтĕм ĕçе тăрă шыв çине кăларҫĕ.

Саҫҫи. Йулташсем! Кунта епĕ, мĕнле ĕççем пулса иртнине итлесе тăратăп та, ку ĕç мана питĕ тĕлĕнтерет. Мĕнле-ха вăл манăн пйесса сирĕн йалта пулса иртнĕ ĕç пырса çакланнă? Епĕ ку пйессăна çырни, шăп виçĕ уйăх çитет ĕнтĕ. Сирĕн колхос пуçлăхне вĕлерни те çав тĕлеллех пулмалла. Епĕ пйессăна çырса пĕтерсен тин илтнĕҫҫĕ ун çинҫен, çавăнпа та епĕ пайан кун пек пуласcине шухăшламан. Йалти Вуслан, пирĕнпе пĕрле ĕçлекен, вăл—пирĕн сывăх йулташҫĕ, анҫах вăл, Шупашкарта çпектаккăҫ лартнă ҫух, манăн алари револьвĕр ăшне пуҫă хурса парса, епĕ хамăн арăма

хам персе вӗлертӗм, ҫавӑнтан кайран пирӗн пурин те Аслӑ сут уменҫе тӑмалла пулҫӗ. Ҫав сутра Вуслан мэнӑн револьвӗр ӑшне пуҫӑ хурса панине тунмарӗ. Вара пирӗн ҫывӑх йулташ Вуслэн, пирӗн происвотствӑра ҫи паллӑ вретиггӗл пулни палӑрҫӗ. Халӗ Вуслана 10 ҫуллӑх тӗрмене хупса лартнӑ.

Комсомолӗс. Йулташсем, куртӑр-и ӗнтӗ искуствӑ мӗн тума пултарнине? Епӗ комсомол йаҫҫейки йаҫӗпе пирӗн пролеттариллӗ артиссене тав тӑватӑп. (*Пурте алӑ ҫупаҫҫӗ*).

Саҫҫи. Епӗр пролеттариллӗ писсаттӗлсемпе акторсем комуниссен партти йертсе пынипе, мӗн пур вретиттӗлсене, прокулшҫӗксене, пйантсӑсене, пӳрократсене, йалти куштан кулаксене пур тӗнҫери ҫӗлен-калтасене стсенӑ урлӑ тӑр шыв ҫине кӑларса, тӗппипех кӑкласа пӗтерӗпӗр. Сывӑ пултӑр колхоспа искуствӑ пӗрлешӗвӗ!.. (*Алӑ ҫупаҫҫӗ*).

Пӗри (*ҫупса кӗрет*). Йулташсем, йулташсем!

Пурте. Мӗн пулнӑ? Мӗн?

Пӗри. Вуслан тӗрмерен тухса тарнӑ та йала килнӗ, хаҫ акӑ ҫак колхос клупне ҫертме тӑнӑ. Хаҫ ҫех мана курсан ҫырманалла сикрӗ. Айтӑр хыҫран, пурӗ пӗр тытатпӑр!

Пурте. Айтӑр!.. (*Пурте ҫупса тухаҫҫӗ*).

Ҫэршав

4-МӖШ ПАЙӖ.

Йалта Николай Никколайҫӑн пурҫе. Саҫҫин отпуск вӑхӑҫӗ. Саҫҫи сӗтел хушшинҫе кӗнекессемпе аппаланса ларать. Римӑ сӗтел пуҫне ларнӑ та ҫырать.

Н. Ник. (*кӗрет*). Ах, Станислав, Станислав. Есӗ каллех хутсемпе аппаланса ларатӑн иккен?

Саҫҫи. Ларатӑп-ха.

Н. Ник. Есӗ киле канма килнӗ вӗт? Канас пулат, Станислав, апла кунӗн-ҫӗрӗн хут ҫинҫе ларсан ухмаха та йерсе кайӑн.

Саҫҫи. Мӗнщӗн?

Н. Ник. Тепӗр ҫухне шухӑшлатӑп шухӑшлатӑп та, ҫисти хӗрхенсех кайатӑп вара.

Саҫҫи. Ну, тупнӑ мӗншӗн хӗрхенмелли.

Н. Ник. Мӗнле есӗ ывӑнмастӑн, ывӑлӑм? Ак, епӗ Римӑ вӗренткеленипе пӗр 15—16 саспалли пӗлкелегӗп те, виҫ сӑмах вулиҫҫенех тӑн тухат.

Римӑ. Еп сана, атте, вилиҫҫен профессӑра кӑларатӑп ак.

Н. Ник. Пӑрах-ха есӗ хӑвӑн шуткуна, есӗ кӗҫӗр мана 17 мӗш саспаллине кӑтарт-ха луҫҫӑ.

Римӑ. Халех, халех. Аҫта-ха манӑн пуквар.

Н. Ник. Есӗ пукварсӗрех, ахалех...

Римӑ. Ҫук, пукварпа авантарах ӑнлантарма пулат. (*Пукварне тупса*). Акӑ пӑх, кунта карттинки те пур. 17-мӗш саспалли вог ҫак пулат.

Н. Ник. Ҫак ҫурла пекки и?

Римă. Вот-вот-вот, çавă-çавă. Çак çурла пек саспаллине „ĕ Ç“ теççĕ. Нуккă кала-ха.

Н. Ник. „ĕ Ç“.

Римă. Çапла, çапла. Есĕ çак саспаллине манса кайасран, ак сана вальđи кунта çурла туса панă. Çурла вăл хăй те „ĕÇ“ саспаллинђен пуçланат „Ç ç-çурла“. Ну вот ĕнтĕ, çурла пек саспалли „ĕÇ“ пулат, ăнлантăн-и?

Н. Никол. Ахă, ăнлантăм, ăнлантăм.

Римă. Ĕнтĕ çак сăмаха вуласа кăларайатни?

Н. Никол. Нуккă. (*Вулат*) „Ç-а-ц-л-а“.

Римă. Ну вот, вĕрентĕни? Ак çакна вула-ха. Ку хўресĕрри „ĕс“ пулат. Е е, куна есĕ пĕлетĕнçке-ха.

Н. Никол. (*вулат*) „Со-вет, совет“. Çапла-и?

Римă. Маттур, атте! Халĕ ĕнтĕ çурла пек саспаллине манмастăн пулĕ?

Н. Никол. Çук, манмастăп.

Римă. Ну мĕнлеђђĕ-ха?

Н. Никол. „ĕç“.

Салђђи. Есĕ хăвăн уђенĕкне хăйĕн йатне çырма вĕрент-ха?

Римă. Çук, иртерех-ха. Епĕ ăна хаљ те хамăн отпуск пĕтиђђен утарлă вĕрентсе кăларас тетĕп те-ха.

Салђђи (*кулса*). „Досрочный выпуск“.

Римă. Мĕн тăвас тетĕн-ха.

Салђђи. Ну, Римăђкă, айта колхос клупне кайар еппин, пире кĕтсе ывăнђĕç пулĕ.

Римă. Есĕ кĕçĕр мĕн çинђен каласасшăн-ха?

Салђђи. Кĕçĕр епĕ трамкрушок ђленĕсене „Самодеятельное искусство“ çинђен каласа ăнлантаратăп. Ну, кайрăмăр-и?

Римă. Кайрăмăр.

Н. Никол. Есĕр мана пĕрре клепетитсине илсе кайăр, епĕ сире 70 çулхи пионера выљђаса парам. Хĕ-хĕ!.

Римă. Йурат, йурат. Çитес репетитсинђех сана илсе кайатăп. Епĕр хаљ лартакан пйессăра пионер-рољĕ çук çав, çитес пйессăна, „Маленький герой“ йатлă пйессăра пионер выљђат, ун ђухне илсе кайăпăр. Йурат-и?

Н. Никол. Мана курма пырсан та йуратçке.

Римă О-о!... Курма!.. Сана нисашто хăвармастпăр. Ну, кайрăмăр.

Салђђи. (*кĕнекесене илсе*) Кайрăмăр. (*Кайаççĕ*).

Н. Никол. (*сĕтел патне пырса вулат*) „Пилĕк“, ă-ă-ă... çак çурла пекки мĕнлеђђĕ ха çав, вот вĕт ват çын пуçĕ, çавна та манса кайрăм. (*Шухăшлат*). Çурла пекки... çурла пекки... (*Аса илсе*). Ей, катăрашнăй. „ĕÇ“ (*малалла вулат*). Пиллĕк çул-лăх, пла-на 4 çул-та тус-с-са пĕтерер!!! (*пуçне сĕклесе хăйĕссĕн*) „5 çуллăх плана 4 çулта туса пĕтерер! Ку лош сотсиалисăм теççи çав... çав йапала пулмалла ĕнтĕ, план тăрăх, 5 çуллăха йышăннăскере 4 çулта тăвас тени пулат иккен.

(Вусланка Тимкка кӗрсӗсӗ. Руслан шӑл ыратнӑ пек туса питне пысӑк тутӑрпа ҫыхнӑ, тата вӑл тӗлхесӗре пенӗ. Тӑхӑнисса иккӗш те ҫӗтӗк-ҫатӑк тумланнӑ).

Тимкка. Сторовӑ. (*Тутарлларах калаҫат*). Лайӑх пурнаты?

Н. Никол. Килӗрех-ха, килӗрех.

Тимкка. Пире хваттер йамастны?

Н. Никол. Есир ӑҫта кайаканскерсем?

Тимкка. Шупашкара кайатпыр.

Н. Никол. Инҫетрисем-и?

Тимкка. Айакрисем ҫав.

Н. Никол. Шупашкара мӗн ӗҫпе?

Тимкка. Ара, суту-илӳ ӗҫӗпе мар-и, суту-илӳ ӗҫӗпе.

Н. Никол. Килтен тухни самай пулат-и? Хӑш йен ҫыннисем пулатӑр есӗр?

Тимкка. Кавал патӗнђисем. Кавал пасар тенине илтни?

Н. Никол. Илтнӗ, илтнӗ.

Тимкка (*Вуслана кӑтартса*). Ку тата ӑҫтисем? Ма вал нимӗн те шарламаст?

Тимкка. Вӑл ђӗлхесӗрҫке-ха, унӑн ђӗлхи скарлатынӑ ђир хыҫҫӑн, ҫӗтсе ларнӑ, тет. Ҫавӑнтанпа кайран пӗрре те-каласман, тата хӑй вӑл пирӗн патрисемех, ҫул ҫинђе хуса ҫитрӗм те, вара кунта ҫитиђђенех пӗрле килтӗмӗр, иксӑмӑр йӑмахха ҫаптартӑмӑр ҫех.

Вуслан (*Тимккана айӑккинђен тӗксе*) тсс!..

Тимкка. Утни нимӗн те сис-с-с-с!... (*аса илсе ҫӑварне аллипе хупласа ларат*).

Н. Никол. Ӑҫта-ха, сирӗн токкумӗнтсем пур-и? Токкумӗнт ҫук ҫынсене хваттер йарсан пирӗн претҫетаттӗл нитӗ хытӑ вӑрҫат.

Тимкка. Мӗншӗн апла?

Н. Никол. Сахали... йалта тем пулма та пултарат, тепӗр ђухне ҫаратса та кайаҫҫӗ. Нуккӑ токкумӗнт.

Тимкка. Токкумӗнт пур. (*Шырат.*) Анђах ӑҫта хунӑха епӗ ӑна? Токкумӗнт ҫук пулсан?

Никколайђӑ. Претҫетаттӗл патне кайатӑп та, йаратӑп унта сире..•

Тимкка. Ак, ак, ак! Тупрӑм. На, на (*парат*).

Н. Никол. (*Илсе вулат*). „Сђет Ђувашлесу, Слетует с вас полуђит! ӑш-ӑш... ку темӗскерле сӑмах, нийепле те вуласа кӑлараймастӑп.

Тимкка (*илсе*). Кур-ха хам вуласа парам. Итле (*вулат*) „за командировочное" снађђӑт, мана Ђувашлес комантироват тунӑ пулат, Шупашкара кайма. Ӑнлантӑн-и? Акӑ манӑн йат Ипраким Тимкка. Вот ҫапла вӗт?

Н. Никол. Йурӗҫке. Ку ђӗлхесӗррин пур-и? (*Вуслан пуҫне силлет*). Ну, йурӗҫке, ҫывӑрӑр.

Тимкка. Есӗ пире сӑмавар лартса паман-ши? Ҫул ҫинђи ҫынан шутсӑр ӗҫес килет у.

Н. Никол. Сӑмаварне нумайах та пулмаст ман хӗрађа ларт-

пăђђĕ те, хаљ кăшт сивĕнерех пађĕ пулин çех (*тытса пăхат*). У-у, сивĕнмен. Халех ĕçĕпĕр. Вĕретнĕ шыв шел мар.

Тимкка. Сирĕн урăх йыш çук-и мĕн?

Н Никол. Пур, пур. Пĕр херађа пур.

Тимкка. Апла иккен.

Н. Никол. Ывлăм манăн Шупашкарта вырăнта пурăнат. Темисе вĕле кайрĕ ĕнтĕ.

Тимкка. Мĕн вырăнта пурăнату?

Н. Никол. Театтăрта артисра пурăнат.

Тимкка. Артисра?

Н. Никол. Хаљ, пĕрер уйăхлăха канма тесе киле килнĕ те-ха. (*Сăмаварне сетел çине лартат*).

Тимкка. Карђăкку çук-и мĕн тата?

Н. Никол. Карђăкки вăл иртнĕ уйăхра кинпе пĕр кунах вилмелле пулђĕ.

Тимкка. Мĕнле апла пулнă-ха тата?

Н. Никол. Кунтан çак... пĕр 8 çухрăмра Толикково йатлă йал пур, Тулик-Хураски тетпĕр те, çав йал çынни Вуслан йатлăскер Шупашкарта ман ывăла, вуљвер ăшне пуљă хурса панă та, вара стсенă çинђе выљљанă ђух, манăн ывăл хăй арăмне хăйех персе вĕлернĕ. Карђăкки ман вăл ĕлĕкренех сывах марђђĕ те, шăп çав кунах вилсе кайрĕ, мĕн тăвас тетĕн , пытартăмăр.

Тимкка. Халĕ ывăлу ăçта кайнă тата?

Н. Никол. Клупа кайатпăр тери çав...

Тимкка. Пха!.. Клупа еппин...

Н. Никол. Ну, ларăр ларăр, еккей халапа пула, сăмаварĕ çинђең мансах кайнă. (*Стакансем лартат*). Сирĕнпе пĕрле хам та ĕçкелĕп.

Тимкка (*Вуслана*). Ей, ђĕлхесĕрри, кил лар.

Н. Никол. Есир тултарса ĕçĕр-ха, епĕ нÿхрепе кайса пĕрер стаккан сĕт илсе кĕрем. (*Кайат*).

Вуслан. Ну,- мĕнле шухăшлатăн, пуçтарса хăварма май килет пек-и?

Тимкка. (*Тутарла мар, ђыннрех калаçат*) Епĕ мĕн пĕлетĕп, кирек мĕн хăтлан, епĕ, есĕ хытă тархасланăран, йулташлăх анђах кĕтĕм, асăннă укçана халех паратăн пулсан вара...

· **Вуслан.** Мĕнле-ха есĕ апла? Апла сана кам, кам пĕрле тĕрмере ларнă йулташ вырăнне шутлĕ.

Тимкка. Тĕрмере, тĕрмере...

Вуслан. На, еппин, на! (*Парат*). Анђах тытăнсан иксĕмĕр пĕрле ответ тытатпăр. Ман шутпа ним сас-хурасăрах пуçтарса хăвармалла.

Тимкка. Пемесĕрех-и?

Вуслан. Пăшал сассисĕрех тума пулат.

Тимкка. Мĕнле?

Вуслан. Ак ђей стаккан çине «Соннăй порошок“ йаратпăр та ун умне лартса йаратпăр (*ярат*). Хайне авантарах пђутине

парас. Çав стаккана ĕçсенех унăн ыйхи пусса килĕ те, çывăрма та выртĕ. Кайран Станислав килсен, ашшĕ вилнĕ пек çывăрнăҫух, лешне пуçтарса хăварма та авантарах пулат. Анҫах есĕ тутар пек авантарах çаптар, атту сисĕç те...

Тимкка, Йурат, йурат.

Н. Никол. (*кĕрет*). Есĕр ĕçĕр, ĕçĕр. Мана ан пăхăр.

Тимкка. Есĕ те лар-ха пирĕнпеле. Сана ваҫҫи те тултарса йантларăмăр, кил, лар.

Н. Никол. Мана ĕçмесен те пырĕ те-ха. Епĕр нумай пулмаст еçрĕмĕр.

Тимкка. Айта, лар.

Н. Никол. Кăçалхи çул сахăр таврашĕ те хаклă та.

Тимкка. У-у сахăр çинҫен мĕн калаçмалли пур, çитмесен хутаçра татах та пур. (*Анйк патне кайса хутаççинҫен сахăр илет. Çав вăхăтра Н. Никколайҫă хăй умĕнҫи стакканне Тимкка умĕнҫипе улăштарса лартат*).

Н. Никол. Ку авантарах стакканпе вăл ĕçтĕр-ха. Ку наҫаррипе хам та ĕçкелĕп. Ҫей стаккансем те ванса .пĕтрĕç те ĕнтĕ, çавна та илеймерĕмĕр-ха. (*Вуслан пахса ларат*).

Тимкка (*сахăр илсе пырат*). Мĕ, акă ĕçĕр, ĕçĕр.

Н. Никол. Йурат, йурат ĕçĕпĕр еппин. (*Сунтăхран сахăр кăларат*). Сахăрĕ пирĕн хамăрăн та пур таха.

Тимкка. Уншăн мĕн калаçмалли пур, хăт сирĕн, хăт . пирĕн. (*Ĕсеççĕ.*)

Вуслан (*Ури аллине тапкаланса ларат. Тимккана „ан ĕç" тесе каласшăн*). Тс-с-с...

Тимкка (*Вуслана йатлаçса*). Мĕн тата тапаланса ларатăн, ĕç хăвăртрах, ҫейĕ сивĕнсе кайат тата. *Ĕсеççĕ. Паусă. Вуслан пуçне сулласа ларат*). Çул тăршипех ăш хыпса килҫĕ, шутсăр ĕçес килет.

Н. Никол. Еçĕр, ĕçĕр. Шыв шел мар.

Тимкка. Ывăлу килсен пире вăрçмĕ-и-ха?

Н. Никол. Сире хваттере йанăшăн-и?

Тимкка. Алай.

Н. Никол. Çук, сирĕн пек çынсемшĕн вăрçас çук.

Тимкка. Есĕ вара... ой... куç... куç хупăнсах килет, ой... ыйăх киле пуçларĕ... те кунĕпех утнăран ой... ой... пĕтĕмпех пусса килҫĕ (*анаслат*).

Н. Никол. Стакканри шывне ĕçсе йарсам ĕнтĕ.

Тимкка. Çук пулмст, епĕ çакăнтах сак çине кăшт вынтса илем-ха. (*Выртат*).

Вуслан (*çилленсе*).Тфу!... (*алйк патне кайса ларат*).

Н. Никол. Сахал ĕçрĕрçке есĕр, тăранах ĕçес пулатҫĕ. (*Сăмаварне илсе лартат*). (*Вуслана*) Ех, шел çынна, шел хăйĕн питĕ калаçас килет пулмалла. Шел, шел (*сĕтел çинҫен пуçтаркалат*). Мĕн тăвас тетĕн, пурнас пулат пĕр çуралнăскер. Шел, шел. Кайса, пахҫаран пăрува илсе килем-ха.

Вуслан. Хи-хи-хи!... Пурнас пулат çав пĕр çуралнăскер (*Тимкана тăрат*). Ей, йулташ, тăр-ха, тăр, тăр, теççĕ. (*Пауса*). Ну, шуйтан илесшĕ пуçна... Çывăрах.... Епĕ хамăн ĕçе тăватăпах... петерме шухăшларĕç, тошĕ... Вуслан халех вилес çук-ха. Мана ĕçрен кăларса, тата епĕ мĕнле çынне пиессăсем урлă çутатса панăшăн... асту сыхлан... (*Стсенă хыçĕнчe Никколай Никколайсвич сасси: „Станислав! Станислав! пўртре йут çынсем пурха [унта, есĕ кĕçĕрлĕхе тулалла выртаймастăн-ши?“*).

Саччи (*сасси*). Йурĕçке, ăçта май килет, çавăнта вырнаçăпăр, маншăнах ĕç сахал (*кĕрет*). У-у, çынсем çывăрнă иккен. Ну-у, ку йут çынсемпе, кĕçĕр халапа çапатпăр ĕнтĕ тесе шухăшласа кĕтĕм епĕ, пулмарĕ иккен. (*Кĕнекисене хурат*). Ну, йурат, епĕ те çывăратăп (*ларат*). Ех-хе-хеă!.. Йалтан кайни нумайах та пулмаст те, çапах та йал чылай улшăннă, колхос та вăйланса кайнă, копператтив та ниччево ĕçлет. Пуринчен ытла чиркĕве хупса 8 çул вĕренмелли шкул уçни мана савăнтарат. Та, йалта ўркенмен çынсем самай. Еçлеççĕ. Хамăн отпуск пĕтиччен, çав шкула ратио лартса хăварасчĕ, вара татах та йала çĕнĕ сывлăш кĕрĕччĕ. Хулапа йала танлаштарса пăхсан йал та хуларан кайах йулмаст. (*Выртат*). Ну, çыврас пулĕ. Атте, улма хурал тăмалла тўррех пахчана кайса выртат пулĕ. Римăчкă угă çинче çывăракан. (*Хăй сўнтерет*). Т-та. Хам арăма, хам алăпа персен йăванса кайни нихăçан та ман куç умĕнчен кайас çук. Нта-а!.. Вуслан... Вот йулташ, те. Пĕр стсенă çинче ĕçлекен йулташ... Кам шухăшланă ăна ун пек çын тесе... Тĕрмерен тухса тарнăранпа сыхлаççĕ пулин те, çакланаймаççĕ-ха. Таçта, такăш хулана тарнă ĕнтĕ вăл та... Ох, ывăнатăп иккен епĕ. Çывăрас... çывăрас... ох.. (*Хуллен çывăрса кайат. Пауса. Урамра, катаран йаш кĕрĕмсем вăйă йуррисем йурлани илтĕнет. Вуслан хуллен тăрат, аллинче револьвĕр тытнă. Тăрса пĕрик утăм пуссан, урамра тосор шаккани илтĕнет, çав вăхăтра Вуслан вырăн çине лапчăнат. Пауса. Саччи Вуслана сиссе, хуллен тăрса сак айнелле пытанат. Вуслан тăрат, пĕрик утăм пуссан хуллен калат*).

Вуслан. Утарнĕк!... а?! Аранах лекрĕн-и манăн алла? Аранах тĕл пултăмăр-и. Есĕр мана çакăн пек çапкаланчăк турăр пулсан, епĕ те сире тивĕçлипех тавăрăп. Çак йапалана пĕрерĕн пĕрре йарăйтарсан, йулашки сывлăшу та çакăнтах пулĕ.

Саччи (*хуллен*). Ак-ку çын Вусланçке. (*Татах тосор шаккани çывхарат. Вуслан кантăкран хуллен пăхат. Тосор иртсе кайат. Саччи алăк патнелле упаленет*).

Вуслан. Ну, Саччи, йулашки сывлăшу çак вăхăтра пултăр. (*Саччи вырăнĕ патнелле пырат*). Вот сана çĕнĕ пурăнăç, вот сана колхос. Вот сана çĕнĕ театтăр!.. (*çак вăхăтра Саччи тухса пăшăнса тарат. Вуслан алăк сассине илтсе*). Кам унта. (*Алăк патна чупса пырат.*) Никам та çук? Кам уçса хупрĕ пулĕ, кам? (*Чупса пырса лампăнă çутат. Вырăн çинче никам та çуккине курса*). Ах, вырăн çинче никам та çук! (*Иăхкалат*). Ăçта тарас? (*Тимкана лăкат*).

Тӑр! Пĕтрĕмĕр вĕт, иксĕмĕр те пĕтрĕмĕр, тархасшăн тăр хăвăртрах, тăр! (*Пауса*). Ну, тăмастăн пулсан, ђорт с топой! (*Тухса тарма тăрат, алăка пырса тӗкет те алăкне тултан Салђи питĕрнĕ*). Ых... питĕрнĕ!.. Ну, кантăкран... (*кантăк патне ђупса пырат, анђах пӳрҫеђерен ана хирĕç Салђи револьвĕрне тĕллет*).

Салљљи. Стой!.. (*Вуслан каиалла ђакса алăка шалтан ҫаклатат. Вуслан алăк патĕнђен урамалла перет, хăй кăмака ҫумне лăпђăннă. Стенă хыҫĕнђе сысем пухăна пуҫлаҫҫĕ. Сасăсем илтĕнеҫҫĕ*).

Сасă. Мĕн пулнă?

Сасăсем. Вуслан!.. Вуслан.

Сасăсем. О-о, Вуслан!

Сасăсем (*Шавлама пуҫлаҫҫĕ*) Тавай пуртă! Алăкне ҫĕмĕрес! Тавай пакур! Пакурпа хăйне те туртса кăларатпăр. (*Вуслан тулалла перет. Пӳртре ҫутă ан пултăр тесе, лампăна пуканпа персе ҫĕмĕрет. Тĕттĕм. (Тулта халăх шавлат*).

Халăх. Алăкне ҫĕмĕрес! (*Алăка лăкама пуҫлаҫҫĕ*).

Милитси сасси. Халăх, ан ҫĕмĕрлĕр! Ахалех тытатпăр.

Салљљи. Халăх, халăх, ан ҫĕмĕрлĕр! (*Халăх шавлат*).

Милитсионер. Халăх лăпланăр-ха, лăпланăр! (*Алăкран пӳртелле кăшкăрат*). Парăнатни? Парăнатни?

Вуслан. Вилсен—парăнатăп.

Халăх. Вĕлерес ăна, вĕлерес! (*Вуслан кантăкалла ђупса пырат те, ҫав хушăра пăшал сасси илтĕнет. Вуслан йури урайне йăванса кайат*).

Милитсионер. Ђӳређерен виксе кĕрет. Аха, лекрĕни? (*Алăк ҫаклатнине уҫат. Халăх алăкран тăпăлса кĕрсе тулат*). Халăх, ытла хытă ан шавлăр! Ăҫта, килхуҫи пур-и кунта, лампă ҫутас пулат?

Салљљи. Халăх! (*шкапран лампа илет те, ҫутаҫҫĕ*).

Милитсионер. Ну, халăх, халђ актă ҫырмалла пулат, ђи малтан.... (*Вуслан урайĕнђе выртнă ҫĕртенех Салђийе револьвĕрпе ҫапалаттарат. Салђийа тивмест. Халăх шартах сикет. Вуслан тухса тарма тăрат. Милитсионер Вуслана ĕнсерен ҫулса илет*).Ҫыхăр ăна! (*Ҫыхаҫҫĕ*)

Ђарша

САВАСЕМ

Арк. Ёçхёл

ÇИРЁПЛЕНЕТПЁР.

Ех, улăхра йантрат ёçђенён
Комсомолин хавас ёçхалё,
Лўп шăрăхпа ёç кунё кўпђенё,—
Йепле çак шăрăхра
сассăм çухалё?

Персе çитрём Тапук прикатине
Михал прикатинђен
пример пакашёпе:
—Мёнле ёçсем?
—Вăйхал тўнет,
Темшён вăйхал шёвек?!
Тапук çапла ответлерё хуллен.
Йепле, Тапук,
патмарђё ес куллен,
Пайан йăвăрлăха ирёк пиллен,
Прикатуна
ёçе тăп-тăп кўлмен.

—Кўлсе пăх-ха!
епё курам.
Калаçмашкăн пёлеттёр ссёр...
Ей-ей, Тапук,
йаратăн мён йурра,
Анђах йурру—
вёђесёр!

—Тархашшён ан калаç, темскер
оппортунис пулман епе.
Нихçан пулас та' çук!
Условисем тискерринђен тискер:
Лашийёсем—аран-аран...
вăл çук...
ку çук...
Пуринёнђен айăп—коççилккăра,—
ванаççё,
çурăл хăт пуçу.

Тӳрех калап, йулташ Тапукăм,
Ку сăмахсем оппортунисăм çех,
Сан ĕç пырат хăйне-хăй йухăм;
Йавăрлăхпа кĕрешмесессĕн хĕртĕнсе
малалла мар,
кайалла йухăн.

Тытăнса пăхни хастарла
Йавăрлăха тĕпрен хирмешкĕн?
Çук, пăхман!
Тавай, Михал, йевĕр—
çак шăрăх кăнтăрла!
Епĕр—
Октапĕрпе йĕкĕрешçке,
Ăшра вĕт пирĕн тутăхман!..

Опеслиҕкă
шоп! кăларса çапар,
Çвенопала çвено—ăмăртăва,
коççилккăпа—коççилккă,
Есĕн тирпейлĕхне—ҕапа!
Штурмлар массăпала умри тăва,
Вĕт пирĕнре хастарлă шилккă,
Çапар, Тапук, çапар!..
Кунĕпеле хĕртен хĕвел
ĕшеннĕн ҕас.
Тĕтреллĕ катана пытанҕĕ...
—Пуху кĕçĕр!
„Мана ĕнтĕ парĕç мунҕа"—
Çакăн çинҕе пуху пуçланҕĕ.

Шултăрканă шăм-шак
тин тăп-тăпланҕĕ,
—Тавай, васкар!
Штурмлар!
Штурмлар!
Ак парăнат йăвăрлăх—анҕăк,
Тавай, Тапук,
çĕнтерӳллĕн йурлар.
Коççилккисем кĕçенеç,
Кĕçенеç хăйуллăн.
Акă вăл пирĕн ĕç
Шавлă, пултаруллă!..

Пултарăпăр пур крепăçа та илмешкĕн,
Пултарăпăр йалан çĕнтерӳпе тухма;
Епĕр—Октапĕрпе йĕкĕрешçке,
Ăшсем вĕт пирĕн тутăхман.

Умри кунсем пулмĕç пĕр тертсĕр.
Ђылай килеç тумхах кунсем куçса...
Епĕр кĕрешӳре çирĕпленетпĕр,
Пур лĕнђĕр-ленђĕр вăйсене хуçса!
Уççăн сывлат саламлă улăх,
Ех, ырăçке çак анлă ирĕкре?
Еçре йантрат вĕр-çĕнĕ кулă,
Тавай, татах та çирĕпрех!

КĔРЛЕТ МАН ÇАМРĂК ЙУН...

Ех, пурнăç!
çĕклен ес,
курнăç.
Ђупат ман йун електроток пек!
Тинĕс пайан
тăвăлпа урнă,
вăл хăватне
ахалех тăкмĕ.

Вĕççĕр халлă
тапасшăн ђере;
Еп пăхатăп,
куратăп:
хавассăн
мăнçĕршыв
хĕвеллехçке хĕрет,
Йепле сӳнĕ пайан
манăн сассăм?..

Вăл сӳнмест,
сӳпес çук,
тӳнес çук,
вăл пайан
кĕрешмешкĕн ђĕнет вĕт,
вăл йулман—
тинĕсе ӳкес ђул,
хавасне
ирсĕрлемĕ, шĕветмĕ!

Шавласа ӳсекен
ђĕр хунав
Тепре ђух
çилпеле авăнасшăн,
Халђ çапах
пултарулла йуна
стройккăна
пĕтĕмпех еп парасшăн.

Пултараймĕ çапах
хуçăлма
Авăна авăнах çирĕпленĕ,
Мешђенле лўђĕрнмекĕн
вал мар,
ком-ђванла та
пуçа
вăл çĕклемĕ.

Путылкка ђикес çук
сăмсана,
- вĕри йунăн
çыранĕ
пулмĕ катăк!
Ман тăван çĕрĕм-шыв —
комсомол,
парттире
халăма шалпарлатăп.

Типĕ „Ей" шĕн
ђылайĕш тиркеç,
анђах епĕ
аслă класăн—
пĕр аттăм,
çавăнпа
лирĕкка çак ирпе
йантратасшăн
хавассăн та
паттăр!
Иккĕмĕш пиллĕкçуллăх
умра

таптанат
хирĕçен
урнă кашкăр,
ĕнерхи
ђĕр тăмран
çĕнĕ хал,
çăмăл мар
шăратмашкăн.

Харсăр епĕр,
нихăçан паранман,—
уйрăмах
ăшăтат ыр хĕвел те...
Йунăм тап,
ан шутла ывăнма,
вĕри йун
ĕмĕрте ан шĕвелтĕр!

КУЛĂШ ЛИТТЕРАТТУРĔ ЫЙТĂВĔСЕМ ÇИНЂЕН.

М. Алекçейĕв.

Йулашки вăхăтра кулăш литтераттурĕ çинђен (пуринђен ытла кометисем çинђен) сăмах тапратса йанине куратпăр. Ку йанала пит те вырăнлă. Кулăш литтераттурĕ ыйтăвĕсем йенелле епĕр пит те сахал çаврăн а пăхатпăр.. Етменĕн «Сунтал» (1920 ç. 4-мĕш № те) «Кулăшла литтераттурăна вăйлатас çул çинђе» йатла статйи тухађђен пиђетленнĕ статйасем (Рошин, Йехрим Йăванĕн, Ç. П.) нимĕнех те калаймарĕç, çавăнпа вĕсем хађхи вăхăтра асран та тухса ÿкнĕ. Етменĕн статйине çав хисепех лартма çук, мĕншĕн тесен вăл хăй паллăрах ыйтусене тапратса пађĕ, кулăш литтераттурĕн çитменлĕхĕсене çийелтен те пулсан шута илсе, унăн уменђе таракан сатађсене çутатса пађĕ. Анђах çакăн хыççăн ĕçе малалла тапратса йарас вырăнне кулăш литтераттурĕ ыйтăвĕсем тавра çанталăк каллех лăпланса ларђĕ. Çавăнпа та çак йулашки вăхăтсенђе кометисем çинђен тапратса йапп питĕ вырăнлă. Сăмах тапратса йанă май ыйтусем тарăнланса, сарăлса пыма кирлĕ, çавăнпа та кулăш литтераттурĕ ыйтăвне пĕр ансăрлатмасăр, йăшăхлатмасăр сÿтсе йавмалла. Пирĕн уйрăм сатирĕксĕн творђђĕствисене тĕпђес тĕлĕшпе нимĕн те çук тесе ÿпкелешме тытăнаççĕ. Ÿпкелешме йăвăр, ĕçех мар, епĕр ăна «с успехом» пултаратпăр, анђах аплипе ĕç малалла кайма пултараймаст. Ђи малтан ыйтăва пĕтĕмĕшпе çавăрса илмелле, унсăрăн уйрăм ыйтусене çутатма пултараймаст.

Халиђђен çыркалаписене пăхса тухнă хыççăн кулăш литтераттурĕ çинђен икĕ тĕрлĕ каланине, икĕ тĕрлĕ ăнланнипе курма пулат[1]. Пĕр тĕрлĕ калани (Ç. Йаккăвлĕв, «Сунтал» 3—4-мĕш №№, 1926 ç.) кулăш, кулăшла литтераттур пире савăнма кирлĕ тени. Ç. Йаккăвлĕв шухăшĕпе çын савăнни, кулни, вăл сывлăхлине, ĕçе йурăхлине кăтартат.—«Вăхăтра савăнса кулма пĕлмен çын ни пурăнма, ни ĕçлеме пултараймаст», тесе вĕрентет вăл. Çав ђăнахах та «çаплипе» Çемашкă сăмахĕсемпе кăтартасшăн. Вара çынăн куласси унăн ÿтпĕвĕнђи фиçиолокиллĕ протсессенђен килет пулат. Етемĕн ÿтпĕвĕ сывлăхлă пулсан, ырат-

[1]) Кунта кайарахпа тухнă Вађ т. ыт. статйисем кĕмеççĕ. Вĕсем çинђен сăмах малалла пулат.

маст пулсан ёнтĕ, вал кулать, саванать; ҫирлĕ, хĕн курса пурнать пулсан, вара етем кулмасть, саванмасть. Кулăшăн тымарне фиçнолокинçе шырани, фиçнолокиллĕх йенçен пăхни Паккăвлĕва кулăш литтераттурĕ çине те çав йенçенех пăхтарать. Ç. П. кулăш литтераттурĕ çине сывлăх комиссариачĕн çӳреçи виттĕр пăхать. Çавпашкал пăхнин тĕрĕсмарлăхĕ çылайĕшне аван курăнать пуç -тетпĕр. Анçах çапах та уп çинçе кăшт та пулин çаранса тăни ытлашши пулмĕ, мĕншĕн тесессĕн Паккăвлĕв пек пăхни, пысăк сипеплĕ йапала пулса тăма пултарать. Çи маттан кам вăл—вăхăтра саванса кулма пĕлмен йе вĕлнĕ сын. Ç. П. уменçе фиçнолокиллĕ орканисăм хисепĕнçе тăракан «çын» кăна курăнать. Паллах, вара кулăша та вăл ӳтпĕври фиçнолокиллĕ протсессемпе çыхăнтарать. Уншăн пулсан вара «Капкăн» та, çăвашсен кулăш шурналĕ, çав «çынсене» вăхăтра култарса савантаракан, йе усăллă леккарства пулса тăрать.

— «Хăш вăхăтра кулса саванас та килет. Çав вăхăтра çăваш вулакансем патне «Капкăн» пырса хăйĕн йумăрĕпе савантарса йарать, **кулăш вăл пушă вăхăт пур çухне килĕшӳллĕ канăç кăна мар, пит усăллă леккарствă** (Курççив ман. М. А.): çав леккарствă «Капкăнра» сахалах мар, çитмелле», тесе çырать Ç. П. Вара «Капкăн» вулакансемшĕн саванас килĕшӳллĕ канăç кӳрет, тата (сывлăхсăррисемшĕн пулмалла) пит усăллă «леккарствă» пулса тăрать. Çавăнпа та кулăпла калавсене çыракансем, тата лекĕрсем пулса тăраççĕ. Паккăвлĕвăн «локĕккин тăрăх кулăш çынăн ӳтпĕвĕнçи фиçнолокиллĕ протсессенçен килет пулсан, кулăш литтераттурĕ те пиолокиçĕски оркансăмăн рефлĕксĕ кăна пулса тăрать. Паккăвлĕв «хăйĕн теорийĕпе» литтераттур теорийĕнçи пиолокиллĕ сулăнçăк йĕрĕпеле çуптарать. Кунта вара çав пиолокиллĕ сулăнçăк çинçен кăштах асанма тивет, анçах епĕр çакна Паккăвлĕвăн «теорине» усăмларах кăтартакан йенçен кăна илĕпĕр[1]). Креçмĕр тухтăр çынсене, вĕсен ӳтпĕвĕсен стройĕнине пăхса, виçĕ типа уйăрать: астенĕкле, атлĕтла тата пикникле типсем. Вара кашни типăн хăйне майлă ӳтпĕвĕн стройĕни, характĕр, çирĕ тата хăйсене майлă пултаруллăх пур. Епĕр Паккăвлĕвăн шухăшне усса пама пикникле тип çинçен унăн пултаруллăхĕ йепле пулмалли çинçен калание илер. Пикникле типан характĕрĕнçе:

«Простая человечность и естественность, прямодушная чест-

---

[1]) Ку тĕлĕшпе „На лит. посту" шурналăн 3-мĕш [illegible] (1928 ç.) çапăннă М. Крикорнĕвăн „Биологический уклон в литературоведении" тенĕ статйине вулама пулать.

ность, признание жизни, любовь ко всему, что существует, особенно к самому человеку и народу, зґравый смысл и трезвый моральные взгляды, уменье ценить добродетельное и **добродушно смеяться над худшими мерзавцами. Умиротворяющий смех и умиротворяющий гнев.** (Курççпв ман.—М. А.).

Искуствäра вёсем вара, Кређмер шухашёпе, реалиссемпе йуморнссем пулаççё», тет Крикорйёв.

Кређмёрäн шухäшёпе, кёскен каласан, хутошёства пултаруллäхё етемён утнёвё стройёнинђен килет. Пикникле типсем искуствäра, литтераттурäрä, йуморнссем пулаççö. Вёсен йумäрё—килёшуллёх кўрекеп йумäр. «Савäнäç, килёшўллё канäç», тет Йаккäвлёв. Унäн шухäшён тёп тымарё, пуçламäшё Кређмёрён патнех пырат.

Литтераттур теорниђи пиолокиллё суланђак тепёр йепђен Фрейт вёрентнипе çыхäнса тарат. Фрейтисäмäн тёпре выртакан итеолокиллё мотив—«етемён пурнäçё (в смысле судьбы), пётём пурнäçпа творђђёстван тултарäмё: хутошнёк пулсан—искуствäн сöтершаннйё, пёлуçё пулсан—унäн наукäлä теорийёсем, политтёк пулсан—политтёкле прокрамсемпе ёçёсем пурте «половое влечение» тенипђен килеççё тени. Ыттисем пурте çав арлä туртäмсен вäйлä кеввлнђи «сäсäсем» кäна тени.[1])

Епёр куйта шалалла кёмесёр пиолокиллё сулäнђäкäн тымарне, пуçламäшне палäртасшан кäна. Ун çинђеп йатарласа çырас пулсан вäл ыйту тарäп та, сарлака та.

Паллах, епёр çакäнта Йаккäвлёва Кређмёрпа. Фрейтпа т. ыт. танлаштарасшäн мар. Ку тёлте Йаккäвлёв хäйне майлä вёсеп иоçитен çине туртма хäтлапнине кäтартасшäн. Унäн контс-псийё, паллах, пит те имперкке, äшäх, çÿванпа та калаçма та тäмаст ун çинђеп тейёç хäшёсем. Анђах унäн сийенё саралма пултарнине, сийенлёх сарäлас поттентсиио асра тытсан, асäнмасäр иртсе кайма йурамаст.[2]) Опђäллä, сотсцалла йавлениеене пиолокипђен тытäнтарии çёнё йапала мар, унäн тёрёсмарлäхне кäтартса çырнисем ђылай. Çав пиолокисäм Йалавёнäп (Йаккäвлёвäн «Çул çинђе»[3]) йатлä калавёнђе те паллäнах курапса тäрат. Унта вäл:

[1]) Н. В. Волошипов. „Фрейдизм" (критический очерк) ГИЗ, 1927 г. стр. 15. Опђа йавлениссем çине пиолоки йеньсен урäх майлä пäхма хäтланни те пур. Ресем пурнё те условнäй тата песусловнäй рефлёкссемпе тäнлантараççё. (Енђмен, Савиђ, т. ыт.).

[2]) Йаккäвлёв (Йалавён) хäйён кайрантарах çырнä статйисенђе те марксисам поçитсн çинђе тäманин, анла капла йатранни курнат.

[3]) „Утäм" Хусанти АНП тäваш [illegible] пексемеш алманахё. 1929 с. 41 стр.

— «Ваттисем вилсе пыраҫҫӗ, вӗсен вырӑнне аҫасем ҫуралаҫҫӗ, ӳссе ҫитӗнсен каҫҫасем авлапаҫҫӗ, хӗрӗсем каҫҫа кайаҫҫӗ.

Ҫапла вара пурнӑҫ» тесе пуҫласа йарат хӑйӗн калавне. Авӑ йепле иккен пурнӑҫ тени. Ҫав «пурнӑҫӑн» формулӗ вара ҫапла пулат: (ваттисем) вилеҫҫӗ—(вӗсен вырӑнне аҫасем) ҫуралаҫҫӗ, ҫав «вилеҫҫӗпе» «ҫуралаҫҫӗ» хушшиҫе «авланаҫҫӗпе» «каҫҫа кайаҫҫӗ» вырӑнаҫаҫҫӗ. Ҫак формула Йалавӗн пурнӑҫ ҫине мекеҫленсех, ӗхлесех тӑхӑнтартса лартат; вӑл формулӑ пит те тӑвӑр пирки «ытлашшийӗ», пӑҫӑртанипе пӗтӗмпех йухса тухат, мӗншӗн тесен, унта вӗсене ваҫҫи «кил вырӑнӗ» паман, ҫавӑнпа та вара пӗр пиолокилле «выҫӑхла» пурнӑҫ анҫах вырнаҫса йулат. Ҫавпашкал пурнӑҫлӑ ҫынсем Йаккӑвлӗн (Йалавӗн) умӗнҫе ҫаврӑнаҫҫӗ, вӑл ҫав ҫынсем йенҫен кулӑш литтераттурӗ ҫине пахат. Ҫӑн пурнӑҫа хӑйӗн формулпе типӗтсе илсе, вӑл литтераттурӑна та ҫавнашкалах типӗтет: кулӑш литтераттурӗ таҫтан айакран пырса ҫав ҫынсене сазӑнӑҫ, киллӗшӳллӗ канӑҫ йе тата лекарствӑ кӳрсе тӑрат, вӗсене ӗҫе йурӑхлӑ (тата ыт.) тӑват, тет. Ҫапла фисиолокиллӗ органисӑм хисепне лартни—ӑна абстрактлӑ тӑплаппине, унӑн опҫӑлӑхне сирсе пӑрахнине пӗлтерет. Ҫын тени, унӑн опҫӑлӑхне, класлӑхне катартмаст, ҫавӑнпа та ҫын тенине унӑн опҫӑллӑ пурнӑҫри вырӑнӗнҫеп татса илни, ӑна пиолоки органисӑмӗ хисепне ҫеҫ лартса, пур ҫӗрҫун тӗнҫипе пӗрлештерсе йанипе пӗлтерет. Класла опҫӑра, пирӗншӗн пулсан, абстрактлӑ ҫынсем мар, опҫаллӑ, класла ҫынсем анҫах пулаҫҫӗ.

«Сущность человека—это есть совокупнсть всех общественных отношений» (Маркс, К. о Фейербахе)».

Ҫавӑнпа та вара кулӑшла литтераттурӑ ҫитҫеп ыйтӑва тӗппипех урӑхла лартмалла. Ҫынӑн «сущность»-не айаккалла пӑрахса хӑйӗн теорине фиҫиолоки ҫине сӗвентернипе, кулӑш литтераттурӗн ыйтӑвӗсене, паллӑлӑхне етемӗн «сывлӑхӗнҫен» ӗмсе кӑларнипе, вӑл савӑнӑҫ, килӗшӳллӗ канӑҫ кӳрет теме хӑтлапакансемпе хытӑ кӗрешме кирлӗ. Халҫхи сотсиалисӑмла строиттӗлствӑпа, хастарлӑ класлӑ кӗрешӳре, пролеттариат талкашпе сотсиалисӑмла наступлени туса пынипе, унӑн револҫутсиллӗ теорийӗпе маркҫисӑм ленинисӑмпа хирӗҫӳллӗ йапала пулса тӑрат. Вӑл «теори» Совет сойусӗнҫе, Йалавӗн пек шутласан, ӗҫлекенсем кив тӗнҫе пӗтсе пынипе кура ӑпа кулса ӗсаттаҫҫӗ. Асатакаписен куласси питех килмест пулмалла, вӗсем теме терлӗ майпа та шӑла ҫыртса хирӗҫ тӑрасшӑн. Ҫакӑнта ыйту хыҫҫӑн ыйту сиксе тухаҫҫӗ, ответ ыйтаҫҫӗ. Вӑл ответсене опӗр паллак етемӗн «сывлӑхӗнҫе», унӑн ӳтпсӗвӗнҫе шыраса кунайманӑр.

Тӗппипех урӑх майлӑ калат Етменӗн статйи упта:

«Влаç пролеттариатӑн çирӗп аллинҫе тӑнӑ вӑхӑтра кулӑш литтераттурӗ клас тӑшманӗшӗн йаланах çивӗҫ çӗçӗ пек пулса тӑрат. Вӑл пуршуаçин кулӑш литтераттурӗ пек ӗç сукран çӑвара выҫатса лармалла çеç[1]) мар. Вӑл ӗçсӗр аптранӑ сынсене йӑпатмашкӑн (савӑнӑç, килӗшӳллӗ канӑç кӳрекен М. А.) литтераттурӑ йатне çӗклесе тӑмаст. Вӑл пролеттарин кӗрешӳ хӗççи, мӗн пур çитӗнӳпе çитменлӗхе сиссе тӑракан, пурнӑçӑн (клас тӑшманен. Рет.) ирсӗр йенӗсене пӗтӗм çарамаслӑхӗпе кӑтартакан куçкӗски», тенӗ.

Канла каланине çителӗклӗ мар пулсан та, Йаккӑвлӗвӑн пӑтрапҫӑк шухӑшӗ унӑн çывӑхне те пыраймаст. Кунта иккӗн икӗ тӗрлӗ тӑнланни курӑнсах тӑрат.

Етмен паллах, тӗрӗс çул çинҫе тӑрат.

Илемлӗ литтераттур халҫхи вӑхӑтра пулса пыракан пысӑк çитӗнӳсенҫен, улшӑнусенҫен уйрӑм çулпа каймаст, хӑйне ӑссӗн уйрӑм тӑмаст. Вара кулӑш литтераттурне те сотсиалисӑмла строиттӗлствӑрап, класлӑ кӗрешӳсен пролеттарин çӗнтерӳллӗ ӗçӗнҫен уйармалла мар, унӑн тымарне çавӑнта шырамалла. Вӑл пролеттариат аллине клас тӑшманӗсене çӗптермелли шанҫӑклӑ орутисенҫен пӗри пулмалла.

Паллах, кулӑш литтераттурӗ те илемлӗ литтераттурӑ хисепне кӗрет. Меттӑт, сотерпани йенҫен вӗсем хушшинҫе уйрамлӑх сук, уйрӑмлӑхсем прийомсем йенҫен çеç пулма пултараççӗ. Тепӗр ҫухне уйрӑмӑн илсе калаççӗ пулсан—вӑл пӗрре те пӗрпӗрипҫен уйрӑм татӑлса тӑнине пӗлтермест.

Кулӑш литтераттурӗн вырӑнӗ—клас кӗрешӗвӗн фронтӗнҫе, унӑн сатаҫӗ сотсиалисӑмшӑн кӗрешекен пролеттариат аллинҫе капиталисӑмӑн йулашкисене татӑклӑпах çӗптермелли вӑйлӑ хӗçпӑшал пулса тӑрат.

Пирӗн çӗпӗ сотсиалисӑмла хуçалӑхпа кулҫттур ӳссе пынӑ майӗпе çӗпӗ, комунисла хӑнӑхуллӑ çынсем пулса пымалла. Анҫах кивӗ капиталисла тӗнҫе пирӗн хушша нумай кирӗк хӑварнӑ, çав шӑрпилӑ, сотсиалисӑм строиттӗлствинҫе кайалла туртакан кирӗклӗхе пирӗн хайарран пӗтерсе пымалла. Унтан тасалас ӗçре кулӑш литтераттурӗ пысӑк вырӑнта тӑмалла. Вӑл протсес пӗр куккӑр-маккар-

[1]) „çеç" тенӗ сӑмахне кертме кирлӗ мар пулнӑ, мӗншен тесен, вӑл пролеттарин кулӑшӗнҫе те „çӑвара выҫатмалли" вырӑн хӑварать. Пирӗн вӑл оппеҫатка пек туйӑнать.

сăр, йака çулпа шыв пек йухса пыракан протсес мар, вăл револютсиллĕ класла çапăçу урла, савна пула пролеттари сотсиалисăмла культтурипе пуршуаллă культтурă хушшинче кĕрешӳ урлă пырат. Пролеттарлĕ культтурă пуршуаллă культтурăпа кĕрешмесĕр, унăн мĕн пур йуралтне илмесĕр пулма пултараймаст. Илемлĕ литтераттур, кулăш литтераттурĕ тенĕпĕр епĕр, çав протсесра хăйпе тивĕçлĕ ĕçе туса пымалла.

Халхи рекконструкси тапхăрĕнче икĕ инхăçап килĕшме пултарайман тăшмансем, капиталисăмпа сотсиалисăм хушшинче йулашки хастарлă çапăçу пырат. Сотсиалисăм хăйĕн çĕнтерӳллĕ ĕçне пĕр чаранмасăр малалла шутарат. Сотсиалисăм кив тĕнчене çĕнтерсе пынă çĕрте кулăш литтераттурĕн пахалăхĕ питĕ хăватла пулмалла.

Кулăш литтераттурĕн халхи вăхăтри клас çапăçăвĕсенче, капиталисла елементсене, пĕтĕм классене пĕтĕмĕшпех пĕтерессишĕн, екрономĕкра тата çынсен ăстăнĕнче те капиталисăм йулашкисене çĕнтерессишĕн пĕтĕм ĕçхалăхне классăр сотсиалисăм опчĕствин ăнлануллă, хастарлă строителĕсем тăвассишĕн кĕрешекен, ăна малалла хирсе пыракан рычаксенчен пĕри пулмалла. Урăхла пулма тивĕç мар, çавăнпа та Етменĕн статйинчен илнĕ сăмахсене тĕрĕс тетпĕр епĕр, анчах уппах та çитеймест.

II

«Комедия—последняя фраза всякого образа мировой истории. Боги Греции, раненные смертельно, умерли уже раз трагической смертью в «Скованном Прометее» Эсхила. Но это не избавило их от вторичной комической смерти в диалогах Лукиана. За чем нужно это истории?—Для того, чтобы человечество весело прощалось со своим прошлым» (К. Маркс.—«К критике Гегелевской философии права»).

К. Марксăн çак пит таран шухăшлă, епĕр тĕпчеме тытаннă ыйту çине йепле пăхмаллине кăтартса паракан самахсенчен пуçласа йарасшăн епĕр хамăр сăмаха. Истори тĕплĕ (основательно), тет Маркс. Менле те пулин кив опрăса пытарас пулсан, вăл нумай фасăсем урлă иртет. Вара тĕнче истори кирек мĕнле опрăсĕ те хăйĕн йулашки сыпакĕнче кулăшла йапала (комети)) пулса тарат.

Совет сойусĕнче вăйлă клас çапăçăвĕсенче кивĕ тĕнче вырăнне çĕнĕ тĕнче ӳссе çирĕплесе пырат. Капиталисăмăн йулашки кирпĕчĕсем ывтана-ывтана каяççĕ.

Халхи вăхăтра, тата ытларах малалла чăн-чан кулăш лит-

тераттурĕ вăхăтĕ тесессĕн те ытлашши пулас çук. Çавăнпа та пуҙ пĕри пирĕн театтăрсене:

«До зарезу необходим свежий революционно-бытовой репертуар и в первую голову советская комедия. Сколько новых «недорослей» трепетно ждут своего воплощения на сцене»... тесе çырать. Ахаҙрен мар пулĕ йалсенҙе кометисене купĕп-çĕрĕн кĕтессĕ. Çавнашкалах ахаҙрен мар пуҙ «Капкан» хăпарса пырать. Ахаҙрен мар. Пире кометисем ҙан-ҙăп кирлĕ, вĕсене пама пит васкавлă тытанмалла. Хаҙхи ҙаплă вăхăта ҙаплă кометисем кирлĕ. Унăн çĕнтерӳллĕхпе çунатланса кив тĕнҙене кулса ăсатакан кометисем кирлĕ. Комети пирĕн çĕнĕлле, ураланса пыран пурнăç çине сĕвенсе пур кирек̃лехе таварса кăтартса кулмалла. Анҙах кулăш пĕр стсена çинче выҙанă комети урлă кăна мар, вăл урăх çерте те пулма пултарать.

Сăмахран, ака кино. Пирĕн ҙăваш кинокарттинĕсем хушшинҙе кулăшла фиҙмăсем çук. Çав кулăшла фиҙмăсене тавас ĕçĕ те пĕрре те палармаст.

Ун çинҙен пиҙетре те шарламассĕ. Анҙах, тĕрĕсслпе каласан, пирĕн екран çинҙе кулăшла фиҙмăсем питĕ пысăк ĕç тума пултарассĕ. Çакна пурин те сисме, тăнланса илме кирлĕ. ҙи малтан ку ĕç кометисем çыракансене пырса перĕнет. Вĕсен çак ĕçе пулăшмалла, кулăшла киностсенарсем пама тытăнмалла. Вăл йапала ытахаҙрен кана туниме пулмасть, пирĕн комети çыракансен киностсенарисем çырма вĕренмелле. Киноискуствăна илемлĕ литтературă хушшинҙе, кинорешиççорсемпе хутошнĕксен, литтераттăрсен хушшинҙе таҙă çыхану тытмалла. Унсăрăн ĕç йнасса шанҙăк пит те сахал. Ун çинҙен пиҙетре те сăмах тапратмалла. Анҙах кунта пуршуаллă кулăш кинофиҙмăсем хыççăн каймалла мар, вĕсен хӳринҙе çапкаланса пымасăр мĕн пур илме май пуррине илсе пымалла.

Вара комети пĕр стсенă çинҙе анҙах мар, вăл екран çинҙе те пурăнма (выҙҙанма) пултарать.

Кулăш тени, кулăшла çырнин тĕрлĕ романсенҙе, повĕççенҙе, калавсенҙе, паçнасенҙе т. ыт. вырнаçать. Çавнашкалах тĕрлĕ карикаттурăсенҙе те тĕл пулатпăр.

Ака «Капкăн» хăйĕн странитсисене кашни нумĕртех тĕрлĕ карикаттурăсемпе илемлетет. Анҙах вĕсене пĕр илемлетесшĕн кăна «сăрлаççĕ» тесен тĕрĕс пулмаст. Карикаттурăсем вĕсем хăйсене уйрăм илемлĕ просветенисем пулса тăраççĕ: вĕсем тепĕр ҙухне, тепĕр кулăшла калавран та т. ыт. те кайă мар, маларах та тăма пултараççĕ. Епĕр кометисем çинҙен калаçма, сӳтсе йавма, тĕпҙеме

кирлĕ тейетпĕр пулсан, çавнашкалах кулăшла карикаттурсем çинчен те калаçма, сÿтсе йавма, вĕсене тĕрлеме кирлĕ. Ку тĕлĕшпе те ĕçсем пирĕн наçар.

Кулăш пĕр çĕрте кăна тăварланса тăмасть, унăн вырăнĕ пит те сарлака. Пĕтĕм искуства фротĕнче хăйне тивĕçлĕ вырăн йышăнать. Унăн пахалăхне халхи тапхăрта чакарма мар, хăпартса пымалла. Вăл халхи вăхăтрап килсе тăрать, вĕсем хушшинче питĕ таçă сыхăну. Мĕн тума кирлĕ çав кулăш? Сотсиалисăм тăвас ĕç малалла кăна майĕпе аваллăха кулса ăсатма. Кунта куççулпе йĕрсе, йе «куççул виттĕр» кулса ăсатни кирлĕ мар. Пролеттарпат халхи, пĕтĕм талкăшпе сотсиалисăмла наступлени пулса пынă вăхăтра, вăл тĕпвипех çĕнтерессине, çĕнтерсе пынине ĕненсе, курса тăнă вăхăтра, çăпахах та çĕнĕ сотсиалисăмла пурнаç пур йенчен те куç умĕнче хăйĕн алли витĕр пулса пынă вăхăтра, пролеттариат тата унпа пĕрле çĕпĕ çул çине куçнă чухăн, вăтам хресчепсем куççул виттĕр кулма мар, пĕр куççулсăр шанчăклă, çĕнтерÿллĕ кулăшпа анчах пулма пултараççĕ.

Мĕне пĕлтерет куççул виттĕр кулни? Вăл кулăшла йавленисене пĕтĕм çĕнтерсе илме май çуккине кура, йе çав кулăшла йавленисене çĕклесе тăракан çынсенчен кулнă май çавăнтах вĕсене шелленипе кула—кулăш куççул виттĕр тухнине пĕлтерет. Кулнă вăхăтра, кулăш опйекчĕ хăйĕн хăрушлахне, кичемлĕхне çĕнтерме шанчăксăррине систерсе тăрса кулăша куççул виттĕр кăларат.

Халхи вахăтра çĕнтерме шанчăксăррине мар, çĕнтерме шанчăклăхне çĕнтерсе пынине куратпăр. Мĕне пĕлтерет ку? Вăл халхи кулăш урăхла пулмаллине пĕлтерет. Çапах та теприсем çавна пĕрре те курасшăн мар, вĕсемшĕн пулсан пролеттариатăн та куççул виттĕр кулмалла, вĕсемшĕн пулсан урăхлăхĕ нимĕн те çук. Акă Вал тискуççи пуçланă майĕпе пичетлешнĕ статйинче халхи кулăш литтераттурĕ куççул виттĕр пулма сĕнет, Кокăл çапла кулнă тет. Итлер Вал калапине:

— Кокăл куççул виттĕр кулнă—патша влаçĕн çĕрĕк кив пÿрократла аппаратĕнчен. йĕркинчен тарăхласа, вăл çĕнĕ йĕркешĕн (М. А.) патшалăхăн çирĕп буршуаçиллĕ аппарачĕшĕн кулнă. Пролеттари литтераттурĕнче те çак шăнăр питĕ кирлĕ, ăна паллă вырăн памалла. Сотсиалисăм тăвас ĕçре тухакан йăнăшсенчен, тунтерлĕхсенчен тăрăхласа—куççул виттĕр кулма кирлĕ-и, кирлĕ мар-и. Кирлĕ, тет. (Курçăив мап М. А.). Паллах А. Вал пĕтĕмпех пăтранса кайнă. Тата хăй пăтравнипе çитмест ыттисене те пăтратасшăн.

Аккатĕмĕк Котъаровски, Н. А.:

«Кокăљ Раççейшĕн хăй пурăннă вăхăтри патшалăх йĕркинљеп ытла нимĕн те кĕтмен... Пĕтĕм хăйĕн консерваттивлĕљĕрипе хăйĕн вăхăтĕнљи йĕркене сыхлас ĕмĕтпе пурăннă... Вăл хăйĕн кулăшне патшалăха пулăшма пултаракай, пулшăшма кирлĕ орути тесе шутланă», тесе çырат[1]).

Кокăљ хăйĕн кометисенље, повĕçсенље патшалăхăп пўрократла аппаратне виттĕр «тĕрĕс» кăтартнă пулсан та, патшалăх йĕркине çĕмĕрессе, улăштарасса мар, хăйĕп куççуљ виттĕр кулăшĕпе вĕрентсе љинавнĕксене йусасса тĕллесе çырнă. Кокăљ кулат, анљах çавăнтах шеллени сисĕнет, киљемлĕх пусса илет. Кулăш куççуљпе хутшăнат. Кокăљ кулăшĕп паллăлăхĕ, уйрăмлăхĕпе епĕр паллашма ĕлкĕрнĕ, йĕрлĕ авттăрсеп мненисем те çавнах калаççĕ. Кокăљ хăй те çавнах калат.

«И долго еще определенно мне чудной властью итти рука об руку с моими странными героями, озирать всю громадно-несущуюся жизнь, озирать ее сквозь видный миру смех и незримые, неведомые ему слезы» («Мертвые души» глава VII, стр. 194).

Çак сăмахсенљен паллăлăхĕ, уйрăмлăхĕ курăнсах тăрат. Çав шухăша тепĕр çĕрте те урăх майлăрах туса калат:

«Сквозь смех..., читатель услышал грусть», йе тата «веселое мигом обратится в печальное, если только долго застоишься перед ним» т. ыт. те.

Куççуљ виттĕр пулнин тымарне Кокăљ вăхăтенљи реформă умĕнхи економĕкра пулса пынă протсессенље, опља йĕркинље шырамалла. Çав протсессем, патшапа помешљĕксен Раççейĕ çĕрме тытаннипе кăтартакан протсессем.

Раççейĕн «љăн сăп-сăпатне, пĕтĕм унан сăнсăрлăхне уçса, унăн тискер кашнăкунлăхне, сутăннă љиновнĕксене тата вçатăљниљĕстване, пĕтĕм пĕр çĕре пуçтарса, љунтан-вартан патша Раççейне («без европейских выдумок»—револютсисемсĕр М. А.) љиртен хăтарас шутпа, љиновнĕксене й... ас («облагородить») тенĕ шутпа, хăйĕп куççуљ виттĕр кулнипе пĕтĕм Раççейе вăтантарса, намăслантарса унăн тискер хăрушă сăнне çуса тасатас майпа, Кокăљ харăс пуринљен те кулас тенĕ, анљах хăйĕн кулăшĕ ытла та «шала», «љĕрре» кĕрсе кайма пул-

1) Литературная критическая библиотека под ред. В. М. Фриче. Н. В. Гоголь, ГИЗ М-ва, 1930, стр. 167, 168, 171 Купикков кăтартнă тăрăх Кокăљ хăйĕн çырăвĕнље. «пламенел неугасимой ревностью сделать жизнь свою нужною для блага государства» тесе çырат.

тарппне кура, патша интересёсемпе хирёсе кайассипе кура, вăл хăй сăрланă картпнёнђен хăраса ўкнё. «Внутри себя я слышал упреки и ропот против своей же пьесы» («Ревизора» М. А.) тет Кокă.ђ. Кам та кам Кокăлён кулăшне касарусăр хёрхенўсёр кулăш тет—вăл йапăшат. Творенсем хушшинђен тухнă, вёсемпе сыхăнса тані Кокăлён куссулё кулăшё творенсене хирёс касарусăр кулăш пулман, пулма та пултарайман.

«Вдруг взрыв смеха. Страшного смеха, смеха судорожного, в котором были и стыд и угрызение совести, и, пожалуй, не смех до слез, а слезы до смеха». (Герцен).

Нам еще жаль старый порядок вещей, кому же и пожалеть его как не нам. Мы созданы им, мы его любимые дети, мы сознаемся, что ему надобно умереть, но не можем ему оказать в слезе» (Валах).

Кокă.ђпа Кертсён хушшинђе тăванлăх пур. Савăппа та Кертсён сăмаххисем ђылай усса парассё. Вёсем Кокă.ђ творенсемпе сыхăнса таннне кăтартассё, савăппах сыхăнса тарат—унăн кулăшё те. «Каман лавё синђе ларатăн, савăннех йуррине те йурлатăн» тессё. Хăйён, йулашки пурнăсне Кокă.ђ мистптсисăм ăшне путарђё. Паллах кунта хăйне тпвёслё локёккă пур. Унăн «видный миру смех и **незримые неведомые** (Курссив ман. М. А.) ему слезы» тепё сăмахсене тёплёрех ђухласа илсессён, савăнтах унăн мистптсисăм йенелле суланасси курăнсах тăрат. Сапла кёскен пăхса тухнă хыссăн, усăмлă татаклă вывăт тухса тăрат: Кокă.ђён куссу.ђ виттёр кулăшё пролеттари литтераттурине тăванлă мар, унта ăна ва.ђ.ђи выран сук. Унпа кёрешсе, ăна сёнтерсе пырса капа епёр сотсиалисăм ёсне туса пыракап хамăрăн пролеттариллё кулăш литтераттурине тума пултаратпăр.

Ва.ђ пролеттарите, сёнё пурнăс тăвакан ёссыппипе куссу.ђ виттёр култарасшан. Майакковски те, Темйан Петнăй та савпашкалах пулма.ла тесе вёрентет. Темйан Петнăйпа Майакковскине Кокă.ђпе пёрле лартма ниййепле те килёшмест. Темйан Петнăйа пётёмёшпе пролеттарла саттирёке творенсен инссаттёлёпе пёрлештерес-и? Ăстан, мёнђен вăл апла. Сапла калани Темйан Петнăй синђен (Майакковски синђен те) питё пысăк елек сарин пулса тăрат. Ва.ђ пёр «пёђёк» йапалапа «манса» хăварпă—ха.ђхи вăхăта. Пире куссуллё комети, куссу.ђ виттёр кулни кирлё мар, апђах Кокă.ђрен епёр йуморпссене ђылай пулăшма пултарат. Ха.ђхи саттирёксемпе йуморпссен Кокă.ђ т. ыт. сумёнђе вёренсе вёсем хыссăн йурттарса

пийепле вĕренмелле мар теместпĕр, вăл çапах та хаҕхи саттирĕксемпе каймалла мар, вĕсенҕен çитĕнсе иртсе хаҕхи сатаҕсемпе пымалла. Кунта икĕ тĕрлĕ пăтранма пултараççĕ. Пĕрисем куççене хупса хыççăн кайма пултараççĕ (пултарнă та), теприсем вĕсенҕен пире нимĕн усси те пулас çук теме пултараççĕ. Вĕсенҕен нихăшĕ те йышăнма

Шҕетрĕнăн саттирне те çаплипех пĕр улшăнмасăр хаҕхи вăхăта куçармалла тенисем питĕ пысăк йăнăш тăваççĕ. Ваҕшан пулсан, çав ыйтусем асра та çук, вăл Кокăҕ, Шҕетрĕна тата ыттипе хаҕхи вăхăта иксе килесшĕн, вăл вĕсен айне пулнă. Ытлах ан сисĕптĕр тесе пулас «пролеттари куçĕпе çĕнĕ пурнăç тăвакан ĕççынпи куçĕпе пăхса кулмалла» тет йулашкиҕен.

Паллах хаҕхи вăхăтра урăхла кулăш, урăхла кулăш литтераттурĕ çитĕнсе пырат. Ăна хаҕ авалхи кивĕ виçепе виçме йурамасть. Çавăнпа та епĕр çĕнĕ советла кометисем кĕтетпĕр. Хаҕхи кулăш вăхăтĕнҕе пире вăйла, пысăк, çĕнĕлле кулакан саттирĕксемпе йуморпссем кирлĕ. Вĕсем çитĕнсех пыраççĕ.

III

Пире мĕнле кулăш литтераттурĕ кирлĕ. Çак ыйту хаҕхи кулăшла литтераттур умĕнҕе паллă ыйту пулса тарать, мĕншĕн тесен, ун çине тĕрĕс ответ панинҕен ҕылай йенҕен ытти ыйтусене йепле çутатса памаллипе, кулăш литтераттурĕ йепле пулмаллипе ҕухласа илме пулат. Анҕах хăшĕсем çав ыйтăва курмаççĕ те, теприсем кураççĕ пулсан та айакран çаврăнса иртсе кайаççĕ. Виççĕмĕшсем те пур—вĕсем çав ыйтăва кăпт та пулин пырса перĕнниех, анҕах тĕплĕн ҕухласа хаҕхи вăхăтпа çыхантарма пĕлеймесĕр тĕрлĕ-мĕрлĕ пăтратса пĕтерпĕ.

Çавăнпа та епĕр вăй çитнĕ таран çутатса ӳçса парасшăн.

Октăпĕр революҕутси Совет сойусĕнҕи пĕтĕм ĕçхалăхне ҕуралăх сăнҕарĕнҕен хăтарҕĕ. Апла пулсан, вара, çав ҕуралăхăн йĕрĕсем, сăнҕăр йĕрĕсем рапоҕҕипе пĕтĕм ĕçхалăхĕн пурнаçĕнҕе, Совет сойусĕнҕе пĕтĕмпех пĕтсе çитнĕ теме пулатши? Çук, апла калама пулмасть. Анҕах ку тĕлте кунтан тӳнтерлĕ, епĕр кив тĕнҕерен, унăн хамăра сийеплĕ йенĕсенҕен тасалма, вĕсене пĕтерме пултараймастпăр тени те паҕах тĕрĕс мар. Совет сойусĕ 14 çул хушшинҕе рапоҕҕипе хрестҕенсем, комуниссен парттийĕ йертсе пынипе, çĕнĕ сотасиалисăмлă опҕă тăвас ĕçре çултан çул ихăсан курман-илтмен утăмсемпе малалла пăхса пыни, Совет сойусĕнҕи пролеттариат Раççейри капиталисăмăн йулашкисене пĕтĕмпе кăкласа, хăртса пыни кирĕкрен тасалса пынине аванран аван кăтартать.

Пĕтĕм тĕнҕери пролеттариат хăй çийеле тухассипе сиссе, пĕлсе

тăрса, хăй ҫĕнтерсе пынине курса тăрса, тата ытларах, пĕтĕм ҫĕр ђăмăрĕн 6-мĕш пайĕнђе сотсиалисăм тума тытăнпă пролеттарпат, пĕтĕм пурнăҫа урăх майлă ҫаварса лартса сотсиалисăмла пикĕс хывса пынă ҫĕрте, хăйĕн ĕҫпе шанђăклă, ҫĕнтерӳллĕ туса пынă вăхăтра, пролеттарпат виђкĕн, хастарлă, ташмана виттĕр тухакан, ҫав вăхăтрах, хăйĕн ҫитĕнӳллĕ шанђакĕпе тулли пĕр ӳкĕнӳсĕр шеллевсĕр хăрамаслă пролеттариллĕ саттирă, йумăрпа апђах кулма пултарат. Ку епĕр хамăртан шухăшласа кăларса ҫыпăҫтарнă йарлык мар, вăл пролеттарпатăн пĕтĕм историллĕ практĕкĕпђон тухса тăрат: пуршуаҫи хăйĕн йулашки кунĕсем ҫывхарса пынине кура йулашки шăпăрсене карăнтарат. Хай мĕнле те пулин хăйĕн пурнăҫне тăсма хăтланни, вăл ђĕрĕллех ҫĕрме тытăннипе авапах кăтартат. Ҫав ҫĕрме тытăнпă пуршуаллă опђăпа ҫапса салатса, ҫĕнĕлле опђăллă строй, ҫĕнĕлле опђăллă отношенисем туса савăпăҫлă пĕр куҫҫулђĕр аваллăха ĕмĕрлĕхе ăсатмалла. Урăхла пулмаст, пулма та пултараймаст. Ҫак ыйтăва урăх майлă, мĕнле те пулин, ҫутатма тарăшни пĕрре те тĕрĕс мар, урăхла каласан, пролеттарпатăн класлă ҫапăҫăвĕнђе питĕ сиенлĕ йапала пулса тăрат. «Куҫҫулђ виттĕр кулăша» пролеттарла кулăш литтераттурăне кирек мĕнле майпа сĕнсен те, кирек мĕнле форма тăхăнтарсан та, темĕнле «науђна» йакатса каласа никĕслесе ĕпентерме тăрашсан та, вал питĕ сиенлĕ йапала пулса тăрат, мĕншĕн тесессĕн, ăна илемлĕ формă тăхăнтартса, тĕрлĕ майлă витĕнтерсе «ҫĕрпрођђăнла» пролеттарлăх сĕнсе, пролеттари литтераттурне пăрса илсе кайма хатланнипе пĕлтерет. Кулăш литтераттур ыйтавĕсенђе Кокăђ хыҫҫăн куҫ хупса кайма сĕнни, ҫавпашкал потхот маркҫисла потхот мар, формăллă-меттафиҫĕклĕ потхот, вал Кокăђ вахăтĕпђи вырăссен историпе халђи вăхăт хушшинђи уйрăмлăхсене, вĕсене хутăштарма май ҫуккипе пĕрре сулнипе ђĕрсе пăрахат, урăхла каласан истори ђылайĕ вăхăтне кăларса ыватат. Кунта тиалектĕклĕ потхотăн шăршийĕ те ҫук, ҫавпашкал ҫав епохăхсен кађђĕствăллă уйрăмлăхне шута илессин, Кокăђĕн куҫҫуллĕ кулăшăн класлă никĕсне аналĕслессин халђи вăхăта куҫарса лартни кала пур. Вара ыйтава ҫапла лартнипе паллăл итеалисăма парпе кӳни кана пулса тарат.

Анђах халђи вăхăтра куҫҫуллĕ кулăш мĕнле сĕткенпе тарапма пултарат, пурши ăна валђи никĕс? Пирĕн шутпа пурах. Пролеттарии ҫĕнтерӳллĕ кулăшĕн тымарри вăл кăпиталисăма ҫĕнтерес шанђăкрра, Совет сойусĕнђе («в одной стране») сотсиалисăм тума шанђак пурринђе, сотсиалисăм пысăк утăмсемпе талкăшпе саралса пырса кăпиталисăмăн йулашкисене таптаса, хăртса пынинђе пулсассăн, куҫҫуллĕ

кулӑшӑн тымарри пролеттариат ҫӗнтерессине ӗненменнинҁен, уйрӑм Совет сойусӗнҁе сотсиалисӑм тума май пуррине ӗненменнинҁен, класлӑ тӑшманӑн вӑйне пысӑклатса уптан хӑраса ӳкнинҁен сӗткен илсе тӑрат.

Йулашкинҁен вара вӑл хайӗн тымарӗсемпе сылтӑм сулӑнҁӑкпа тротскисӑмӑн теориттӗклӗ никесӗсем патнелле ҫывхарни курапат. Ҫывхарни кӑна та мар, вӑл лиипе пынинҁеи, вакпуршуалла липерали-сӑм куҫлӑхӗ витӗр пӑхнинҁен тухса пынине ӑнлаоа илме те йавӑрах мар.

Ҫавна вара «маркҫисӑм» тесе сӗпеҫҫӗ, ҫав ӗнтӗ вара пролеттарии кулӑш литтераттурӗне ҫул кӑтартса паракан, теҫҫӗ.

Ҫак статйара тапратнӑ ыйтусем ҫинҁен малашне татах ҫырма тивет. Ку статйа пуҫламӑшне хуни ҫеҫ.

Кулӑш литтераттурӗн пултаруллӑх меттӑҁӗсем, мӗнле прийомсемпе ҫырасси ҫинҁен, саттирӑ йумӑр распаллӑхӗсем ҫинҁен, ҁӑвашсеп кулӑш литтераттурӗн сӑнлӑхӗсем ҫинҁен уйрӑмӑп ҫырӑпӑр. М. А. й-ш тепрере Йалавиппа Ваҁ ҫинҁеи пӗтӗҫтерсе калани, кулӑш опйекҁӗ, меттӑт т. ыт. ҫинҁен ҫырса пама хатӗрленет.

ҪӖНӖ КӖНЕКЕСЕМ

ТУРПАССЕМ.

К. Краснов—Кӗҫӗнни. «ҪУНКАВ», Ҁӑвашистат, Шупашкар, 1932 ҫ., 47 стр., хакӗ—65 пус.

Хӑш-ҁух писсаттӗлсемпе поетсене вулакансен йатлас та килет. Мӗншӗн тесен вӗсем вулакансем ыйтнине памаҫҫӗ. Ҁи малтан вӑл ҫителӗклӗ ӗҫлеменнинҁен, творҁҁӗствӑн пахалӑхне хӑпартассишӗн кирлӗ таран тӑрӑшманнинҁен килет,—пирӗн мӗн пур вӑйа творҁҁӗствӑ пахалӑхне хӑпартас ҫӗре йамалла. Ку писсаттӗлсемпе поетсене творҁҁӗствӑ ыйтӑвӗсене тӗплӗреххӗн, тата тарӑнраххӑн вӗренме, нумайрах ӗҫлеме, итеолоки тӗлӗшӗпе ҫитӗнме хушат. Анҁах пирӗн хӑш-пӗр писсаттӗлсемпе поетсем ҫак тӗлӗшпе сахал ӗҫлеҫҫӗ. Пуринҁен ытла ӗҫ ҫапларах тӑни ҫамрӑк - писсаттӗлсем, поетсем, криттӗксем хушшинҁе сисӗнет. К. Красновӑн „Ҫункав" йатлӑ спорнӗкӗ пирки те ҫавнах калама тивет. Автӑр хӑш-пӗр сӑввисенҁе калама ҫук мӑн шухӑшсем каласшӑн, анҁах вӗсем пӗҁӗк шухӑшсене наҁар каланинҁен те кулӑшла тухаҫҫӗ. Хӑш-пӗр сӑввисене паҁах та ӑнланмалла мар,—тем каласшӑн унта автӑр? Сӑмахранах: «„Вилнӗ" Хусанкайа» ӑнланма ҫук. „Вӑрҫӑ йытти" те, „Тете патне" те ҫавах. Ытти сӑввисене те ӑнланма хӗн. Ӑна автӑр хӑй те сисет пулас, ҫавӑнпа та-и тен вӑл:

„Ан вӑрҫ ытла, вулакан,
Ӑнланмастӑп ан тейсем", тесе ҫырат.

Анђах, поет капла каланипех ҫăлăнма пултараймаст. Мĕншĕн тесен, вулакансем автăр ыйтнă тăрах, мар, унăн ĕҫĕсем тăрăх. происветенисене хак параҫҫĕ. Паллах, „Тете патне“ сăвăшăн вулакансем автăра ырлас ҫук. Унта автăр тем каласшăн пулнă?

„Хама хам еп пĕлместĕп...“

тет автăр ҫак сăвăра. Мĕне ку пĕлтерет? Паллах, автăрăн творђђĕствă установккисем, класла поҫитси ҫирĕпленсе ҫитейменнине пĕлтерет. „Тете патне“ сăвва сийенлĕ сăвă теме те йурат. Унăн шухăшĕ пĕтĕмпех вакпуршуаллă. Унти пек шухăшсемлĕ етем ҫĕнĕ пурнăҫа активлă сыхлаймаст, киввишĕн тăма та хăрат. Ҫавăнпа та, вăл хăйне хăй пĕлеймен пирки, калат:

„Уйăх ҫапнă ҫын пек, йаланах
Темшĕн (?) туртăнап пĕлĕте...
Анђах
йывăр—
сурат хулпуҫҫи..

Уйăха
утланап-утланап тенĕ
ђух—ҫĕре палт!
тирĕнеп“, тет.

Автăр каланă тăрăх, унтан ҫакă етем „ђирлет“; ăна „вилĕм курăнат“, „хăрушă“ т. ыт. те. Мĕншĕн ҫавăн пек? Тен, кунти пурнăҫ ăна килĕшмест? Калас пулат: вакпуршуаҫин хăш пĕр сийĕсене халђхи пурнăҫ килĕшсех каймаст,—вĕсем кĕрешӳрен таҫтах тарма хатĕр. Ҫак шухăша автăр „пĕлĕте туртăннă“ пек туса кăтартнă. Анђах пурнăҫран тарма ҫук, пурнăҫ ăна „туртса“ антарат. Ҫак сăвăри вакпуршуаллă итейă ĕҫлекенсен массисене кĕрешĕве ђĕнеймест, вăл реаксиллĕ,—ҫавăнпа та, сийенлĕ.

Автăр тата ытти сăввисенђе те пĕлĕтпе, уйăхпа аташат.

„Пĕлĕтпе выђаса ыр куратăп...“
„Ывăнсан уйăха утланатăп...“ („Ҫул йурри“).

„Улăп тупăкĕ умĕнђе“ йатлă сăввинђе вăл „планетри сыснана ĕнтни“ ҫинђен (34 стр) калат. Тата: „хĕвеле насуспа сӳнтерме, йе Марăса (планеттах) алăпа тӳнтерме“ никам та пултараймани ҫинђен калат. Ытти сăввинђе те кун пек шухăшсем пур Автăр, „хăйне хăй пĕлсе“ ҫитеймен пирки, пайанхи строиттĕлствăн ӳсĕмĕсемпе ҫитменлĕхĕсене кăтартса парса ĕҫлекенсене прорывсем пĕтерме ђĕнес вырăнне—шухăшĕсемпе пĕлĕтелле уйăх хыҫҫăн ђупат. Кун пек йухăм литтературăра пулман мар,—пулнă: вăл—„космисем“ тенĕ йухăм. Анђах унăн ĕмĕрĕ халĕ иртнĕ темелле: Краснов ку тĕлĕшпе ҫĕнĕрен ним те калайман.

Ытти ыйтусене те вăл „вопђе“ лартат. Клас тăшманĕ ҫинђен ҫырат, анђах тăшман ҫинђен конкретнă каламаст. Сăмахранах, „кашлакан уй-хирĕнђе“ класлă тăшман ҫавăн пек ђухнă.

„Хайар тайкан ирсĕр вăйĕ
„Таткаласа ăна
(комсомолĕса)—(хут.)
кышларĕ...“
„Тискер ҫĕлен
ши ши
шахăрђĕ...

Унăн сасси
лăх лах
ахăрђĕ...“ (12 стр.)
Йе тата:
„Ей, тăшман,
халех хуп
...

Йанахху кĕçтет—
кӳр,
наструклам...“ (35-мĕш стр).

Тăшман кунта „вопђе“ кăна курăнат. Тата кĕрешӳре классем пĕр-пĕрне „Йанахху кĕçтет—кӳр, наструклам“ тесе тăнине есĕр ăçта курнă? Çук, пĕрре те апла мар! **„Тăшман парăнмаст пулсан — ăна пĕтерэççĕ“**—тет кун пирки Максим Коркки.

Краснов хăйех тепĕр сăввинђе кĕрешӳ çинђен калат:

„Тăшман
Веркĕшет вăрманта,
Тăшман
Сăрса илнĕ хире.
Кам паттăр—пĕр харăс
фронта!
„Йе вилĕм,
Йе пурнăç пире!..“ („Фронта“)

Çапла, кĕрешӳре „кӳр йанаххунтан çапам“ тесе тăмалли çук, мĕншĕн тесен кĕрешӳре ыйту: „йе вилĕм, йе пурнăç“ тенĕ пек кăна тăрат.

Спорнĕкре лайăх сăвăсем те пур: „Фронта“, „Вăраннă йал“ „Пиллĕх“, „Патрак йурри“ т. ыт. те лайăх тухнă. Пуринђен ытла „Фронта“ килĕшӳллĕ. Шухăшĕ унăн çирĕп.

„Револђутси хушат çапăçма!“—
тет автăр. Çак шухăш пĕтĕм сăвă витĕр тухат.

Йе тата тепĕр сăввинђе:

„Хурçă пек çирĕп
пулма ыйтатăп“—тет вăл.

„Вăраннă йалта“ йал мĕнле çĕнелсе пынине кăтартнă; ăнланмалла мар вырăнсем кунта та пур. Анђах вĕсем сăвă хакне ӳкермеççĕ.

Çапла, „Çункав“ спорнĕкре йурăхсăр сăвăсем пур вăхăтрах килĕшӳллĕ сăвăсем те пур. Малашне автарăн нумайрах ĕçлемелле. Вара:

„Хаваслар,
Мухтавлар
Сăвăлар-ха,
Сăвăçăн хуп ан пултăр арђи,
Шăратар çĕнĕ йурă,
Пулар-ха
Хурçăран хыванна шăнкăрђи“—

тесе çырни те вырăна кĕрĕ. Вĕренмелле!—Çакна манмалла мар, çитĕнмелле!—Кăна та манмалла мар. Вулакансене „Çункав“ (турпас) мар, илемлĕ, таса шухăшлă сăвăсем памалла.

Епĕр Краснов (Кĕçĕнни) çырма пултараймаст, тесе каласшăн мар. Унăн çитменлĕхĕсемпе йăнăшĕссене криттĕклесе—ана, тата ытти çамрăк писсаттĕлсемпе поетсене те пулăшмалла.

ЂĂВАШ ПРОЛЕТТАРИ ШИВОППИÇĔШĔН.

Пурнăçа тĕп никĕсрен революци илĕ улăштарасшăн кĕрешекен пролеттариат, хăйне хирĕç кĕрешекен клас тăшманĕсен вăй-хăватне çĕмĕрсе тăкса, хăйĕн клас çул-йĕрне питĕ çирĕппĕн тытса пырат. Культтур строиттĕлствин нумай ĕçĕнче, „вĕçĕ-хĕррисĕр" нумай формăллă пайĕсенче, вĕсен шутĕнче пролеттари искуствине аталантарас, çирĕплетес ĕçре, польшевиксен принтсĕпĕсемшĕн кĕрешсе çĕнтерсе пынипе çеç епĕр çак ĕçе çулĕрен-çулерех çĕнĕ сыпăксем çине хăпартса пыратпăр. Пролеттари искуствине клас кĕрешĕвĕнче татах та çивĕчрех хатĕр тума аслăрах, сарлакарах, хăвăртрах ўсмелли çул çине кăларса искуствăра та, партти кăтартса панă пек „Макниттостройсемшĕн" кĕрешсе пыма пултаратпăр.

Тўрех каламалла: пролеттари литтераттурĕ, мусăкĕ, театăрĕ халĕхи тапхăрта сотсиалисăм строиттĕлствин пайанхи ыйтăвĕсенчен кайа йулса пыраççĕ пулсан, пространства искуствисен фронĕ—архитектура, шивоппис—ытти искуствăсенчен те йылайах кайра тăрать. Çавăнпа та простаранствă искуствин фронтĕнче пирĕн парти йулашки вăхăтра пролеттари литтераттурĕ тĕлĕшне панă польшевикле кăтартусене тĕплĕн тăнласа илсе, вăл кăтартусене çак фронтра та мĕн пур паттăрлăхпа пурнăçа кĕртессишĕн çапăçма тытăнмалла. Пролеттари искуствин малта йертсе пыракан пайĕсем чи малтан—пролеттари литтераттурĕн кайарах тăракан искуствăсене хайпе танлашма пулăшса малалла çĕнтерўсем патне йертсе каймалла.

* * *

Чăваш республĕкĕнчи искуствăсенчен, вĕсем пурте пекех Октапĕрти революци хыççăн тин ўсме тытăннă пулин те, пространствă искуствисем чи çамрăкраххипе чи вăйсăртараххи, вĕсем сотсиалисăм строиттĕлствин халĕхи тапхăрĕнчен темиçе çул кайалла тăрса йулнине куратпăр. Чăннипе каласан, пирĕн пространства искуствисенчен пĕр шивоппис кăна аталанма тытăннă, архитектурăна илсен—кувта пирĕн нийепле тапрану та çук-ха. Чăваш республĕкĕнче тăвакан çуртсенче, архитектурĕ стилĕ йенчен, пĕринче те натсиллĕ формăн мĕлкийĕ палăрнине курмастпăр. Архитектăр Аввакумăвăн, йылайах паха пройекчĕсем те ку телĕшрен (архитектурăра натси формин проплемине лартас тĕлĕшрен) малалла утнине кăтартмаççĕ пулас. Çав вăхăтрах Шупашкар урамĕ варринче, нумайах пулмасть, вăтам ĕмĕрти рытсăрсен пашнĕссене, вĕсен стилне чĕртекен хапхасем „илемленсе" (кам вăрçманши вăл хапхасене?) лараччĕç. Хапхи тарама-ха... Хресчен çуртне, Йуститси кăмиссариачĕн çуртне, йе рапфак урамĕнчи çĕнĕрен туса лартнă çуртсене илер. Паллах, вĕсенче пĕринче те епĕр ăшчикĕпе пролеттариллĕ натси формăллă искуствăн проплемине лартнине курмастпăр.

Анчах шивопписçре те пирĕн пĕр станокпа сырнă карттинăсен пайĕ кăна маларах кайнă: плаккат искуствийĕ, клупсене илемлетес тĕлĕшрен—кăштах пĕрер утăм пусма хăтланнине çеç куратпăр. Çав вăхăтрах çак кайран кăтартнă искуствăсем чи малтан плаккатпа клупсенчи искуствă, пайанхи строиттĕлствăра пит паха вырăнта тăмалла.

Иртнĕ çул пирĕн парттин Тĕпкомĕ плаккат литтераттурĕ пирки мĕн пур пространствă искуствисен фронтне çĕнĕлле ĕçлеме çул кăтартса паракан постановлени йышăннăччĕ (Постановление ЦК. ВКП (б) от 24 марта 1931 г. „О плакатной литературе").

Анчах пирĕн республĕкри хутошнĕксемшĕн вăл постановлени çутçанталăкра та пулманпа пĕрех: нийепле те, иментле ĕçре те вăл постановлени ĕçре палăрни курăнмасть.

Илер тата крафиккă искуствине, кĕнеке шурнал çийĕсене (хуплашкисене хатĕрлес асталăха. Каллех калама çук кайра, тăракан час-часах тăшманла итео-

локине саракан ăсталăх пулса тăрат вăл. Илĕр тĕрлĕ „Çуттаҫăл"-сен, шурналсен, пуринђен ытла „Хатĕр пул" шурналăн çинĕсене—вĕсенђе наротнĕкле, мешђенле, итеалисла „ăсталăх" паллаксене çеç тăрат.

Çак пысăк сийен кӳрекен „ăсталăхсене" пайан кун кура тăркабах малалла та „усме" ирĕк пани—искуствă фронтĕнђе çĕрĕк либерализăма хутелени пулĕђђĕ. Кĕнеке кăларас ĕçре çакăн çине тинкĕререх пăхса халерех ĕçе çĕнĕлле çулсем çине куçармалла, укçашăн анђах сăрлакан „хутошнĕксенђен" хăтăлса ђăнтан пролеттари крафик искуствишĕн кĕрешме пуçлас пулат. Ку тĕлĕшрен çамрăк хутошнĕксене ĕçе хутшăнтарса коллективпа ĕçлеттермелле; коллективпа çамрăксем çеç мар, пысăк палăрса çитнĕ хутошнĕксемех питĕ паха ĕçлесе пыраççĕ пулсан (акă Кукрыниксы йатлă кариккатуриссенĕ илер-ха—вĕсем виççĕн пĕрле ĕçлеççĕ, хушаматне те пĕрлештерсе йанă. Куприйанăв, Крылов, Николай Соколов—Кукрыниксы), паллах, вĕренекенсен куна та ах та ытларăх пурнăçа кӳртме тăрăшас пулат.

Çапла Ђăваш р-ђи пространçтва искуствисене кĕскен çеç пăхса тухсан та, çитменлĕхсем ытлах та пысăккăн тăнине, пайанлăха çитĕнӳсенђен ытларах çитменлĕхсем çинђен калаçмаллине куратпăр. Анђах вăл çитменлĕхсене сылтăм оппортунисла „криçĕс, криçĕс пулмасан та криçĕс манерли пурах" тесе кăшкăрнипе мар,—апла кăшкăрни вăл пирĕн искуствă фронтне елекрени çеж пулĕђђĕ—умра тăракан сатаđсен анлăшĕне тарăнĕшне астуса, мĕн пур вăйа хурса ĕçленипе çеж ђăнниреx хăђхи тапхăрта пирĕнпеçĕн кирлĕ пролеттари пространствă искуствисене польшевикла ӳсĕм çулĕ çинĕ кăларма пултарăпар.

КЛАС ТĂШМАНЛĔ ВАЙСЕМПЕ КĔРЕШСЕ ВĂЙСЕНЕ ЂĂМАРТАР.

Пространства искуствисенђен (маттериал йышлăхĕ йенђен) пирĕн паллăрах вырăн йышăнса тăракани шивоппис теремер. Ку таранђен паларна хутошнĕксен карттинисене илсен, вĕсен (хутошнĕксен) пултарулăхĕ пролеттари искуства шутне кĕрекен искуствă теме пултараймастпарха епер. Вăл хутошнексем хушшинђе, пĕр йенђен—ђи реаксиллĕ—ђирку „искуства" („церковщина") маçтăрĕсене, итеалисла шивоппис шкулĕсен акĕнђĕсене, тепĕр йенђен—сылтăм поппутђĕксемпе сулахай поппутђĕксен протуксине куратпăр. Паллах, пирĕн „палăрса" çитмен хутошнĕксем те пур. Вĕсенђен нумайĕшĕ ђылайах паха йапаласем—шивописпе пролеттари итеолокишĕн кĕрешӳне кăтартакан йапаласем панике те куратпăр. Анђах çак çамрăк револьуцилле вăйсене пĕрлештерсе, ӳсме пулăшса вĕсенђен кивĕ, клас тăшманĕлле вăйсемпе кĕрешме пултаракан вăй-хăват тăвас пирки нимех те туман-ха.

Ђăвашсен хутошнĕкесем çырнă карттинĕсен теп маттериалĕ—етнокрафи маттериалĕ пулса тăнине куратпăр. Анђах „етнокрафи маттериалĕ" тени нимĕн те каламаст: пĕр йенђен хутошнĕк—етнокрафи маттериалĕнђен мĕнле клас елеменђĕсене илсе ĕçленине етнокрафи маттериалĕнђе хутошнĕх класлă уйрăмлăхсене курнипе курманнине, вăл маттериална мĕнле класăн ăнланăвĕпе пырса ĕçленине палах астуса тăмалла. Етнокрафи маттериалĕ çине унри класлă уйрăмлăхсене астуса пăхмалли пирки пирĕн петĕм искуствă фронтĕнђе сăмах сарлаканах тапрапса кайман пулсан, ти, ку ыйту кăçал пулсă иртнĕ мусăк конференцинђе ђылайах пысăк вырăн йышăнса тăђĕ. Ђ.П.П.А-йĕнђе ку ĕç çине мĕнле пăхни паллах: епĕр етнокрафи маттериалне („халах" сăмахлăхне) хирĕç мар, анђах ăна маркçисла тĕпђесе ĕçе илмелле, тетпер.

Сăмах тапранса майан, кунта етнокрафи маттериалĕ пирки [illegible] (Суттаҫăн 9-мĕш №-ђе „Пролеттариллĕ нурăна мусăкшан çапаçар" йатла статйинђе) хаштĕр тĕрĕс мар шухăшĕсене хирĕç каласа хăвармалла.

Пĕррехĕш: ...„туй..." сăмаххисене тăрăхлаеа çырсан та, пире йурăхлă йапала пулма пултараймаст ку.... „Пăс таканлă аттăм пур" йурра та „туй" хыççăнах асатмалла... Анђах, упан кĕввисийенлĕ мар, сăмаххисене улăштарсан [illegible] телхăвшăн йурталлă йура та тума пулат унтан" тет. Çак сăмахсем [illegible] кивĕ йурăран, сăмаххисене улăштарса, çĕнĕ кимăнесем" тăвас тенĕ петĕмпех натсионалисла. Йурă кĕввинђе таса формă кăна куракан итеалиста „теорйесенђен" айăккăх кайман. Алакĕр тухĕпе хăштер йурасен сăмахĕсем кака йурахсăр иккен, сăмахĕсене калаçа

ыватсан, вĕсенҫен ҫĕнĕ йурă та тума пулат иккен, паллах; пирĕншĕн йурăхсăр клас тăшманĕллĕ шухăш.

Иккĕмĕш: Алакĕр шуҫĕпе етнокрафи наукки клас тăшманĕллĕ йурăсен йышшин ҫавăн пек йурăхсăр маттериал „пуххи" пулса тăрат иккен. Вăл „Туй", „Ака-суха йурри" пек йурăсене „пайанах етнокрăфсене леҫсе памалла", вĕсем „етнокрăфсен маттериалĕ пулма пултаракан йапала кăна" тесе пуплешет. Мĕншĕн а ла? Йе Алакĕр шуҫĕпе етнокрăфсен мĕн нур ĕҫĕ те ҫав клас тăшманĕллĕ маттериала „вĕренсе" ларас еҫ антах-и мĕн? Тĕрĕс мар, сийенлĕ шухăш. Етнокрăф та хăйĕн ĕҫĕнҫе сотсиалисăм строиттĕлствинҫе мен пур марксисла наукка фронҫĕпе тан пымалла наукка. Тепĕр ĕҫ—ку таринҫен тĕрлĕ Никкольски, Вантер т. ыт. „професăрсем" етнокрафире пуҫ пулса тăна пулсан, вĕсене тĕпĕ-тымарĕпе кăларса ывăтса, марксисла етнокрафишĕн кĕрешесси. Ҫапла кăна тăмалла пирĕн умра ку ыйту.

Виҫҫĕмĕш: Алакĕр шуҫĕпе „Туй", темĕн пек хастарлă кĕвĕпе йанăрат пулсан та, вăл пролеттари хастарлăхпе палăртма пултараймаст, вăл кулаксен ниҫта шăнăҫтарайман хастарлăхĕпе пирҫешĕ кĕвĕ". Ҫапла ĕнтĕ „Туйра" хастарлăх пурах иккен, ҫăнах та вăл „кулаксен ниҫта шăнăҫтарайман хастарлăхĕ" ҫапах та... хастарлăх. Апла пулсан кунта Алакĕр хăйне-хăй хирĕҫлеместии? Ҫăнах та, епĕр вĕт пуршуаҫийĕн мĕн пур культтурине кăларса ывăтмастпăр, пуршуаҫи хăй тусулелле хăпарнă вăхăтра (период революционного под'ема) тунă хастарлă культтурне марксисла криттĕклесе хамăр ĕҫре усă курмалла, тетпĕр. Апла пулсан, кунта Алакĕрĕн каллĕ-маллĕ хуҫкаланни ҫех пулмас-ти. Паллах ҫапла. Вăл ниййепле те хăйĕн шухăшне пĕр вĕсĕнҫен тепĕр вĕсĕпе ҫыхаймаст? Мĕншĕн? Мĕншĕн тесен вăл кулаксен йурри „хастарлăхне" ытараймаст. Алакĕр шуҫĕпе „Туй" хастарлăхпа пулнă йурă пулсан, пирĕншĕн вăл, паллах, йĕркесĕр, таврари классен уйрăмлăхве шăлса лартма „тăрăшакан", шухăшсене салатма „тăрăшакан", куштан ҫăрсăрлăхĕпе, ĕрĕхсе кайнă кулакăн ĕлĕкхи пурăнăҫĕн сарлакалăхпе кăтартакан йурă. Акă мĕне Алакĕр „хастарлăх" „ҫапах та... хастарлă" тесе перкелешет. Алакĕр, ытла та „сулахайăн" курăнма тăрăшакансккер, тĕпрен шутласан каллех „халăх пултарулăхĕнҫе—халăхăн ăс-хакăлĕ, хастарлăхĕ текен натсионалиссем калаҫни паллах.

Епĕр етнокрафи маттериалне марксисăм-ленинисăм теорийĕпе аналислесе вăл маттериалпа ҫăваш пролеттари искутствин ҫак тапхăрти сыпăкĕнҫе ҫылайăх сарлакан усă курмаллине манмалла мар. Ку тĕлĕшрен ҫăваш хутоҷнĕкĕсен ҫăн пысăк „ҫитменлĕхĕ" (хĕшĕ-пĕрисен ҫитменлĕхĕ мар, сăмахран, Йури Сайтсăван: вăл етнокрафи маттериалĕ урлă, ытти маттериалти пекех, пĕтĕмпех клас тăшманĕллĕ, итеалисла пуршуаҫилле искуствăшăн кĕрешет, вăл етнокрафи маттериалне ним тишкĕрмесĕр, ун „ашĕнҫи" клас тымарĕсемпе туртăмĕсене ним уйăрмасăр пырса илнинҫе. Унтан ҫак маттериал тăрăх хăйсен пултарулăхĕпе—марксисла пултарулăхăн меттăҫĕпе активлă ĕҫлеме пĕлменнинҫе, вĕсем етнокрафи маттериалне пырса фоттокрăфла ӳкерсе илнинҫе

Ҫи малтан етнокрафи маттериалне итеалисатсилекен, пуршуаҫийĕн итеалисла искуствă меттăҫĕпе ĕҫлекен натсионалисла хутоҷнĕксем ҫинҫен. Акă Йури Сайтсăвăн „Ҫăваш хĕрарăмĕ" йатлă картинне (1929. „Сунталăн" 7 мĕш №—хуплашкине пăх) илер-ха. Йе ҫавăннех „Шăпăрҫă" йатлă карттинĕ ҫине пăхăр. Малтанхи карттинă пирки хăшпĕр комуниссемех „ку карттинă хутошĕствă (!?) пултарулăхĕ йенҫен пăхсан, ҫăваш хутошĕствă искуствине усă сывлăш (!) кĕнĕн туйăнат, ним иккĕленмесĕр тăмасăрах вăл карттин паллă вырăн йышăнса тăрасса ĕмĕтленмелле"—терĕҫ Ку анҫах та мар: ҫак сăмахсен авттăрĕн шуҫĕпе „Ҫăваш хĕрарăмĕ" карттинран „тытăнса пирĕн сотсиалисăмăн (!) кĕрешекен, ҫăваш ĕҫхăвалне сывăх хутошĕствă просветенисен сăн-сăпатне, хакне,—пултарулăхне (?) ҫĕне ҫул (!) ҫине кăлармалла иккен. (Сунтал асăнна №, умĕнҫи хуплашкин тепĕр йенҫи статйиран.)

Ҫак хаҫ илнĕ сăмахсене ҫыракан Ломоносăв йулташ пролеттари искуствишĕн кĕрешсе ĕҫре тĕрĕс ҫул ҫинҫе пынине епĕр аван пĕлетпĕр, анҫах ҫулерех илнĕ сăмахсем пĕтĕмпех пуршуаҫи искуствин акентне пролеттари искуствин ҫулне хуралкăй хутоҷнĕк вырăнне лартни—пысăк политтĕклă йăнăш.

Иури Сайтсĕв хăйĕн „Ҫăваш хĕрарăмĕ" карттинĕнҫе (кунта унăн техгĕккине те ним мрамалли ҫук) „Шăпăрҫăра" та ҫавах—„меттăсăр" ĕҫлемест: унăн мет-

тăђĕ тап-таса итеалисла хутошнĕксен меттăђĕ: вăл вĕресе тăракан клас кĕрешĕвĕнђен ; епле те пулин айаккарах „тарам“ пек туса (ђăннипе ėаласан вал унтан тармасĕ, кулаксен „сотсиалла саккасне“ пурнăçа кĕртет). вăтам емĕрти еçхалăхне пусмăрлакансен классен сăнĕсене илсе вĕсем урлă: иртни халђынђен йепле „ђенрех“, „хитререх“, „пуйанрах“, „сарлакарах“ („Ђăваш херарăмĕ“), „пурăнаç“ йепле „тулли“ „хавас“ „ырă“ „тута“ („Шăпăрçă“) „пулнă“ (камшан?) тесе анккинђен пыракан сукмаксемпе çўресе, халђхи сотсиалисам строиттĕлствине елеклеме, ăна хирĕç тухма хăтланат.

Йури Сайтсăвăн ытти карттинĕсемпе фотоçнимĕкĕсене илсен весене еçтетла итеалис хутошнĕк тунине, Сайтсĕв ђăваш ĕçхалăхĕн халђхи пурнăçевђе те ексоттикка çеç шыранине куратпăр. Тĕрлĕ пуршуалла „вĕреннĕ“ сынсем „ђавашсем“ çине йепле пăхнине çак кĕске тентатта аван кăтартса тăрат:

> „Белая чалма, белый с расшитыми, кумачными концами сорбан, далеко ниспадающий с головы, придают низовой чувашке... картинный и экзотический, восточный—не то арабский, не то еврейский вид“... (Брогхауз и Ефрон, Энциклоп. словарь, кн. 76, стр. 933—38).

Смирнов пек (словарти статйа автарĕ)—„уђђонăйсем“ револђутсиђђен ђаваш хĕрарамне çапла кăна курма пултарнă пулсан, хутошнĕк Сайтсĕв пролеттари револђутси хыççăн та ђăваш ĕçхалăхĕн пурнăçне çаплах курат.

Тĕлĕнмеллийех çук—иккĕшин те пĕр тымар, иккĕшин те пĕр тĕллев: вăл тавраси пурнăçа йурийех пăсса елеклесе кăтартасси. Ку тĕлĕшрен ике тĕрле шухаш пулма пултараймасĕ.

Меттат йенђен К. Танилăвăн карттинĕсене илер. Танилăв карттинесем пирки Ф. Павлăв („Сунтал“ 11-меш №, 1927.) çапла çырат: „Хутошнĕк ытла та шалса йакатса çырат. Мусăк искуствинђе ун пек стиле „хораљнăй“ йе „ђиркў стиле“ теççĕ тет. Анђах Павлăв хайĕн статйинђе çав „стилĕн“ клас тымарне ытла та шăлса „йакатса“ лартат. Кунта епĕр, паллах, мистистисăм, тĕн сĕремне саракан капиталисла классен акĕнтне куратпăр. Ан тив, Танилăв пеккисем „комсомолкка“ карттинă та çырма „хатĕр“. Анђах, вĕсем вăл ĕçе совет искуствинђе хăйсен пĕтсе пыракан классен итеолокине контрапантăлла илсе кĕме кăна таваççĕ, çакна астумалла та.

Пирĕн шивопиçре ку тарапђђен палăрса çитнĕ хутошнĕксенђен М. Спиритонăв хутошнĕк çинђен ытларах та, тепĕрех те калаçмалла, мĕншĕн тееен Спиритонăвăн пултарулăхĕнђе сийенлĕ, пролеттари искуствишĕн йут йапаласемпе пĕрлех хутошнĕк халђхи сотсиалисăм строиттĕлстви йенелле суланма тăрăшнине кăтартакан тентентсисене те куратпăр. Спиритонăв хутошнĕкĕ, унăн пултарулахне пĕр иккĕленмесĕр полђшевикла тўррĕн, çирĕп криттĕклесе, хамăрăн хутошнĕк тăвасшăн кĕрешес сатађа пирĕн.нийепле те манма йурамасĕ.

М. Спиритонăвăн пултарулăхне ђухăн (условно) виçĕ сыпăка „уйăрма“ май килнĕ пек туйанат. Епĕр „уйăрма“ сăмаха кавыђкана илетпĕр, мĕншĕн тесен Спиритонăв пултарулăхĕн пĕрремĕш сыпăкĕшĕн паллă пенĕсем иккĕмĕш, виççемĕш сыпаксенђе те палăрса тăраççĕ, çав вăхăтрах иккĕмĕш тапхăрта пысăк выран йышăнса тăракан темăсем, ĕçлес майсем—пĕрремĕш сыпăкрах пур, халђхи тапхăрта та хутошнек вĕсенђен хăтăлса çитеймен. Çапла виçĕ тапхар.хушшинђе нийепле те пат уйрăмлăх тупма май çук.

Малтанхи тапхăрта хутошнĕк пўри[illegible] ытларах хăйĕн карттинесенђе „таса искуствăшăн“ ĕçлет, çутçанталăка вак пуршуалла -интеликентле курса укерет. Кунта хутошнĕк тавраси револђутсилле опђă пурăнăçенђен айакра тани, хайен пултарулăхĕпе çав пурнăçра вырăн „йышăнайманнине“ кăтартаççĕ. Кунта епĕр Спиритонăвăн пейсашĕсем çинђен калатпăр.

Епĕр пейсаша хирĕç мар. Анђах, хутошнĕк çутçанталăка хăй тĕллĕн опђ пурнăçĕнђен патах уйрăм татса илсе „тап-таса çутçанталăк“ пек катартнине çынсем прироѓăна йепле пăхăнтарасшăн кĕрешнине манса хăварнине—паллах елеклĕ таса еçтеттисăмшăн кĕрешекен искуства йулашкийĕсем теме çеç пултаратпăр. Ђанах та Йури Сайтсăв пек хутошнĕкĕн кун пек „таса искуства“ тен, искуствăн тĕп темă выранĕнђех тăрат и тен те... епĕр ун пек искуствăна мешђенле тавраси пурăнăçран татса илме тăрăшнипе итеалисла ăнланнипе хытăн кĕрешмелле.

Иккĕмĕш тапхăрта—М. Спиритонăв хăйĕн пултарулăхĕн теп суланаçне стиокрафи маттерьяле çине куçарат. Кунта хутош[illegible] [illegible] сарлакăн еçлеме тытă:

пат. Кам пӗлмест Ҫпиритонӑвӑн „Ҫӑпата тӑвакан“ „Станок хушшинҫе“, „Вуҫах умӗнҫе“, „Тӑла пусни“, „Сакс“, „Суха тӑвакан“ т. ыт. карттинӗсене. Ҫак асӑннӑ карттинсене темӑ йенҫен (хӑш вӑхӑтра ҫырнине астусан) ҫылайӑх паха темелле. Анҫах хутошнӗк вӗсене ҫырнӑ ҫухне „ӗҫе непле пулнӑ савӑн пек“ ӳкерсе илме тӑрӑшнин курӑнат. Хутошнӗк хӑшпӗр карттинара хӑйне манерле-активлӑ ӗҫлеме тӑрӑшнӑ ҫӗрте паротнӗкле халӑха йуратниҫен, нишӑн (йе хаваслӑн, йе хуйхӑллӑн) куҫа шывлантарниҫен малалла кайман. Ҫак калаҫӑ елементсене ҫӳлерех кӑтартнӑ картинӑсенҫе аванах курма пулат.

Ҫак ӗҫ сӑнӗсене ӳкерсе паракан карттинсемпе йунашарах, ҫак тапхӑртах Ҫпиритонӑв „Ҫаваш хӗрӗ“ карттина, т. ыт. савӑн пеккисене ҫырат. Сирӗн умра тухйа тенкиссне ҫуталтарса тӑракан, пуйан хресҫен ҫеминиҫен илнӗ хӗр санӗ. Ытлах хутошнӗк хуҫалӑха хӑпартна вӑхӑтра, (карттина савӑн ҫух ҫырнӑ) патраксемпе ҫухӑнсен активлӑ совет ӗҫне „астумасарах“ тухналӑ хӗрсен сание сӑрлама пикенет пулсан, хутошнӗкӗн ҫак асӑннӑ иккӗмӗш тапхӑрти ҫул-йӗрӗ аванах палӑрса тӑрат: вӑл, пӗтӗмӗшпе илсен, хуҫалӑха хапартнӑ вӑхӑтра пуҫӗсене ҫӗкленӗ кулаксен натсионалисла интелликентси йснелле вӑйлӑнах туртӑнат. Хутошнӗк класлӑ уйрӑмлӑхсене курмапа пӗрех. Курсан, та („Шкулга“ йатлӑ карттин) наротнӗкле итеолокирен малах иртсе кайаймаст.

Ҫак тапхӑртах хутошнӗк пӗррӗмӗш тапхӑрти ӗҫне тс ҫӑсат, вӑл тӗлӗшрен нимӗнле улшӑнӑвах та тӑваймаст, природӑна ӑнланас тӗлӗшрен малалла утин курӑнмаст.

Ку тӗлӗшрен Ҫпиритонӑвӑн нулашки виҫҫӗмӗш тапхӑрти пейсашӗсенҫе улшӑну пуҫланнине курма пулат: хутошнӗк природӑна пӗр тӗллевсӗр илмест; вӑл Ҫӗмӗрле кӑмпинаҫӗ пулас вырӑна „Судостроительный“ савӑт пулас вырӑна т. ыт. те илсе ӳкерет. Паллах, ку хутошнӗкӗн пултарулӑхӗнҫи улшӑнӑва кӑтартакан йӑваш паллисем кана, ҫапах та...

Ҫапах хутошнӗк халҫ ӗнтӗ тӑла пуснине мар, тракторпа авӑн ҫаннине, тухна тӑхӑннӑ хӗр вырӑпне—ҫаваш шахтӗрӗсене, шӑпӑр калакан старик вырӑнне Улатӑр рапоҫҫнийӗсем йусаса хатӗрленӗ паравоса Канаш хулиҫи ӗсхалӑхӗ йенле хаваспа хирӗҫ тухса илнине кӑтартат. Хутошнӗк тӗрӗс ҫул шырат, савӑнпа хутошнӗке ку тӗлӗшрен пулӑшмаллах; ҫурӑмрав пырса лӑпканипе мар, йулташла хӗрӳллӗ криттӗклесе пулӑшмалл.

Ҫпиритонавӑн пайанхи пултарулӑхӗн тӗп ҫитменлӗхӗ—хутошнӗкӗн меттӑт тӗлӗшӗнҫен терек ҫукки. Вӑл тӗреклӗхе пӗр маркҫиста теори кӑна пама пултарат, пӗр польшевикла меттӑт кӑна хутошнӗкӗн пултарулахне пайан искуствӑ умӗнҫе таракан сатаҫсене ӑнланса илме пулӑшӗ.

Меттӑт йенҫен Ҫпиритонавӑн пайанхи пултарулӑхӗнҫе хутошнӗк пурнӑҫри фактсенҫен „ҫӳлерех хӑпарма“ пултарайманнине куратпӑр. Вӑл пурнӑҫри улшӑнусене, колхосри пурнӑҫа курат, анҫах ҫав пурнӑҫри йавленисене типласа ӳкерсе пама пултараймаст. Хӑйне манерлӗ „лефовское пассивное отображательство“ темелле Ҫпиритонӑвӑн пултарулӑхӗ ҫинҫен Ку ҫул—пиге йакӑлкка ҫул кунган приспособлентсӑсен—халттуршҫӗксен сукмакӗ ҫине лекме те пултарас ҫӑмӑл. Ҫакна епӗр Ҫпиритонӑв йулташа ним иккӗленмесӗрех кӑтартса памалла.

Иртнӗ ҫулсенҫе пӗр совешҫанире Ҫпиритонӑв хутошнӗке, ытти хутошнӗксемпе пӗрлех, унӑн пысӑк ҫитмӗнлӗхӗсем ҫине польшевикла уҫҫӑн кӑтартса панӑҫҫӗ. Ҫав кӑтартусене асра тытса ӗҫлесен, йулташла маркҫисла криттекӑ кӑтартса панисене тӗплӗн ӑнланса илсен, Ҫпиритонав, паллах, хӑвартрах та, паттӑртарах та ӳсме пултарӗҫҫӗ.

Кунта тата тепӗр йапала ҫинҫен ҫеҫ асӑнса хӑварас килет: пирӗн шутпа хутошнек умӗнҫе сотсиалисӑм тапхӑрӗнҫи йалхуҫалӑх улшӑнуне техникӑ йенҫен ҫеҫ курма хӑтланини хӑрушлӑхӗ тӑрат. Трактӑра, т. ыт. йалхуҫалӑх машинисене кӑтартни—кирлӗ йапала, анҫах ҫав вӑхӑтрах колхоснӗксен „санӗ“ те улшӑннине, вӗсем ҫенӗ вайхӑват пулса пынине кӑтартассине манса хӑвармалла мар. Анҫах ку ҫитменлӗх хӑйне тӗллӗн уйрӑм сиксе тухнӑскер мар, вӑл ытти ҫитменлӗхсемпе пӗрлех хутошнӗкӗн меттӑҫӗ ҫителӗксӗррине, Ҫпиритонавӑн тӗп сатаҫӗ—тиалектӗкле маттериалисӑм меттӑтне ӑнласа илес сатаҫ иккенне ҫеҫ кӑтартса тӑрат.

Ытти хутошнӗксен—Лаврентйӗв, Полянкоу, Васҫилйӗв пултарулӑхӗсем ҫинҫе. вӗсемпе ҫителӗклех паллашайман пирки, ҫарӑнса тӑраймастпӑр. Анҫах вӗсен

ђăвашсене пусмăрлани" йатлă карттине (Ку карттина „Супталăн 11-мĕш №-ђе 1931 ç. „Шуррисен çарĕсем йалă кĕрсен хресђенсене ним вырăнне хумасăр çарата-çарата çӳренĕ"—тесе йат панă. Ку тĕрĕс мар, мĕншĕн тесен кунта хутошнĕк, патша ђухнехи вăхăта кăтартасшăн пулнă) ђылайах паха карттинă. Анђах кунта хутошнĕк технĕккă йенђен кирлĕ таран ĕçлейменнине куратпăр.

УМРА ТĂРАКАН САТАЂСЕМ.

Ђăваш шивоппиçĕнђи çак ăсталăха малалла утма пулăшакан револютсилл çитĕнӳсене шута илсен, пирĕн шивоппис (кунта епĕр „пирĕн" тесе ђан-ђана совет искуствин картинне кĕремен елементсене çех калатпăр) хăйĕн малтанхи картлаçе çинђе танине, малашне ăна çӳлерех сыпăка—пролеттари искуствинĕ кĕрешес çул çине кăларасшăн пикенсех ĕçлемеллине куратпăр.

Ђăваш пролеттари шивоппиçĕшĕн кĕрешес ĕçре пирĕн халђи тапхăртах вай пысăках пулмасан та, вăл вăйпа кĕрешмелĕх пур. Пирĕн происвотсвăпа тађă çыхăнса ĕçлекен хутошнĕкесем пур: Сороккĕн, Филиппăв йулташсем; çамрăк хутошнĕксем ӳсеççĕ: Меçникков, Толстов, т. ыт. те. Вăтам шкулсенђе вĕренекенсем хушшинђе, колхоссенђе, тĕрлĕ çĕрте сапаланса хăйсем тĕллĕн шивоппис йенĕпе ĕçлекен йулташсем пурри те паллах. Çесĕрен ĕçлеме тытăнакан претпринаттисенђе крушоксем уçсах çак тĕлĕшрен ĕçе аталантарма тытăнмалла.

Сталин йулташăн: „Польшевиксен техвĕккăна хăйсен аллине çавăрса илмелле! терĕ лосăнка пурнăçа кĕртес ĕçре пространствă искуствисем йепле паха вырăнта тăни çинђен каламалли те çук. Çавăнпа çак искуствасене кĕçĕн тата вăтам шкулсенђе йепле вĕрентсе пынине аставас ĕçе те пирĕн умрах тытса тăмалла.

Анђах, ђăнниех пролеттари пространства искуствисемшĕн кĕрешес тĕлĕшрен йурăхлă йатне уçнă шкул урлă хамăра кирлĕ катăрсене хатĕрлеме тытăнмасăр ĕçе малалла йама йăвăр пулат. Пайанхи кун пространствă искуствисен фронтĕнђе катăрсем хатĕрлес ыйту вăл—тĕп ыйту.

Ку тĕлĕшрен хуграм-сигрен „хăйсем тĕллĕн" шăтса тухакан талантсем çине çех шанмалли çук: çĕнĕ катăрсене хатĕрлес ĕçе планлă, орканисатсиллĕ тума тытăнмалла. Никам та хутошнĕк пулса çуралмаст, вĕсене ытти катăрсене хатĕрленĕ пекех хатĕрлемелле.

Ђăваш интеликентсийĕнђи натсионалисла елементсем ку тĕлĕшрен йепле „шухăшланине" пăхсан, вĕсем ку ĕçре те партти политĕкне, пролетариалле интернатсионалисăма хирĕç пырса „икĕ култтур (вырăсла ђăваш култтурĕ) кĕрештерес" лосăнка кăларса тăратнине куратпăр.

Акă çавăн пек натсионалисла елементсенђен пĕри хăйĕн Наркомпроса йанă çыравĕнђе çапла çырат:

„Я слыхал, что вы открыли художественную школу. Радуюсь, но страшно огорчен таким нелепым подходом: принимают только окончивших 8-летку—при таком бюрократическом подходе у нас долго еще не будет художников, а будут рисовальщики. Я подбирал бы художников, а не окончивших, хотя бы 8-ти летку.

Если хотите **опередить русских в культуре**, то лучше держаться **чувашского правила**: смотреть на вещи по существу, **а на русского**: быть формалистом в каждом деле". (*Курççив—Т. Т*).

Çырăва 1928 ç. çырнă. Анђах çакна манерлĕ шухăшлакансем: пĕр йенђен—талантсем çине çеç тĕллев тытакансем, тепĕр йенђен—„ђăваш" култтурĕ „вырас" култтурĕнђен ирттĕрсе каймалла текен вак пуршуйллă-натсионалисла шухăшсем пĕтемешпех пĕтнĕ тесе каламалла мар. Ун пек Совет сойусĕнђи „икĕ" култтурă „икĕ" хуçалăх кĕрешӳн „теорийĕ" (ђанах та урăхларах сăмахсемпе, урăхларах напала çинђен) пумайах пулмаст Ђăваш партти орканисатсийĕ таса шыв çине кăларнă Флекенттăвăн оппортунисла çыравĕнђе питĕ уççăн палăртнăђђĕ.

Катăрсене хатĕрлес ĕçре, те çак ĕçри пекех çак шутра пространствă искуствисем валли **пролеттари катăрĕсем** хатĕрлес тĕлĕшре те натсионалиссемпе весен акĕнђĕсемне польшевикла кĕрешсе пынипе çеç епĕр ђăннипех сотсиалисăм строиттелствине кирлĕ çынсем хатĕрлеме пултарăпăр.

Хапрак-савăтра, колхоссенђе ĕçлекен çамрăксенђен искуствă фронђĕ валли катăрсене шкул урлă хатĕрлес ĕçпе пĕрлех пирĕн респуплĕкре ку таранђен

ӗҫле-ӗҫлеми пурӑнакан АХР орканисатсийӗ ҫинҫен те калаҫмалла. Ҫӑваш р-ҫи АХР орканисатсийӗ хӑйӗн умӗнҫе тӑнӑ сатаҫсене пурнӑҫа кӗртес телӗшпе ӗҫлемен темелле. Иртнӗ—1931 ҫул пӗтӗм искуствӑ фронҫӗшӗн, уйрӑмӑнах пространствӑ искуствисен-фронҫӗшӗн те калама ҫук паллӑ ҫул пулса тарат: март уйӑхӗнҫе Парттин Тӗпкомӗ плаккат литтераттурӗ ҫинҫен йурийех постановлени кӑларат; АХР орканисатсийӗн фраксийӗ пусласа йаниле пролеттари хутошнӗкӗсен ассотсиатсийӗ (майӗ уйӑхӗ)—РАПХ пуҫлапса кайат; йулашки вӑхӑталла партти искуствӑ фронтне татах та пысӑк кӑтартусем парат.—АХР-ӑн ҫӑваш филиале ҫак сопыттисене сиcмесӗрех ирттерсе йарат: вӑл хӑйӗн хупӑлҫи ӑшне кӳкленсе ларса политтӗклӑ пысӑк сопыттисен айккипе тӑрса йулат.

Ку акҫах мар: тӗрлӗ орканисатсисем—Ҫ.П.П.А., театтӑр, мустехнӗккӑм ҫрикатӑсем пӗрлештерсе претприйаттисене, колхоссене кайаҫҫӗ, промфинпланшӑн кӗрешес ӗҫе (ҫителӗклех пулмасан та) хутшӑнаҫҫӗ—АҪР хутошнӗкӗсем кунта та ҫук. Ҫапла АХР ҫӑваш филиале сотсиалисӑм строиттӗлствинҫен вӗҫех уйӑрӑлса кайат.

Ӗҫе малашне кун пек хӑварма йурамаст: хапрӑк-савӑтри клупсенҫе ӗҫлессине претприйаттисенҫи сотсиалисӑмла кӗрешӳне хутшӑнас телӗшпе халех ӗҫлеме тытӑнмалла.

Клупсем ҫинҫен калана май: пирен Шупашкарти клупсенҫе те пролеттари шивописҫӗпе килӗшмен тӗслӗхсене куратпӑр. Раппрос клупӗнҫи стсенӑ порттаҫне илсен те ку тӗлӗшрен ҫылайах кӑтартуллӑ тӗслӗх. Халӗхи пек АХР орканиетсийӗ вырӑнсе сарлака орканисатси туса хумалла, уйӑн йаҫҫейккисене претприйаттисенҫе, колхоссенҫе, шкулсенҫе орканисатсилемелле. Литтераттур орканисатси умӗнҫе те, мусӑк, театтӑр ӗҫӗнҫи пекех, пространствӑ искуствисене вӑйлӑ пулӑшса пырас сатаҫ тӑрат. Ҫи малтан кунта марксисла криттӗккӑшӗн, тӗрлӗрен клас тӑшманӗлле теорисене таса шыв ҫине кӑларса, вӗсемпе поҫшевикла кӗрешсе пымалла. Пространства искуствисем пирки пиҫетленнӗ клас тӑшманӗлле теорисене, криттӗкле статйаҫене криттӗклес тӗлӗшрӗн пирӗн ӗҫ талпоанайман-ха. Кун пек статйасем Ҫ П.П.А-йӗн хӑйӗн орканӗ „Сунтал" странитсисем ҫинҫен тухнисем те пур. Акӑ Ф. Павлӑв „Сунталӑн" 11 мӗш №-ҫе (1927 ҫ.) „Карттин" выставкинҫе йатлӑ статйара М. Ҫпиритонӑвӑн етнокрафиллӗ карттинӗсем ҫинҫен калана майӑн (вӑл карттинсене мӗнле меттӑтпа ҫырнине, вӗсен класлӑ тымарепе тӗллевӗ ӑҫталла пынине епӗр ҫӳлерех кӑтартма тӑрӑшнӑҫҫӗ) ҫапла ҫырат:

„Ӗмӗртен самана ҫавнашкал пырат:-пӗр-пӗр халӑх, йе унӑн тӗп класӗ истори ҫулӗ ҫинелле тухма пуҫласан, вара вӑл халӑх хӑйӗн ҫинҫен историне палла напаласем хӑварма тытӑнат. Хастарла хутошнӗксем.. ун пек ҫухне халӑхӑн сӑнсӑнатне, унӑн пурнӑҫне, йӑлисене, тавраш не—карттин ҫине укерме тытӑнаҫҫӗ"... „М. Ҫпириттонӑва етнокрафи хутошнӗкӑ. терӗмӗр... вӑл--пирӗн хутошнӗк. Вӑл хӑйӗн вирьлӗ куҫӗсемпе ҫӑваш ӗҫхалӑхӗн ҫӗршывӗ ҫине пикенсе пӑхма хапӑл туна. Вӑл ҫӑвашӑн пурнӑҫне сӑн ҫине ӳкерме тытӑннӑ".

Йе тата: Ф. Лаврентйӗвӑн фанттаҫи пысӑк..., полеҫи тарӑн.. Вӑл пирӗнӗ хутошнӗкӗ. наттуралисӑма йуратат рая.. импреҫҫионисӑм йенелле те сулӑнат".

Пӗр йенҫен, ҫак илнӗ сӑмахсем Ф. Павлӑвӑн кунта халӑхӑн „пӗр йухӑмпа пыракан" теорине (теория единого потока) тытса пыни, тепӗр йенҫен унӑн криттӗкле анализе формӑллӑ анализрен малалла иртменнине куратпӑр (наттуралисӑм, импреҫҫионисӑм терменсене вӑл формӑ тӗлӗшӗнҫен ҫеҫ ӑнланат). Кам пӑн усӑлла теори ку?

Паллах, натсионалиссене усӑллӑ, вӑлтерисӑм армане ҫине шыв ӑнтаракан теори.

Ҫӑваш пространства искутствисем пирки 1930 ҫ. ГАХН (Госуд. Академия худ. наук) кӑларнӑ „Искуство народов СССР" йатлӑ кӗнекере ҫакан пек вырӑна тӗл пулатпӑр:

„..Особенности чувашской вышивки характеризуют это искуство как типично крестьянское.., однако можно сказать, что она (вышивка—Т. Т.) остается скорее у зажиточных слоев крестьянства, имеющих больше досуга".

Малалла автӑр А. Фуксӑн: „чувашки чем богаче, тем рукодельнее" тенӗ сӑмаххисемпе килӗшсе, факт этот об"ясняется тем, что зажиточные чувашки располагают большим досугом" тесе хӑйен шухӑшне ҫаварса хурат. (70 стр).

1) Курҫҫив пур ҫӗрте те пирӗн.—Т. Т

Анҫах автăр калани ни истори йенҫен, ни йулашки вăхăтри фактсемпе килĕшмест: кам пĕлмест тĕрлĕ алаҫĕсене, вăл шутра тĕрсене те, пуйан хĕрарăмĕсем йалти ҫухăн хĕрарăмне тара тытса тутарнине. Ҫăваш йалĕсенҫе йулашки вăхăтсенҫех ҫавăн пек „тĕрĕ ăстисем“ пулнă, ҫас-ҫасах ҫав ĕҫ синҫе ларакаиисем те пулнă. Ҫавăнпа та ҫав ҫÿлерех илнĕ сăмахсене ҫыракан ҫăваш искуствине тĕпҫес тĕлĕшĕен пĕтĕмпех йут теорине сарни кăна пулса тăрат: хайне йевĕрлĕ—ҫăваш „халăх“ искуствине кулаксем тупă,—тейекен теори пулса тăрат.

Камшăн усăллă, мĕнле класăн вăйсене кирлĕ теори иккенни—вăл паллах вантерсен, йумансен т. ыт. нагсионалисла кăмăлĕсене хăпартакан теори пулса тăни каламасăрах палл ă.

Вантерисăм установккисемпе мĕн пур искуствă фронтĕнҫе вăйлă кĕрешес сатаҫа пĕрмайах асра тытсах тăмалла. Ку таранҫҫен ҫăваш шивоппиҫенҫен вăл установккăсене ҫăларса пăрахас тĕлĕшпе ĕҫлеме тытанман-ха. Паллах, Сайтсĕв пек хутошнĕксен пултарулăхĕнҫе ку установккăсем пурри тĕлĕнтермест, мĕншĕн тесен Сайтсĕв пултарулăхĕн клас сĕткенĕсем вантерисăм ҫымарĕсейҫенех тухса пырăҫҫĕ. Анҫах ҫăваш шивоппиҫĕн сулахай елеменҫесенҫе те вантерисăм канри вырăнта тăмасĭ. Ҫпиритонăв хутошнĕк пултарулăхĕнҫен етнокрафиллĕ карттинĕсем ҫинҫен калана ҫух епĕр кун ҫинҫеп ҫылайах ҫарăнса тăнăҫҫĕ. Калас пулат: епĕр ҫăваш пролеттари искутствийĕнҫи натси формин проплемине мĕн ҫул сивĕҫрех лартма тытăнсан ҫавăн ҫулах вантерисăмпа кĕрешес сатаҫ та сивĕҫлевсе пырасси, ҫав натси формин проплемине поҫшевикла тагса хунипе кăна епĕр пирĕн искуствăран вантерисăма пăрахасси паллах. Ҫавăнпа та ҫаваш пролеттари искуствишĕн кĕрешес ĕҫре хаҫхи тапхăрта вантерисăм тĕп хăрушлăх пулса тăрат“, ҫавăнпа та вантерисăма хирĕҫ пуҫланă кĕрешÿне пĕр йăвашлатмасăр вăйлатса пымалла.

Ҫак вăхăтрах „сулахайҫĕсен“ настройенисене хирĕҫ тухма та хатĕр тăмалла. Ун пек настройенисем ҫÿлерех асăнна кулҫтпропсовещҫанинҫе „Октапĕр“ платформи ҫинҫе таракан хăшпĕр хутошнĕксем хушшинҫен илтĕнкеленĕҫҫĕ. Епĕр пролеттари литтераттурĕнҫе оҫҫĕрка „пĕрген пĕр тинамĕклĕ шанăр“ текен теорисене хирĕҫ кĕрешнипе пĕрех, стануклă шивопиҫе плаккатшăн манса хăварма тăрăщакансемпе кĕрешме хатĕр тăмалла: епĕр плакката та, стануклă шивопиҫе те, ыгти „шанăрсене“ те вăйлатса, ÿстерсе пырассишĕн ĕҫлес сатаҫ уменҫе тăрататпăр, вĕсене пурне те сотсиалисăм строиттĕлствине пăхăнтарса тамалла.

Плаккатпа пĕрлех пирĕн шивопиҫре сотсиалисăмшан кĕрешекен утарнĕксене скулҫтурăра, портрет ҫинҫе т. ыт. майсемпе те кăтартас ĕҫе туса пымалла, рапоҫҫи класăн, колхосниксен пат тăр-ҫапă авĕпе ҫĕнтерÿсене пролеттари литтераттурĕнҫи пекех мусăкра, пространствă искуствинҫĕ кăтартассишĕн кĕрешер.

Совет искуствисем умĕнҫе тăракан ҫак тĕп сатаҫпа епĕр уйрăм шанăрсене маларах йе кайарах вырăна тăратнипе мар, хутошнĕкĕн, компоситтăрăн, писсаттелĕн пултарулăхне поҫшевисăм итейлăхĕпе авăрласа кан пурнăҫа кĕртме пултаратпăр.

* * *

Паллах, пирĕн хаҫхи Совет искуствин ҫиг вăйлă „йепĕ“ вăл итейлăх йенҫен ҫирĕппи (куна „йенĕ“ темелле мар, унăн ҫĕри темелле), вăл—РППА-йĕн йулашки пленăмĕ Совет литтераттурĕ пирки „Советская литтература является по своей идейной насыщенности самой значительной литературой в мире“ тенĕ кĕске поошенинҫе (ресолюсийĕн 4-мĕш пункҫе).

Ҫакă совет литтераттурĕ пирки калана сăмахсене мĕн пур совет искуствин фронҫе пирки те каламалла. Ҫак итейлăх йенҫен хаҫхи пуршуаҫи искуствине пăхсан ҫылайах интереслă йапаласем курмă пулат. Акă пуршуаҫи теореттĕксем хăйсен пайанхи искуства ҫинҫен мĕн каланисене илер ха.

Керманире пĕр паллă писсаттĕл, Алперт Тĕпаин ҫапла ҫырат:

„Искуствă ĕмĕрĕ иртрĕ, хаҫхи саманара искуствă—вăхăтсăр йапала“ „Дейтче альгемейнс цейтунг“ 1931 ҫ. майăн 9-мĕшĕнҫе).

„Кунст унд Кюнстлер“ шурналăн 1931 ҫ. нăуҫти ... Алперт Ламм ҫырат:

„Ĕҫ малашне те каплипех пырсан, искуствă тата пилек сул та ҫатса тăрапмĕ: хаҫхи хутошнĕксем ун ҫухне пулмĕҫ. Ҫĕпĕрен ҫамрак хутошнĕк-

сем тухасси ҫинҫен—шутламалли те ҫук". „Йулашки ҫулсенҫи искуства—суйа (фальсифицированное) искуства, вăл искуства мар... Ҫӗрӗ, малалла ҫӗнексн туртăмсен сӳнсе ларҫӗҫ... итейăлă, ҫӗнеллӗхе шыракан хутошнӗк выранне—рынак ваҫҫи ӗҫлекен хутошнӗк (художник де еҫ) типӗ тухре".

Ҫӳлерех илнӗ Кермани пуршуаҫийӗн куҫттурӗ тупинҫе тăракансем хăйсен искуства ҫинҫен ҫапла калаҫҫӗ пулсан, Франтсире те ҫав тӗкӗм, хура шухăшсемех вӗҫҫе ҫӳреҫҫӗ. Ака пӗр Вольтемар Шорш йаиласкер (Франтсири искуствă пӗлӗвҫи) „халхи искуствă ҫӗр проҫҫанӗпех хăй вилеӗ умӗнхи асаплăха кӗрсе ӳкрӗ"—тет.

Ҫапла малаллаха ҫухатнă искуствăн теореттӗкӗсем хăйсене манерлӗ хăшпӗр искуствăна пăрахăҫа кăларас теорисем шутласа кăларнисемпе те тӗл пулатпăр. Ака Ели Фора натла писсаттӗл „Агония живописи" йатлă статйинҫе:

„Паллах, хутошнӗксем пӗтмен-ха, вӗсем малашне те пулӗҫ, анҫах шивоппис, ҫакă ирикка пӗҫҫенлӗхӗн ҫеҫен инструменҫӗ—вилмеллӗвах ямаиăн туйăнат. Шивоппис кирлӗ, тесе ан та калаҫҫӗр мана. Ҫутă пӳлемрен... саватран, ваксалран, оккеан прахуҫӗсемпе оттелсенҫен хуса кăларнă шивоппис, кинепа ватно тинамисăмне тӳсеймесӗр хăйӗн статтӗкпă поситсийӗсенҫен тухса ӳкнескер—таврари пурнăҫшăн хăйен пахаралхе ҫухатрӗ... Ҫук, вăл (шивоппис) пире текех кирлӗ мар."—тесе ҫырат[1]).

Епӗр ҫакă танкаланакан кăпиталисăм искуства пирки каланисене вӗсем мӗне пӗлтернине пур йенҫен те пăхса тухмасăр (ун пек пăхса тухни пирӗн искуствă тӗлӗшпе ӗҫлеме тытăнакан ҫамрăксемшӗн питӗ усăллă, анҫах епӗр ăна ку статйара тума пултараймастпăр) пӗр йенҫен ана хăшпӗр искуствăсене теорисем вырăнтан кăларса ывăтни ҫинҫен калаписе астутарасшăн.

Пирӗн Совет искуствинҫе те „леф"-сем ҫаплах каламасҫӗҫ-и варя. Вӗсем („леф"-сем) хыҫӗнҫен литфронтсăсем те ҫав йуррăх йурлама тытăннаҫҫӗ.

Кăпиталисăм хăшпӗр искуствăсене ҫеҫ мар (кун пирки пуршуаҫи теореттӗкӗсем каппайни вăл исторйӗн ҫырлахусăр (неумолимый) протсесне курма хăраинҫен, йе ăна курсан та „шалсă" лартма тăрăшнипҫен ҫеҫ килет) пӗтӗм искуствăсене ӳсме ҫарма тытăнат пулсан, пирӗн Совет сойусӗнҫе, сотсиалисăм ҫулӗпе мӗн ҫул айаккарах утнă семен, искуствăн „формисем" калама ҫук нумайланса йышланса, тӗрлӗрен тӗрлӗ тӗссем тухса пырасси паллах. Пролеттари искуствин калама ҫук йышлă тӗсӗсем хушшинҫе пролеттари шивопписӗ те паллă вырăнта тăрат. Ҫакна „леф"-сем, вӗсен хирӗнҫе пыракан литфронтсăсем ăнланса илме пултараймаҫҫӗ.

Пролеттариатăн ӗҫхалăх куҫттурлăхӗ кашни кун тенӗ пекех ӳссе, ҫӳлерех хăпарса пырат. Рапоҫҫисемпе колхосникӗсем хушшинҫе сотсиалисăмлă ăмарту, утарниҫҫӗствă сарăлса пыни—ку тӗлӗшрен питӗ катартуллă йапала. Куҫттурапа ҫӗнӗрен хутшăнакан массăсем искуствă умне пысăк сатаҫсем лартаҫҫӗ, вӗсем польшевикла паттăр, тарăн итейăллă, тӗнҫене улăштарма пулăшакан искуствă ыйтаҫҫӗ.

Ӗҫхалăхӗ искуствăпа интересленнине ҫак фактсем те лайăх кăтартаҫҫӗ. 1929 ҫ. пӗр ҫулталăк хушшинҫе искуствă мусейӗсене (Музей изящных искуств) 473 пин ҫын пырса курвă. Р-ви Тӗп Мусейе пыракан ҫынсен шутне илсен те вăл пӗрмайах ӳссе пынине куратпăр.

Октапӗр револютсиҫҫен искуствăпа интересленме мар, ҫырма-вулама вӗренес тӗлӗшрен те аилкра тăнă ҫăваш ӗҫхалăхӗ пайан кун халӗн театтăрне, шивопписне, литтераттурне, мусăкне ӳстерет, вӗсене урлă пӗтӗм Совет сойусӗнҫи пролеттариатпа ӗҫхалăхӗпе пӗрле сотсиалисăмшăн кӗрешсе пырат.

Нумай та пулмаст (1923 ҫ.) ҫăваш натсионалисӗсенҫен пӗри искуствă ҫинҫен ҫапла ҫырнинҫе куратпăр: „пусмăртан хăтăлна ҫăваш хура халăхне тенҫе сулӗ ҫине тухма ҫунат кирлӗ, ҫав ҫунатта поеҫи ҫеҫ парат" (Йуман, Ахтономлă Ҫăваш оплăҫӗ, 147 стр.).

Пусмăртан хăтăлнă ҫаваш ӗҫхалăхӗ натсионалиссен „тӗнҫе сулӗ" ăҫталла иасе кайнине, „вӗсен ҫунаҫӗсем" ăҫталла вӗстерме хăтланнине питӗ лайăх астуса

---

1) Ҫак кăпиталисла патшалăхсенҫи хальхи искуствăсем ҫинҫен калакан сăмахсене „За пролетарское искусство" шурналăн 1931 ҫ. 10-мӗш №-ҫен илнӗ. Курҫсив пур ҫӗрте те пирӗн.—Т. Т.

тăрса, вĕсен çулĕçне татса, çунађĕсене хуçса сотсиалисăмшăн кĕрешекен сарлака çул çинђе хăйĕн натси формĕллĕ пролеттари искуствине çитĕнтерсе пырат. Вăл шутра тăваш ĕçхалăхĕн пространства искуствиĕсем те хăпараççĕ. Çак искуствăсене хăпартас ĕçре те тĕрлĕ вак-пуришалла натсионалисла йухăмсене хирĕç, пођшсвисăм принтсĕпĕсемшĕн мĕн таран вăйлăрах, çирĕпрех кĕрешĕлĕр— тăваш пролеттари шивописне, архиттектурне çав тери хăвăртрах аталантарса пырăпăр.

12/1—32 ç. Мускав. **Т. Танилăв.**

Ретексирен: Алђманаха Т. Танилăвăн çак ИСО искуства. шивописĕ çинђен çырнă статине кĕртсе, ретаксй искуствă тĕлĕшĕпе ĕçлекенсем ку статйара хускатнă ыйтусем тăрăх хăйсен шухăшне пелтересе шанса тăрат.

Кунсăр пуçне ытти искуствăсем (мусăк, театар, кино, архитектур ыйтăвĕсем) тăрăх та тĕплĕн тĕпђевлĕн сутсе-йавса марксисла-ленинла анализ пама та вăхăт иккенне астутарат. Хăш пĕр йулташсем ку тĕлĕшпе ĕçлеççĕ те ĕнтĕ, ретколлекисатанисем те панă. Укрăмăнах ĕçхалăх хушшине массăллă йурăсем йепле саралса пынипе ђăваш компоситтăрĕсен творђествине сăнаса хак памалла. Ђăваш театар сăнавĕсемпе çĕнĕ постановккасем, пирĕн трамалла протуктенисем, кино-карттинĕсем çинђен çырмалла. Ђăваш архитектури çинђен—Аваккумăвăн Петинститут, тĕп театар, куљтур çурђĕ, т. ыт. проекђĕсем тăрăх каттериалсем хатĕрлетпĕр. Ку ыйту тăрăх ĕçлекенсене, вĕсемпе интересленекенсене, йĕтĕм ĕçхалăх массине те çак ĕçсене хутшăнма, хăйсен маттериалĕсене пама ђĕнетпĕр.

Ретакси

ИЛЕМЛЕ ЛИТТЕРАТТУР ОРКАНИСАТСИСЕНЕ УРĂХЛАТАССИ ÇИНЂЕН

ПСК(п)П Тĕпкомĕ 1932 çулхи апрелĕн 23-мĕшĕнђе йышăннă постановлени.

1. Партти Тĕпкомĕ çакна палăртат: йулашки çулсенђе сотсиалисăм строиттĕлстви тунă палла çитĕнÿсен никĕсĕ çинђе литтераттурăпа искуства та йышлăх тĕлĕшĕнђен, çавăн пекех пахалăх йенђен те пысăк ÿсĕм турĕ.

Темиçе çул кайарах, уйрăмăнах çĕнĕ економĕк политтĕкĕн малтанхи çулĕсенђе, литтераттурăра йут. елементсен туртăмĕ уççăнах палăрса тăнă ђух, çав вăхăтрах пролеттари литтераттурĕн катăрĕсем вăйланса çитейменнине пула, пролеттари писсаттĕлĕсемпе искуствăра ĕçлекенсен поçитсисене çирĕплетес тесе, партти литтераттурпа искуства ĕçĕсенђе уйрăм пролеттарлă орканисатсисем туса вĕсене çирĕплетессине пур майпа та пулăшса пыђĕ.

Хаљхи вăхăтра, пролеттарлă литтераттурпа искуствăн катăрĕсене ÿстерсе çитĕнтерме ĕлкĕрнĕ хыççăн, савăтсенђен, хапрăксенђен, колхоссенђен çĕнĕ писсаттĕлсемпе хутошнĕксем ÿсĕе тухнă хыççăн, халĕ ĕçлекен пролеттарлă литтераттурпа хутошĕствă орканисатсисен (ВОАПП, РАПП, РАМП т. ыт. те) рамккисем хĕсĕк пулса тăраççĕ, çавăнпа та вĕсем хутошĕствăллă творђествă ĕçĕсем хăватлăн сарăлса каяссине ђарманкараççĕ. Çакăн пек пулни ку орканисатсисем созет писсаттĕлĕсемпе хутошнĕкĕсене сотсиалисăм строиттĕлстви сатађĕсем тавра ытларах мопилисатсилекенсем пула: вырăнне—вĕсенђен питĕрĕнсе ĕçлекен крушоксене саракансем пулса тăрасси, вĕсем хаљхи политтĕкла сатађсенђен уйăрлса йуласси, тата сотсиалисăм строиттĕлствишĕн таракан писсаттĕлсемпе хутошнĕксен ђылайах пысăк ушкăнĕсенђен уйăрăлса кайасси хăратат.

Çаксенђен литтераттурпа хутошĕствăллă орканисатсисене çĕнетсе урăхлатма кирли тата вĕсен ĕç никĕсне çирĕплетмелли курăнат.

Çаксене шута илсе, ПСК(п)П Тĕпкомĕ çакна йышăнат:

1. Пролеттари писсаттĕлĕсен ассотсиатсине (ВОАПП, РАПП) пĕтермелле;

2. Совет влаçĕн платформине тытса тăракан тата сотсиалисăм строиттĕлствине хутшăнса ĕçлеме тăрăшакан писсаттĕлсене пурне те совет писсаттĕлĕсен комунисла фраксиллĕ пĕрлĕхлĕ сойусне пĕрлештермелле;

3. Ытти йышши искуствăсене те çакăн майлах улăштармалла;

4. Çак решшенийе пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе оркпÿрона татăклă ĕç майĕсем хатĕрлеме хушас.

ПСК(п)П Тĕпкомĕ.

ЂАПП ÇЕКРЕТТАРИАЂĔ ПСК(п)П ТĔПКОМĔН ЛИТТЕРАТТУР ОРКАНИСАТСИСЕНЕ УРĂХЛАТАС ПИРКИ КĂЛАРНĂ ПОСТАНОВЛЕНИЙĔ ТĂРĂХ ЙЫШĂННИ.

ПСК(п)П Тĕпкомĕ литтераттурпа хутошĕствă орканисатсисене урăхлатасси çинђен йышăннă постановленийе ЂАПП çекреттариађĕ пĕтĕмпех те тĕппипех йышăнса хапăллат. Ку решшени вăл партти сотсиалисăм строиттĕлстви фронтĕнђе татăклă çĕнтерÿсем тунинђен, пролеттарлă литтераттурпа искуствă катăрĕсем ÿсниђен, литтераттурă интеликентсийĕ сотсиалисăм строиттĕлстви йенне çаврăнинђен килнĕ решшени. Партти йертсе пынипе, пролеттариллĕ литтераттур орканисатсисем (РАПП) литтераттур тĕлĕшпе ĕçлекен вăйсене савăтсенђен, хапраксенђен, колхоссенђен пуçтарса ÿстерес пирки пысăк çитĕнÿсем турĕ, тĕрлĕ майла палăракан сылтăмпа «сулахай» оппорттунисăма хирĕç, пролеттарлă итеолокийе тăшманлăн пыракан йухăмсемпе сулăнăçсене (ворошђĕна, переверçевшђĕнă, литфронттовшђĕнă тата ыт. те) хирĕç пырса, полђшевикла парттиллĕ литтераттуршăн кĕрешессинђе усăллă сăнавсем нумай пуçтарђĕ.

ЂАПП, партти йертсе пынипе, ђăваш литтераттуринђи натсионалисăмла, кулакла тата клас тĕлĕшĕнђен ытти йышши йут итеолокисемпе йухăмсене хирĕç кĕрешессинђе ђылай пысăк çитĕнÿсем турĕ, рапођђисемпе колхозникĕсенђен писсаттĕлсен çĕнĕ катăрĕсене ÿстерсе çитерђĕ. ЂАПП, 1923-мĕш çулхине орканисатсиленнĕ «Канаш» сойусĕнђен ÿссе пулнăскер, 1926-мĕш çул пуçламĕшĕнђен ВОАПП платформи çине тăпăскер, хăй ĕçлесе тăнă 9 çуллă вăхăт хушшинђе—пролеттари тиктаттуришĕн, сотсиалисăмшăн, ăшђикĕпе сотсиалисăмлă формипе натсиллĕ литтераттур искуствишĕн хастарлăн кĕрешекен пĕтĕм ђăваш писсаттĕлĕсене пĕрлештерсе тăракан пĕрреп пĕр орканисатси пулђĕ.

ПСК(п)П Ђăвашопкомĕ йертсе пынипе, ЂАПП литтераттур политтĕкĕнђи парттиллĕ çул-йĕршĕн кĕрешсе пыђĕ. Вăл ђăваш литтераттурĕнђи пуршуйллă натсионалисăмпа кулакла йухăмсене (Ванттер, Йуман, тата ыт. те) хирĕç, тата тĕп хăрушлăх вырăнђе шутланакан сылтăм оппорттунисăма хирĕç, пролеттариалле литтераттурăна вăйлатса çирĕплетессишĕн кĕрешрĕ. Çак вăхăтрах ЂАПП сулахай сăмахпа çаптаракансене хирĕç, ђăваш литтерат-

турĕн пуласлăхне шанман сулăхайсене хирĕç (ЂАПП-ăн ийулри пленăменђе тухнă йулташсен ушкăнĕ), çавăн пекех тата литфронттовстсăсен кусĕсемпе пăхакансемпе, попутђĕксемпе ĕçлеме килĕшменнисемпе, ЂАПП-ра «пролеттари писсаттĕлсен» питĕрĕнсе ларнă ушкăнне орканиçатсилеме хăтланнипе, пĕтĕм ђăваш литтераттурие пуçарса пыма килĕшменнипе тата урăххисемпе те кĕрешсе пыђĕ.

Тĕпком постановленийĕ «хаљхи вăхăтра пролеттариллĕ литтераттурпа хутошĕства орканисатсисен (ВОАПП, РАПП, тата ыт. те) хаљхи рамккисем тăвăрланса çитнипе вĕсем хутошĕствăллă творђествана пикенсех сарăлса кайма ђăрмантарнине палăртса, çакăнпа пĕрлех тата пур литтераттурпа хутошĕства орканисатсине те кирлĕ пек урăхлатма, вĕсен ĕç никĕсне урăхлатма кирлине йышăнат, ку тĕлĕшрен совет влаçĕшĕн тăрса сотсиалисăм строиттĕлствине хутшăнса ĕçлеме тăрăшакан пур писсаттĕлсене те пĕрлештерсе—комуниссен фраксиллĕ совет писсаттĕлĕсен пĕрлĕхлĕ сойусне тумалла тесе кăтартат.

Çакăнпала партти литтераттурăра крушковщђинăсемпе круппощђĕнăсем тымарланса вырнаçасран, хаљхи политтĕкла сатаđсенђен татăлса йуласран, тата сотсиалисăм строиттĕлствишĕн тăракан писсаттĕлсемпе хутошнĕксен ђылайах пысăк ушкăнĕсенђен уйрăлса кайасран систерсе асăрхаттарат.

Çак решенипе партти литтераттур орканисатсийĕсене поппутђĕксем текеннисен ĕçĕ çине те хыттăн асăрхаттарса пăхтарат, сулахай сăмахпа çаптаракансене хирĕç, ĕçе çĕнетме килĕшменнисене хирĕç тата вирлерех кĕрешмелли ыйтăва кăларса тăратат.

ЂАПП çекреттариађĕ пĕтĕм литорканисатсине партти Тепкомĕн постановленине пурнăçа кĕртессишĕн тимлĕн ĕçлеме, литтераттур Макнитстройĕшĕн, тата хапрăксенђен, савăтсенђен, колхоссенђен çĕнĕ писсаттĕлсен вăйне кăларассишĕн хастарлăн кĕрешме ђĕнет.

ЂАПП Çекреттариађĕ.

ЂПП Ассотсиатсине ликвитатсилесси çинђен.

ПСК(п)П-Тĕп комиттеђĕ 1932 çулхи апрелĕн 23-мĕшĕнђе литтераттурпа хутошĕствăллă орканисатсисене урхалатасси çинђен йышăнна постановленийĕ пурнăçлас майĕпе Ђăваш Пролеттари Писсаттĕлĕсен Ассотсиатсийĕн (ЂППА) правленийĕ çакна йышăнат:

ЂППА орканисатсине пĕтерес. ЂППА ĕçĕсемпе укçи-тенкине, вăл кăларса тăнă истанисене алла илме, тата совет писсаттĕлĕсен Ђăваш сойусĕн сйесне пухса иртерме Орккомиттет уйăрса хурас. Оркомиттетра ĕçлеме А. Солаттав, В. Йаккăвлĕв, С. Дашман, К. Алентей, Н. Танилăв, Н. Полоруссăв йулташсене палăртас.

ЂППА правленийĕ.

ЂĂВАШ СОВЕТ ПИССАТТĔЛĔСЕН СОЙУСĔНЂЕ.

○ **Орккомиттетăн** çĕнĕ составĕ. Ђăваш Совет писсаттĕлĕсен сйесĕђђен писсаттĕлсен сойусĕн пĕтĕм ĕçĕсене йĕркелесе йертсе пымашкăн Орккомиттета çĕнерен çынсем хушса орканисатсиленĕ. Унта 15 çын: П. Иванов, А. Петтоки, Н. Патман, С. Лашман, Н. Васанкка, А. Солăттăв, С. Елкер, В. Йаккăвлĕв, Йăвап Муђи, С. Шăпђăк, Талвир, П. Н. Осиппăв, И. Т. Куçнетсов, Уйăп Мишши, тата Макçимăв-Кошкински.

○ **Орккомиттетăн пресçитиумне:** П. Иванов (пуслăхĕ). А. Петтоки (самеçтиттĕлĕ), Н. Патман (секреттарĕ). С. Лашман, Н. Васанкка (пресçитиум ђленĕсем) суйланнă.

○ **Орккомиттет** тĕрлĕрен ĕçсене йĕркелесе пыма виçĕ комиççи орканисатсиленĕ: 1) орканисантсипе истастĕлствă ĕçĕсем тăрăх: А. Петтоки, Н. Васанкка, С. Елкер, Шăпђăк, В. Йаккăвлĕв йулташсем тăраççĕ. 2) писсаттĕлсен пурнăçĕпе ĕç условисене пулăшас тĕлĕшпе ĕçлекен комиççи—П. Иванов, А. Петтоки, А. Солăттăв, Н. Павлăв (Ђăвашистат), П. Н. Осиппăв, 3) творђђĕствăла консултатси (лит. вĕренӳ) комиççи—Н. Патман, Й. Саххарăв, Йăвап Муђи, Лашман. Хутар йулташсем.

○ **Çĕнĕ ретколлекисем.** «Сунтал» ретколлекинђе—А. Петтоки (ответлă ретактăр), С. Елкер, А. Солăттăв, Иванов П. И., Н. Патман, Н. Васанкка, Ç. Шăпђăк, Талвир, «Трактăр» альманах ретколлекинђе—Н. Васанкка (отв. ретактăр) И. Куçнетсов, А. Солăттăв, П. Н. Осиппăв, Йăван Муђи, Уйăп Мишши, Й. Саххарăв, тата Митта Васлейĕ ĕçлĕмелле.

○ **Макçим Кошкин ђысласа,** вăл литтературтурăра 40 çул ĕçлениине хисепленĕ май çĕнтапĕрĕн 25-мĕшĕнђе Шупашкар хули совеђĕпе Ђăваш Совет писсаттĕлĕсем ђаплă лару туса иртерђĕç. М. Корккин кĕрешӳ çулĕпе литтераттурăри ĕçĕсем çинђен Й. Саххарăв токлат туса пађĕ. Токлат хыççăн М. Коркки пронсветенисен ьынăкĕсене вуласа пађĕç.

М. Корккин ку тĕле «Манăн университетсем» тата „Амăшĕ" йатлă пронсветенисем пиђетленсе тухрĕç.

М. Коркки çинђен ђăвашла пиђетленнĕ пронсветенисене Ђулхулари М. Коркки йађĕпе хисепленекен мусейе йараççĕ.

○ **Ђăвашсен халăх писсаттăрĕсем** йаглă спорнĕк пиђетлесе кăларма хатĕрленеççĕ. Унта писсаттĕлсен пиокрафийĕсем тата вĕсем çырнă пронсветенисемпе кескен паллă тарни пулмалла. Спорнĕке Орлов хатĕрлет.

○ **Ђăваш писсаттăлĕсен пронсветенисене вырăсла куçарас ĕç** Ђулхулара Октапĕр револютси 15 çул тултарнине уявланă тĕле ђăваш писсаттĕлĕсен пронсветенисене пиђетлесе кăлараççĕ. Унта В. Краснов, А. Петтоки, Уйăп М, Митта, Йăван Муђи, Гукташ, Трупина Мархви. Ђалгун. Хусанкай. Васанкка т. ыт. çыранисем пулаççĕ.

В. Краснов-Асли «Вутра» повеçне вырăсла куçарнă, Н. Тукташăн «...çырмийĕ» куçарăнат. 1933 çулхи пĕтĕм тăрăх Патшаликан илемлĕ литтературо истаттĕлстви (ГИХЛ) ђăвашсен куçарса ... пиђетлесе ... пиђетлеме йышăннă.

РЕТАКСИНЕ КИЛНЁ ÇЫРУ

ЛИТТЕРАТТУР АРХИВНЕ ТĂВАССИ.

Çак алманахăн пĕрремĕш кĕнекинҫе Н. Ваçанкка çырнă „Писсаттĕлсен алçырăвĕсене пухса пырасси“ йатлă статйана вулаcа тухнă хыççăн, ҫăваш литтераттурĕ архивне майласси çинҫен хамăн шухăша çырса пĕлтерес терĕм.

Ҫăваш литтераттурĕ сотсиалисăмшăн хастарлă кĕрешекен ĕçхалăх масси хушшинҫе пит те кирлĕ вăйлă орути пулса пытăр тесен, пирĕн ҫăваш пролеттари литтераттурĕ йухăмĕн историне, тата унăн çĕнелсе вăйланса пыракан тапхăрĕсене пĕлсе тăни те питĕ кирлĕ. Октапĕр револютсине те епĕр пĕтĕм тĕнҫери револютси йухăмĕн историве пĕлсе тăрса тунă.

Литтераттурă ĕçне çеç мар, кирек хăш оплăçăн ĕçне те, сотсиалисăм тăвас ĕçри хăвăртлăхсемпе тан йертсе илсе пырасси, пирĕн ума çав ĕç йухăмĕн историне тĕплĕн пĕлсе тăрас сатаҫ кăларса таратат.

Апла пулсан пирĕн ҫăваш пролеттари литтераттурĕ Октапĕр револютси хыççăн мĕнле майланса, мĕнле меттăтпа ĕçлесе, çак таранҫен мĕнле çĕнĕ вăйпа, çĕнĕ тапхăрсемпе ÿссе пынине тĕплĕн кăтартакан токкумĕнтсем кирлĕ.

Çак тĕлĕшпе ҫăваш писсаттĕлĕсем алманахĕнҫе йатарласах „литтераттурă архивĕ“ йатлă уйрăм туни пит вырăнлă ĕç шутланмалла. Вăл уйрăм литтераттур орканисатси аллине лекеймен писсатĕлсен хаклăрах токкумĕнҫĕсемпе алçырăвĕсене пухма, тата çав литтераттăрсен пултарулăхĕпе паллаштарса пырса писсаттĕлсене халхи ĕçре пулăшат.

Писсаттĕлсен алçырăвĕсене пухса пынă пулсан, вăл архив мĕн таран хаклă тăнине каласа та пĕтерес çук. Октапĕр револютси пулăшнипе ҫăваш ĕçхалăхĕ историре ҫи пирвайхи хут туйăннă литтераттурлă токкумĕнҫĕсем, вĕсем—ҫăваш хуçалăхĕпе култтурă историйĕн пысăк теп вăйĕ пулса тăраççĕ. Çак сотсиалисăм тăвас ĕçе кăтартакан токкумĕнтсене ним вырăнне хумасăр тупăка çапса хурса шăтăка йани, вăл—çĕршывăн происвотствăллă вăйне сарассишĕн кĕрешекен ĕçхалăх оппăтне вĕлерсе хуни пулат. Пирĕн историк-марксиссем: „Уничтожить архив легко, восстановить не возможно“ теççĕ.

Çавăнпа та пирĕн литтераттурă архивне майласа йарасси, тата унта орканисатсилесси пайанхи сатаҫ пулмалла. Ку тĕлĕшпе ҫи пирвай пирĕн вилнĕ писсаттелсен алçырăвĕсене, йатарласа кампани тусах пухмалла. Сăмахран, Тайăр Тимкки, Çеçпĕл М., Тал-Марса, Ахах, Кели К., Иссайĕв М., тата ытти йулташсем маттериалĕсем пире тепĕр 300 çул иртсен те политтĕк тĕлĕшпе танлаштарса пахма кирлĕ пулаççĕ. Çаваншăн вĕсен алçырăвĕсене

ашшĕ-амăшĕсенҫен, арăмĕсенҫен, йулташĕсенҫен, тăванĕсенҫен йе вĕсем ĕçленĕ уҫрештенисенҫен ыйтса пĕлсе пуçтармалла.

Çавăн пекех пирĕн халĕ пурăнакан поетсемпе писсаттĕлсен алçырăвĕсене те хакласа халех пухса пыма тăрăшмалла. Вак пуршуаллă, шовинисла, пеççимисла писсаттĕлсен алçырăвĕсем те, пире кирлĕ мар тейес пулмаст, вĕсем те пире йăнăшсене кăтартса тăрса, литтературă ĕçне малалла поҫшевикла çултан пĕр пăрăнмасар илсе пыма пулăшаççĕ. Уйрăм алăсенҫе, тĕрлĕ хулари шкулсемпе уҫрештенисенҫе сăпаланса пĕтнĕ маттериалсене те манса хăвармалла мар. Кирлĕ пулсан вĕсене пуçтарма укçатенкĕ те уйăрмалла.

Çак ĕçĕн иккĕмĕш йенĕ, вăл писсаттĕлсемпе поетсен пухăнакан алçырăвĕсенҫен литтературă архивĕ орканисатсилесси, çав архива хăш уҫрештени çумĕнҫе усрамалли çинҫен сăмах татасси.

Ваçанкка Н. çырат: „Ҫăвашсен Тĕп архивĕнҫе, Муçейре, Вырăнти çĕршыва сăнаса тĕпҫекен ушкăнра, Аслăлăхпа тĕпҫев инçтитуҫĕ, ҪППА („Канаш" ретакси çумĕнҫе), ВОПИ ҫăваш уйрăмĕнҫе (Хусанта), Шупашкарти ҫăваш Петинçтитуҫĕн ҫĕлхепе литтераттур капинетĕнҫе йе урăх çĕрте усрамалла вĕсене" тет, татса каламаст хăй шухăшне. Ку ĕç пирки ман тӳрех çакна калас килет.

Раççейри Халăх кăмиссарĕсен канашĕн 1926-мĕш çулти 13-ш мартра йышăннă „Архив маттериалĕсене Тĕп Архива парасси" йатлă текрет тарăх (С. У. 1926 г., №14, ст. 110) пĕтĕм уҫрештенисемпе претприйаттисен тĕрлĕрен хут ĕçкĕнекисемпе алçырăвĕсене вырăнти архив оркăнне памалла. Çавăнпа ĕнтĕ ҫăваш совет писсаттĕлĕсен литтераттур архивне, урăх нихăш уҫрештенине те мар,—Ҫăвашсен Тĕп архив тытăмĕ çумĕнҫи „Октапĕр револютси архивне" усрама памалла. Унта пани тĕрĕс усранас йенҫен те, тата вăл архивпа усă курас йенҫен те авантарах пулмалла.

Ҫăвашсен Тĕп архивĕ çумĕнҫи „Октапĕр револютси архивĕнҫе" усрасан, литтераттурă архив маттериалĕсемпе Аслăлăхпа тĕпҫев инçтитуҫĕ те, Вырăнти çĕршыва сăнакан ушкăн та, тата писсаттĕлсем те кирлĕ вăхăтра усă курма пултараççĕ. Ҫăваш Тĕп архив тытăмĕ литтераттур архивĕнҫи маттериалсем тарăх еçлеме йе вĕсемпе усă курма, литтераттур орканисатси тытăменҫенех (халĕ Оркомиттет) хушса çырнă хутсăр никама та çывăха памаст. Литтераттур архивĕн пуçлăхĕ те пĕрпĕр писсаттĕл, Оркомиттет ҫленĕ пулмалла.

Анҫах Ҫăваш Тĕп архивĕ нихăш уҫрештенирен те архив маттериалĕсене архив технĕккипе йĕркелесе памасăр, йе ăна йеркелеме укçа тӳлемесĕр, хăй патне усрама илмест.

Литтераттур архивне майласа йарасси пиҫет ĕçĕнҫе кирлĕ выран йышăнса тăрат, çавăнпа та литтераттур архивне орканисатсилес ĕçе пур писсаттĕлсен те хутшăнмалла.

Ҫăвашсен Тĕп Архив пуçлăхĕ **Йермолайĕв П.**

ТУПМАЛЛИ.

1. И. Тукташ. Вăкăр çырми 3
2. И. Тумилĕн. Шуралăн керой (поемă) 45
3. Усман. Кунран кун (оçерк) 49
4. А. Петтокя. Партти (поемăн сыпакĕ) 60
5. Есрел. Рот-фронт 75
6. М. Танилăç-Çаптун. Вут ăшĕнçен („Лукка Петĕрĕ" повеçрен) 79
7. Н. Айсман. Театр . . . . [illegible]
8. Ĕçхĕл. Сăвăсем 125

Теорипе криттăккă.

9. И. Алексейĕв. Кулаш литтературă ыйтăвĕсем çинçен 129
10. В. Хутар. Турнассем 141
11. Т. Танилăв. Çăвăш пролеттари шивоппиçĕшĕн 144

Литтературă хыпарĕсем.

12. Илемлĕ литтературă орканисатсийĕсене урăхлатасси çинçен ПСК(п)П Тĕпкомĕ 1932 ç. апрелĕн 23-мĕшĕнçе йышăнна постановлени 151
13. ÇАПП секреттариççĕ ПСК(п)П Тĕпкомĕн литтературă орканисатсиссене урăхлатас пирки кăларнă постановленийĕ тăрах йышăнни 155
14. Çăваш совет писсаттĕлĕсен союсĕнçе 158

Сдано в производство 25 VI—32 г.
Подписано к печати 22 X—32 г.

Ответлă ретактăршăн Н. Васанкка.
Ретколлеки: А. Солăттав, Н. Васанкка, В. Краснов-Асли, Иван Мучи.

Уп. Чувашлита № 1438. Заказ № 983. Тираж 1100 экз.

Ст. ф. 6 130x219. Об'ем 10 п. листов. 82.000 п. з. в п. л.